63-92
8831



2
1963

# ТĂВАН АТĂЛ



Чăваш писателĕсен улттăмĕш съездне килнĕ хăнасем Чăвашсен И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогикă институтĕнчи студентсем патĕнче. Сулахайран сылтăмалла: **В. Кучер, Ю. Збанацкий** (Украинă халăхĕн хальхи вăхăтри паллă писателĕсем), **П. Ойфа** (Ленинград поэчĕ), **П. Чичканов** (Ҫиевра пурăнакан чăваш художникĕ), **П. Хусанкай** (чăваш халăх поэчĕ).

8831

# ТĂВАН АТĂЛ

Чăваш
писателĕсен Союзĕ
икĕ уйăхра
пĕрре кăларакан
альманах

2 МАРТ — АПРЕЛЬ 1963

Чăваш АССР
кĕнеке издательстви
Шупашкар

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗ.
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
4 июня 1963
№ 108

## ТУПМАЛЛИ

Стр.
**Н. С. Хрущев.** Пысăк идейăлăхпа художествăллă ăсталăх — совет литературипе искусствин аслă вăйĕ . . . 3
**Чăваш писателĕсен улттăмĕш съезчĕ** . . . 26
**Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне тата Никита Сергеевич Хрущев юлташа** (Съезд янă саламлă çыру) . . . 32
**С. Антонов.** Ленин çинчен çырнă калавсем
Пирĕншĕн пуриншĕн те . . . 33
Кремльте тĕл пулни . . . 39
**Александр Яндаш.** Тăван кил. Повеç . . . 43
**Куçма Турхан.** Çĕр суранĕ. Роман. (Юлашки) . . . 66
**Петĕр Хусанкай.** Шелепи. Сăвă . . . 80

ÇĔНĔ САВĂСЕМ

**Николай Сандров.** Вăхăт . . . 81
Телей . . . 82
Йĕр . . . —
Юлташа . . . —
**Иван Малгай.** Чуллă ту умĕнче . . . —

ПАЯНХИ ОЧЕРКСЕМ

**Арк. Александров.** Ылтăнран çутăрах . . . 83
**Александр Каттай.** Асатте пуканĕ. Сăвă . . . 85

АЧАСЕМ ВАЛЛИ

**Герасим Харлампьев.** Тимлĕ хуралçă. Калав . . . 86
Шăнкăрчă — юрăçă. Калав . . . 88

САТИРĂПА ЮМОР

**Аркадий Эсхель.** Пăтăрмах. Калав . . . 90

ПУБЛИЦИСТИКĂ

**Павел Крысин.** Тўрĕ кăмăл . . . 94

**РОДНАЯ ВОЛГА**

*Литературно-художественный и общественно-политический двухмесячник Союза писателей Чувашии*

2 (101) книга

*На чувашском языке*

Редактор **Л. Я. АГАКОВ.**

**Редколлегия:** А. Е. Алга, М. Я. Сироткин, И. С. Максимов-Кошкинский, И. Н. Вашки (отв. секретарь), И. Н. Никифоров, К. С. Турхан, С. А. Шавлы.

*Художественное оформление Элли Юрьева.*

НТ 01541. Сдано в набор 15-III-1963 г. Подписано к печати 24-IV-1963 г.
Бумага 84×108 1/16. Объем 9,84 п. л., 11,37 уч.-изд. лис. Заказ № 1178.
Тираж 8350 экз. Цена 30 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
г. Чебоксары, ул. Володарского, д. 5.

# ПЫСĂК ИДЕЙĂЛĂХПА ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ĂСТАЛĂХ— СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИПЕ ИСКУССТВИН АСЛĂ ВĂЙĔ

## Н. С. ХРУЩЕВ юлташ 1963 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче партипе правительствă руководителĕсем литературăпа искусствă деятелĕсемпе тĕл пулнă чухне каланă сăмах

Хаклă юлташсем! Юлашки уйăхсенче эпир сирĕнпе иккĕмĕш хут тĕл пулатпăр. Партин Центральнăй Комитетĕнче литературăпа искусствăн çамрăк работникĕсемпе калаçнине — Идеологи комиссийĕ ирттернĕ калаçăва — шута илсен вара пирĕн паянхи тĕл-пулу виççĕмĕш тĕл-пулу пулать.

Çав тĕлпулусен материалĕсене хаçат-журналсенче пичетлесе кăларнă, вĕсем çынсене питĕ интереслентерчĕç. Эпир тулли кăмăлпа çакна палăртатпăр: партин Центральнăй Комитечĕ искусствă ыйтăвĕсем тĕлĕшпе тытса пыракан позицие творчествă работникĕсем, партипе халăх, урăх çĕршывсенчи туссем хĕрӳллĕн ырлаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕ литературăпа искусствă ыйтăвĕсем тĕлĕшпе тунă пуçарăва Совет Союзĕнчи тата урăх çĕршывсенчи общественноç мĕн тери интересленсе кĕтсе илни çинчен Ильичев юлташ хăйĕн сăмахĕнче каларĕ ĕнтĕ. Вăл пирĕн çĕршывра литературăпа искусствăри пăсăк тенденцисене хирĕç кĕрешес ĕçре творчествă работникĕсен активлăхĕ мĕн тери вăйланнине тĕрĕс палăртрĕ.

Çак канашлура тухса каланă нумай юлташсем интереслĕ шухăшсем каласа пачĕç тата паха сĕнӳсем чылай пачĕç. Çакă вăл эпир сирĕнпе сӳтсе явакан ыйтусем социализмлă культурăна, совет литературипе искусствине Коммунистсен партийĕн Программинче палăртса хунă çулпа аталантарас ĕçре принцип тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине витĕмлĕ кăтартса парать.

## КОММУНИЗМ ТĂВАССИ ТАТА ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ТВОРЧЕСТВĂ ЗАДАЧИСЕМ

Писательсен, художниксен, композиторсен, скульпторсен, кинопа театр работникĕсен — пĕтĕм творчествăлла интеллигенцин ĕçĕпе партипе халăх яланах интересленеççĕ. Çакна ăнланма йывăр мар ĕнтĕ. Эпир литературăпа искусствă, Владимир Ильич Ленин малтанах каласа хунă пек, пĕтĕм халăх ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнă вăхăтра пурăнатпăр.

Хăйĕн ленинла партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ коммунизм обществи тăвать. Коммунизм строительствинчи пирĕн тĕп тĕллев вăл,— эпĕ çакна уйрăмах палăртатăп,— ĕç çыннисем лайăхрах пурăнччăр тесе пур условисем те туса парасси. Коммунизмлă обществă шăпах ĕнтĕ ĕç çыннисен обществи пулать.

Çынсем ĕçлемесĕр пурăнма пултараймаççĕ. Капитализм кăна, ĕç çыннисене чăтма çук йывăр условисенче пурăнтарса, вĕсене асап хуçнă пек хуçать, нумай çынсене ĕç çине йĕрĕнсе пăхма хăнăхтарать. Этеме этем пусмăрланипе килĕшме пултарайман çынсем ĕçре хăйсен класс ăнланăвне аталантараççĕ, ĕç çыннисен интересĕсемшĕн, эксплуататорсене хирĕç активлă кĕрешекенсем пулса тăраççĕ. Теприсем, хăйсемшĕн, хăйсен харпăрлăхĕшĕн кăна тăрăшакансем, обществă пурнăçĕнче пассивлă, вĕсем буржуазие сирпĕтсе антарассишĕн тата çĕнĕ обществă тăвассишĕн пыракан класс кĕрешĕвне хутшăнмаççĕ. Виççĕмĕшсем çын ĕнси çинче, урăх çынсем ĕçленипе усă курса пурăнаççĕ. Вĕсем — эксплуататорсем, ĕç çыннисене пусмăрлакансем.

Коммунизма ĕçпе, миллионшар çынсен ĕçĕпе тăваççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ парти коммунизм строительствине пĕтĕм совет халăхĕ — рабочисем, колхозниксем, инженерсем, конструкторсем, техниксем, учительсем, врачсем, агрономсем, ученăйсем, культурăпа литературăн тата искусствăн мĕн пур отраслĕсенче ĕçлекенсем — пĕр пĕтĕм ĕç коллективĕ пулса хутшăнччăр тесе мĕн пур вăя хурать.

Халĕ пурте кураççĕ: парти тăрăшни чаплă результатсем кӳрет, пирĕн халăх коммунизм патне каймалли çул çинче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Анчах эпир çĕнĕ обществă тăвас ĕçре хамăр сирсе пыракан йывăрлăхсене курмасăр тăма пултараймастпăр. Çавнашкал йывăрлăхсенчен пĕри вăл — обществăн мĕн пур сийĕсенчи хăш-пĕр çынсен ăс-тăнĕнче ĕлĕкхи пурнăçран юлнă йăласем. Çав кивĕ йăласем пуринчен малтан ĕç çине, харпăр хăйĕн обществă умĕнчи тивĕçĕ çине, халăх умĕнчи тивĕçсем çине тĕрĕс мар пăхнинче палăраççĕ.

Пирĕн кĕрешӳре — коммунизмшăн пыракан кĕрешӳре — мĕн пур çынсене коммунизм идеалĕсем тăрăх воспитани парасси питех те пысăк вырăн йышăнать. Çакă вăл пирĕн партин хальхи вăхăтри идеологиллĕ ĕçĕнчи тĕп задачă пулса тăрать. Партин идейăллă хĕç-пăшалĕсене пурне те кĕрешĕве хатĕрлесе йĕркелесе хумалла пирĕн. Çав хĕç-пăшалсен шутне литературăпа искусствă та кĕреççĕ, вĕсем — коммунизмла воспитани памалли хăватлă хатĕрсем. (Алă çупаççĕ).

Эпир сирĕнпе тĕл пулса калаçасси пурнăçри ырă йăла пулса тăчĕ. Чăннипе каласан, çак тĕлпулусем литературăпа искусствă вăйĕсене, вĕсен творчествăллă активлăхĕпе революциллĕ хастарлăхне пăхса тухмалли хăйне евĕрлĕ смотрсем пулса тăраççĕ.

Парти, унăн Центральнăй Комитечĕ çапла шутлаççĕ: совет литературипе искусстви ăнăçлă аталанса пыраççĕ, вĕсем, тĕпрен илсен, хăйсен задачисене лайăх пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах литературăпа искусствă çитĕнĕвĕсене ытлашши пысăклатса кăтартни тата писательсен, художниксен, композиторсен, кинопа театр работникĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене асăрхамасăр тăни сиенлĕ пулнă пулĕччĕ. Идейăпа творчествă енĕпе ытлашши хытă пăшăрханмалли нимех те пулман, анчах кунта пысăк çитменлĕхсем çинчен, чылай енĕпе — йăнăшсем çинчен те сăмах пырать, çав çитменлĕхсемпе тата йăнăшсемпе килĕшсе тăма юрамасть.

Парти Программинче литературăпа искусствă енĕпе палăртса хунă задачăсене литературăпа искусствă работникĕсем пурте тĕрĕс ăнланаççĕ теме çук-ха. Çакна пурнăç кăтартса пачĕ, вăл иртнĕ тĕлпулу вăхăтĕнче тата паян хăш-пĕр юлташсем калана сăмахсенче те палăрчĕ. Апла пулсан, анлăн коммунизм тунă тапхăрта пирĕн парти художествăллă творчествăн тĕп ыйтăвĕсем çине мĕнле пăхни çинчен тепĕр хут ăнлантарса пани кирлĕ.

Мĕнле художествăллă произведенисем кĕтетха совет халăхĕ, мĕнле произведенисене вăл пысăка хурса хаклать тата ырлать, мĕнле произведенисене йышăнмасть?

Социализмлă реализм литературипе искусстви художествăллă творчествăра пысăк çитĕнӳсем турĕç, вĕсен революциллĕ традицисем нумай, вĕсем пĕтĕм тĕнчипе чапа тухрĕç. Мĕн пур советлă республикăсенче чаплă произведенисем, ăстăн пуянлăхĕсем тунă, пирĕн çĕршыври халăхсем вĕсемпе тивĕçлипе мухтанаççĕ.

Совет литературипе искусствин паллă представителĕсен творчестви вăл — вĕсен халăх умĕнчи тава тивĕçлĕ пысăк ĕçĕ, художник хамăрăн Тăван çĕршывшăн чуна парса ĕçленине кăтартакан, хавхалантаракан тĕслĕх пулса тăрать.

Хăйĕн талантне пĕтĕмпех коммунизмшăн кĕрешекен халăха панине, хăйĕн произведенине халăх кăмăлласа йышăннине, ăна пысăка хурса хакланине туйса тăнинчен ытларах художника урăх мĕн савăнтарма пултарĕ.

Хăй вăхăтĕнче пирĕн халăх Демьян Бедный поэзийĕпе кĕрешӳре епле усă курнине аса илĕрха. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче, совет халăхĕ тĕнчери империализма хирĕç хаяррăн кĕрешсе рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствине хӳтеленĕ чухне, хĕрлĕ гвардеецсем те, хĕрлĕ армеецсем те, партизансем те Демьян Бедный юррисемпе çапăçава кĕнĕ. Çав юрăсем пуриншĕн те, Хĕрлĕ Çарти хут пĕлмен хресченсемшĕн те ăнланмалла пулнă.

Ун чухне чапа тухнă «Как родная мать меня провожала» ятлă юрăра халăх шухăш-туйăмĕсем çинчен каласа панă. Поэт революцишĕн кĕрешекенсен ретĕнче пулнă, вăл хăйĕн питех те пысăк талантне ĕç çыннисене эксплуататорсен пусмăрĕнчен ирĕке кăлармалли аслă ĕçе пулăшма панă.

Демьян Бедный ĕç хресченĕн чунне тĕлĕнмелле лайăх ăнланса илме пултарнă. Мĕн тери тĕрĕс ăнланса, мĕн тери пысăк ăсталăхпа уçса кăтартнă вăл хресчен чунĕ икĕ еннелле сулăннине. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче çырнă произведенисенче поэт хресчен шухăш-туйăмĕсене унăн çав вăхăтри мĕн пур уйрăмлăхĕсене шута илсе витĕмлĕ кăтартса панă. Пĕр енчен, хресчен хăйне çĕнĕ влаç — большевиксен влаçĕ çĕр панăшăн питĕ савăннă, мĕншĕн тесен вăл çав çĕршĕн ĕмĕтленсе пурăннă, çĕршĕн çав вăхăтра хĕç-пăшаллă кĕрешӳ пынă. Тепĕр енчен, хăш-пĕр хресченсем, Совет влаçĕ хăйсене çĕр панă пулин те, халăх влаçне, революци панă тивлете алла хĕçпăшал тытса хӳтĕлеме кирлине ăнланман.

Демьян Бедный çырнă произведенисем çынсене воспитани парас ĕçре питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ: хресчен енчен-енне сулăннине, иккĕленсе тăнине поэт революциллĕ позици çинче тăрса хаяррăн сивлет, çав вăхăтрах вăл ăна çавнашкал енчен-енне сулăнни тата иккĕленни хресченсен хăйсен интересĕсене хирĕç пынине ăнлантарса парать. Поэт хресчене большевиксен партийĕ ертсе пынипе рабочи класпа тачă союзра тăни уншăн хăйĕншĕнех усăллă пулнине ăнланса илме пулăшать.

Халĕ манпа пĕр çулсенчи çынсем, уявсенче пĕр-пĕринпе тĕл пулсан, граждан вăрçи вăхăтĕнчи çулсене тулли кăмăлпа аса илеççĕ, Демьян Бедный юррисене юрлаççĕ, мĕншĕн тесен çав юрăсем халĕ те паян çырнă пекех янăраççĕ. (Алă çупаççĕ.) Вĕсен илемĕ акă мĕнре: вĕсем пире йывăр, анчах лайăх та илемлĕ пулнă вăхăтсене аса илтереççĕ, çав тери йывăр условисенче Совет влаçĕшĕн, ĕç çыннисене ирĕке кăларассишĕн, халăхшăн, социализмшăн паттăррăн кĕрешнĕ тата çав кĕрешӳре çĕнтернĕ çынсене аса илтерсе кăмăла çĕклеççĕ.

Чăн-чăн искусствă произведенийĕ çынсен чĕринче мĕн тери вăйлă та таса туйăмсем çуратнине витĕмлĕ кăтартса пама тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Сирĕнтен нумайăшĕ совет воинĕсене асăнса лартнă Берлинти памятник çинчен пĕлеççĕ пулмалла,— унăн авторĕ паллă скульптор Е. В. Вучетич. Нумай пулмасть Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн улттăмĕш съездне пынă тăванла партисен делегацийĕсем Роза Люксембург, Карл Либкнехт тата рабочи класс ĕçĕшĕн кĕрешсе пуçĕсене хунă ытти паттăрсен вилтăприсем çине чечек кăшăлĕсем хунă çĕрте пулчĕç.

Кайран совет воинĕсене чысласа лартнă Берлинти памятник патне чечек кăшăлĕсем хучĕç. Хумхантаракан минутсем пулчĕç вĕсем. Унта çĕршер çынсем пычĕç, музыкă чаплăн янрарĕ, памятник патне пурте пĕр сăмахсăр пыра-пыра тăчĕç, никам та хыттăн калаçма хăймарĕ, çак вырăн хăех çынсене çапла тума хистерĕ. Чаплă скульптурăна курсан, паттăр совет воинĕсене хисеплес, чĕререн тав тăвас, фашизмăн хура вăйĕсене хирĕç кĕрешсе пуçĕсене хунă çынсене пуç таяс туйăм çуралать.

Нумаях пулмасть ЦК Президиумĕн членĕсем тата партин Центральнăй Комитечĕн секретарĕсем Мускавра Вучетич юлташ проекчĕ тăрăх лартакан Çĕнтерӳ памятникĕн эскизĕсемпе паллашрĕç. Проект тăрăх реализмла искусствăн вăйлă произведенийĕ, çĕнтерӳçĕ-халăха тивĕçлипе мухтакан тата пирĕн аслă социализмлă Тăван çĕршыв вăй-хăвачĕпе унăн никам тĕкĕнейми çирĕплĕхне малалла тĕреклетме чĕнекен произведени пуласса шанатпăр.

Кербель юлташ туса хатĕрленĕ Карл Маркссăн Мускаври памятникĕ те искусствăн чаплă произведенийĕ пулса тăрать. Скульптор наукăлла коммунизм никĕсне хывакан гениллĕ çыннăн аслă сăнарне художествă тĕлĕшĕнчен ăста кăтартнă. Çак илемлĕ монумент умĕнчен чарăнса тăмасăр иртме çук.

Революциллĕ пысăк хавхаланупа, творчествăллă пафоспа çуралнă чаплă произведенисем кăна çын чĕрипе ăс-тăнĕ патне çитеççĕ, гражданла вăйлă туйăмсем çуратаççĕ тата çынсен телейĕшĕн кĕрешме çирĕп вăй-хăват параççĕ. Çавăн пек произведенисен авторĕсене халăх тивĕçлипе юратса хисеплет. Çавăн пек пысăк идейăллă тата çынсен ăсĕпе туйăмĕсене художествăллă вăйлă витĕм кӳрекен произведенисем пама чĕнет те Коммунистсен партийĕ писательсене, художниксене, композиторсене, кинопа театр работникĕсене. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Пирĕн халăха кĕрешӳре пулăшакан революциллĕ искусствă кирлĕ. Витĕмлĕ художествăллă сăнарсем урлă совет литературипе искусстви коммунизм строительствин аслă та паттăрла вăхăтне кăтартса пама, пирĕн пурнăçра çĕнĕ, коммунизмлă хутшăнусем çуралнине тата вĕсем çĕнтерсе пынине тĕрĕс ӳкерсе пама тивĕç. Художникăн лайăххине курма пĕлмелле, пирĕн чăн пурнăçăн тĕп палли пулса тăракан ырă ĕçсемшĕн савăнмалла, вĕсене пулăшмалла, çакăнпа пĕрлех унăн, паллă ĕнтĕ, юрăхсăр явленисене курмасăр, пурнăçра çĕннине çуралма чăрмантараканнине асăрхамасăр иртмелле мар.

Кашни ырă ĕçĕн, чи лайăххин те хăйĕн начар енĕсем пур. Чи илемлĕ çыннăн та кăлтăксем пулма пултараççĕ. Пĕтĕм ĕç кунта пурнăçри явленисене мĕнле илсе пăхнинчен тата вĕсене мĕнле хакланинчен килет. Сăмах май каласан, мĕн шыратăн, çавна тупатăн. Халăхăн творчествăллă ĕçне активлă хутшăнакан, таса куçпа пăхакан çын пурнăçра лайăххине тата япăххине тĕрĕс курать, çав явленисене кирлĕ пек ăнланать тата тĕрĕс хак парать, малта пыраканни, тĕп вырăнта тăраканни, обществă аталанăвĕнче чи кирлĕ вы-

рӑн йышӑнаканни ҫирӗплентӗр тесе активлӑн кӗрешет.

Анчах та пирӗн пурнӑҫ ҫине аякран пӑхса тӑракан ҫын чӑн пурнӑҫа курма та, ӑна тӗрӗс ӳкерсе кӑтартма та пултараймасть. Шел пулин те, ҫапла пулкалать, искусствӑн хӑш-пӗр ҫыннисем чӑн пурнӑҫа тула тухмалли вырӑнсенчи шӑршӑран кӑна пӗлеҫҫӗ, ҫынсене юриех пӑсса ӳкерсе кӑтартаҫҫӗ, хӑйсен картинисене хура тӗксӗм сӑрӑсемпе ӳкереҫҫӗ, вӗсем ҫынсене тунсӑха, хуйха яма тата умри ҫула курми тума кӑна пултараҫҫӗ, чӑн пурнӑҫа хӑйсен йӑнӑш, пӑсӑк, субъективистла ӑнланӑвӗсем майлӑ, хӑйсем шухӑшласа кӑларнӑ имшеркке схемӑсем тӑрӑх ӳкерсе кӑтартаҫҫӗ.

Пӗррехинче эпир Эрнст Неизвестнӑйӑн хӑсас килтерекен картинисене курнӑччӗ. Ҫак ҫын, пултаруллӑскерех пулас, совет аслӑ шкулӗнчен вӗренсе тухнӑскер, халӑха усал ӗҫпе тавӑрса панӑшӑн тарӑхнӑччӗ. Пирӗн ҫавӑн пек художниксем сахал, ку ӗнтӗ лайӑх, ҫапах та искусствӑ ҫыннисем хушшинче вӑл пӗччен мар, ҫакӑншӑн шел ӗнтӗ. Эсир художник-абстракционистсен ытти хӑш-пӗр изделийӗсене те куртӑр. Эпир ҫавӑн пек пӑсӑк япаласене уҫҫӑн, пӗр килӗшмесӗр сивленӗ, малашне те сивлӗпӗр.

Юлташсем! Пирӗн парти совет киноискусствине халӑха коммунизмла воспитани памалли питех те кирлӗ художествӑ хатӗрӗсенчен пӗри тесе шутлать. Ҫынсен ӑсӗпе туйӑмне витӗм парас тата халӑхӑн чи анлӑ сийӗсене воспитани парас тӗлӗшӗнчен киноискусствӑпа нимӗн те танлашма пултараймасть. Кино обществӑн мӗн пур сийӗсемшӗн, урӑхла каласан, тӗрлӗ ҫулхи ҫынсемшӗн, ватӑсенчен пуҫласа шкул ачисем таранах, ӑнланмалла искусствӑ. Вӑл чи аякри районсемпе ялсенче те йӑлана кӗрсе пырать.

Акӑ мӗншӗн партин Центральнӑй Комитечӗ совет киноискусствине аталантарма ҫавӑн пек тимлӗн тӑрӑшать, ун умне пысӑк требованисем лартать.

Эпир художествӑллӑ кинематографири ҫитӗнӳсене куратпӑр тата вӗсене пысӑка хурса хаклатпӑр. Ҫакӑнпа пӗрлех халиччен тунӑ ҫитӗнӳсем пирӗн задачӑсене тата киноискусствӑ работникӗсем валли туса панӑ майсене тивӗҫтермеҫҫӗ тесе шутлатпӑр. Эпир киноискусствӑн идейӑллӑ содержанийӗ тӗлӗшпе тата экрансем ҫине кӑларакан кинофильмсен художествӑ ӑсталӑхӗ тӗлӗшпе шухӑшламасӑр тӑма пултараймастпӑр. Ку тӗлӗшпе ӗҫсем кино работникӗсенчен чылайӑшӗ шухӑшланӑ пек мар, чылай япӑхрах пулса пыраҫҫӗ.

Кинотеатрсенче питех те шупка, содержани енчен чухӑн тата форми енчен вӑйсӑр, куракансене тарӑхтаракан е ҫывӑрттарса яракан, тунсӑхпа кичемлӗхе кӗртсе ӳкерекен кинокартинӑсем нумай кӑтартни хытах пӑшӑрхантарать.

Пире малтанлӑха паллашма «Застава Ильича» ятлӑ, ятне илсен, вӑйлӑ картинӑ пулмалла кинофильм валли ӳкернӗ материалсене кӑтартрӗҫ. Картинӑна Горький ячӗпе хисепленекен киностудире режиссер М. Хуциев юлташ, паллӑ кинорежиссер С. Герасимов юлташ художествӑ руководителӗ пулса ертсе пынипе лартать. Тӳрех каламалла, ҫав материалсенче хумхантаракан вырӑнсем те пур. Чӑннипе вара ҫав вырӑнсем картинӑн чӑн пӗлтерӗшне пытарма ҫеҫ кирлӗ, мӗншӗн тесен фильмӑн тӗп шухӑшӗ обществӑпа харпӑр хӑй пурнӑҫӗнче совет ҫыннисемшӗн пачах ют идейӑсемпе нормӑсене ҫирӗплетме тӑрӑшни пулать. Ҫавӑнпа та ҫак пысӑк та питӗ кирлӗ темӑна ҫавнашкал ӑнлантарса панине эпир татӑклӑнах хирӗҫлетпӗр.

Ҫакӑн ҫинчен каламан пулсан та юрӗччӗ, мӗншӗн тесен фильма ӳкерсе пӗтермен. Анчах та пирӗн пичетре тата литераторсемпе кино деятелӗсем халӑх умӗнче тухса каланӑ чухне асӑннӑ фильмӑн «пысӑк пахалӑхӗсене» пур майпа та мухтаҫҫӗ пулсан, пирӗн хамӑрӑн шухӑша та калани кирлӗ.

«Застава Ильича» фильмӑн ячӗ аллегориллӗ. Застава сӑмах хӑех малтан хуралҫӑсен отрячӗ тенине пӗлтернӗ. Халӗ те ҫӗршывӑн чиккисенчи форпостсене эпир ҫапла калатпӑр. Ахӑртнех фильмри тӗп геройсем совет ҫамрӑкӗсен малта пыракан сийӗсене, социализмлӑ революци ҫӗнтерӗвӗсене, Ильич халалӗсене ҫирӗп хӳтӗлекен ҫынсене кӑтартса параҫҫӗ тесе ӑнланмалла.

Анчах та ҫак фильма курнӑ кашни ҫынах ку вӑл суя тесе калать. Фильмри сӑнарсенчен чи лайӑххисем те — виҫӗ ҫамрӑк рабочи пирӗн чаплӑ ҫамрӑксене палӑртса тӑмаҫҫӗ. Вӗсене ҫапла ӳкерсе кӑтартнӑ: вӗсем мӗнле пурӑнмаллине тата мӗншӗн кӗрешмеллине те пӗлмеҫҫӗ. Коммунистсен партийӗн Программин идейисемпе ҫутатнӑ, коммунизма анлӑн тума тытӑннӑ пирӗн вӑхӑта ҫапла кӑтартаҫҫӗ!

Ҫавӑн пек ҫамрӑксем, ашшӗсемпе пӗрле, парти ертсе пынипе коммунизм тӑваҫҫӗ-и вара! Ҫавӑн пек ҫамрӑк ҫынсемпе пирӗн халӑх хӑйӗн пуласлӑх шанчӑкне ҫыхӑнтарма пултарать-и, вӗсем аслӑрах ӑрусен социализмлӑ революци тунӑ, социализм туса ҫитернӗ, алла хӗҫ-пӑшал тытса, ӑна фашистла эшкерсене хирӗҫ пынӑ хаяр ҫапӑҫусенче сыхласа хӑварнӑ, коммунизм обществине анлӑн туса пыма пурлӑхпа ӑс-хакӑл пуянлӑхӗсем туса хунӑ ӑрусен аслӑ ҫӗнтерӗвӗсене хӑйсен аллине илӗҫ тесе ӗненме пулать-и!

Ҫук, обществӑ ҫавӑн пек ҫынсем ҫине шанӑҫ хума пултараймасть — вӗсем кӗрешӳҫӗсем мар, тӗнчене ҫӗнетсе улӑштаракансем те мар. Вӗсем — мораль тӗлӗшӗнчен хавшак, ҫамрӑклах

ватăлнă, пурнăçри аслă тĕллевсемпе ĕмĕтсене çухатнă çынсем.

Картинăра пирĕн çамрăксем хушшинче тĕл пулакан тӳрпилĕксене тата япăхса кайма пуçланă типсене, никама та юратман тата хисеплемен çынсене, аслисене шанма мар, хытах курайман çынсене питлеме тата критиклеме тăрăшни кăштах палăрать. Çав çамрăксем пуриншĕн те кăмăлсăр, пуриншĕн те мăкăртатаççĕ, пуринчен те тăрăхлаççĕ тата пурин çине те сураççĕ, хăйсен вăхăтне нимĕн ĕçлемесĕр ирттереççĕ, каçсемпе çĕрсене темĕнле ырах мар шухăшпа пĕрле пухăнса ирттереççĕ. Çавăн пек типсем ĕç çинчен питĕ йĕрĕнсе калаçаççĕ. Çавнашкал ашкăнчăк хăйĕн кулленхи çăкăрне кавлет те тата хăйсен йывăр ĕçĕпе тырă ӳстерекенсенчен кулма пăхать.

Ĕççĕр çапкаланса çӳрекенсене, харампырсене питлес ĕмĕте фильм лартакансем пурнăçлайман. Вĕсен çавнашкал йĕксĕксене тата халăхран уйрăлса кайнă çапкаланчăксене питлесе намăслантарма, намăс юпи çумне çыхса лартма гражданла хăюлăх та, тарăху та çитеймен, вĕсем çав путсĕрсене кăшт питрен çупса илнипех çырлахнă. Анчах унашкал путсĕрсене питрен çупнипе тӳрлетеймĕн.

Фильм лартакансем куракана пирĕн çамрăксене лайăх кăтартмаççĕ. Пирĕн совет çамрăкĕсем хăйсен пурнăçĕнче, ĕçре тата кĕрешӳре унчченхи ăрусен, марксизм-ленинизм идейисене вĕçĕмсĕр парăннине мирлĕ строительствă çулĕсенче те, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче те кăтартса панă ăрусен традицийĕсене малалла илсе пыраççĕ тата нумайлатса пыраççĕ. Пирĕн çамрăксене А. Фадеевăн «Çамрăк гварди» романĕнче лайăх кăтартса панă. Питех те шел, С. Герасимов, çав роман тăрăх фильм лартнăскер, хăйĕн вĕренекенне М. Хуциева хăйĕн картининче пирĕн çамрăксем çамрăк гвардеецсен пит те паха традицийĕсене упранине, аталантарнине кăтартма канаш парайман.

Ĕнерех каларăм ĕнтĕ, фильм геройĕ хăйĕн вăрçăра вилнĕ ашшĕн мĕлкипе тĕл пулнине кăтартнине принцип тĕлĕшĕнчен хытă хирĕçлемелле. Ывăлĕ: мĕнле пурăнмалла, тесе ыйтсан, ашшĕн мĕлки ывăлĕнчен çапла ыйтать: эсĕ миçе çулта? Ывăлĕ хăй çирĕм виçĕ çултине пĕлтерсен, ашшĕ — эпĕ çирĕм пĕр çулта тет те... куçран çухалать. Эсир вара пире çакă вăл чăн-чăн эпизод тесе ĕнентересшĕн. Никам та ĕненмест! Пурте пĕлеççĕ, чĕрчунсем те хăйсен çурисене пăрахмаççĕ. Çурине шыва пăрахсан, йытă та пурнăçне шеллемесĕрех тӳрех çурине çăлма ыткăнать.

Ашшĕ ывăлĕн ыйтăвĕ çине ответлеменнине, ăна пурнăçра тĕрĕс çул тытма канаш парса пулăшманнине мĕнле ăнланмалла вара?

Кăна ахальтен туман. Кунта хăй майлă тĕп шухăш пур. Ачасене çапла вĕрентесшĕн: ашшĕсем вĕсен пурнăçĕнче учительсем пулма пултараймаççĕ, çавăнпа вĕсенчен канаш ыйтма та кирлĕ мар. Фильм ӳкерекенсен шухăшĕпе, çамрăксен хăйсен мĕнле пурăнмаллине, аслисен канашĕпе пулăшăвĕсĕрех, хăйсен татса памалла.

Çаплах, кунта кинофильм лартакансен позицийĕсене çителĕклĕ таранах уççăн кăтартнă. Анчах эсир виçерен ытлашши тухса каймарăр-и? Эсир, мĕн, çамрăксене аслă ăрăва хирĕç тăратасшăн-и, вĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтересшĕн-и, Совет çĕршывĕнчи коммунизмшăн пĕрле кĕрешекен çамрăк çынсемпе ваттисен туслă çемйинче хирĕçӳ кăларасшăн-и? Çавăн пек çынсене пĕтĕм ответлăхпа çапла калатпăр: сирĕн çакăнтан нимĕн те тухмасть! (Т ă в ă л л ă н  а л ă  ç у п а ç ç ĕ).

Пирĕн вăхăтра ашшĕсемпе ачисен ыйтăвĕ Тургенев вăхăтĕнчи пек мар. Эпир пачах урăхла историллĕ саманара пурăнатпăр, çак саманара çынсем хушшинчи хутшăнусем те урăхла. Советсен социализмлă обществинче ăрусем хушшинче хирĕçӳсем çук, «ашшĕсемпе ачисен» ыйтăвĕсене ĕлĕкхи пек ăнланни пулма пултараймасть. Ашшĕсемпе ачисен ыйтăвне фильм лартакансем шухăшласа кăларнă та усал шухăшпа юриех ӳстерсе кăтартаççĕ.

Эпир пирĕн обществăри çынсем хушшинчи хутшăнусене çапла ăнланатпăр, çав хутшăнусене литературă произведенийĕсенче, пьесăсенче, кинофильмсенче, музыкăра, живописьре — искусствăн пур отраслĕсенче те тĕрĕс кăтартса паччăр, тесе тăрăшатпăр. Кам çакна ăнланса илеймен, лайăххах шухăшлатăр, эпир вара вĕсене тĕрĕс позици йышăнма пулăшапăр.

Фильм режиссерĕнчен Хуциев юлташран тата унăн шефĕнчен Герасимов юлташран çапла ыйтас килет: мĕнле майпа çуралнă-ха вĕсен çавăн пек картинă идейи?

Фильмăн пысăк çитменлĕхĕсем куç умĕнчех. Кино деятелĕсен, ăна курнă хыççăн, режиссера уççăн та тӳррĕн каламалла пулнăн туйăнать. Картинă тавра вара пачах та урăхла шав пуçланнă. Фильма никам та курман-ха, анчах та çав фильм çинчен тĕнчипех вăйлă рекламă кампанийĕ пуçланнă, ăна «пирĕн искусствăри питех те чаплă явлени», тесе хакланă. Мĕн тума кирлĕ ку? Юрамасть капла тума, юлташсем, юрамасть!

# ПАРТИЛЁХ ТАТА ХАЛĂХĂН ШУХĂШ-КĂМĂЛНЕ ПАЛĂРТНИ—ПИРĔН ИСКУССТВĂН ПИТĔ КИРЛĔ ПРИНЦИПĔ

Юлашки ÇУЛСЕНЧЕ литературăпа искусствă деятелĕсем хăйсен творчествинче совет обществин пурнăçĕнчи Сталина ытлашши пысăка хунипе çыхăннă тапхăра пысăк вырăн параççĕ. Çакна ăна пĕтĕмпех ăнлантарса пама пулать, вăл çавăн пек пулмалли паллă. Çав çулсенчи совет обществин пурнăçне парти позицийĕсем енчен тĕрĕс сутатса паракан произведенисем пичетленсе тухрĕç. Сăмахран, А. Твардовскин «За далью — даль» поэмине, А. Солженицынăн «Один день Ивана Денисовича» повеçне, Е. Евтушенкăн хăш-пĕр сăввисене, Г. Чухрайăн «Чистое небо» кинофильмне тата ытти произведенисене илсе кăтартма пулать.

Тĕрĕссине кăтартса паракан художествăллă произведенисене, вĕсенче сăмах пурнăçăн кирек мĕнле япăх енĕсем çинчен пырать пулсан та, вĕсем халăха унăн çĕнĕ обществăшăн пыракан кĕрешĕвĕнче пулăшаççĕ, унăн вăйĕсене пĕтĕçтереççĕ тата тĕреклетеççĕ пулсан, парти ырлать.

Сатирă, уйрăммăн илсен, юптарусем мĕнле пысăк вырăн йышăннине пурте пĕлеççĕ. Михалков юлташ, сăмахран, час-часах çак жанрпа çырать. Сатирă вăл — çивĕч бритвă пекех; этем çине тухса ларнă мăкăльсене кăтартса памалла та тӳрех, лайăх хирург пек, вĕсене касса пăрахмалла. Анчах та сатирă хĕç-пăшалĕпе, хирург хăйĕн çĕççипе усă курнă пекех, лайăх усă курма пĕлес пулать, сиенлĕ мăкăле касса пăрахмалла, анчах организма тĕкĕнмелле мар, ăна сиен кӳмелле мар. Кунта ăсталăх кирлĕ. Çав ăсталăха вĕренсе çитмен пулсан, ăна ан тыт, мĕншĕн тесен ыттисене сиен кӳретĕн, хăвăн аллуна та касса пĕтеретĕн. Ачасем çивĕч япаласемпе усă курма вĕренсе çитиччен вĕсене амăшĕсем çивĕч япаласем памаççĕ, тĕрĕс тăваççĕ. (З а л р а х у с к а л с а и л е ç ç ĕ, а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Кунта эпир мĕн пур творчествă работникĕсене уйрăм авторсен произведенийĕсенче палăракан йăнăш кĕвĕсемпе туртăмсем çинчен асăрхаттарма кирлĕ тесе шутлатпăр. Йăнăш туртăмсем, тĕпрен илсен, çакăн пек: законсăр тунă ĕçсем çине, влаçпа усă курса тунă киревсĕр ĕçсем çине пĕр енчен çеç пăхаççĕ.

Чăнах та, уйрăм çынна ытлашши пысăка хунă çулсем пысăк йывăрлăхсем хăварнă. Пирĕн парти кун çинчен халăха тĕрĕссине пĕтĕмпех каларĕ. Кунпа пĕрлех çакна шута илмелле тата асра тытмалла: çав çулсем вĕсем, пирĕн тăшмансем шутланă пек, совет обществин аталанăвĕ чарăнса ларнă тапхăр пулман. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, аслă Ленин идейисен тата халалĕсен ялавĕпе пирĕн халăх социализм туса çитерчĕ. Партипе халăх тăрăшнипе Совет Союзĕ хăватлă социализмлă государствă пулса тăчĕ, вăл вăрçă вăхăтĕнчи питĕ йывăр, историре халиччен пулман çапăçусенче çĕнтерчĕ, фашистла çарсене пĕтĕмпех аркатса тăкрĕ. (Т ă в ă л л ă н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Çавăнпа та эпир çапла калатпăр: пирĕн çĕршыв пурнăçĕнчи çав тапхăра хак панă чухне питех те пĕр енчен кăна пăхакан писательсем, пур событисене те тенĕ пекех салхуллăн, хура сăрăсемпе сăнласа пама хăтланса, тĕрĕс мар тăваççĕ. Хăйсем валли çӳп-çап шăтăкĕнчен материалсем пухма пикенекен тата çавăн пек произведенисене халăх пурнăçне тĕрĕс çутатса паракан произведенисем пек кăтартма тăрăшакан литераторсем те пур-ха. Çавнашкал шухăш майлă тăракансем çапла шутлаççĕ: пирĕн халăхăн çитĕнĕвĕсем çинчен, пурнăçра лайăххи çинчен калакан произведенисем пурте «хитрелетсе кăтартакан» произведенисем пулса тăраççĕ, теççĕ. Ун пек каланипе килĕшме çук. Паллă ĕнтĕ, хăш-пĕр произведенисенче хитрелетсе кăтартнисем пулнă, парти ун пек явление ырламанни çинчен каласа пачĕ. Анчах та çав тапхăрта пурте япăх пулман-çке-ха, халăх социализм строительствин çав тапхăрĕнче те паттăрлăх кăтартнă, çавăнпа та пурне те тикĕтпе варалама юрамасть.

Пирĕн пурнăçăн лайăх енĕсем çинчен çыракан писательсемпе искусствă деятелĕсене «хитрелетсе кăтартакансем» тесе ят пама юратакансене отпор парас пулать. Ун пек пулсан, пурнăçра япăххине кăна шыракансене, пурне те хура сăрăпа сăнласа паракансене мĕнле ят памалла-ха? Тен, вĕсене тикĕтпе варалакансем темелле пулĕ. Пурнăçри лайăххине литературăпа искусствăра тивĕçлипе çутатса памалла.

Литературăпа искусствă деятелĕсен пурнăçри явленисене тарăнрах тĕпчесе вĕренмелле тата вĕсене хăйсен произведенийĕсенче тĕрĕсрех çутатса памалла. Кашниех хăйĕн хĕç-пăшалĕпе халăхшăн, пирĕн пĕтĕмĕшле ĕçшĕн ĕçлеме тивĕçлĕ. Эпĕ кашни писателе, скульптора, композитора, кинопа театр деятельне асра тытса калатăп. Тĕрлĕ йышши искусствăн кашнин хĕç-пăшалĕ пирĕн халăха усă кӳме тивĕçлĕ, çапла вара тăшмансене аркатмалла тата çутă пуласлăх патне—коммунизмлă обществă патне çул хывмалла.

Эпир çакăн çинчен яланах асра тытма тивĕçлĕ. Янăравлă сăмахсем кирлĕ мар. Кашни твор-

чествă работникĕ çинчен халăх вăл мĕн тунине кура хак парать. Анчах хăш-пĕрисем çав вăхăтра, пурнăçан лайăх енĕсене те курса, произведенисем çырнă çынсене пурне те сивлеççĕ. Çав вăхăтра çырнисене пурне те пĕр сăлтавсăрах хурласа тăкмалла мар. Ку вăл XX тата XXII съездсенчен чакни пулать, тейĕç. Çук, ку вăл XX тата XXII съездсен çул-йĕрне çирĕплетни! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

И. Г. Эренбургăн мемуарĕсене вуланă чухне çакна асăрхатăн: вăл пурне те тĕксĕм сăрăсемпе сăнласа парать. Уйрăм çынна ытлашши пысăка хунă тапхăрта Эренбург юлташа хăйне хĕсĕрлемен е ĕçлеме пӳлмен. Сăмахран, Галина Серебрякова писателĕн кун-çулĕ пачах урăхла пулса тухнă, вăл нумай çул хушши тĕрмере ларнă. Анчах та вăл, çавна пăхмасăрах, хавхаланулла кăмăла сыхласа хăварнă, парти ĕçне парăнса тăнă, реабилитациленĕ хыççăн тӳрех творчествăлла ĕçе пикенчĕ, хăйĕн хĕçпăшалне тытрĕ, вăл халăха тата партие кирлĕ произведенисем çырать. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Çĕршывра хăватлă производителлĕ вăйсем туса хунă пулнă, культурăллă революци тунă. Совет халăхĕн çавăн пек мухтавлă çĕнтерĕвĕсен чаплă результачĕсене пĕтĕм тĕнче паян пирĕн çĕршыв коммунизм патне хăватлăн утнинче, наукăпа техникăн аслă открытийĕсенче, космоса çĕнтернинче курать. Пирĕн паянхи çĕнтерӳсене экономикăпа культурăн çав çулсенчи çитĕнĕвĕсенчен уйрăм илсе хаклама юрамасть.

Халĕ час-часах çакăн пек ыйту лартаççĕ: законлăха пăснисене тата влаçпа усă курса киревсĕр ĕçсем тунине мĕншĕн-ха Сталин пурăннă вăхăтра усса палăртман тата пĕтермен, ун чухне çавăн пек тума май пулнă-и? Парти документчĕсенче ку ыйту тăрăх пирĕн шухăша пĕр хутчен çеç мар туллин тата яр-уççăн çутатса панă. Шел пулин те, событисене пăсса кăтартма хăтланакан çынсем, çав шутра искусствă работникĕсем хушшинче те пур-ха. Çавăнпа та паян та пирĕн каллех Сталина ытлашши пысăка хуни çинчен тăракан ыйту пирки калама тивет.

Ыйту тухса тăрать: партин ертсе пыракан кадрĕсем, сăмахран, ун чухне çынсене арестлени çинчен пĕлнĕ-и? Çапла, пĕлнĕ. Анчах та вĕсем çынсене нимĕн айăпсăр арестлени çинчен пĕлнĕ-и? Çук. Вĕсем ăна пĕлмен. Вĕсем Сталина шаннă, çавăнпа та тӳрĕ кăмăллă, пирĕн ĕçе парăнса тăракан çынсене репрессилеме пултарасси çинчен шухăшламан та.

Совет обществи Октябрь революцийĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласа çĕршывра эксплуататорла классене тĕппипе пĕтеричченех чи çивĕч класс кĕрешĕвĕ пынă лару-тăрура пурăннă. Класс тăшманĕсене граждан вăрçинчи çапăçусенче çĕмĕрсе тăкнă, анчах вĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкман, вĕсем совет стройне сăтăр кӳрес тĕлĕшпе ирсĕр шухăша пăрахман. Вĕсем кĕрешӳ формисене улăштарнă, тĕрлĕ меслетсемпе усă курма тытăннă — саботаж тунă, сăтăр кӳнĕ, вăрттăн вĕлернĕ, террорла актсем, пăлхавсем тунă.

Революцин хăй çĕнсе илнисене хӳтĕлемелле пулнă-и? Çапла, унăн çавăн пек тумалла пулнă, малтанхи кунсенчен пуçласах вăл татăклăн çавăн пек тунă. Паллă ĕнтĕ, Совет влаçĕн малтанхи уйăхĕсенчех Владимир Ильич Ленин декречĕ тăрăх пролетариат диктатурин органне, революци тăшманĕсемшĕн хăрушă орган, контрреволюцие хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлекен ВЧК туса хунă. Революцие хирĕç тунă каварсене уçса палăртсан, Сталин, Центральнăй Комитетăн секретарĕ пулнă май, çĕршыва каварçăсенчен тасатас тĕлĕшпе кĕрешнĕ тата çак ĕçе халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешес лозунгпа ирттернĕ. Ăна çак ĕçре шаннă тата ăна пулăшнă. Урăхла пулма та пултарайман. Пирĕн партин историйĕнче революци ĕçне сутнă тĕслĕхсем пĕр хутчен кăна мар пулнă вĕт-ха, сăмахран, Малиновскин — Государствă думинчи большевиксен фракцийĕн членĕн провокаторла ĕçĕ.

Парти революципе социализм строительствин тăшманĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе ун чухне Сталин ертсе пынă. Çакă вăл унăн авторитетне çирĕплетнĕ. Çавăн пекех Сталин революциллĕ кĕрешĕве Октябрьти революциччен, революци вăхăтĕнче тата кайран, социализм тунă çулсенче мĕнле вăй хунине пурте пĕлсе тăнă. Ленина хирĕçле юхăмсемпе партири оппозициллĕ ушкăнсене хирĕç, парти речĕсене тата Совет влаçне çирĕплетессишĕн, ленинизмшăн, тăшманла юхăмсене хирĕç тата партири оппозициллĕ ушкăнсене хирĕç, сăмахран, троцкистсене, зиновьевецсене, сылтăм оппортунистсемпе буржуалла националистсене хирĕç кĕрешнĕ тапхăрта Сталин авторитечĕ уйрăмах ӳснĕ.

В. И. Ленин вилнĕ хыççăн парти социализм строительствин тата партири лару-тăравăн тĕп ыйтăвĕсем тăрăх троцкистсемпе тата зиновьевецсемпе дискусси ирттернĕ. Çав дискуссире Троцкин, Зиновьевăн тата вĕсен хӳрешкисен Ленина хирĕçле, социализмшăн тăшманла шухăшĕсемпе ĕçĕсене — капитализмла йĕри-тавралăх пулнă условисенче пирĕн çĕршывра социализм тумалли ленинла çул-йĕре хирĕç пыракан шухăшсемпе ĕçсене усса палăртнă тата тăрă шыв çине кăларнă.

Партин çĕршыва индустриализацилемелли тата ял хуçалăхне коллективизацилемелли ленинла çул-йĕрне хирĕç троцкистсем хыççăн Бухарин, Рыковпа Томский ертсе пыракан сылтăм оппортунистсем тăнă. Вĕсен шухăшĕсем пурнăçа кĕнĕ пулсан, Совет Союзĕн экономики ирĕксĕрех капитализмлă çĕршывсене пăхăнса тăракан пулнă пулĕччĕ, çакă вара пирĕн çĕршывра тепĕр

хут капитализм туса хурасси патне илсе пыма пултарнӑ. Сылтӑм оппортунистсен ҫул-йӗрӗ ҫакӑн патне илсе пыма пултарнӑ: пирӗншӗн тӑшманла, агрессиллӗ капитализмлӑ ҫӗршывсем хупӑрласа тӑнӑ условисенче пирӗн ҫӗршыв ҫар тӗлӗшӗнчен хӗҫ-пӑшалсӑр тӑрса юлнӑ пулӗччӗ.

Пирӗн парти ҫӗршыва индустриализацилес тата ял хуҫалӑхне коллективизацилес тӗлӗшпе тытса пыракан ҫул-йӗр вӑл ленинла ҫул-йӗр пулнӑ, ӑна пӗтӗм парти, ҫӗршыври мӗн пур ӗҫсыннисем ырланӑ. Пирӗн вунӑ ҫул хушшинче экономикӑ аталанӑвӗ тӗлӗшӗнчен Хӗвеланӑҫ Европӑ ҫӗр ҫул хушшинче утса тухнӑ историллӗ ҫул-йӗре утса тухмалла пулнӑ. Троцкистсене, зиновьевецсене, бухаринецсемпе националистсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре Сталин В. И. Ленин вилнӗ хыҫҫӑн малтанхи ҫулсенче ленинла позицисене хӳтӗленӗ, ҫак ӗҫре паллӑ ыйвӑн йышӑннӑ. Ҫавӑнпа та парти тата массӑсем ӑна шаннӑ, ӑна пулӑшнӑ.

Анчах та Сталинӑн пысӑк ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсем пулнӑ, ҫакӑн ҫинчен хӑй вӑхӑтӗнче Владимир Ильич Ленин партие асӑрхаттарнӑ.

Аслӑ Ленин ҫак хӑрушлӑха кӑтартса панӑ: хӑй аллинче калама ҫук пысӑк влаҫ тытса тӑракан пулса, Сталин хӑйӗн пысӑк ҫитменлӗхӗсене пула ҫав влаҫпа тӗрӗс усӑ кураймӗ. Партин Центральнӑй Комитечӗн генеральнӑй секретарӗ пулма Сталин вырӑнне урӑх ҫынна лартма сӗнсе, Владимир Ильич кунпа пӗрлех ҫапла шутланӑ: ку вырӑна ҫакӑн пек деятель лартмалла, «ҫав ҫын ытти енчен Сталин юлташран пӗр ҫакӑнпа кӑна пахарах пулмалла: юлташсем тӗлӗшпе чӑтӑмлӑрах, йӗркеллӗрех, вашаватрах, тимлӗрех пулмалла, кутӑнлӑхӗ сахалтарах пулмалла тата ытти те».

Владимир Ильич Ленин Сталина марксист, пирӗн партин паллӑ деятелӗ, революцие парӑннӑ ҫын тесе шутланӑ. Хӑйӗн шухӑшӗсене В. И. Ленин партин черетлӗ съездне янӑ ҫырура каласа панӑ, ӑна партин XIII съездӗнче делегацисем пӑхса тухнӑ. Ҫак ыйтӑва татса парса, парти ун чухне Центральнӑй Комитетри вӑйсен чӑн-чӑн шайлашӑвне шута илнӗ, Сталинӑн паха енӗсене асра тытса, вӑл шантарса каланине ӗненнӗ, вӑл Владимир Ильич кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсене пӗтерессе шаннӑ. Сталин кайран хӑй панӑ сӑмаха улӑштарнӑ тата парти шаннипе усӑ курса киревсӗр ӗҫсем тунӑ, ку вӑл сиенлӗ ӗҫсем патне илсе пынӑ, вӗсем уйрӑм ҫынна ытлашши пысӑка хунӑ тапхӑрта сарӑлнӑ.

Сталин парти пурнӑҫӗн ленинла нормисене сӗмсӗррӗн пӑснине, законсӑр ӗҫсем, влаҫпа усӑ курса киревсӗр ӗҫсем тунине, коммунизм ӗҫне пысӑк сиен кӳнӗскерсене, парти ҫирӗппӗн сивлерӗ тата халӗ те сивлет. Кунпа пӗрлех Сталин партипе коммунизмла юхӑм умӗнче тунӑ тава тивӗҫлӗ ӗҫсене кирлӗ пек хаклать. Эпир халӗ те ҫапла шутлатпӑр: Сталин коммунизма парӑнса тӑнӑ, вӑл марксист пулнӑ, ҫакна тунма юрамасть тата тунма кирлӗ те мар. Унӑн айӑпӗ ҫакӑн пек: вӑл теорипе политикӑ тӗлӗшӗнчен пысӑк йӑнӑшсем тунӑ, государствӑпа партие ертсе пырас ӗҫре ленинла принципсене пӑснӑ, партипе халӑх ӑна панӑ влаҫпа усӑ курса киревсӗр ӗҫсем тунӑ.

Сталина пытарнӑ чухне нумайӑшӗн, ҫав шутра манӑн та куҫсем шывланчӗҫ. Ку вӑл чӗререн тухнӑ куҫҫуль пулнӑ. Сталинӑн хӑш-пӗр ҫитменлӗхӗсем ҫинчен пӗлнӗ пулин те, эпир ӑна ӗненнӗ.

Сталина шанса тӑни тата унӑн авторитечӗ мӗн тери пысӑк пулнине уҫҫӑнрах кӑтартса парас тесе, эпӗ ҫакӑн пек тӗслӗх илсе кӑтартам. Нумайӑшӗ Якир юлташа astӑваҫҫӗ. Вӑл ҫарти пысӑк начальник, питӗ таса кӑмӑллӑ большевик пулнӑ, ҫав ҫулсенче пӗр айӑпсӑр пӗтнӗ. Хӑйне персе вӗлерме приговор йышӑннӑ пулин те, вӑл ку ӗҫ Сталинтан килмен тесе ӗненнӗ, персе вӗлерес умӗн те: «Сывӑ пултӑр Сталин!» тесе кӑшкӑрнӑ. Допрос тунӑ чухне Якир юлташ следовательсене ҫапла каланӑ: мана арестлени тата айӑплани вӑл провокаци, партие тата Сталина улталанӑ, вӗсем ҫакна пурне те тӗпчесе пӗлӗҫ, ман пек ҫынсем провокацисене пула пӗтнине пӗлӗҫ. Якир юлташ кӑна мар, партипе государствӑн пӗр айӑпсӑр асап курнӑ ытти деятелӗсем те нумайӑшӗ ҫапла шутланӑ.

Сталин юлашки ҫулсенче питех те чирлӗ ҫын пулнӑ, вӑл шутсӑр шанман, хӑйне йӗрленӗ пек туйнӑ. «Ленинградри ӗҫ», «врачсен ӗҫӗ» тата ытти «ӗҫсем» мӗнле пуҫланса кайни ҫинчен парти халӑха тӗплӗн каласа пачӗ. Анчах та, юлташсем, ҫав тапхӑрта Сталинпа юнашар ӗҫленӗ ҫынсем унпа пур енчен те килӗшнӗ пулсан, ҫавнашкал «ӗҫсем» тата нумайрах пулма пултарнӑ. Пӗррехине хамӑн сӑмахра эпӗ Сталин «Мускаври контрреволюциллӗ центр» текен ӗҫе ҫӗклеме шутлани ҫинчен каласа панӑччӗ. Анчах та, паллӑ ӗнтӗ, унӑн шухӑшӗпе килӗшекенсем пулмарӗҫ, вара Мускаври парти организацийӗн кадрӗсене ҫӗнӗрен массӑллӑн репрессилемерӗҫ.

Ҫакӑ та паллӑ: Сталин Советлӑ Украинӑри творчествӑлла интеллигенцин чылай пайне пӗтерме шутланӑ. Бериялпа Каганович элекленине пула, вӑл вӑрҫӑ хыҫҫӑн Советлӑ Украинӑра творчествӑлла интеллигенци хушшинче темле националистла тенденцисем, шухӑшсем пуҫланса кайнине туйма тытӑннӑ, вара вӑл Украинӑри чи паллӑ писательсене тата искусствӑ деятелӗсене пӗтерес ҫулпа пыма пуҫӑннӑ. Ун чухне Украинӑри большевиксем Сталин шухӑш-кӑмӑлне парӑннӑ пулсан, Украинӑри интеллигенци пысӑк ҫухатусем тӳснӗ пулӗччӗ тата Украинӑри националистсем ҫинчен «ӗҫ» туса хунӑ пулӗччӗ-и, тен.

Сталин шикленсе шухӑшланине тата ыттисене шанманнине пӗлсе, империализмлӑ ҫӗршывсен разведкисем ятарласа ӗҫсемпе документсем

«яра-яра» панӑ, вӗсем чӑнах та тӗрӗс пек туйӑннӑ тата пирӗн ҫӗршывра Совет влаҫне хирӗҫ, Совет государствине хирӗҫ ҫар спецӗсен ушкӑнӗсем кӗрешеҫҫӗ, тӗрлӗ преступникла ушкӑнсен каварӗсене тӑваҫҫӗ тесе шухӑшлама пӗтӗмпех майсем туса панӑ.

Мемуар литературине юратакансем ҫав вӑхӑтри ӗҫсене час-часах чикӗ леш енчен, инҫетрен ҫырнӑ пек ҫутатаҫҫӗ, ҫитменнине тата тупсӑмӗ енчен те, ҫав событисене пула тухса тӑнӑ сиенлӗ ӗҫсен пӗлтерӗшӗ енчен те чӑн-чӑн пурнӑҫран аякра пулнӑ событисене ҫутатаҫҫӗ.

Анчах, калас пулать, пирӗн хушӑра Сталин иртӗхнине хӑйсем тӳссе ирттернӗ юлташсемпе питӗ паллӑ писательсем, искусствӑ деятелӗсем пур, вӗсем ҫав питӗ йывӑр вӑхӑтсенче те ҫавнашкал ӗҫсемпе килӗшмен, вӗсене хирӗҫ тӑнӑ, хӑйсен шухӑшӗсем ҫинчен уҫҫӑн тӳрремӗнех Сталина пӗлтернӗ.

Эпир пурте хисеплекен Михаил Александрович Шолохов 1933 ҫулхи ҫуркунне ун чухне Дон тӑрӑхӗнче тӑвакан тискер ӗҫсене хирӗҫ тӑнӑ. Нумаях пулмасть архивра Михаил Александрович Сталин патне янӑ икӗ ҫырӑва тата ҫав ҫырусем ҫине Сталин панӑ ответсене тупнӑ. Вешенскинче тата Дон тӑрӑхӗнчи ытти районсенче преступникла ӗҫсем тунӑ ҫынсен тарӑхтаракан ӗҫӗсем ҫинчен Шолохов чӗрери юнпа ҫырнӑ тӗрӗс ҫырусене хумханмасӑр вулама ҫук.

Михаил Александрович 1933 ҫулхи апрелӗн 16-мӗшӗнче Сталин патне ҫапла ҫырнӑ: «Кун пек тӗслӗхсем вӗҫӗмсӗр нумай илсе кӑтартма пулать. Ку вӑл — сулӑнчӑксен уйрӑм тӗслӗхӗсем мар, ку вӑл — районти тыр-пул хатӗрлевне ирттерес тӗлӗшпе законлӑ йӗркепе пурнӑҫа кӗнӗ «меслет». Ҫак тӗслӗхсем ҫинчен эпӗ е коммунистсенчен, е колхозниксенчен хӑйсенчен илтнӗ, вӗсем ҫав «меслетсене» хӑйсем тӳссе ирттернӗ, кайран вӗсем «ҫавӑн ҫинчен хаҫата ҫырма» ыйтса ман пата пычӗҫ.

Астӑватӑр-и эсир, Иосиф Виссарионович, Короленкӑн «Лӑпланнӑ ялта» ятлӑ очеркне? Ҫапла, кулакӑнне вӑрланӑ тесе айӑпланӑ виҫӗ хресчен кӑна мар, вуншар пин колхозник ҫапла «ҫухалса» пӗтнӗ. Ҫитменнине тата, куратӑр-и, техникӑллӑ майсемпе туллинрех усӑ курса тата ҫав тери хӑрушла».

Шолохов малалла Сталинран районсенче пулса иртекен ӗҫсем ҫине пӑхма ыйтнӑ. «Колхозниксенчен тата Совет влаҫӗнчен мӑшкӑлланӑ ҫынсен ӗҫӗсене кӑна мар, ҫав ӗҫсене ертсе пынӑ ҫынсен ӗҫӗсене те йӗрлесе тухмалла».

«Эпӗ мӗн ҫырса кӑтартнисем ЦКна интересленпереҫҫӗ пулсан, Вешенски района чӑн-чӑн коммунистсене ярӑр, вӗсем районти колхоз хуҫалӑхне пӗтереслех аркатнӑ ҫынсене, вӗсем кам иккенне пӑхмасӑр, тӑрӑ шыв ҫине кӑларма хӑюлӑх ҫитерме пултарччӑр, колхозниксене асаплантарма, хӗнеме тата вӗсенчен мӑшкӑллама тискер «меслетсемпе» усӑ курнӑ пур ҫынсене те тӗпчесе палӑртма кӑна мар, тата ҫав ӗҫсене тума хавхалантарса пынӑ ҫынсене те йӗрлесе тупма пултарччӑр».

Шолохов юлташ ҫырӑвӗнчен ытти вырӑнсене те илсе кӑтартма пулӗччӗ. Ку вӑл — уҫӑмлӑн ҫырнӑ хӑюллӑ ҫыру, сӑмах майӗн каласан, вӑл унӑн сочиненийӗсенче те, аса илӗвӗсенче те пичетленмен.

Эпӗ кунта урӑххи ҫинче чарӑнса тӑрасшӑн — Шолохов писатель ҫырӑвӗ ҫине Сталин мӗнле ответленӗ-ха? Вӑл Михаил Александрович патне ҫапла ҫырнӑ: «Сирӗн ҫырусем ӗҫсене пӗр енлӗрех ҫутатаҫҫӗ». Сталин ҫырӑвӗнче ҫапла каланӑ:

«Эпӗ Сире ҫырӑвӑрсемшӗн тав турӑм, мӗншӗн тесен вӗсем партипе совет ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ, тепӗр чухне пирӗн работниксем, тӑшмана ҫӑварлӑхлас тесе, асӑрхаман хушӑра туссене пыра-пыра ҫапаҫҫӗ, вара садизм патнех ҫитсе тӑраҫҫӗ. Анчах ҫакӑ эпӗ Сирӗнпе **пур енчен** те килӗшетӗп тенине пӗлтермест. Эсир **пӗр енне** куратӑр, япӑх мар куратӑр. Анчах ку вӑл ӗҫӗн **пӗр енӗ** кӑна. Политикӑра йӑнӑшас мар тесен (Сирӗн ҫырусем вара — беллетристикӑ мар, пӗтӗмпех политикӑ) йӗри-тавралла пӑхас пулать, **тепӗр енне те** курма пӗлес пулать. Тепӗр енӗ акӑ мӗнре: сирӗн районти (сирӗн районти кӑна та мар) тыр-пул ӳстерекен хисеплӗ ҫынсем «итальянкӑ» (саботаж!) тунӑ, рабочисене, Хӗрлӗ Ҫара ҫӑкӑрсӑр тӑратса хӑварма хӑтланнӑ. Саботаж шӑв-шавсӑр иртнӗ тата тул енчен кӑмӑла хуҫмасӑр (юн тӑкмасӑр) пулнӑ пулин те, ҫак тӗслӗх сирӗн районти тыр-пул ӳстерекен хисеплӗ ҫынсем тӗрӗссипе совет влаҫне хирӗҫ «шӑв-шавсӑр» вӑрҫӑ тунине улӑштарма пултараймасть. Выҫӑ тӑратса хӑварас тесе, хисеплӗ Шолохов юлташ...

Паллах, ҫакӑ вӑл пирӗн работниксем тунӑ йӗркесӗр ӗҫсене, эсир ҫырса кӑтартакан ӗҫсене тӳрре кӑларма ниепле те пултараймасть, — тесе ҫырнӑ малалла Сталин. — Ҫав йӗркесӗр ӗҫсене тунӑшӑн айӑплисене тивӗҫлӗ наказани памалла. Анчах ҫутӑ кун пекех ҫакӑ паллӑ: тыр-пул ӳстерекен хисеплӗ ҫынсем ҫав териех айӑпсӑр ҫынсем мар ӗнтӗ, аякран ҫеҫ ҫавӑн пек туйӑнма пултарнӑ».

Вӑт, куратӑр-и ӗнтӗ, Михаил Александрович Шолохов писатель, Сталина законсӑр тӑвакан чӑтма ҫук ҫитменлӗхсем ҫинчен пӗлтернӗскер, ӗҫсене «аякран ҫеҫ ҫавӑн пек туйӑннӑ пек» курнӑ. Акӑ мӗнле каланӑ халӑх хушшинче пулнӑ писатель ҫинчен, коллективизаци ҫинчен партиллӗ тӗрӗс кӗнеке — «Уҫнӑ ҫерем» ҫырнӑ писатель ҫинчен. (Н у м а й ч ч е н  а л ӑ  ҫ у п а ҫ ҫ ӗ).

Чӑн-чӑн писатель-большевик пулса, М. Шолохов тарӑхтаракан тӗрӗсмарлӑхпа килӗшмен,

ун чухне тӑвакан законсӑр ӗҫсене хирӗҫ тӑнӑ, анчах Сталин Шолоховӑн ҫав сигналӗсене итлемен, хӑюллӑ коммунистсен ҫавнашкал ытти сигналӗсене те итлемен.

Сталин влаҫпа ытлашши усӑ курни тата вӑл киревсӗр ӗҫсем туни ҫинчен калакан тӗслӗхсене эпир вӑл вилнӗ хыҫҫӑн тата Берияна — партипе халӑхӑн усал тӑшманне, шпиона тата ылханлӑ провокатора тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ хыҫҫӑн тин пӗлтӗмӗр.

Ҫакна асра тытмалла: Берия, ҫав киревсӗр ҫын, Сталин тупӑкӗ умӗнче хӑй савӑнӑҫне пытарма кирлӗ мар тесе шутланӑскер, влаҫ патнелле тискеррӗн туртӑннӑ, парти лидерӗ пулма хӑтланнӑ. Ун чухне ҫавнашкал хӑрушлӑх чӑннипех пулнӑ. Ҫакӑ Октябрьти революци ҫӗнтерӗвӗшӗн, пирӗн ҫӗршыври коммунизм тӑвас ӗҫшӗн тата пӗтӗм тӗнчери коммунизмла юхӑм ҫитӗнӗвӗсемшӗн пысӑк хӑрушлӑх пулнӑ.

Сталин вилнӗ хыҫҫӑн малтанхи кунсенчен пуҫласах Берия парти ӗҫне чӑрмантаракан, Совет Союзӗпе социализм лагерӗнчи тӑванла ҫӗршывсем хушшинчи туслӑ ҫыхӑнусене пӗтерме тӗллев тытакан утӑмсем тунӑ. Сӑмахран, Маленковпа пӗрле вӑл Демократиллӗ Германи Республики социализмлӑ государствӑ пулнине пӗтерме, Германири социалистсен пӗрлӗхлӗ партине социализм тӑвассишӗн кӗрешмелли лозунга пӑрахӑҫлама сӗнӳ парасшӑн пулнӑ. Партин Центральнӑй Комитечӗ ун чухнех сутӑнчӑклӑ ҫак сӗнӳсене тарӑхса сирсе пӑрахрӗ, провокаторсене аркатмаллах пырса ҫапрӗ.

Центральнӑй Комитет йышӑннӑ мерӑсем партипе ҫӗршыва Берийн — империалистсене сутӑннӑ ҫак агентӑн ултавлӑ шухӑшӗсенчен хӳтӗлесе хӑварчӗҫ.

Юлташсем, ҫак мӗн пур ӗҫсем ҫинчен лайӑх пӗлес пулать, совет обществи ҫинчен, унӑн хальхи тата малтанхи пурнӑҫӗ ҫинчен ҫыракан кашни ҫыннӑн историллӗ событисене тӗплӗн пӗлес пулать. Совет халӑхӗ кивӗ, буржуаллӑ тӗнчене аркатса ҫӗнӗ, социализмлӑ обществӑ турӗ, пирӗн ҫӗршывра вӑл пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерчӗ, ҫапла вара халӑх пысӑк та мухтавлӑ ҫул утса тухрӗ. (Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫак ҫул ҫӑмӑл пулмарӗ; социализмшӑн пыракан кӗрешӳре пирӗн халӑх хӑй умне тухса тӑнӑ пур йывӑрлӑхсемпе ҫитменлӗхсене те паттӑррӑн ҫӗнтерчӗ. Йывӑрлӑхсене ҫӗнтернӗ ҫӗрте совет ҫыннин характерӗ, ҫӗнӗ обществӑ ҫыннин, тӗнчене революцилле ҫӗнетсе улӑштарассишӗн кӗрешекен борец характерӗ йӗркеленчӗ. Ленинла пысӑк идейӑлӑх, иксӗлми хастарлӑх, коммунизмла идеалсем ҫӗнтермелле тӑвассишӗн кӗрешме харпӑр хӑй пурнӑҫне пама хатӗр тӑни — Коммунистсен партийӗ воспитани панӑ совет ҫыннисен ӑрӑвӗн чаплӑ пахалӑхӗсем. Скептицизм, ирӗклӗх ҫукки тата йӗркесӗрлӗх, пессимизм тата пурнӑҫ ҫине нигилистла пӑхни совет ҫыннисемшӗн ют.

Литературӑн хӑш-пӗр произведенийӗсенче, кинофильмсемпе спектакльсенче ҫынсем хӑйсен пурнӑҫӗнчи йывӑрлӑхсем пирки пӑшӑрханса-кӳренсе ҫӳренине пур майсемпе те сутатни вара тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерет. Халӑхӑн пултаруллӑ ӗҫне хутшӑнман, унӑн ӗҫ поэзийӗпе хавхаланман, пурин ҫине те аякран пӑхакан ҫынсем кӑна пурнӑҫри картинӑсене ҫавӑн пек сутатма пултараҫҫӗ. Тепӗр чухне пурнӑҫа тӗксӗм сӑрпа сутатакан ҫулсенчи событисене хутшӑннӑ май, хамӑн опыт тӑрӑх ҫапла калама пултаратӑп: ҫав ҫулсем савӑнӑҫлӑ та телейлӗ ҫулсем, кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсен ҫулӗсем, коммунизмлӑ идейӑсем ҫӗнтернӗ пулсем пулнӑ. (Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ).

Нумаях пулмасть Вальтер Ульбрихт юлташ пире «Русское чудо» ятлӑ кинофильм кӑтартрӗ, ӑна нимӗҫсен кино работникӗсем Аннелипе Андре Торндайк тунӑ. Ку вӑл — питӗ чаплӑ фильм. Эпир ӑна пӑхнӑ чухне пирӗн умма хамӑр ҫӗршыв пурнӑҫӗнчен илнӗ тӗрӗс картинӑсем тухса тӑчӗҫ. Эпир ӑна пӑхнӑ чухне эпӗ хама граждан вӑрҫине хутшӑннисем хушшинче курнӑн туйрӑм, ҫав кунсенче Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем мӗнле пулнине куртӑм. Фильма пирӗн документлӑ материалсем тӑрӑх тунӑ. Калас пулать, пирӗн кино работникӗсене те ҫакӑн пек лайӑх, тӗрӗс фильмсем ӳкерме тӳр килтӗрччӗ. «Русское чудо» фильм пирӗн ӗнерхи куна паянхи кунпа танлаштарса кӑтартать. Пӑхатӑн та ҫак фильма ҫапла шухӑшлатӑн: авӑ мӗнле утӑмсем турӗ пирӗн ҫӗршыв! (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Хамӑрӑн ҫамрӑк ҫынсене эпир те ҫапла сӗнесшӗн: революци историйӗнчен, сирӗн аҫусемпе аннӳсем хутшӑннӑ кӗрешӳ историйӗнчен вӗренӗр, вилнӗ ҫынсене чыслӑн хисеплесе пурӑнӑр, халӗ пурӑнакансене хисеплӗр, эсир хӑвӑрӑн аҫусен ӗҫӗсене малалла туса пыраканӗсем пулма тивӗҫлӗ пулас тетӗр пулсан, вӗсенчен мӗн кирлине йӑлтах хӑвӑр алла илӗр. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ). Эсир тивӗҫе сыхласа усраймасан вара сире намӑс пулать.

Эпир хамӑр халӑха, унӑн вӑйне, унӑн творчествӑллӑ революциллӗ ӑс-хакӑлне ҫирӗп ӗненетпӗр. Эпир ҫакна шанатпӑр: пирӗн творчествӑ ӗҫӗнчи ҫамрӑксем хӑйсен ашшӗсен ӗҫне малалла туса пырӗҫ, яланах халӑхпа пӗр тан пырӗҫ.

Ҫӗнтерӳ тума пӗтӗм чун-чӗререн тӑрӑшакан боец походсемпе ҫапӑҫусенчи йывӑрлӑхсене, вӗсем темле пысӑк пулсан та, асӑрхамасть. Вӑл хӑйӗн пурнӑҫне идейӑшӑн кӗрешме парать, мӗншӗн тесен кӗрешӳ ҫав тери ҫивӗчленсе ҫитнӗ чухне уншӑн идейӑ кирек мӗнле йывӑрлӑхсенчен те пахараххи, чи кирли пулса тӑрать.

Пурнӑҫри явленисене тата историллӗ событисене ҫын мӗнле хакласси вӑл хӑй мӗнле идейӑл-

лă позицисем çинче тăнинчен, çав явленисемпе событисем çине хăй мĕнле пăхнинчен килет. Пирĕн революци тата социализм туни çинчен кĕнекесем çырнă çынсем хушшинче революцие тата халăхăн улăштарса çĕнетекен ĕçне «маччари кантăк витĕр» сăнаса тăнисем те пур.

Хăйсене революци ăшă йăвасенчен кăларса ывăтнă, хăйсем революцие ăнланса илмен тата ăна йышăнман çынсем те революци çинчен, совет халăхĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кĕнекесем çырнă. Событисен хумĕ вĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна — Мускавран Крыма, Крымран Тбилисие, унтан вара пĕтĕм тĕнче тăрăх хăваланă. Хăйсем çине тата хăйсем йышши ытти çынсем çине тиеннĕ йывăрлăхсем пирки, пăсăлнă пулă тата çавнашкал ытти апат-çимĕç çиме тивнĕ пирки вĕсем хăйсен повеçĕсенче, романĕсенче тата мемуарĕсенче нăйкăшаççĕ. Пирĕн совет çыннисем ун чухне япăх тумланнă тата выçăллă-тутăллă пурăннă пулсан та, тепĕр чухне пăсăлнă пулă та пулман пулин те, тăшмансене çĕнтернĕ, анчах вĕсем нăйкăшман, йынăшман, çине тăрса кĕрешнĕ, революци çĕнтерĕвĕсене хăюллăн хӳтĕленĕ. (Т ă в ă л л ă н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Пирĕн парти яланах литературăри тата искусствăри партилĕхшĕн тăнă. Вăл пурне те — литературăпа искусствăн ватă деятелĕсемпе çамрăк деятелĕсене те, партире тăракансемпе тăманнисене те, анчах художествăллă творчествă ыйтăвĕсенче коммунизмлă идейăлăх позицийĕсем çинче çирĕп тăракансене саламлать. Вĕсем— парти тĕрекĕ, унăн шанчăклă салтакĕсем. (А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Эпир вĕсене пулăшса пынă, малашне те пулăшса пырăпăр, пирĕн творчествăллă вăйсем ӳссе тĕрекленсе пыччăр тесе, революциллĕ художниксен пĕрлĕхлĕ боевой çемйине, хăйсен творчествинче çĕнтерсе пыракан марксизм-ленинизм идейисене хӳтĕлекен, çĕрсе пăнтăхнипе, юттипе, тăшманлипе, вĕсем кирек ăçтан сăрхăнса кĕрсен те килĕшмен художниксен çемйине пĕрлешчĕр тесе тăрăшатпăр тата малашне те тăрăшăпăр. (А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Кунта Р. Рождественский поэт тухса каларĕ. Вăл Н. Грибачевăн «Нет, мальчики!..» сăвви пирки чарăнса тăчĕ. Рождественский юлташ сăмахĕнче пирĕн мĕн пур çамрăксен шухăш-кăмăлне çамрăк литераторсен ушкăнĕ кăна палăртать, вĕсем çамрăксене вĕрентекенĕсем пулса тăраççĕ текен шухăш палăрчĕ. Ку пачах та апла мар. Пирĕн совет çамрăкĕсене парти воспитани панă, вĕсем парти хыççăн пыраççĕ, партире вĕсем хăйсен воспитательне тата çулпуçне курса тăраççĕ. (Т ă в ă л л ă н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Р. Рождественский çамрăк поэта эпĕ поэт-салтакран, çивĕч куçлă, идейă тĕлĕшĕнчи тăшмансене тĕл тивертекен Н. Грибачев поэт-коммунистран пример илме сĕнесшĕн. (А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Эпир идейăллă кĕрешӳ çивĕч пынă, çынсен шухăш-кăмăлĕшĕн, вĕсене çĕнĕрен воспитани парасшăн кĕрешнĕ тапхăрта пурăнатпăр. Ку вăл— кăткăс ĕç, станоксемпе заводсене çĕнетнинчен чылай йывăртарах. Эсир — литературăпа искусствă деятелĕсем,— ытарлăн каласан,— çынсен психологине çĕнетес ĕç тимĕрçисем. Сирĕн хăватлă хĕç-пăшал пур, çак хĕç-пăшал яланах халăх интересĕсемшĕн кĕрешмелле.

Çирĕпрех каласан, обществăра партисĕрлĕх çук. Кам та кам хăйĕн партисĕрлĕхĕ çинчен сăмах сарать, çакна вăл, хăй майлă çынсем пухас тесе, парти шухăшĕсемпе тата идейисемпе килĕшменнине пытарас тесе тăвать. Чи ирсĕр реакционерсемпе контрреволюционерсем те партисĕрлĕх лозунгĕпе витĕнсе кĕрешни, вĕсем буржуаллă партире тăни каярахпа тин палăрни историре пĕр хут кăна мар пулнă.

Кун пек тĕслĕхсене пирĕн çĕршыври рабочи класпа ĕç хресченĕсем Совет влаçне тĕреклетессишĕн кĕрешнин историйĕнчен сахал мар илсе кăтартма пулать. Тĕрлĕ вăхăтсенче, тĕрлĕ тапхăрсенче рабочисемпе хресченсен тăшманĕсем коммунистсене хирĕç, социализм строительствине хирĕç кĕрешнĕ чухне тĕрлĕ меслетсемпе усă курнă, партире тăманнипе витĕннĕ.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче эсерсем, анархистсем, меньшевиксем, кадетсем тата ытти йăх-яхсем, эксплуататорсемпе интервентсен ирĕкне палăртса тата вĕсен агентурипе тарçисем пулса, революцие хирĕç, Ленина хирĕç, рабочисемпе хресченсен влаçне хирĕç уççăн та тӳррĕнех тăнă.

Граждан вăрçи çулĕсенче рабочи класпа хресченсене хирĕç кĕрешнĕ тăшмансен лагерĕнче капиталистсемпе помещиксем пулнă, вĕсем ют çĕршывсенчи интервентсемпе пĕр союзра тăнă. Меньшевиксен, эсерсен, анархистсен хӳрешкисем контрреволюци майлă тăнă, контрреволюци тарçисем пулнă.

Контрреволюцие тата интервентсене хирĕç хаяр çапăçусем пынă чухне пирĕн çĕршыври ĕççыннисем политикăллă воспитани шкулĕ витĕр тухнă, политграмотăна хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе ирттернĕ, кам хыççăн каймаллине, кам енне тăмаллине хăйсемех ăнланса илнĕ, большевиксем пулса тăнă.

Çакна Д. Фурмановăн «Чапаев» повеçĕпе кинофильмра, А. Серафимовичăн «Хурçă юхăм» романĕнче, А. Фадеевăн «Аркатни» романĕнче, Н. Островскин «Хурçă епле хĕрнĕ» романĕнче тата пирĕн революциллĕ совет писателĕсен художествăллă ытти произведенийĕсенче лайăх та ĕненмелле кăтартса панă. Вĕсен произведенийĕсенче партилĕх идейисем палăрса тăраççĕ, вĕсем халĕ те пысăк вырăн йышăнаççĕ, пирĕн партин идеологиллĕ ĕçĕнче хĕç-пăшал пулса тăраççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ «Хурçă епле хĕрнĕ» кĕне-

кене Кубăра тата ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн кĕрешекен ытти чылай çĕршывсенче юратса вулаççĕ.

Ленин идейисем ытларах та ытларах рабочисемпе хресченсен ăс-тăнне кĕрсе вырнаçнă май, коммунистсен халăх хушшинчи витĕмĕ вăйланса пынă май, Совет влаçĕн авторитечĕ ӳссе пынă май, революци тăшманĕсем большевиксене хĕсме тата Советсене хăйсен аллине ярса илме хăтланса пăхнă, вĕсем «Советсем коммунистсемсĕр пулмалла» текен лозунг кăларса тăратнă.

Советсем коммунистсемсĕр тени мĕне пĕлтерет-ха? Ку вăл революциллĕ содержанисĕр тăрса юлнă пуш формă. Контрреволюционерсем çакна лайăх ăнланнă, «Советсем коммунистсемсĕр пулмалла» текен лозунг кăларса тăратса, вĕсене революциллĕ влаç органĕсенчен массăсене хăйсем енчен витĕм кӳмелли орган туса хума, Советсен авторитечĕпе хăйсен халăха хирĕçле шухăшĕсене пурнăçлас ĕçре усă курма хăтланнă. Ĕç кунта пĕр-пĕр организаци ячĕ мĕнлинче мар, вăл мĕнле политикă тытса пынинче, хăш класс интересĕсене хӳтĕленинче.

Францире, сăмахран, тахçантанпах коммунăсем пур. Куратăр ĕнтĕ, управленин çак органĕсене революциллĕ ят панă, вĕсен тупсăмĕ вара капитализмлă, вĕсем монополистсене хӳтĕлеççĕ. Революциллĕ сăмах — «коммунă» Францири буржуазие пачах та хăратмасть, мĕншĕн тесен унăн управлени органĕсем çав ятлă.

Халĕ тĕрлĕ çĕршывсенче хăйсен буржуалла политикине социализмла сăмахсемпе пытарма хăтланакан буржуалла деятельсем нумай. Вĕсем социализм туни çинчен пĕлтереççĕ, çав вăхăтрах коммунистсене тĕрмене хупаççĕ, вĕсене вĕлеревĕлере пĕтереççĕ, коммунистсен партийĕсене ĕçлеме чараççĕ, хăйсем социализмшăн кĕрешетпĕр теççĕ. Çакна вĕсем социализм идейисем мĕн пур çĕршывсенчи халăх массисем хушшинче ытларах та ытларах сарăлнă пирки, çав идейăсем халăхсен ăс-тăнне кĕрсе вырнаçнă пирки тăваççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсен примерĕ халăхсемшĕн революциллĕ маяк пулса тăрать. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ буржуалла деятельсем, уйрăмах сулахай буржуази представителĕсем, ĕççыннисене улталама социализм тăватпăр текен лозунгпа анлăн усă кураççĕ.

# ЭПИР ИДЕОЛОГИ ЕНĔПЕ МИРЛĔН КИЛĔШТЕРСЕ ПУРĂНАССИНЕ ХИРĔÇ

ИСТОРИ ОПЫЧĔ çапла вĕрентет: политикăллă, идеологиллĕ кĕрешӳре сăмахсемпе декларацисене шанма юрамасть, вĕсене кам тата мĕнле тĕллевпе каланине ăнланса илме пĕлмелле. Çапла тума пуринчен малтан марксист-ленинец пулмалла, пĕтĕм пурнăça, таланта çĕр çинчи ĕççыннисен телейĕшĕн паракан çирĕп шанăçлă коммунист пулмалла.

Хăвна ĕç халăхĕн интересĕсемшĕн кĕрешекен тесе шутлатăн пулсан, кĕрешекен енсем хушшинче нихăш енĕ майлă та пулмасăр тăма, «ырра та, усала та пĕр пекех лăпкăн пăхса тăма» юрамасть.

Класс кĕрешĕвне обществăри мĕн пур сийсем хутшăнаççĕ, вăл пĕр кил-йышри çынсене те уйăрма пултарать. Пĕр çемьери çынсем баррикадăсен тĕрлĕ енче, пĕр-пĕрне хирĕç тăни те пулкалать.

Хăйсем революцие хутшăнманнине «ырă» шухăшсемпе тӳрре кăларма тăрăшакан çынсем пур; эпир «хамăр пек этемсем» çине алă çĕклеме пултараймастпăр, теççĕ вĕсем. Анчах çынсене вĕлерекенсем те «хамăр пек этемсемех» вĕт!

Революцисене обществăри классем тăваççĕ. Капиталистсен класне сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешекен рабочисемпе хресченсен революцийĕ — чи гуманизмлă, чи ырă ĕç. Çавăн пек революцие рабочисемпе хресченсен енне тăрса хутшăнни гуманизмăн чи таса палăрăмĕ пулса тăрать. Эксплуататорсен стройне сирпĕтсе антармасăр ĕççыннисене ирĕке кăларма тата вĕсене телейллĕ пурнăç туса пама çук. Кĕрешĕве ĕççыннисем майлă пулса хутшăнмасăр тăракансем, чăннипе каласан, буржуазие пулăшаççĕ. Çакна ăнланса илме йывăр-и вара? Кам рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле пымасть, çав çын пурпĕрех вĕсене хирĕç пырать. Çакна лайăх ăнланмалла, юлташсем! (А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Хăш-пĕрисем: эпир коммунизм идейине йышăнатпăр, теççĕ, тепĕр чухне çав идейăна мухтаççĕ те, анчах хăйсем кĕрешĕве активлă хутшăнмаççĕ, кĕрешекенсен çулĕ çинче çапкаланса çӳреççĕ, хăйсем пăтрашса каяççĕ, ыттисене те пăтраштараççĕ. Ун пек çынсем халиччен те пулнă, халĕ те тĕл пулаççĕ-ха.

Революци вăл — ырлăх çинчен çемçешке чунпа ĕмĕтленни мар, вăл — хаяр та çивĕч кĕрешӳ. Революцишĕн революци тунă вăхăтра кăна мар, унăн çĕнтерĕвĕсене çирĕплетсе пынă тапхăрта та, коммунизм туса çитеричченех кĕрешмелле. Кунта пĕр рефератсем, лекцисем, докладсем кăна сахал, лару-тăру хушсан тытăçăва та хутшăнмалла.

Классен кĕрешĕвĕнчи йывăр условисенче иккĕленсе тăракан çынсен, тепĕр чухне хăйсем кĕтмен çĕртенех, именмелле пулса тухать. А. В. Луначарскин пĕррехинче мĕнле пулса тухнине

аса интерем. Хĕç-пăшаллă рабочисем тăшмана пенĕ чухне историллĕ памятниксене лектерсе, вĕсене сиен тума пултарасран хăраса ӳксе, вăл В. И. Ленин патне çавăн пирки хирĕçлеме пынă, хăй Совет правительствин составĕнчен тухасси-пе те хăратма пăхнă. Революци çинчен çавнашкал обывателле шухăшланинчен Владимир Ильич тăрăхласа кулнă. Кайран çакна Луначарский хăй те ăнланса илнĕ.

Çавна май манăн Эренбург юлташ çинчен темиçе сăмах калас килет. Тахçан Эренбург юлташ В. И. Ленин патне Парижа пынă пулнă, В. И. Ленин ăна ăшă кăмăлпа йышăннă, ун çинчен Эренбург юлташ хăй çырать. Эренбург юлташ партине те кĕнĕ пулнă, анчах кайран унтан пăрăннă. Социализмлă революцие вăл тӳрремĕнех хутшăнман, айккинчен пăхса тăрас, тенĕ пулмалла. Çапла каласан та йăнăш пулмасть пулĕ тесе шутлатăп: Эренбург юлташ хăйĕн «Çынсем, çулсем, пурнăç» ятлă асаилĕвĕсенче те пирĕн революцие тата ун хыççăнхи социализм строительствин пĕтĕм тапхăрне çавăн пек позициренех хак парать.

Совет писателĕн, художникĕн, композиторĕн, творчествăлла кашни работникăн чи пысăк тивĕçĕ вăл — коммунизм тăвакансен ретĕнче пуласси, хăйĕн таланчĕпе пирĕн партин аслă ĕçне усă кӳресси, марксизм-ленинизм идейисен çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешесси. Тĕнчере пĕр-пĕринпе килĕшме пултарайман икĕ идеологи — социализмлă идеологипе буржуаллă идеологи хушшинче çивĕч кĕрешӳ пынине асра тытас пулать.

Художникăн хăйĕн произведенийĕсемпе коммунизм идейисене çирĕплетме пулăшмалла, социализмпа коммунизм тăшманĕсене хаяррăн пыра-пыра çапмалла, империалистсене, колонизаторсене хирĕç кĕрешмелле.

Художник умĕнче тăракан задачăсене патриотла, парти хушнă пек ăнланнин чаплă тĕслĕхĕ пирĕн паллă писателĕн Михаил Александрович Шолоховăн творчестви пулса тăрать. Унăн «Лăпкă Дон» тата «Уçнă çерем» романĕсене, «Этем шăпи» калавне, «Вĕсем Тăван çĕршывшăн çапăçнă» романĕн сыпăкĕсене илер. Вĕсем — çав тери вăйлă, революциллĕ хĕрӳ туйăмлă, илемлĕх енчен çав тери чаплă произведенисем, вĕсенче коммунизмла партилĕх, пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсен революципе социализм çĕнтерĕвĕшĕн пынă класс кĕрешĕвĕ уççăн палăрса тăраççĕ. Шолохов юлташ граждан вăрçи вăхăтĕнче, эксплуататорла юлашки класа — кулаксене пĕтернĕ тапхăрта, фашистла захватчиксене хирĕç пынă Отечественнăй вăрçăра кĕрешĕве хăй те активлă хутшăннă. Çав çапăçусене вăл сăнавçă пек мар, воин пулса хутшăннă, мирлĕ вăхăтра та вăл ĕççыннисен телейĕшĕн çавăн пекех активлă кĕрешет. (Т ă в ă л л ă н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Михаил Александрович Шолохов обществăллă явленисемпе событисен тупсăмне питĕ лайăх ăнланса илме, туссене лайăх курма, тăшмансене палласа илме тата чăн пурнăçа парти хушнă пек витĕмлĕ сăнласа пама пултарать, унăн пултарулăхĕ калама çук пысăк. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл коммунистсен, ĕç çыннисен сăнарĕсене çав тери юратса ӳкерсе кăтартать!

Пирĕн обществă стройĕн тăшманĕсене вăл класлă хаяр курайманлăхпа тăрă шыв çине кăларса питлет, çапса хуçать. Çапăçури тытăçусене мĕн тери витĕмлĕ те ĕненмелле ӳкерсе кăтартать вăл! Тăшманпа тытăçса каяççĕ пулсан, ун чухне хĕççенчен вут-хĕм сирпĕтсе çапăçаççĕ, халăх ĕçĕшĕн кĕрешеççĕ, вара çав ĕç çĕнтеретех.

Михаил Александрович Шолохов творчествин тĕслĕхĕнчен пурте çакна кураççĕ: писателĕн коммунистла партилĕхĕ унăн художествăллă хăйне евĕрлĕхне палăртма чăрмантармасть, пачах урăхла, унăн талантне хăватлăн аталантарма активлă пулăшать, унăн произведенийĕсен обществăри пĕлтерĕшне чи çӳллĕ шая çитерет.

Эпир искусствăра класс позицийĕсем çинче тăратпăр, çавăнпа социализмлă идеологипе буржуаллă идеологи пĕр-пĕринпе мирлĕ килĕштерсе пурăнассине хирĕç кĕрешетпĕр. Искусствă вăл — идеологиллĕ ĕç. Çавăнпа та совет искусствинче социализмлă реализм та, формалистла, абстракционистла юхăмсем те пĕр-пĕринпе мирлĕ килĕштерсе пурăнма пултараççĕ тесе шутлакансем пирĕншĕн ют позицисем çине — идеологи енĕпе мирлĕн килĕштерсе пурăнмалли позицисем çине кĕрсе ӳкеççĕ. Çавнашкал шухăш-туйăмсемпе эпир юлашки вăхăтра тĕл пултăмăр. Шел пулин те, çак серепене хăш-пĕр коммунист-писательсемпе художниксем те, творчествă организацийĕсене ертсе пыракан хăш-пĕр деятельсем те лекнĕ. Çавăнпа пĕрлех çакна та палăртмалла: партире тăманнисем те, сăмахран, Л. Соболев юлташ, парти литературăпа искусствă енĕпе тытса пыракан çул-йĕре çирĕп хӳтĕлеççĕ.

Иртнĕ тĕлпулу вăхăтĕнче И. Эренбург юлташ: килĕштерсе пурăнас идейă пирки çырура шӳтлесе çырнă, терĕ. Çапла пултăр, тейĕпĕр. Анчах ку вăл — усалла шӳтлени. Идеологи пирки кун пек шӳтлеме юрамасть. Шухăшласа пăхар-ха: литературăпа искусствăра тĕрлĕ идейăллă юхăмсем пĕр-пĕринпе мирлĕ килĕштерсе пурăнмалла текен çынсем çĕнтерес пулсан, совет искусствинче ĕççем мĕнле пулса тухма пултараççĕ? Чи малтан вĕсем пирĕн социализмлă искусствăри революциллĕ çĕнтерӳсене пырса çапнă пулĕччĕç. Кĕрешӳ логики тăрăх ĕç çакăнпах вĕçленмен пулĕччĕ. Çавнашкал çынсем, вăй пухса, революци çĕнтерĕвĕсене хирĕç кĕрешме те хăтланса пăхма пултарнă пулĕччĕç.

Эпĕ каланăччĕ ĕнтĕ, идеологи енĕпе мирлĕ килĕштерсе ĕçлени вăл марксизм-ленинизма сутни, рабочисемпе хресченсен ĕçне сутни пулать. Совет обществи халĕ çĕршыври мĕн пур социализмла нацисем, халăхăн мĕн пур сийĕсем — рабочисем, колхозниксем, интеллигенци — ленинла парти ертсе пынипе ăнăçлăн коммунизм тăвакансем пур енĕпе те пĕр пĕтĕм пĕрлĕхлĕ пулса çитнĕ тапхăрта пурăнать.

Çак çирĕп пĕрлĕхе кирек мĕнле майпа хавшатма хăтланнине те пирĕн халăх тата парти чăтса тăрас çук. Çак пĕрлĕхе хавшатма хăтланнисенчен пĕри вăл — пире тĕрлĕ идеологисем мирлĕ килĕштерсе пурăнмалла тенине йышăнтарма хăтланни. Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпир çавăн пек киревсĕр идейăсене хирĕç те, çав идейăсене саракансене хирĕç те кĕрешетпĕр. Шанатăп, çак енĕпе эпир пурте пĕр шухăшлă. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Йăнăш çулпа пыракансене вара эпир лайăхрах шухăшласа пăхма, хăйсен йăнăшĕсене тишкерсе тухма, çав йăнăшсем ăçтан, мĕнрен пулса кайнине ăнланса илме, вĕсене пĕтерме тата партипе пĕрле, халăхпа пĕрле, марксизм-ленинизмăн хĕрлĕ ялавĕпе коммунизм тăвас ĕçе активлă хутшăнма, социализмлă культурăн, литературăпа искусствăн çитĕнĕвĕсене ӳстерсе пыма чĕнетпĕр.

Абстракционизм, формализм майлă тăракан уйрăм çынсем çак юхăмсене социализмлă искусствăра вырăн памалла тесе çуйăхашаççĕ. Анчах абстракционизм, формализм вăл — буржуаллă идеологи формисенчен пĕри вĕт. Хăш-пĕр творчествăлла работниксем, çав шутра нумай пурăнса курнă работниксем те çакна ăнланманшăн пăшăрханма тивет.

Эренбург юлташ çырнă мемуарсенче çакăн пек вырăн пур. Вуласа паратăп ăна: «Литературăра питĕ нумай шкулсем пулнă: комфутсем, имажинистсем, пролеткультовецсем, экспрессионистсем, фуистсем, беспредметниксем, презентистсем, акцидентистсем тата ничевокăсем те. Паллах, хăш-пĕр теоретиксем ăссăр шухăшсем каласа нумай сӳпĕлтетнĕ... Анчах манăн çав тахçанхи вăхăта хӳтĕлессĕм килет».

Курăнать ĕнтĕ, мемуарсен авторĕ «сулахай» искусствă тенĕскерĕн представителĕсене питĕ кăмăллать, çав искусствăна хӳтĕлеме задачă лартать. Ыйтас килет — камран хӳтĕлесшĕн вăл? Пирĕн марксистла-ленинла критикăран пулмалла. Мĕншĕн çапла хăтланать-ха вăл? Ахăртнех, çав явленисем е вĕсен евĕрлисем пирĕн хальхи вăхăтри искусствăра та пурăнма пултарччăр тесе тăрăшнăран. Ку вăл социализмлă реализмпа формализм килĕштерсе пурăнассине йышăннине пĕлтернĕ пулĕччĕ. Эренбург юлташ идеологи енĕпе пысăк йăнăш тăвать, эпир ăна çакна ăнланса илме пулăшма тивĕç.

Пирĕн иртнĕ тĕлпулу вăхăтĕнче Евтушенко юлташ абстракционизма хӳтĕлесе тухса каларĕ. Хăйĕн позицине никĕслесе пама хăтланса, вăл: лайăх çынсем реалистсем хушшинче те, формалистсем хушшинче те пур, терĕ, çавна май Кубăри икĕ художник пурнăçĕнчен тĕслĕх илсе кăтартрĕ. Çав художниксем искусствăна пачах тĕрлĕ майлă ăнланнă, анчах кайран революцишĕн çапăçса пĕр окопрах вилнĕ. Кун пекки пурнăçра пулма пултарнă, анчах ку вăл — уйрăм факт кăна.

Пачах урăх йышши тĕслĕх илсе кăтартма пулать. Граждан вăрçи хыççăн Артемовск хулинче, Украинăра, илемсĕр, формалистла памятник лартнă пулнă. Унăн авторĕ скульптор кубист Кавалеридзе пулнă. Çав памятник калама çук илемсĕр пулнă, анчах кубистсем ăна питĕ мухтанă (вăрçă вăхăтĕнче çав памятник арканнă). Формалистла памятник авторĕ, фашистсем оккупациленĕ территорире юлса, хăйне тивĕçсĕр тыткаланă. Çапла вара, Евтушенко юлташ илсе кăтартнă тĕслĕх унăн шухăшне витĕмлĕ çирĕплетсе пама пултараймасть.

Евтушенко юлташ абстракционизм пирки йышăннă позици, чăннипе илсен, Эренбург юлташ хӳтĕлекен шухăшсемпе пĕр пекех. Вăл çамрăк-ха, енчен-енне сулкаланать, искусствă ыйтăвĕсем тĕлĕшпе унăн шухăшĕсем çирĕпленсе çитмен. Анчах вăл Идеологи комиссийĕн ларăвĕнче каланă сăмахсем вăл хăйĕн иккĕленӳлĕхне çĕнтерме пултарасса шантараççĕ. Манăн Евтушенко юлташа тата ытти çамрăк литераторсене массăсен шанăçне хисеплеме сĕнес килет, йӳнĕ сенсаци ан шырăр, обывательсен шухăш-кăмăлне юрама ан тăрăшăр, тесе канаш парас килет. (Нумайччен алă çупаççĕ). Хăвăрăн йăнăшăрсене йышăнма ан вăтанăр, Евтушенко юлташ. Сирĕн çинчен тăшмансем тем те пĕр калĕç, эсир унтан ан хăрăр. Сирĕн çакна лайăх ăнланса илмелле: эпир сире принциплă позицисенчен пăрăннăшăн критиклетпĕр пулсан, тăшмансем сире мухтама пуçлаççĕ. Пирĕн ĕçе курайман тăшмансем сире хăйсен кăмăлне каякан произведенисемшĕн мухтама тытăнаççĕ пулсан, халăх сире тивĕçлипе критиклет. Апла пулсан, сирĕншĕн хăшĕ лайăхраххине хăвăрах суйласа илĕр. (Алă çупаççĕ).

Коммунистсен партийĕ абстракционизма хирĕç тата искусствăри формализмла ытти кирек мĕнле пăсăк явленисене те хирĕç кĕрешет, малашне те кĕрешĕ. Формализм çине эпир нейтралистла пăхса тăма пултараймастпăр. Эпĕ Америкăра пулнă чухне темĕнле художниксем — эпĕ пĕлместĕп, паллă художниксем-и вĕсем е паллă маррисем-и,— мана картинăсем парнелерĕç. Эпĕ сире çав вараланчăк картинăсене ĕнер кăтартрăм. Çав çынсем манăн тăшмансем мар пулĕ, тăшман пулсан, вĕсем хăйсем ӳкернĕ картинăсене

парнелес çукчĕ. Анчах, çакна шута илсен те, вĕсен парнине эпĕ изобразительнăй искусствăн чаплă шедеврĕ теме е ахаль шедевр теме те пултараймастăп.

Калăр-ха, мĕн ўкерсе кăтартнă унта? Кĕпер çинчен пăхсан хула мĕнле курăннине кăтартнă, теççĕ. Темле пăхсан та, тĕрлĕ тĕслĕ йăрăм-йăрăмсемсĕр пуçне, урăх нимĕн те курма çук. Çапах та çак вараланчăка картинă теççĕ!

Акă тата тепĕр çавăн пек «шедевр». Тăвата куç курăнать унта, тен, ытларах та. Кунта çын сехĕрленсе, хăраса ўкнине кăтартса панă, теççĕ. Искусствăна мĕн тери илемсĕрлетсе пăсаççĕ абстракционистсем! Çак картинăсем Америкăри живописĕн тĕслĕхĕсем.

Акă, пирĕн архитектурă искусствинче пулнă темиçе тĕслĕх. Мускавра, Сокольникре, Русаков ячĕпе хисепленекен клуб пур. Ăна архитектор Мельников юлташăн проекчĕ тăрăх тунă. Тĕлĕнмелле илемсĕр çурт, тем амакĕ пекех вăл. (З а л р а х у с к а л с а и л е ç ç ĕ). Анчах хăй вăхăтĕнче çав çурта прогрессивлă çĕнĕ йышши çурт тетчĕç.

Архитектурăра ăса манса формă хыççăн кайнин тепĕр тĕслĕхĕ вăл — Мускаври Совет Çарĕн театрĕ. Ăна Алабянпа Симбирцев архитекторсен проекчĕ тăрăх туса лартнă. Архитекторсене Каганович ухмахла идейă йышăнтарнă, театр çуртне вăл пилĕк вĕçлĕ çăлтăр формипе тума сĕннĕ. Пилĕк вĕçлĕ çăлтăр вăл — символ, эмблемă, анчах ĕçре усă курмалли çурта çăлтăр формипе туса лартни вара пачах вырăнсăр. Мĕн чухлĕ унта кирлĕ мар кĕтессем, усăсăр лаптăксем!

Совет Çарĕн театрĕ пуринчен те ăссăртарах туса лартнă çурт пулĕ. Ĕç акă епле пулнă: хăйĕн идейине Каганович Сталина каласа панă, Сталина çав идейă килĕшнĕ, вара çурта пилĕк вĕçлĕ çăлтăр евĕрлĕ туса лартма йышăннă. Çав çăлтăра никам та курма пултараймасть: ун çине пĕлĕт çинчен пăхас пулать. (З а л р а к у л а ç ç ĕ). Ухмахла идейă, искусствăри тата пурнăçри илем çинчен айванла шухăшланинчен килнĕ вăл.

Шухăшлатăн та, ниепле те ăнланаймастăн: нумай вĕреннĕ, чипер ăс-тăнлă çынсем мĕншĕн урмăшаççĕ, мĕншĕн хуçкаланаççĕ, хăйсен лăпăрлапăр произведенийĕсене искусствă произведенийĕсем вырăнне хурса ĕнентерме тăрăшаççĕ. Вĕсем тавра чăн-чăн пурнăç вĕресе тăрать вĕт, унта чуна хумхантаракан илем те темĕн чухлех.

Çĕнĕ çул умĕн эпĕ хула тулашĕнче пулнă хыççăн Мускава таврăнаттăм. Декабрĕн 31-мĕшĕнче эпĕ иртен пуçласа кунĕпех вăрманта пултăм. Поэзилле кун, вырăс хĕлĕн çав тери илемлĕ кунĕ пулчĕ вăл. Вырăс хĕлĕн çав, мĕншĕн тесен, пирĕн Российйăри пек хĕлсем пур çĕрте пулмаççĕ. Ку ĕнтĕ, паллах, нацилле явлени мар, климатран килекен çутçанталăк явленийĕ, çавăнпа мана тĕрĕс ăнланма ыйтатăп. (З а л р а к у л а ç ç ĕ. А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Çав кунхине вăрман питĕ илемлĕччĕ. Пĕтĕм вăрман мамăк пек паспа витĕннĕрен илемлĕччĕ вăл. Астăватăп-ха, çамрăк чухне эпĕ «Огонек» журналта темĕнле калав вуланăччĕ. Çав калав авторне аса илейместĕп-ха, унта çакăн пек сăмахсем пурччĕ: «ытарма çук кĕмĕл мĕлкесем». Хĕллехи тум тăхăннă сад пахчине сăнласа панăччĕ унта автор. Калавне вăл лайăх çырнă пулмалла, тен, ун чухне эпĕ хам литературă пирки тиркешсех тăман. Анчах мана калав килĕшрĕ, ун чухнехи туйăмсене халĕ те лайăх асра тытатăп. Мана уйрăмах хĕллехи тум тăхăннă йывăççем çинчен çырса кăтартни кăмăла кайрĕ.

Çĕнĕ çул умĕнхи кун эпĕ хĕллехи вăрмана ытараймарăм, çав тери илемлĕччĕ вăл, тен, мĕлкесем кĕмĕл тĕслех те марччĕ пулĕ, анчах эпĕ вăрман хама чунтан хумхантарнине каласа кăтартма сăмах тупса çитерейместĕп. Эпĕ хĕвел тухнине сăнарăм, паспа пĕркеннĕ вăрман çине пăхса тăтăм. Çак илеме хăйсем вăрманта пулса çав чĕрĕ сăнсене хăйсен куçĕпе курнă çынсем кăна ăнланма пултараççĕ. Художник çавнашкал хумхантаракан сăнсене хăй çĕнĕрен чĕрĕ вăй кĕртсе ўкерсе пама пултарнипе палăрса тăрать те ĕнтĕ, анчах çакăн пек пултарулăх кашни çыннăнах çук.

Хампа пĕрле пулнă çынсене эпĕ çапла каларăм: пăхăр-ха эсир çак чăрăшсем çине, вĕсен капăр тумĕ çине, хĕвел çутинче йăлтăртатса выляса çаврăнакан юр пĕрчисем çине, мĕн тери илемлĕ вĕсем! Модернистсем, абстракционистсем вара çав чăрăшсене тымарĕсене çўлелле туса пуç хĕрлĕ ўкересшĕн, çапла хăтланнине хăйсем искусствăри çĕнĕ, програссивлă япала теççĕ тата.

Çавнашкал искусствăна чипер йĕркеллĕ çынсем нихăçан та кăмăллама пултараймаççĕ, çынсене художниксен картинисенче ўкерсе кăтартнă çутçанталăкри ытарайми сăнсене, пирĕн клубсенчи, культурă çурчĕсенчи, килти пўлĕмсене илем кўрсе тăракан картинăсене пăхса савăнмашкăн пăрахтарма çук.

Тен, хăш-пĕрисем: Хрущев искусствăра фотографизма, натурализма çул пама чĕнет, тейĕç. Çук, юлташсем! Эпир чăн пурнăçа, унăн мĕн пур тĕсĕсене тĕрĕс, витĕмлĕ, художествăллă ăсталăхпа сăнласа пама чĕнетпĕр. Çавăн пек искусствă кăна çынсене савăнтарма, ырă туйăмсем çуратма пултарать. Этем нихăçан та илемлĕх туйăмне çухатмĕ, вăл хăйне вараланчăк лăпăрлапăра искусствă произведенийĕ вырăнне хурса кăтартма ирĕк памĕ, ун пек вараланчăк картинăсене кирек хăш ашак та хăйĕн хўрипе ўкерме пултарать. (А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Нимĕн иккĕленмелли те çук, халăх çавнашкал «новаторсене» отпор пама вăй тупĕ. Çавăн пек

«новаторсем» хушшинчи ăса пăрахман çынсем тăна кĕрĕç, халăхшăн ĕçлеме тытăнĕç, савăнтаракан, ĕçлеме хавхалантаракан илемлĕ картинăсем ӳкерĕç.

Çакна ăнланма çук: формализмпа абстракционизм майлă тăракансем социализмлă реализм позицийĕсем çинче тăракан çынсене мĕншĕн консерваторсем теççĕ, çав вăхăтрах абстракционистсене искусствăра малта пыракан юхăмăн представителĕсем вырăнне хураççĕ. Çапла калама сăлтав пур-и? Çапла шутлатăп: ун пек калама нимĕнле сăлтав та çук, пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен формализм тата абстракционистла хуçкаланни халăхшăн ют, вăл вĕсене ăнланмасть. Халăхшăн ют япала, халăх ырламан япала, паллах, малта тăма та пултараймасть!

А. И. Лактионов художник нумай пулмасть «Правдăра» статья çырса кăларчĕ, унта вăл абстракционистла искусствăпа килĕшме пултарайманнине кăтартса пачĕ. Абстракционистсем тата вĕсене хӳтĕлекенсем, çак статьяра искусствăри консерваторла юхăма хӳтĕленĕ тесе, ăна хурласа тăкрĕç. Çав çынсем Лактионов юлташăн живописçне те натурализмла живопиç тесе хурлаççĕ.

Живописьри икĕ произведение — А. Лактионовăн автопортретне тата Б. Жутовскин автопортретне танлаштарса пăхăр-ха. Кун пирки хăш-пĕр çынсем хуть те мĕн шутлаччăр, хуть те мĕн калаччăр, анчах чипер ăс-тăнлă, йĕркеллĕ туйăмлă кирек хăш çынна та Лактионов художникăн картини этем сăнне юратса кăтартнипе кăмăла каять, çынна хисеплеме хистет. Пăхатăн та ун çине, киленетĕн, çыншăн савăнатăн.

Кама ӳкерсе кăтартнă-ха Б. Жутовский? Латти çук çынна! Унăн автопортречĕ çине пăхсан, хăраса ӳкме пулать. Çавăн пек латсăр япала ӳкерсе, вăя сая яма мĕнле намăс мар-ха? Мĕнле-ха капла, çын Совет Союзĕнчи вăтам шкултан, институтран вĕренсе тухнă, ăна пăхса ӳстерме, вĕрентме халăх укçи-тенкине тăкакланă, вăл халăх çăкăрне çиет. Хăйне вĕрентсе кăларнă расходсемшĕн, халĕ хăйне пăхнăшăн, вăл халăха, рабочисемпе хресченсене мĕн парать-ха,— çакăн пек автопортрет-и, çакăн пек çӳçентерекен киревсĕр япала-и? Кун пек вараланчăк лăпăр-лапăр çине пăхма йĕрĕнетĕн, ăна хӳтĕлекенсене итлеме те йĕрĕнмелле.

Социализмлă реализм позицийĕ çинче тăракан художниксен творчествине тем пек киревсĕр сăмахсем каласа ятлаççĕ пулин те, абстракционистсене тата ытти пур тĕрлĕ формалистсене тем пек мухтаççĕ пулин те, чипер ăс-тăнлă мĕн пур çынсем çакна лайăх ăнланаççĕ: социализмлă реализм позицийĕ çинче тăракан художниксен искусстви — чăн-чăн искусствă, абстракционистсемпе формалистсем вара — пăсăлнă этемсем, ытарлă каласан, вĕсен пуç мимисем тӳнтерле, вĕсен произведенийĕсем — çынсен туйăмĕсене мăшкăл тăвакан йĕрĕнчĕк халтурă. (А л ă  ç у п а ç ç ĕ).

Кирек хăш чĕрĕ организм та халсăрланса çитнĕ, вилнĕ клеткăсене сирсе пăрахать, çавăн пекех совет обществи те искусствăра пăнтăхни мĕн пур, çавна пĕтĕмпех сирсе ывăтать.

Пирĕн халăхăн ăс-тăн тĕлĕшĕнчи пурнăçĕнче, идеологи ĕçĕнче музыкă пысăк та паллă вырăн йышăнса тăрать. Çавна май музыкă творчестви мĕнле çулпа аталанса пыни çинчен хăшпĕр шухăшсем каласа пама кирлĕ пек туйăнать. Эпир темĕнле судьясем пек пуласшăн мар, пульт умне тăрса композиторсемшĕн дирижер пек пуласшăн та мар.

Ытти искусствăри пекех, музыкăра та тĕрлĕ жанрсем, стильсем, формăсем нумай. Çав стильсемпе жанрсенчен пĕрне те никам та чармасть. Анчах эпир музыкă пирки, унăн задачисем пирки тата музыкă творчестви мĕнле çулпа аталанса пымалли пирки хамăр мĕн шутлани çинчен каласа парасшăн.

Кĕскен калас пулсан, эпир музыкă мелодиллĕ, содержаниллĕ пулмалла, вăл çынсен чунне хумхантармалла, вăйлă туйăмсем çуратмалла тесе шутлатпăр, çавăнпа тĕрлĕ какофоние хирĕç тăратпăр.

Кам пĕлмест пулĕ Буденнăй çарĕ çинчен хунă юрра! Пирĕн композиторсем — пĕр тăван Покрассем лайăх юрăсем нумай çырнă. Мана вĕсен Мускав çинчен хывнă юрри питĕ килĕшет. Калас пулать, çав юрра пирĕн заказпа çырнă, ун чухне эпĕ партин Мускав комитечĕн секретарĕ пулнăччĕ. Астăватăп, эпир Мускав комитетĕнче пухăнтăмăр та, вĕсенчен пĕри çак юрра пире пĕрремĕш хут юрласа кăтартрĕ. Юрласса вăл лайăхах юрламасть, анчах юрă музыкине çырасса пĕр тăван Покрассем лайăх çырнă.

Ĕлĕкхи революциллĕ юрăсем, сăмахран, «Замучен тяжелой неволей», «Варшавянка» мĕн тери хумхантараççĕ тата! Кам пĕлмест пулĕ «Интернационала»? Миçе çул юрлатпăр ĕнтĕ эпир çак юрра, вăл тĕнчери рабочи класăн гимнĕ пулса тăчĕ. Мĕнле вăйлă революциллĕ шухăш-туйăмсем çуратать вăл, мĕнле çĕклет çын кăмăлне, ăна ĕççыннисен тăшманĕсене хирĕç кĕрешме мĕнле мобилизацилет!

Глинкă музыкине итленĕ чухне манăн яланах савăнăç куççулĕ тухать.

Тен, ку вăл хальхи модăпа килĕшмест, тен, кивĕ йăла пек туйăнать, эпĕ çамрăк çын мар ĕнтĕ, анчах Давид Ойстрах сĕрме купăс калани мана килĕшет; çавăн пекех Пысăк театрти скрипачсен коллективĕ сĕрме купăс калани те питĕ кăмăла каять, çак коллектива профессиллĕ чĕлхепе мĕнле ят панине пĕлместĕп эпĕ. Çак коллектив пултарулăхне эпĕ нумай хутчен итленĕ, яланах питĕ савăнса итленĕ.

Паллах, музыкăна эпĕ мĕнле ăнланатăп, пурте ăна çавăн пекех ăнланмалла, тесшĕн мар эпĕ. Анчах урăм-сурăм сасăсене чăн-чăн музыкă тесе ĕнентерме хăтланакансемпе эпир килĕшме пултараймастпăр, хăш-пĕр çынсем халăх юратакан музыкăна кивелнĕ тесе хурлаççĕ.

Кашни халăхăн музыкă енĕпе хăйĕн традицийĕсем пур, кашни халăх хăйĕн юрри-кĕввисене юрататъ. Эпĕ вырăс ялĕнче çуралнă, вырăссемпе украинецсен халăх музыкине, вĕсен мелодийĕсемпе халăх юррисене итлесе ӳснĕ. Эпĕ Соловьев-Седойăн юррисене, Колмановский композиторăн Евтушенко поэт сăвви тăрăх çырнă «Хотят ли русские войны» юррине питĕ кăмăлласа итлетĕп. Украинă юррисем те питĕ килĕшеççĕ мана; П. Майборода композитор Андрей Малышко сăмахĕсем тăрăх çырнă «Рушничок» юрра юрататăп. Итленĕçемĕн итлес килет ăна. Лайăх композиторсем нумай пирĕн, лайăх юрăсем нумай çырнă вĕсем, анчах эпĕ, хăвăрах ăнланатăр ĕнтĕ, вĕсене хамăн сăмахра пурне те каласа тухма пултараймастăп.

Музыкă творчествинче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Джаз музыкине тата джазсене кăмăллама пуçланине йĕркеллĕ япала теме çук. Эпир джазсем валли çырнă пур музыкăна та хирĕç тăратпăр тесе шутламалла мар, джазсем тĕрлĕ пулаççĕ, вĕсем валли çырнă музыкă та тĕрлĕ пулать. Дунаевский джазсем валли те лайăх музыкă çырма пĕлнĕ. Леонид Утесов ертсе пыракан джаз калакан хăш-пĕр юрăсем килĕшеççĕ мана. Анчах хăстаракан, ăша патрантаракан музыкă та пулать.

РСФСР композиторĕсен Союзĕн пленумĕ хыççăн Шостакович юлташ пире Кремльти театра концерт итлеме чĕнчĕ. Пушă вăхăт пулман пулин те, эпир музыкă итлеме кайрăмăр, пире концерт интереслĕ пулать, терĕç. Кайран хамăрах куртăмăр, унта чăнах та интереслĕ номерсем пулчĕç. Анчах темшĕн сценă çине малтан пĕр джаз, унтан тепĕрне, виççĕмĕшне кăларчĕç, ун хыççăн виççĕшне пĕрле кăларчĕç. Лайăххи те, ытлашши нумай пулсан, йывăр туйăнать, джаз музыкине çакăн пек чыхса тултарнине тӳсме вара вăй çитерме пулмарĕ. Пытанăттăмччĕ те, ниçта пытанма çук.

Мелодисĕр музыкă вĕчĕхтернисĕр пуçне урăх нимĕнле туйăм та çуратмасть. Ăнланманран çапла вăл, теççĕ. Чăнах та, тепĕр чухне джаз музыкине ăнланма та çук, итлеме те йĕрĕнтерет.

Ку чухнехи ташăсем текен хăш-пĕр ташăсем те кăмăла каймаççĕ, вĕсене пирĕн çĕршыва Хĕвеланăçĕнчен илсе килнĕ. Çĕршыв тăрăх нумай çӳресе курма тӳр килнĕ мана. Эпĕ вырăс, украинец, казах, узбек, армян, грузин ташшисене тата ытти ташăсене курнă. Вĕсем пурте илемлĕ, пăхма кăмăллă. Ку чухнехи çĕнĕ ташă текеннисем вара темĕнле намăс, киревсĕр хуçкаланса турткаланни кăна, тем шуйттанĕ темелле ăна! Çавăн пек киревсĕр хуçкаланнине трясунсен сектинче кăна курма пулать, теççĕ. Чăнах çапла-и, калама пултараймастăп, мĕншĕн тесен хам трясунсен пухăвĕсенче нихçан та пулса курман. (Залра кулаççĕ).

Творчествă работникĕсем хушшинче: музыкăра халĕ мелоди кирлĕ мар, ун вырăнне «çĕнĕ» музыкă —«додекафони», шавлă музыкă йышăнмалла, тесе ĕнентерме хăтланакан çамрăксем пур иккен. Йĕркеллĕ çынна «додекафони» мĕне пĕлтернине ăнланса илме хĕн, анчах, тем тесен те, вăл какафонипе пĕрех пулмалла. Çапла вара, музыкăри çав какафоние эпир пĕтĕмпех сирсе ывăтатпăр. Пирĕн халăх çавнашкал çӳп-çапа хăйĕн идейăллă хĕç-пăшалĕ вырăнне хурса йышăнма пултараймасть.

САСĂСЕМ: Тĕрĕс! (Алă çупаççĕ).

Эпир хавхалантаракан музыкă майлă, кĕрешӳре паттăр пулма, ĕçлеме чĕнекен музыкă майлă. Çапăçăва кайнă чухне салтак хăйне мĕн кирлĕ, çавна илет, оркестра та нихçан та пăрахса хăвармасть. Походра оркестр кăмăла çĕклет. Оркестрсем валли музыкăна социализмлă реализм позицийĕ çинче тăракан, пурнăçран, халăх кĕрешĕвĕнчен уйрăлса кайман композиторсем, халăх хисеплекен композиторсем çырма пултараççĕ, çыраççĕ те.

Эпир искусствă тĕлĕшпе тытса пыракан политикă, абстракционизмпа, формализмпа тата ытти кирек мĕнле буржуалла пăсăк юхăмсемпе нихçан та килĕшме пултарайман политикă вăл — ленинла политикă, ăна эпир яланах çирĕп тытса пынă, халĕ те çирĕп тытса пыратпăр, малашне те тытса пырăпăр. (Алă çупаççĕ).

Владимир Ильич Ленин çапла каланă: литературăпа искусствă рабочисемпе хресченсен интересĕсемшĕн, халăх интересĕсемшĕн тăрăшмалла.

Халĕ хăш-пĕрисем сулахай искусствă тенĕскерне каçса кайсах мухтаççĕ. Çав «искусствăна» Владимир Ильич: çав тери ăссăр хуçкаланни, пурнăçран пачах уйрăлса кайни тата урăм-сурăм хăтланни, тенĕ. Халĕ вара çакăн пек халап сараççĕ: искусствăри формалистла упражненисене Ленин хирĕçлемен пулать, вăл вĕсене кăмăлланă пек те кăтартма тăрăшаççĕ. Ленин искусствă пирки мĕн шутлани çинчен тĕрĕс мар сăмахсем сарас ĕçе, шел пулин те, Эренбург юлташ та хутшăннă. Хăйĕн мемуарĕсенче вăл çапла çыратъ: «А. В. Луначарский мана çапла каласа пачĕ: вăл Ленинран Майăн пĕрремĕшĕ валли Хĕрлĕ площаде илемлетме «сулахай» художниксене хушма юрать-и, тесе ыйтсан, Владимир Ильич çапла ответленĕ: «Эпĕ ку енĕпе специалист мар, хам кăмăла ытти çынсене ирĕксĕрлесе йышăнтарас килмест манăн».

Кунта Эренбург юлташ вулакана çапла каласшăн: Ленин совет искусствинче тĕрлĕ идейăллă юхăмсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма пултараççĕ, тесе шутланă пулать.

Тĕрĕс мар ку, Эренбург юлташ! Шăпах Ленин литературăпа искусствăн идейăлăхĕпе партилĕхĕн принципне кăларса тăратнине эсир лайăх пĕлетĕр вĕт. Çак принципа кайран Горький тата ытти писательсем, Совет влаçĕн позицийĕ çинче, рабочи класс ĕçĕшĕн кĕрешмелли позици çинче, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешмелли позици çинче çирĕп тăракан писательсем хĕрӳллĕн ырланă.

Партилĕхшĕн, идейăлăхшăн тата художествăллă ăсталăхшăн пысăка хурса хакланă Владимир Ильич Ленин Максим Горькин «Амăшĕ» повеçне.

Художествăлла ăсталăхра, идейăллă позицисем уçăмлă та паллă пулнинче — илемлĕ произведенисен вăйĕ. Анчах çакă пурне те мар килĕшет иккен. Хăш-пĕр чухне литературăпа искусствă произведенийĕсен идейă тĕлĕшĕнчи уçăмлăхне пушă сăмахсемпе вĕрентсе каланине хирĕç кĕрешес сăлтавпа витĕнсе тапăнаççĕ. Çавăн пек шухăш-туйăмсем Некрасовăн «По обе стороны океана» ятлă заметкисенче уйрăмах уççăн палăрчĕç. Çак произведени «Новый мир» журналта пичетленсе тухнă. Экран çине тухман «Застава Ильича» фильма хак парса, вăл çапла сырать: «Экран çине пурне те ăнланакан, пур ыйтусене те тĕп-тĕрĕс те уçăмлă ответ пама пултаракан ватă рабочие шуралма пуçланă мăйĕхĕнчен сĕтĕрсе кăларманшăн эпĕ Хуциевпа Шпаликова чун-чĕререн тав тăватăп. Çав рабочие, ялан вĕрентсе калаçаканскерне кăтартнă пулсанах картинă пĕтнĕ пулĕччĕ».

САСĂСЕМ: Намăс!

Çак сăмахсене совет писателĕ совет журналĕнче çырать вĕт-ха! Ватă рабочи çинчен çакăн пек улпутла йĕрĕнсе çырнă сăмахсене тарăхмасăр вулама çук. Çапла шутлатăп: совет писателĕ çакăн пек сасăпа калаçни — пачах юрăхсăр япала.

Тата çакна та каламалла: асăннă заметкăсенче автор искусствăри уйрăм факт пирки мĕн шутлани çинчен çеç каламан, вăл пирĕн искусствăшăн пачах юрăхсăр принцип кăларса тăратнă. Кун пирки эпир татăклăн хирĕçлемесĕр тăма пултараймастпăр.

# ЛЕНИНЛА ПАРТИ ЕРТСЕ ПЫНИ—ПИРĔН МĔН ПУР ÇĔНТЕРӲСЕН НИКĔСĔ

Уйрăм работниксем хушшинче сыннăн темĕнле абсолютлă ирĕклĕхĕ çинчен калаçнине илтме пулать. Кунта мĕне асра тытнине эпĕ пĕлместĕп, анчах та сыннăн абсолютлă ирĕклĕхĕ нихçан та, пĕтĕмпех коммунизм туса çитерсен те пулмасть, тесе шутлатăп. «Эпир «абсолютсене» ĕненместпĕр»,— тесе ответленĕ В. И. Ленин «абсолютлă ирĕклĕх» майлă тăракансене (Соч., 32 том, 479 стр.). Коммунизм чухне те пĕр сыннăн шухăш-ирĕкĕ пĕтĕм коллективăн шухăш-ирĕкне пăхăнса тăма тивĕçлĕ. Ун пек пулмасан, анархилле, харпăр хăйне евĕрлĕ хăтланни обществă пурнăçĕнче килĕшӳсĕрлĕх кăларать, йĕркелĕхе пĕтерет. Организаци тĕлĕшпе, хăш еннелле çул тытас тĕлĕшпе тĕп никĕс пулмасан, социализмлă обществă кăна мар, нимĕнле обществă та, нимĕнле обществăллă системă та, сынсен чи пĕчĕк коллективĕ те тытăнса тăма пултараймасть.

Обществăллă аталанăвăн пур тапхăрĕсенче те, чи авалхи ăрусенчен пуçласах, пурăнма кирлĕ майсене тупма сынсем коллективсене пĕрлешнĕ. Пирĕн вăхăтра вара, атом, электроникăпа кибернетикă, автоматикă, поток линийĕсен ĕмĕрĕнче, обществăллă системăн мĕн пур сыпăкĕсем пурлăх-ырлăх тăвас енĕпе, ăс-хакăл пурнăçĕ енĕпе те питĕ кал-кал, шутсăр килĕшӳллĕ тата йĕркеллĕ пулни пушшех кирлĕ. Çавнашкал условисенче кăна ĕнтĕ наукăн этем аллипе тунă мĕн пур ырлăхĕсемпе усă курма тата вĕсене харпăр хăйшĕн ĕçлеттерме пулать.

Коммунизм вăхăтĕнче обществăри йĕркелĕхе пăснисем, коллектив шухăш-ирĕкĕнчен тухнисем пулма пултараççĕ-и? Пултараççĕ. Анчах та пĕччеишер фактсем пек çеç пулĕç. Психикă тĕлĕшĕнчен чирленисем пулмĕç тата ухмаха ернĕ сынсем обществăри правилăсене пăсакансем пулса тăмĕç, тесе шутлама юрамасть. Мĕнлине пĕлместĕп, анчах та ухмаха тухнă сынсем иртĕхесрен чармалли мĕнле те пулин майсем пулаççĕ пулĕ. Халĕ те лăплантармалли кĕпе пурçке-ха, ăна ухмаха ернĕ сынсем çине тăхăнтараççĕ, çапла вара вĕсене чарусăрланма, хăйне тата сывăхри сынсене сиен тума памаççĕ.

Ку чухнехи условисенче пирĕн çĕршывра иртнĕ вăхăтран юлнă йăласене хирĕç çине тăрса кĕрешме тата тĕнче аренинче организациленнĕ класс тăшманĕн атакисене сире-сире яма тивет. Çакăн çинчен пирĕн пĕр минутлăха та манмалла мар. Хăш-пĕрисем вара пире идеологи тĕлĕшĕнчен мирлĕ пурăнмалли çул çине тĕртме, «абсолютлă ирĕклĕхĕн» çĕрĕк идейине пăрахса пама хăтланаççĕ. Кашниех, мĕн пур сынсемшĕн пулмалли правилă выранне хурса, хăйĕн субъекти-

вистла шухăшĕсене йышăнтарать пулсан тата вĕсене, социализмлă обществăн пурте йышăннă нормисене хирĕç пырса, пурнăçа кĕртме тăрăшать пулсан, ку вăл пурпĕрех çынсен йĕркеллĕ пурнăçне, обществă ĕçне аркатса ярасси патне илсе пырать. Обществă никама та анархи тума тата хăй пуç тĕлĕшшĕн хăтланма ирĕк пама пултараймасть.

Социализмлă обществăна ертсе пыракан вăй вăл Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пулса тăрать. Вăл пĕтĕм совет халăхĕн шухăш-ирĕкне палăртса тăрать, халăхăн тĕп интересĕсемшĕн кĕрешесси унăн ĕçĕнчи тĕллев пулса тăрать. Халăх партие шанать, парти çак шанăçа хăйĕн кĕрешĕвĕпе, хăйĕн юнĕпе тивĕçлĕ пулнă. Халăх интересĕсене чăрмантараканнине пурне те парти коммунизм тумалли çул çинчен сирсе пăрахĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Пирĕн гуманизм çинчен тăракан ыйтăва ăнланса илес пулать, мĕн тата камшăн лайăххине, мĕн тата камшăн япăххине уйăрса илес пулать. Кунта та, яланхи пекех, эпир класс интересĕсем енчен, ĕçсыннисен интересĕсене хӳтĕлес енчен пăхатпăр. Çĕр çинче классем пур чухне пурнăçра абсолютлă лайăххи çук. Буржуазишĕн, империалистсемшĕн мĕн лайăх, çавă рабочи класа инкек кӳрет, тата, тепĕр майлă, ĕçсыннисемшĕн мĕн лайăх, çавна империалистсем, буржуази йышăнмаççĕ.

Пурте, уйрăмах пире идеологи енĕпе мирлĕ пурăнассине йышăнтарма хăтланакансем, пирĕн принципсене лайăх ăнланса илччĕр, тепĕр эпир. Политикăра шӳт туни пулма пултараймасть. Кам идеологире мирлĕн килĕштерсе пурăнас идейăна сарать, çавă чăннипе антикоммунизм позицийĕсем çине шуса анать. Коммунизм тăшманĕсем пире идейă тĕлĕшĕнчен хĕç-пăшалсăрлантарасшăн. Хăйсен çак усал тĕллевне вĕсем идеологисем мирлĕн килĕштерсе пурăнасси çинчен пропагандăланипе, пирĕн пата хĕпĕртесех кĕртсе яма хатĕр çак «Троя лаши» пулăшнипе пурнăçлама хăтланаççĕ.

Эпир çакна шанса тăратпăр: социализмпа коммунизм тăшманĕсен пирĕн марксистла-ленинла идеологие хирĕçле кирек мĕнле ĕçĕсем те пирĕн çĕршыври рабочи класăн, колхоз хресчечĕсен, халăх интеллигенцийĕн идейăпа политикă тĕлĕшĕнчи çирĕп пĕрлĕхĕ çине пырса çапăнса арканĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пичетпе радио, литературă, живопиç, музыкă, кино, театр — пирĕн партин идейăллă çивĕч хĕç-пăшалĕ. Вăл хăйĕн çак хĕç-пăшалĕ яланах кĕрешĕве хатĕр пултăр, тăшмансене тĕл тиверттĕр тесе тăрăшать. Ăна мăкатма, унăн витĕмлĕхĕн вăйне чакарма парти никама та ирĕк памасть.

Совет литературипе искусстви тӳрремĕнех Коммунистсен партийĕпе унăн Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе аталанаççĕ. Парти писательсен, художниксен, композиторсен, кинопа театр работникĕсен чаплă, талантлă кадрĕсене пăхса çитĕнтерчĕ, вĕсем хăйсен пурнăçне, хăйсен творчествине ленинла партипе тата халăхпа уйăрлми тачă çыхăнтарнă.

Партие, халăха, Ленина пĕр-пĕринчен уйăрма çук. Ленин ĕçĕ — партипе халăх ĕçĕ. Ун çинчен чаплă поэт Владимир Маяковский лайăх каланă:

«Партипе Ленин —
йĕкĕреш, пĕр тăван.
Хăшĕ хаклăрах
истори-аннешĕн?
Калатпăр — Ленин,
шухăшлатпăр — парти,
Калатпăр —
парти,
шухăшлатпăр — Ленин».

Ленинла парти вăл — халăхăн малта пыракан пайĕ, кĕрешӳре тĕрĕсленнĕ авангарчĕ.

Пирĕн çĕршывăн кашни гражданинĕ, вăл кирек кам пулсан та: рабочи е колхозник, ученăй е писатель, художник е композитор — хăйĕн халăхĕн ывăл-хĕрĕсем, вĕсем хăйсене халăх пурнăçĕн тулашĕнче, унăн пултаруллă ĕçĕн тулашĕнче тытасси çинчен шутлама та пултараймаççĕ. Искусствăра партилĕх тата халăхăн шухăш-кăмăлне палăртса тăни пĕр-пĕрне хирĕçлемеççĕ, вĕсем пĕр пĕтĕмĕшле ĕç пулса тăраççĕ!

Обществăри хăйĕн вырăнне çавăн пек ăнланса илмен творчествă работникĕсене, вĕсем çакна лайăх ăнланса илччĕр тесе, пулăшас пулать.

Дирижер оркестрта мĕн пур инструментсем килĕшӳллĕ тата кĕрнеклĕ янăраччăр тесе асăрхаса тăнă пекех, парти те обществăллă-политикăллă пурнăçра мĕн пур совет çыннисен вăй-халне пĕр тĕллев патне çитме пĕтĕçтерет.

Ертсе пыракан вăй пулса тăракан парти урлă социализмлă обществă çынсен йĕркеллĕ пурнăçне пăсакан чăрмавсене сирсе ярать, коммунизм тума пурлăх тĕлĕшĕнчен, культурă, идейă енĕпе кирлĕ майсене хатĕрлет.

Формалистла пăсăлса кайнине парти енчен критиклессине пирĕн обществăн ăс-хакăл пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнакан литературăпа искусствăна аталантарас интересемшĕн туса пыраççĕ.

Литературăпа искусствăра парти халăха хавхалантаракан тата унăн вăйĕсене пĕтĕçтерекен произведенисене кăна ырлать. Обществă хăйĕн интересĕсене хирĕç пыракан произведенисене сивлеме тивĕçлĕ.

Эпир пурте халăх гунă пуянлăхпа пурăнатпăр, çакăншăн халăха хамăрăн ĕçпе тӳлеме тивĕçлĕ. Кашниннех, пыл хурчĕ вĕллене тултарнă пек, хăйĕн ĕçĕпе обществăн пурлăхпа ăс-хакăл пуянлăхĕсене нумайлатса пымалла. Çакăнпа ки-

лĕшместпĕр, ку вăл çынна ирĕксĕрлени, ĕлĕкхи патне таврăнни пулать текен çынсем те тупăнма пултараççĕ. Кун çине эпĕ çапла ответлĕп: эпир организациллĕ социализмлă обществăра пурăнатпăр, унта уйрăм çынсен интересĕсем обществă интересĕсемпе килĕшсе тăраççĕ, пĕр-пĕрне хирĕç пымаççĕ.

Парти политики пĕтĕм обществăн интересĕсене, çапла вара, кашни уйрăм çыннăн интересĕсене палăртса тăрать, парти политикине вара Центральнăй Комитет пурнăçласа пырать, Центральнăй Комитета парти шанать, ăна парти полномочийĕпе парти съезчĕ суйланă. (Т ă в ă л л ă н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Художествăллă творчествă ыйтăвĕсенче партин Центральнăй Комитечĕ пурте — литературăпа искусствăн чи тава тивĕçлĕ тата чи паллă деятелĕ те, çамрăк, тин кăна ĕçлеме тытăнакан творчествă работникĕ те — парти çул-йĕрне çирĕп пурнăçласа пыччăр тесе тăрăшĕ.

Юлашки вăхăтра литературăпа художествă журналĕсенче совет пурнăçĕн уйрăм çынна ытлашши пысăка хунă тапхăрти тата хальхи вăхăтри пурнăçĕ çинчен калакан произведенисем сахал мар пичетленнĕ, çавăн пекех издательствăсем те сахал мар пичетлесе кăларнă. Писательсем иртнĕ вăхăтри йывăр та кăткăс явленисене ăнланса илме тăрăшни вăл вырăнлă. Паллă ĕнтĕ, партин Центральнăй Комитечĕ чи çивĕч критикăллă чылай произведенисене ырларĕ.

Анчах та çакна калас пулать: уйрăм çынна ытлашши пысăка хунипе çыхăннă явленисемпе событисене тата партин XX съезчĕ хыççăн халăхăн обществăллă, политикăллă, ăс-хакăл пурнăçĕнче пулса иртнĕ тата халĕ те пулса иртекен принципла, тĕп улшăнусен тупсăмне, пирĕн шутпа, тĕрĕсех мар, чăннипе каласан, пĕр енлĕн, тĕрĕс мар çутатса паракан кĕнекесем те тухаççĕха. Çавăн пек кĕнекесен шутне эпĕ Эренбург юлташăн «Оттепель» повеçне кĕртнĕ пулăттăм.

Хĕлле е çуркунне пуçламăшĕнче ăшăтса пărахни тени пире улшăнакан, пĕр пек тăман çанталăка, çутçанталăкра температурă улшăнса тăракан вăхăта аса илтерет, ун чухне çанталăк каярахпа мĕнле пулассине калама хĕн. Литературăри çакăн пек сăнар урлă совет обществин обществăллă, политикăллă, производствăллă тата ăс-хакăл пурнăçĕнче Сталин вилнĕ хыççăн пулса иртнĕ принципла улшăнусен тупсăмне тĕрĕс палăртма май çук.

Пирĕн халăх умĕнче коммунизмăн çутă пуласлăхĕ уçăлчĕ. Хальхи ăру коммунизм вăхăтĕнче пурăнассине ăнланни совет çыннисене хăйсен çĕршывĕшĕн чĕререн савăнтарать, коммунизмшăн паттăррăн ĕçлеме хавхалантарать. Халĕ пирĕн çĕршывра пурте ирĕклĕн сывлаççĕ, пĕр-пĕрин çине шанчăклăн, пĕр иккĕленмесĕр пăхаççĕ, вĕсем хăйсен хальхи тата пулас пурнăçĕшĕн шикленмеççĕ, çакна вĕсене пĕтĕм пурнăç стройĕ гарантилесе тăрать.

Сталина ытлашши пысăка хунă йăласен юлашкисене пĕтерсе, Коммунистсен партийĕ ĕççыннисен пуçарулăхĕпе активлăхне тăлласа тăракан мĕн пур чăрмавсене сирсе ячĕ, халăхăн творчествăлла вăйĕсене аталантарма чи ырă условисем туса хучĕ.

Партипе халăх пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Парти, уйрăм çынна ытлашши пысăка хунинчен килнĕ сиенлĕ йăласене пĕтерсе, партипе государствă пурнăçĕнче ленинла нормăсене çĕнĕрен вăй илтерес, социализмлă демократие малалла аталантарас тата мĕн пур вăйсене анлăн коммунизм тума мобилизацилес çул-йĕре çирĕп тытса пычĕ, тытса пырать те. (Н у м а й ч ч е н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Анчах та ку вăл уйрăм çынна ытлашши пысăка хунине сивленĕ хыççăн ĕç хăй тĕллĕнех пулса пыракан вăхăт пуçланнине, влаçа тытса тăрасси вăйсăрланнине, обществăлла карап хумсен юххипе ишнине, кашниех хăй пуç тĕшшĕн, мĕнле килчĕ, çавăн пек хăтланма пултарнине пачах та пĕлтермест. Çук. Парти хăй туса хатĕрленĕ ленинла çул-йĕре çирĕп тытса пынă, халĕ те çавăн пекех çирĕп тытса пырать, идейă тĕлĕшĕнчен кирек мĕнле пăркаланнисене хирĕç, пирĕн обществă пурнăçĕн нормисене пăсма хăтланнисене хирĕç çирĕп кĕрешет.

Уйрăм çынна ытлашши пысăка хунă тапхăра литературăра çутатассипе çыхăннă тата тепĕр ыйтăва хускатасшăн. Журналсемпе издательствăсене çынсен ссылкăри, тĕрмери, лагерьти пурнăçĕ çинчен калакан алçырăвĕсем нумай пыраççĕ, теççĕ.

Тепĕр хут калатăп, ку вăл питĕ хăрушă темă тата йывăр материал. Çыннăн пирĕн паянхи куншăн тата пирĕн çĕршывпа партин пуласлăхĕшĕн ответлăх мĕн чухлĕ пĕчĕкрех, сенсацие юратакансем, «ăшаланине» юратакансем ку материал çине çавăн чухлĕ çăмăлрах тăрăнаççĕ.

САСĂСЕМ: Тĕрĕс! (А л ă ç у п а ç ç ĕ).

Эсир сенсаци çыратăр, çакнашкал «ăшаланине» паратăр, ун çине вара кам тăрăнать-ха? Кун пек «ăшалани» çине, виле ашĕ çине пынă пекех, шăнасем, питĕ пысăк самăр шăнасем тăрăнаççĕ, ют çĕршывсенчи буржуалла тĕрлĕ йăх-ях сĕтĕрĕнет.

Пирĕн тăшмансене савăнтарас текен çын вĕсене çăмăллăнах пулăшма пултарать. Пирĕн халăх ĕçне, пирĕн парти ĕçне усă кӳрес текен çын вара çакăн пек темăна илет, ăна пур енчен те виççе пăхать, çак материала çĕнтерме вăй пуррине туйсан, халăха кирлĕ произведени çырать, вăл çутатса паракан материал халăх вăйĕсене тĕреклетме, пирĕн партие, халăха пĕтĕçтерме тата ăна аслă тĕллев патне хăвăртрах утма пулăштăр тесе тăрăшать. Кашниех çак задачăна пурнăçлама

пултараймасть пулин те, нумайӑшӗ ку материал патне туртӑнаҫҫӗ пулас.

Кунта виҫе кирлӗ. Писательсем пурте ҫав темӑсем тӑрӑх кӑна ҫырма пуҫласан вӑл мӗнле литературӑ пулнӑ пулӗччӗ вара!

Партин Центральнӑй Комитетне ҫырусем килеҫҫӗ, вӗсенче литературӑпа музыкӑн хӑш-пӗр произведенийӗсенче тата уйрӑм спектакльсенче пирӗн ҫӗршыври еврейсен пурнӑҫне пӑсса кӑтартнӑ пирки пӑшӑрханни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Англи философӗ Рассел тата эпӗ пӗр-пӗрин патне янӑ ҫырусенчен пӗлетӗр ӗнтӗ, буржуалла пичетре пире хирӗҫ элеклӗ кампани те пуҫланӑ.

Декабрь уйӑхӗнчи тӗлпулура эпир ку ыйтӑва хускатнӑччӗ, Евгений Евтушенкӑн «Бабий Яр» сӑвви тата Дмитрий Дмитриевич Шостаковичӑн ҫӗнӗ симфонийӗ (унта ҫав сӑвӑпа усӑ курнӑ) пирки каланӑ май хускатнӑччӗ. Лару-тӑру каллех ҫак ыйту патне таврӑнма хушать.

Евтушенкон ҫак асӑннӑ сӑввине мӗншӗн критиклеҫҫӗ-ха? Мӗншӗн тесен автор «Бабий Ярта» ҫынсене массӑллӑн вӗлернӗшӗн фашистла, шӑпах фашистла преступниксене тӗрӗссипе кӑтартса пама тата вӗсене сивлеме пултарайман. Сӑвӑра фашистсем еврейсене ҫеҫ асаплантарнӑ пек кӑтартса панӑ, ҫав вӑхӑтрах унта вырӑссем, украинецсем тата Совет Союзӗнчи ытти халӑх ҫыннисем те сахал мар пӗтнӗ. Ку сӑвӑран унӑн авторӗ политикӑ тӗлӗшӗнчен пиҫсе ҫитнине палӑртайманни тата историллӗ фактсене пӗлменни курӑнать.

Еврей халӑхӗн ҫыннисене пирӗн ҫӗршывра такам хӗснӗ пек кӑтартса пама кама тата мӗн тума кирлӗ пулнӑ-ха? Ку вӑл тӗрӗс мар. Октябрь революцийӗ пулнӑранпах пирӗн ҫӗршывра еврейсем пур енчен те ССР Союзӗнчи ытти халӑхсемпе пӗр тан условисенче пурӑнаҫҫӗ. Пирӗн еврей ыйтӑвӗ ҫук, ӑна шухӑшласа кӑларакансем ют юрра юрлаҫҫӗ.

Вырӑссен рабочи класне илес пулсан, вӑл революциччен те нациллӗ кирек мӗнле пусмӑрӑн, ҫав шутра антисемитизмӑн тӑшманӗ пулнӑ.

Революцичченхи вӑхӑтра эпӗ шахтерсем хушшинче пурӑннӑ. Еврейсене хирӗҫ погромсем тунӑ ҫӗре хутшӑнакансене рабочисем питлетчӗҫ. Погромсене хавхалантаракансем патша правительстви, капиталистсем, помещиксем тата буржуази пулнӑ. Погромсем туса, вӗсем ӗҫҫыннисене революциллӗ кӗрешӳрен пӑрса ярасшӑн пулнӑ. Погромсене организацилекенсем полици, жандармери, черносотенецсем пулнӑ, вӗсем погромсене обществӑри йӑх-яхсене, деклассированнӑй элементсене явӑҫтарнӑ. Хуласенче нумай дворниксем вӗсен агенчӗсем пулнӑ.

Акӑ, сӑмахран, паллӑ революционер-большевика Бауман юлташа,— вӑл еврей пулман,— Мускаври жандармери заданийӗпе дворник вӗлернӗ.

Горькин «Амӑшӗ» ятлӑ чаплӑ повеҫӗнче Российӑри рабочи класӑн интернационализмне питӗ лайӑх кӑтартса панӑ. Рабочи-революционерсен ретӗнче тӗрлӗ национальноҫсен представителӗсем пур. Сӑмахран, вырӑс рабочине Павел Власова тата Андрей Находка украинеца аса илӗр-ха.

Манӑн ачалӑх тата ҫамрӑк вӑхӑт Юзовкӑра иртрӗ, унта ун чухне еврейсем нумай пурӑнатчӗҫ. Заводра пӗр вӑхӑт хушши эпӗ Яков Исаакович Кутиков слесарӗн помощникӗ пулса ӗҫлерӗм. Вӑл квалификациллӗ рабочи пулнӑ. Заводри рабочисем хушшинче ытти еврейсем те пурччӗ. Астӑватӑп, пӑхӑр шӑратакан литейщик пулса еврей ӗҫлетчӗ, литейщик ӗҫӗ ун чухне питӗ пысӑк квалификаци шутланнӑ. Эпӗ ҫак литейщика час-часах кураттӑм, вӑл тӗне ӗненекен ҫын пулнӑ пулмалла, шӑматкунсенче ӗҫлеместчӗ, анчах та украинецсем, вырӑссем тата ыттисем пурте ӗҫлетчӗҫ, ҫавӑнпа та вӑл литейнӑя пыратчӗ, ӗҫе хутшӑнман пулин те, вӑхӑта кунӗпех унта ирттеретчӗ.

Заводра вырӑссем, украинецсем, еврейсем, поляксем, латышсем, эстонецсем тата ыттисем ӗҫлетчӗҫ. Тепӗр чухне пӗр е тепӗр рабочи хӑш халӑх ҫынни пулнине никам та пӗлмен. Мӗн пур национальноҫсенчен тухнӑ рабочисем пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнатчӗҫ.

Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл класлӑ пӗрлӗх, пролетариллӗ интернационализм пулать.

Эпӗ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче пулнӑ чухне, машинӑпа Лос-Анжелоса кайнӑ чухне, пирӗнпе пӗрле пӗр ҫын ларчӗ, вӑл хӑйне хула мэрӗн заместителӗ тесе паллаштарчӗ. Вӑл вырӑсла, ытла тасах мар пулсан та ирӗклӗнех, калаҫма тытӑнчӗ. Эпӗ ун ҫине пӑхрӑм та ҫапла ыйтрӑм:

— Эсир ӑҫтан-ха вырӑсла пӗлетӗр? — терӗм.

— Мӗнле-ха вара, эпӗ Ростовра пурӑннӑ, манӑн атте иккӗмӗш гильдири купец пулнӑ.

Ун пеккисем Петербургра та пурӑннӑ, ӑҫта пурӑнас тенӗ, ҫавӑнта пурӑннӑ.

Куратӑр ӗнтӗ, манпа пӗрле заводра ӗҫлекен Кутиков еврей патша вӑхӑтӗнче хӑй ӑҫта пурӑнас тенӗ, ҫавӑнта пурӑнма пултарайман, Лос-Анжелос хулинчи мэр заместителӗн ашшӗ пек еврейсем вара ӑҫта пурӑнас тенӗ, ҫавӑнта пурӑнма пултарнӑ.

Наци ыйтӑвӗ ҫине патша правительстви ҫавӑн пек пӑхнӑ; вӑл та ку ыйту ҫине класс интересӗсем енчен пӑхнӑ. Ҫавӑнпа та еврейсен — пуян сутуҫӑсен, капиталистсен пур ҫӗрте те пурӑнма правӑ пулнӑ, чухӑн еврейсен вара,— вӗсем вырӑс, украинец тата ытти рабочисемпе пӗр пекех тертленнӗ,— ӗҫлемелле тата япӑх ҫуртсенче пурӑнмалла пулнӑ, вӗсен патша Российӑнчи мӗн пур халӑхсем пекех тарҫӑ ӗҫӗн йывӑрлӑхне тӳсме тивнӗ.

Фашистла захватчиксене хирĕç пынă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче те тĕрлĕ çынсем хăйсене тĕрлĕ майлă тытрĕç. Çав кунсенче сахал мар паттăрлăх кăтартнă еврейсем те пулнă. Вĕсенчен тава тивĕçлисене Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă, нумайăшне орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Тĕслĕхшĕн Совет Союзĕн Геройне Крейзер генерала илсе кăтартам. Атăл çинчи аслă çапăçу вăхăтĕнче вăл иккĕмĕш гвардейски арми командующийĕн заместителĕ пулнă, Донбаспа Крыма ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусене хутшăннă. Халĕ Крейзер генерал Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çарсен командующийĕ.

Тĕрлĕ национальноçсен çыннисем сутăнчăкла ĕç тунă тĕслĕхсем те пулнă. Сире çакăн пек факт илсе кăтартма пултаратăп. Паулюс группировкине хупăрласа илсен тата аркатса тăксан, Паулюс штабне тыткăна илес ĕçе 64-мĕш арми хутшăннă, унăн командующийĕ Шумилов генерал пулнă, Çар Совечĕн членĕ вара Сердюк генерал пулнăччĕ. Вăл телефонпа мана çапла калать: Паулюс штабĕпе пĕрле тыткăна илнисем хушшинче комсомолăн Киев хула комитечĕн инструкторĕ пулнă Коган пур.

— Вăл мĕнле унта лекме пултарнă-ха, эсир йăнăшмарăр-и? — тесе ыйтатăп.

— Çук, йăнăшман,— тет Сердюк юлташ.— Çак Коган Паулюс штабĕ çумĕнче тăлмачă пулнă.

Паулюса тыткăна илнĕ çĕре Бурмаков полковник командир пулнă механизациленĕ бригадă хутшăннă, çак бригадăн комиссарĕ вара Винокур юлташ, еврей, пулнăччĕ. Винокура эпĕ 1931 çултанпах, хам Мускавра партин Бауманански райкомĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ вăхăтранпах пĕлнĕ, ун чухне вăл сĕт-çу заводĕнче парти ячейкин секретарĕ пулнăччĕ.

Çакăн пек пулса тухать: пĕр еврей — Паулюс штабĕнче тăлмачра ĕçлет, тепĕр еврейĕ вара пирĕн çарсен ретĕнче Паулюса тата унăн тăлмачне тыткăна илнĕ çĕре хутшăнать.

Çынсен ĕçне вĕсем мĕнле халăх çынни пулни енчен пăхса мар, класс интересĕсем енчен пăхса хаклаççĕ.

Ĕлĕкхи çӳп-çап шăтăкĕсенче тĕрлĕ национальноçсен ĕççыннийĕсем хушшинче пулнă хирĕçӳсем çинчен калакан тĕслĕхсене шыраса çӳрени пирĕн ĕçшĕн усăллă мар. Нацисем хушшинче хирĕçӳ кăларнăшăн тата нациллĕ пусмăршăн вĕсем айăплă мар. Ку вăл — эксплуататорла классен ĕçĕ. Революци интересĕсене сутакансене илес пулсан, патша влаçĕн, помещиксемпе буржуазин тарçисем вĕсене пур çĕрте те пуçтарнă, тĕрлĕ национальноçсен çыннисем хушшинче сутăнчăксем тупнă.

Черносотенецсен ирсĕр провокацийĕсемшĕн вырăс халăхне айăплани айванла пулнă пулĕччĕ, çавăн пекех «Бундăн» национализмĕпе сионизмĕшĕн, Азефпа Житомирскин («Отцовăн») провокаторла ĕçĕсемшĕн, хăй вăхăтĕнче «зубатовецсемпе» тата патша охранкипе çыхăннă еврейсен тĕрлĕ организацийĕсемшĕн пĕтĕм еврей халăхĕ ответлă тесе шутлани те айванла пулнă пулĕччĕ.

Пирĕн ленинла парти мĕн пур халăхсем хушшинчи туслăх политикине çирĕп тытса пырать, совет çыннисене интернационализм шухăшĕ майлă пулма, расăллă дискриминацин, нацисем хушшинчи хирĕçӳсен кирек мĕнле палăрăмĕсене хирĕç те нимĕн килĕшмесĕр кĕрешме воспитани парать. Интернационализмăн, халăхсен тăванлăхĕн аслă та ырă идеалĕсем пирĕн искусствăна çирĕплетеççĕ.

Пирĕн творчествă работникĕсем ют çĕршывсене кайса çӳрени — кирлĕ ĕç. Партин Центральнăй Комитечĕ çавăн пек çӳренисене пысăк вырăна хурать. Çапла туни кирлĕ: совет писателĕсем тĕрлĕ çĕршывсенчи халăхсен пурнăçне хăйсен куçĕпе курма пултарччăр, вĕсем ĕççыннисен пурнăçĕ çинчен тата вĕсем империализмпа колониализма хирĕç, миршĕн, халăхсен ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн кĕрешни çинчен произведенисем çырччăр. Совет литературипе искусствин произведенийĕсенче, интернационализм шухăшне палăртса, социализмлă çĕршывсенчи халăхсен пурнăçĕпе кĕрешĕвне тĕрĕс çутатса памалла.

Анчах та çакăн пек тĕслĕхсем те пулаççĕ: литераторсем ют çĕршывсене кайса çӳрени усă памасть кăна мар, пирĕн çĕршывăн интересĕсене сиен кӳрет.

Хăш-пĕр совет писателĕсем чикĕ леш енче тухса каланă сăмахсемпе паллашатăн та, вĕсем мĕншĕн тăрăшнине ăнланса илейместĕн: те вĕсем совет халăхĕн çитĕнĕвĕсем çинчен тĕрĕссине каласа парасшăн, те кирек мĕнле пулсан та ют çĕршывсенчи буржуалла публикăна юрасшăн. Çавăн пек «туристсем» тĕрлĕ буржуалла, çав шутра чи реакциллĕ хаçатсене, журналсене тата информаци агентствисене интервью парса çӳреççĕ, вĕсенче вара ответлăха пачах та туймасăр тăван çĕршыв çинчен суя сăмахсем сараççĕ.

В. Некрасов, К. Паустовский тата А. Вознесенский писательсем Франције кайса çӳрени кăмăла каймалла мар йĕр хăварчĕ. Америкă тăрăх çӳренĕ вăхăтра сăмах каланă чухне В. Катаев асăрхануллă пулман.

Çирĕп мар çынна чикĕ леш енче илĕртмелле каласан, «çĕнĕ эпохăн символĕ» е мĕн те пулин çавăн евĕрлĕ каласан, вăл хăй ăçтан, ăçта тата мĕншĕн килнине манса каять те килĕшӳсĕр сăмахсем сӳпĕлтетме тытăнать.

Нумаях пулмасть Евгений Евтушенко поэт Хĕвеланăç Германие тата Франције кайса килчĕ. Вăл тин çеç Парижран таврăннă, унта рабочисен, студентсен, Совет Союзĕн тусĕсен нумай пин çынлă аудиторийĕсем умĕнче тухса каланă. Евтушенко юлташ, калас пулать, çавăнта кайса

çӳренĕ чухне хӑйне тивĕçлипе тытнӑ. Анчах вӑл та, «Леттр Франсэз» журнала ĕненес пулсан, буржуалла публикӑ кӑмӑлне каяс килнинчен хӑтӑлайман.

Поэт хӑйне итлекен çынсене унӑн «Бабий Яр» сӑвви çине пирĕн çĕршывра мĕнле пӑхни çинчен тĕлĕнмелле каласа панӑ. Манӑн сӑвва халӑх йышӑнчĕ, ӑна догматиксем çеç критиклерĕç, тесе пĕлтернĕ вӑл. Анчах та Евтушенко сӑввине коммунистсем критикленине нумайӑшĕ пĕлессĕ вĕтха. Çакӑн çинчен мĕнле манмалла-ха тата харпӑр хӑй валли мĕншĕн выводсем тумалла мар-ха?

Буржуалла пичет час-часах пирĕн искусствӑ работникĕсене çакӑншӑн мухтать: вĕсем, çав пичет çырнӑ тӑрӑх, хӑйсен сӑнанисем «парти доктринипе» килĕшсе тӑман чухне «диалектикӑлла трюксен вучĕпе витĕнсе, каялла чакма» хӑтланмаççĕ.

Çакӑн пек мухтани совет çыннине кӳрентерет. Владимир Ильич Ленин Некрасов поэтӑн чаплӑ сӑмахĕсене илсе кӑтартма юратнӑ:

Пылаккӑн мухтанинче мар,
Хаярлӑхпа тискер шавра вӑл
Туять хӑйне ырланине.

Çакна Некрасов юлташ çырнӑ, анчах та хальхи Некрасов мар, пурте пĕлекен Некрасов çырнӑ. (Залра кулаççĕ. Алӑ çупаççĕ).

Эпир мĕнле вӑхӑтра пурӑннине пурин те ӑнланса илес пулать. Пирĕн çĕршывра социализм пĕтĕмĕшпех тата татӑклӑнах çĕнтерчĕ. Халĕ социализм чиккисем анлӑн сарӑлчĕç. Социализмпа коммунизм тӑвакансен ретĕнче пĕр миллиард çын ытла шутланать. Çĕр чӑмӑрĕ çинче вара виçĕ миллиард çын ытла пурӑнать.

Пирĕн вӑйсем ӳсессĕ пулсан, тӑшман та çывӑрмасть. Социализм вӑйĕ ӳссе пынинчен хӑраса, вӑл социализм çĕршывĕсене хирĕç хаяррӑн хӑйĕн хĕç-пӑшалне хӑйрать, вӑрçа хатĕрленет. Коммунизм тӑшманĕсем социализмлӑ çĕршывсенче идеологи тĕлĕшĕнчен диверси тӑвасси çине хытӑ шанаççĕ. Çакӑн çинчен яланах асра тытӑр, юлташсем, хӑвӑр хĕç-пӑшала та юсавлӑ тытӑр, çапăçăва хатĕр тытӑр. (Нумайччен алӑ çупаççĕ).

* * *

ЮЛТАШСЕМ! Эпир сирĕнпеле государствӑшӑн, партин идеологиллĕ ĕçĕшĕн питĕ кирлĕ нумай ыйтусене пӑхса тухрӑмӑр. Эпир сирĕнпе юлташла тĕл пулатпӑр, пурне те хумхантаракан ыйтусене пĕрле пӑхса тухатпӑр, çакӑнта юлашки çулсенче пирĕн çĕршывра пулса тӑнӑ çĕнĕ ларутӑру палӑрать.

Пирĕн художествӑллӑ творчествӑ тĕрĕс çулпа аталанса пытӑр тесе, халӑхпа парти чĕререн тӑрӑшаççĕ. Литературӑпа искусствӑ аталанмалли çул-йĕре парти Программинче палӑртса панӑ, çав Программӑна пĕтĕм халӑхпа сӳтсе явнӑ, ӑна рабочисем, колхозниксем, интеллигенци пĕтĕмĕшпех ырларĕç.

Çав çул-йĕре художествӑллӑ творчествӑра мĕнле майпа лайӑхрах тата тĕрĕсрех пурнăçлассине сирĕнтен кашниех, халӑх умĕнчи хӑйĕн тивĕçне ӑнланса тата хӑйĕн таланчĕн уйрӑмлӑхĕсене, художествӑллӑ творчествӑри хӑйне евĕрлĕ уйрӑмлӑхĕсене кура, татса парать.

Партипе правительствӑ руководителĕсем литературӑпа искусствӑ деятелĕсемпе тĕл пулнисем, çитменлĕхсене критиклени, пурнăç кӑларса тӑратакан çĕнĕ задачӑсене пĕрле палӑртни, çав тĕлпулусем вӑхӑтĕнче уççӑн калаçнисем—çаксем вĕсем пурте литературӑпа искусствӑн çитĕнĕвĕсене тата çитменлĕхĕсене хакланӑ чухне эпир сирĕнпе пĕр шухӑш-кӑмӑллӑ пулнине кӑтартса параççĕ. Паян пĕр-пĕрин шухӑшĕсемпе паллашни те литературӑпа искусствӑна малалла аталантарас ĕçшĕн пысӑк вырӑн йышӑнĕ, тесе шутлатӑп. (Нумайччен алӑ çупаççĕ).

Эпир совет литературипе искусствин деятелĕсене, партин шанчӑклӑ помощникĕсене, хӑйсен речĕсене тата тачӑрах пĕтĕçтерме, ленинла Центральнӑй Комитет ертсе пынипе коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тӑвассишĕн хӑйсен пĕтĕм вӑйне хума чĕнетпĕр. (Тӑвӑллӑн, нумайччен алӑ çупаççĕ. Пурте ура çине тӑраççĕ).

# Чăваш писателĕсен улттăмĕш съезчĕ

Кăçалхи апрелĕн 3—5-мĕшĕсенче Шупашкарта чăваш писателĕсен VI съезчĕ пулса иртрĕ. Ку съезд— республикăн культурăллă пурнăçĕнчи пысăк та савăнăçлă событийĕ.

Съезд çакăн пек кун йĕрки çирĕплетсе ĕçлерĕ:

1. Чăваш АССРĕнчи писательсен Союзĕн правленийĕн 1958 çулхи сентябрь уйăхĕнчен пуçласа 1963 çулхи март уйăхне çитиччен ĕçĕсем çинчен отчет;

2. Чăваш АССРĕнчи писательсен Союзĕн ревизи комиссийĕн ĕçĕсем çинчен отчет;

3. Хальхи вăхăтри çын — пирĕн произведенисен тĕп геройĕ (Чăваш прози тăвать çул хушшинче);

4. Хальхи вăхăтри çын сăнарĕ пысăк ăсталăхпа çырма хушать (Чăваш поэзийĕ тăвать çул хушшинче);

5. Яланах пурнăçпа тан (Чăваш драматургийĕ тăвать çул хушшинче);

6. Чăваш АССРĕнчи писательсен Союзĕн правленине суйласси;

7. Чăваш АССРĕнчи писательсен Союзĕн ревизи комиссине суйласси.

Кун йĕркинчи ыйтусене сӳтсе явнă чух съезд ĕçĕнче тĕп вырăнта Н. С. Хрущев юлташăн «Пысăк идейăлăхпа художествăллă ăсталăх — совет литературипе искусствин аслă вăйĕ» сăмахĕнче кăтартса панă задачăсем пулчĕç.

Чăваш писателĕсен улттăмĕш съездне тăванла республикăсемпе облаçсенчи писательсен представителĕсем йышлăн килнĕ. Хăнасем хушшинче Российăн Федерацийĕнчи писательсен Союзĕн правлени секретарĕ тутар писателĕ Г. Баширов, Мускав писателĕсем Ю. Чепуринпа П. Градов, украинă халăхĕн хальхи вăхăтри паллă прозаикĕсем Ю. Збанацкипе В. Кучер, белорус писателĕ Т. Хадкевич, тутар писателĕсем Г. Латыповпа Ш. Мударис, удмурт писателĕ Ф. Васильев, мари писателĕ А. Волков, пушкăрт писателĕ Ф. Исангулов, карел поэчĕ А. Титов тата ыттисем пулчĕç.

Съезд ĕçне КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ С. М. Ислюков, КПСС обкомĕн секретарĕ И. П. Прокопьев, КПСС обкомĕн секретарĕ, Партипе Государствă Контроль Комитечĕн председателĕ А. И. Иванов, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Н. Е. Егоров, парти обкомĕн бюро членĕсем тата министрсем хутшăнчĕç.

Съездра литературă аталанăвĕн ыйтăвĕсем çинчен, унăн идейăллă тасалăхĕ, кĕрешӳри хăвачĕ çинчен, унăн коммунистла партилĕхĕпе халăхлăхĕ çинчен, унăн пысăк художествăллă ăсталăхĕ çинчен, тăванла халăхсен литературисем хушшинчи туслă çыхăнусене татах çирĕплетесси çинчен хĕрӳллĕ калаçу пычĕ.

— Пирĕн халăхăн идейăпа культурă шайĕ питĕ çӳле çĕкленчĕ, вăл çĕнĕрен çĕнĕ лайăх кĕнекесем ыйтать,— терĕ Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Александр Алга хăйĕн отчетлă докладĕнче.—Çырас ăсталăха вĕренме те, пирĕн кĕнекесене кăларма та условисем чылай лайăхланчĕç. Эпир тăван Коммунистсен партийĕ литературăпа искусствă ӳсĕмĕшĕн куллен атте пек тăрăшнине туйса тăратпăр. Çаксем ĕнтĕ чăваш литературине малалла аталанма пысăк майсем пачĕç. Чăваш литератури ачалăхпа çамрăк вăхăтне часах пурăнса ирттерсе, çултан çул вăй илсе пынă, Российă литературин хăватлă йывăçĕн чечекленсе ӳсекен турачĕсенчен пĕри пулса тăчĕ. Халĕ пирĕн писательсен организацийĕнче Союз членĕсем 63 çын шутланаççĕ, çамрăк авторсем те нумай. Илемлĕ литературăн пур жанрĕсем те аталанаççĕ, кĕнекесем çултан çул нумайрах тухаççĕ. Икĕ съезд хушшинче чăваш писателĕсен темиçе çĕр çĕнĕ кĕнеки пичетленсе тухрĕ. «Ялав» журналта (унăн тиражĕ 1958 çулхи 4.5 пинтен кăçал 30 пине çитрĕ), «Тăван Атăл» альманахра (унăн тиражĕ 1958 çулхи 2,5 пинтен кăçал 8,5 пине çитрĕ) çĕнĕ произведенисем нумай пичетленчĕç. Республикăри театрсен сценисем çинче драматургсен çĕнĕ пьесисене чылай лартнă. Вулакансем Константин Ивановăн пĕтĕм сочиненийĕсене, И. Я. Яковлев сочиненийĕсене, чăваш совет поэзи никĕсне хывнă Çеçпĕл Мишши сăввисен пĕр томне, Николай Шупуççыннин сăвăсемпе поэмăсен кĕнекине, Федор Павлов, Иван Мучи, И. Тăхти, Хумма Çеменĕ çырнă произведенисен кĕнекисене, пирĕн вăхăтсăр çĕре кĕнĕ поэтсен Владимир Бараевăн, Митта Ваçлейĕн, Илья Тукташăн, Нестер Янгасăн сăвă кĕнекисене илчĕç. «Чăваш прозин антологийĕ», «Чăваш поэзийĕн антологийĕ» тухрĕç, эпир вĕсене питĕ паха изданисем тесе шутлатпăр, унта çĕр çула яхăн пухăнса пынă халăх сăмахлăхĕн ахахĕсем, чăваш писателĕсен чи лайăх произведенийĕсем кĕнĕ. Чăваш литературине пуçласа яракансенчен пĕрин— халăх поэчĕн С. В. Элкер сочиненийĕсен виçĕ томĕ, халăх поэчĕ П. П. Хусанкай çырнă сăвăсемпе поэмăсен икĕ томĕ пичетленсе тухрĕç.

Партин Центральнăй Комитечĕ илемлĕ литературăна малалла аталантарас тĕлĕшпе панă кăтартусене чăваш писателĕсем лайăх ăнланчĕç,— палăртса каларĕ малалла Александр Алга.— Хальхи пурнăç, коммунизм обществи тăвакан совет çыннисен ĕçĕпе кĕрешĕвĕ пирĕн литераторсен кулленхи шухăш-ĕмĕчĕ пулса тăчĕ. Вулакан — пирĕн вăхăтра пĕтĕм халăх вулать — пиртен пурнăçа тĕрĕс, пысăк ăсталăхпа çырнă произведенисем, хамăрпа пĕрле ĕçлесе пурăнакан çынсене кăтартса паракан кĕнекесем ыйтать. Писатель вулаканăн шухăш-кăмăлне туйса тăрать, унпа канашлать пулсан, вулакан ăна хăйĕн

тусĕ тесе шутлать. Кунта манăн пирĕн ĕçчен прозаикăн Мĕтри Кипекĕн романĕсемпе повеçĕсене — «Кайăк тусĕ», «Ĕçре пиçнисем», «Уйăх витĕр çул курăнать» произведенийĕсене асăнас килет. Унăн геройĕсем — халăх пуянлăхĕшĕн кĕрешекенсем, строительсемпе рабочисем, колхозниксем, ĕнерхи воинсем. Степан Асланăн «Алла-алăн», В. Краснов-Аслин «Тăвалла» романĕсем те хальхи пурнăçа сăнласа параççĕ, вĕсенче ялти коммунистсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа панă. Александр Артемьев Тăван çĕршывăн хăюллă патриочĕсем çинчен «Алтăр çăлтăр» ятлă лайăх повеç çырчĕ. Василий Алагер «Çул юппинче», Владимир Садай «Туссем каллех пĕрле», Василий Алендей «Фермă хĕрĕ — сарă хĕр», «Пилеш пăхма пит хитре те», Юрий Скворцов «Хĕрлĕ măкăнь» повеçĕсенче пирĕн çамрăксен пурнăçне сăнласа пачĕç. Хальхи пурнăç, чăваш ĕç çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă повеçсем, калавсем, очерксем нумай тухрĕç. Аркадий Эсхель, Етĕрнере пурăнакан вырăс писателĕ Алексей Чистяков кĕнекисенче тата ытти нумай авторсен произведенийĕсенче пурнăçа лайăх пĕлни палăрса тăрать. Чăваш прозин нумай произведенийĕсене ял пурнăçĕ çинчен çырнă. Эпир хамăр произведенисенче рабочисен, интеллигенцин наци кадрĕсем ӳссе пынине çителĕклĕ кăтартса параймастпăр-ха.

Прозă çинчен калана май Уйăп Мишшин «Инçетри çулсем çинче», Куçма Турханăн «Çĕпĕрти тĕлпулусем» очеркĕсене, Леонид Агаковăн кулăшла калавĕсене, сăмахран, унăн «Кулас килет», «Хаклă кĕрӳ» кĕнекисене палăртас килет. Анчах, «Капкăн» журнал тухса тăрать пулин те, пирĕн литературăра сатирăпа юмор жанрĕ ерипен аталанать-ха.

Пирĕн иртнĕ съездрах ĕлĕкхи пурнăç çинчен çырнă произведенисем çинчен калаçу пулнăччĕ. Паллă писательсем, вĕсене кура çамрăккисем те, чăваш халăхĕн революцичченхи йывăр пурнăçĕнче темăсем шыранă. Паллах ĕнтĕ, пирĕн хамăр халăхăн ĕлĕкхи пурнăçне, унăн кĕрешĕвне пĕлмелле. Анчах çав темăпа çырнă произведенисенчен чылайăшĕнче халăхăн революцичченхи кĕрешĕвне тарăн çутатса парайман. Авторсем халăх ирĕке тухассишĕн кĕрешнине тĕрĕс кăтартса парас вырăнне авалхи йăласем, тĕшмĕшсем çинчен çырса каяççĕ, этнографипе киленеçĕ.

Хăш чухне çапла калаççĕ: «Ĕлĕкхи çинчен çырса çитет!» — теççĕ. Ун пек калани тĕрĕсех мар. Хальхи пурнăç теми те кирлĕ, тĕп темă пулса тăрать, анчах писателе халăха иртнĕ пурнăç çинчен каласа пама та чармалла мар.

«Пирĕн литературăра прозă тĕп жанр пулса тăрать», тенине час-часах илтме пулать. Анчах ку пирĕн поэзи, ывăннă çул çӳрен пек, юлса пынине пĕлтермест. Поэтсем яланах халăхпа пĕрле пулнă. Кунта манăн чи малтан Петĕр Хусанкайăн произведенийĕсене асăнас килет. Вăл çырнă поэмăсен кĕнеки, нумай пулмасть тухнă сăвăсен сборникĕ поэзие юратакансен алăран кайми кĕнекисем пулса тăчĕç. Нумай пулмасть поэт пĕчĕк, анчах ытарма çук кĕнеке — «Тилли юррисем» кăларчĕ. Унта халăх поэзийĕн ĕмĕрхи илемĕ, унăн пысăк таланчĕ çиçсе тăрать. Çак çулсенче чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ те пархатарлă ĕçленĕ. Унăн «Лирика» ятлă кĕнеки тата нумай пулмасть пичетленсе тухнă çĕнĕ сăвă кĕнеки поэт пултарулăхĕнче те, пирĕн пĕтĕм поэзире те хисеплĕ вырăн йышăнчĕç. Талантлă поэт Стихван Шавлы те вулакансене çĕнĕ кĕнекесемпе савăнтарчĕ. Уйăп Мишши хăйĕн юлашки кĕнекинче — «Лирика» кĕнекере вулаканпа чуна уçса калаçма ăста пĕлнине тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Пирĕн поэтсен шутне çĕнĕрен çĕнĕ талантсем хутшăнаççĕ. Георгий Ефимов поэзийĕ пирĕн саманана, пирĕн çамрăксен шухăш-туйăмĕсене витĕмлĕн çутатса парать. Ытти поэтсем те ăнăçлă ĕçлерĕç. Кунта тата ытти ятсене те асăнма пулнă пулĕччĕ. Анчах поэтсем начар сăвăсем те сахал мар çыраççĕ. Пĕр пĕчĕк сăвă çырмалăх темă, шухăш тупаççĕ те, темиçе кунтан çав тери кичем поэмă çавăрттарса хураççĕ. Сăвă çыракансем нумай пирĕн, анчах чăнчăн поэтсем сахал.

Пирĕн драматурги пирки те пăшăрханмалли нумай. Чылайччен драматургсем ĕлĕкхи пурнăç çинчен калакан произведенисем ытларах çырма тăрăшрĕç. Юлашки çулсенче кăна вĕсем хальхи вăхăтри пурнăçпа тимлĕрех интересленме тытăнчĕç. Анчах хăш-пĕр пьесăсем сценă çинче нумай тытăнса тăраймаççĕ.

Пирĕн литературă идейăлăхне тата ăсталăха ӳстерсе пыма кашни писателĕн хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстермелле, юлташĕсенчен те ытларах ыйтмалла, çитменлĕхсене ăслăн критиклеме пĕлмелле. Çак ыйту вăл — ытахальтен лартнă ыйту мар. Чăваш литературинче уççăн палăракан идейăлла «кăлтăксем» çук тесе пирĕн лăпланса ларма юрамасть. Ку вăл пирĕн художествăлла творчествăри идейăлăхпа партилĕх тата халăхлăх ыйтăвĕсене лартмалла мар тенине пачах пĕлтермест, пирĕн литературă тасалăхшăн тăрăшма пăрахмалла тенине пĕлтермест.

Сталина ытлашши пысăка хуни кашни халăхăн литературине те нумай сиен кӳнине халĕ пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Пирĕн писательсен организацийĕ те талантлă юлташсене çухатрĕ. Анчах уйрăм çынна пысăка хунă вăхăтри ĕçсене тĕрĕс ăнланас пулать, çак йăлан литературăри сиенлĕ юлашкисене парти вĕрентнĕ пек пĕтерес пулать. Хăш-пĕрисем вара иртнĕ вăхăтра лайăххи нимĕн те пулман пек шутлама та хирĕç мар. Ун пек çынсем çав çулсенче литературăра пулнă пур ĕçсене те йышăнмасăр тăма хатĕр. Анчах совет халăхĕ яланах вăйя шеллемесĕр ĕçленĕ, фашизма хирĕç пынă çапăçусенче паттăррăн кĕрешнĕ. Литературă халăх паттăрлăхне, унăн патриотизмне, вăл социализм çĕршывне чунтан юратнине тĕрĕс сăнласа кăтартнă. Çав произведенисене литературăран кăларса пăрахма, пирĕн пурнăçри халичченхи тата хальхи ырлăха хурлама пирĕн нимĕнле правă та çук.

Пирĕн уйрăмах çамрăк писательсене пăхса ӳстерес енĕпе тăрăшса ĕçлемелле. Пирĕн Союзпа унăн пичет органĕсем тавра пĕрлешсе тăракан литературă активĕнче 200 çынна яхăн шутланать. Çамрăк литераторсемпе ĕçлессине, вĕсене писательсен Союзĕн правленийĕ, творчествăлла секцисем, писательсен Союзĕн пичет органĕсем идейăпа творчествă енĕпе пулăшса пырассине лайăхрах йĕркелемелле.

Эпир нумай нацилле аслă государствăра пурăнатпăр, вăл пĕр тан праваллă халăхсене туслă çемьене пĕрлештерсе тăрать. Кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи, хăйĕн культури — форми енчен нацилле, содержанийĕ енчен социализмлă культурă, кашни халăхăн йăлара та, тумтир енчен те, характер енчен те хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Анчах хальхи вăхăтра çак уйрăмлăхсем халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăмаççĕ. Пачах урăхла, вĕсем пĕр-пĕрне пуянлатаççĕ.

Чăваш писателĕсен произведенийĕсем те республикă тулашĕнче тата урăх çĕршывсенче пичетленсе тухма пуçларĕç. Çакă пире те, хамăр халăха та чунтан савăнтарать.

Çакă вăл пире тата пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн, пирĕн ĕçчен тăван халăха — ытти халăхсемпе туслăн кĕрешсе коммунизм тăвакан халăха тивĕçтерме пултаракан чаплă литературă тăвассишĕн ырми-канми ĕçлеме хавхалантарать,— тесе вĕçлерĕ отчетлă доклада Александр Алга.

Ун хыççăн писательсен Союзĕн правлени секретарĕ Илпек Микулайĕ чăваш прози икĕ съезд хушшинче мĕнле аталанни çинчен доклад туса пачĕ.

— Юлашки çулсенче чăваш литератури çĕнĕ романсемпе, вуншар повеçсемпе, çĕршер калавсемпе тата новеллăсемпе, очерксемпе пуянланчĕ,— терĕ Илпек Микулайĕ.— Пирĕн литературă çавăн пек вăйлă ӳсни халиччен пулман-ха. Ку чухнехи чăваш литературинче пуринчен ытла çакă савăнтарать: писательсем хăйсен творчествинче пирĕн вăхăтри

çынна сăнласа пама тăрăшни курăнать.

Докладчик çакна нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пачĕ. Вăл К. Турхан колхозлă ял çинчен çырнă «Çĕр суранĕ» романне, В. Алендейĕн «Пилеш пăхма пит хитре» повеçне, А. Алган «Хурама та хурăн», М. Кипекĕн «Кайăк тусĕ» романне тата ытти произведенисене тĕплĕн тишкерчĕ. Илпек юлташ писатель ăсталăхĕ çинче тĕплĕ чарăнса тăчĕ.— Эпир хамăра сăмах ăстисем тесе калатпăр, çакăн пирки тĕплĕн шухăшласа пăхар-ха: эпир пурте сăмах ăстисем-и? Эпир хамăра писатель тетпĕр пулсан, начар ăстасем пулма пирĕн нимĕнле правă та çук,— терĕ докладчик. Малалла вăл чылай произведенисене, уйрăмах çамрăк авторсем çырнисене тишкерсе тухса, вĕсен вăйсăр енĕсене: сюжет тума пĕлменнине, ытлашши вăрăм çырса кайнине, темăна ытла та çиелтен çутатнине, сăнарсем вăйсăр, ĕненмелле мар пулса тухнине тата ытти çитменлĕхсене кăтартса пачĕ.— Пирĕншĕн питĕ кирлĕ тата çĕнĕ темă вăл — рабочисем çинчен, промышленноçпа строительствă аталанса пыни çинчен çырасси. Эпир халĕ çак темăна хускатма темĕнле шикленсе тăратпăр-ха, предприятисемпе стройкăсенчи ĕçсем çинчен пирĕнтен нумайăшĕ çырмаççĕ, çак темăна хăйсен произведенийĕсенче хускатмаççĕ. Эпир, прозаиксем, рабочисем умĕнче пысăк парăмра. Çак кунсенче кăна «Ялав» журнал М. Кипекĕн «Ĕçре пиçнисем» повеçне пичетлесе пĕтерчĕ. Рабочисем повеçе интересленсе вулаççĕ. Юлашки вăхăтра рабочисем çинчен П. Львов, И. Григорьев çамрăк писательсем çырма тытăнчĕç. Анчах рабочисен ĕçĕ, пурнăçĕ çинчен пирĕн асра юлакан произведенисем çукрах-ха. Хамăр творчествăри çак çитменлĕхе пирĕн хăвăртрах пĕтермелле. Рабочисен ĕçри хавхаланăвне кăтартакан произведенисене пирĕн журналсенче анлă çул памалла,— терĕ Илпек юлташ. Чăваш литературинче çĕнĕ морале çирĕплетнине кăтартакан чылай произведенисем çурални çинчен каласа, докладчик С. Элкерĕн «Хурапа шурă», В. Алагерăн «Çул юппинче», Л. Агаковăн «Юманлăхра çапла пулнă», Ю. Скворцовăн «Хĕрлĕ мăкăнь» повеçĕсене тата ытти чылай калавсене тишкерсе тухрĕ.

Съезд кун йĕркинчи тăваттăмĕш ыйту тăрăх тăван поэзин юлашки тăватă çул хушшинчи çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен «Ялав» журнал редакторĕ Г. Ефимов тунă доклада итлерĕ. Поэтсен ăсталăхĕ ÿссе пынине, хăйсен умĕнче тăракан пысăк задачăсене вĕсем тĕрĕс ăнланнине палăртса, Г. Ефимов Мускавра, Шупашкарта тата тăванла ытти республикăсенче кăларнă сăвă кĕнекисем çинче чарăнса тăчĕ, поэтсен пултарулăхне тĕплĕн тишкерсе тухрĕ.

— Писательсен икĕ съезчĕ хушшинче чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай чылай кĕнекесем кăларчĕ. Хăйĕн сăввисене вăл чăннипех чĕрепе, çунатлă чунпа çырать. П. Хусанкай çырнă сăвăсемпе поэмăсем — гражданла лирикăн чи лайăх тĕслĕхĕсем. Поэт ыттисем çырнине чăвашла куçарас тата чăваш поэчĕсен произведенийĕсене вырăсла куçарас тĕлĕшпе те ăнăçлă ĕçлет. Я. Ухсай — çĕнелнĕ чăваш çĕршывĕн юрăçи, чăнчăн сăмах ăсти. Вăл ыттисем асăрхаманнине курма пĕлет, яланах илемлĕ сăвăсемпе лайăх детальсем шыраса тупать. Юлашки тăватă çул хушшинче эпир унăн сăвăлласа çырнă «Çĕр» ятлă романĕпе тата темиçе кĕнекипе паллашрăмăр. Юлашки вăхăтра С. Шавлы та сăвă кĕнекисем чылай кăларчĕ. «Тÿпери паттăр» тата «Çăлтăр çынни» ятлă поэмăсем çырчĕ. С. Шавлы — хăйне евĕрлĕ, интереслĕ поэт. Вăл пур чухне те пурнăçпа тан утма тăрăшать. Анчах поэтăмăра тепĕр чухне ытлашши васкани чăрмантарать. Шел пулин те, юлашки çулсенче Уйăп Мишши поэзире питĕ сахал ĕçлерĕ. Çак авторган эпир нумайрах кĕтнĕччĕ. Икĕ съезд хушшинче А. Алга «Тупă тата сĕрме купăс», Н. Евстафьев «Хĕвеле хирĕç», «Туссем тĕл пулаççĕ», Г. Орлов «Тăван кил», А. Воробьев «Туслăх çăлтăрĕ», А. Лукин «Парти билечĕ» поэмăсем çырчĕç. Поэтсен йышĕ çултан çул ÿссе пыни чăнах та савăнтарать. Чăваш поэчĕсен ретне хастар та паттăр чун-чĕреллĕ А. Канаш хушăнчĕ. Унăн уйрăм кĕнеке туса кăларнă сăвви-юррисене вулакансем чун-чĕререн хапăл туса йышăнчĕç. Н. Сандров та ăнăçлă ĕçлерĕ. Унăн çĕнĕ кĕнекинче лайăх сăвăсем сахал мар. Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш съездсем хушшинче В. Васькин, А. Орлов тата В. Бараев çырнă сăвăсене уйрăм кĕнеке туса кăларнă. Вĕсем пурте совет çыннисен иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхне мухтаса юрлаççĕ,— терĕ Г. Ефимов.

Докладчик малалла ача-пăча валли кăларнă кĕнекесем çинчен каларĕ.— Ачасем валли çырасси,— терĕ вăл, — кашни писательшĕн пысăк чыс. Çапах та вĕсем валли питĕ сахал çыратпăр. Чăн та, В. Давыдов-Анатри юлашки вăхăтра ачасем валли чипер сăвăсем çырчĕ. Ытти поэтсем вара ку тĕлĕшпе нимех те тумарĕç.

Г. Ефимов хăйĕн докладĕнче поэзири çамрăк хунав аталанса ÿснине палăртрĕ. Тата пирĕн критикă пысăк ыйтусем сахал хускатнине астутарса хăварчĕ докладчик.

Чăваш драматургийĕн юлашки тăватă çул хушшинчи аталанăвĕ çинчен съездра Г. Харлампьев драматург доклад туса пачĕ.— Пирĕн нациллĕ драматурги çирĕпленсе вăй илет, вăл пурнăçпа тан пырас тĕллев тытать,— тесе палăртрĕ докладчик.— Юлашки тăватă çул хушшинче чăваш драматургĕсем 20 пьесă ытла çырчĕç. Темиçе çул ĕнтĕ Н. Терентьевăн «Куккук çаплах авăтать» трагедине чăваш театрĕн сцени çинче лартаççĕ. Вăлах «Шанман чечексем», «Ыйхă çухатнисем», «Çăлтăрсем сÿнмеççĕ» пьесăсем çырчĕ. А. Кăлкан уйрăм çынсен юрăхсăр йăлисене çивĕч питлекен «Маргарита майлаштарать» комеди çырса пачĕ. Çамрăксен театрĕ М. Ухсайăн «Миллионер», «Çу, çумăр çу!», «Уй— куçлă, вăрман хăлхаллă», «Кăра çилсем» пьесисене, музыкăпа драмă театрĕ Л. Родионовăн «Мĕншĕн куртăм-ши сана?», «Айăпа кĕнĕ хĕр» тата В. Ржановăн «Ял кулли» пьесисене лартса пачĕ. Тани Юнпа И. Максимов-Кошкинский «Эх, Иван!» пьесă çырчĕç, ăна драматурги жанрне тивĕçтерекен лайăх пьесă тесе калас килет. Н. Айзман хăйĕн пьесисен кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Н. Мранька «Юратакан чĕресем», И. Вашки «Хурама çулçи мĕн пăшăлтатать-ши?» драмăсем çырчĕç.

Хăйĕн докладĕнче Харлампьев юлташ театрпа драматургсем хушшинчи çыхăну çинчен чылай чарăнса тăчĕ.— Чăваш республикинче музыкăпа драмă театрĕ уçни пире, драматургсене, балетсем, оперăсем, опереттăсем, музыкă комедийĕсем валли либреттăсем çырас тĕлĕшпе ытларах тăрăшса ĕçлеме хушать,— терĕ докладчик. Малалла вăл пирĕн драматургсен пьесисенче мĕнле çитменлĕхсем чăрмантарнине тишкерсе тухрĕ.— Тĕлĕнмелле, анчах юлашки вăхăтра пирĕн пьесăсенчи положительнăй геройсен сăнарĕсем ăнăçлă пулмарĕç,— палăртрĕ Харлампьев,— вĕсем отрицательнăй геройсенчен шупкарах, чылай вăйсăртарах, вĕсем нимĕнле пысăк ĕçсем те тумаççĕ, цитатăсемпе калаçаççĕ. «Пилеш пăхма пит хитре те...» пьесăра, тĕслĕхрен, колхоз председателĕ Андриянов нимĕнех те тума пултараймасть. А. Кăлканăн «Маргарита майлаштарать» пьесинче вара Маргарита Ландышевран нумай ăслăрах тата чеерех.

Докладчик пĕр актлă пьесăсем сахалли çинчен каларĕ.— Чи кирли — пирĕн вĕресе тăракан пурнăçпа тан утасси,— терĕ вăл юлашкинчен.

Чăваш АССРĕнчи писательсен Союзĕн ревизи комиссийĕн председателĕ В. Ржанов доклад туса панă хыççăн чăваш писателĕсен улттăмĕш съездне КПСС обкомĕ янă саламлă çырăва КПСС обкомĕн секретарĕ И. П. Прокопьев юлташ вуласа пачĕ. Делегатсем ку салама тăвăллăн

алă çупса кĕтсе илчĕç. «КПСС облаç комитечĕ,— тенĕ вăл саламра,— тулли кăмăлпа çакна палăртать: V съезд хыççăн иртнĕ çулсенче Чăваш республикинчи писательсем тĕрлĕ жанрлă произведенисем сахал мар çырчĕç, çав произведенисенче совет çыннисем, республикăри ĕç çыннисем хăйсен Тăван çĕршывăн çутă пуласлăхĕшĕн кĕрешнине çутатса панă. Анчах та пирĕн халиччен мĕн тунипе лăпланса ларма юрамасть. Парти пире çапла вĕрентет: ку таранччен тунă ĕçсене критикăлла хакламалла, харпăр хăй ĕçĕн вăйсăр енĕсене курмалла, çитменлĕхсене, кăлтăксемпе йăнăшсене пĕтермешкĕн творчествăллă вăйсене тата пултарулăха мобилизацилемелле.

...Чăваш литераторĕсем умĕнче çакăн пек задачă тăрать: партипе правительствă руководителĕсем творчествă интеллигенцийĕпе тĕл пулнă чухне мĕн каланине пурне те вĕçне çитиех ăнланса илмелле, литературăпа искусствăн аслă тĕллевне тата тарăнрах ăнланса илмелле, коммунизмшăн пыракан кĕрешӳре харпăр хăй вырăнне палăртса хумалла.

Çакăн хыççăн съезд делегачĕсем докладсем тăрăх тухса калама тытăнчĕç. Чи малтан Российă Федерацийĕнчи писательсен Союзĕн правлени секретарĕ Г. Б а ш и р о в сăмах илчĕ. Вăл Советлă Российăри литераторсенчен, РСФСРти писательсен Союзĕн правленийĕнчен съезда хĕрӳллĕ салам каларĕ.

— Эпир хамăр юлташсен — чăваш писателĕсен творчествине пысăка хурса хаклатпăр,—терĕ Г. Баширов.— Кĕске вăхăтрах чăваш литератури, пирĕн нумай нациллĕ пĕтĕм совет литературин уйрăлми пайĕ пулса, чылай çитĕнӳсем туни пире пурне те савăнтарать. Сирĕн писательсенчен нумайăшĕ, уйрăмах поэтсем, Пĕтĕм Союзĕпе палăрчĕç. Вată тата çамрăк писательсем прозăпа поэзире çырнă чи лайăх произведенисенче пурнăç вĕресе тăни курăнать, вĕсенче пирĕн вăхăтри паттăра, çĕнĕ, коммунизмлă пуласлăх тăвакан çынна чăннипех ăста сăнласа кăтартнă. Чăваш халăх поэчĕсем Семен Элкер, Яков Ухсай, Петĕр Хусанкай чăваш литературине тата пĕтĕм совет литературине нумай пуянлатнине, вĕсен творчестви халăх пурнăçĕпе çирĕп çыхăнса тăнине, вĕсен ăсталăхĕ пысăк пулнине палăртса, Баширов юлташ çамрăк авторсене вĕсенчен, çавăн пекех Российăри, Украинăри, Белоруссири тата пирĕн çĕршыври нумай республикăсенчи чи лайăх писательсенчен вĕренме кирли çинчен каларĕ.

— Сирĕн съезд,— терĕ малалла Баширов,— çĕршыва пур çĕрте те литературăпа искусствă задачисем çинчен Кремльте пуçланнă пысăк калаçу пынă кунсенче пухăннă. Мана партипе правительствă руководителĕсен литературăпа искусствă деятелĕсемпе тĕл пулнă çĕре хутшăнма телей тиврĕ. Ку вăл хумхантаракан, нихçан асран кайми событи пулчĕ. Эпир Н. С. Хрущевпа Л. Ф. Ильичевăн сăмахĕсене итлерĕмĕр, вĕсем мĕн калани пĕтĕмпех пирĕн чĕресене çав тери çывăх сăмахсем пулчĕç, вĕсем лайăх юрă пек асра юлчĕç. Хрущев юлташ сăмахĕ партин литературă творчествипе искусствăн ку чухнехи тĕп ыйтăвĕсем çинчен калакан паха документ пулса тăрать, эпир ăна татах та, татах та вĕренĕпĕр.

Баширов юлташ малалла тĕлпулусем вăхăтĕнче И. Эренбург писателĕн йăнăш шухăшĕсене, вăл совет культурин çитĕнĕвĕсем çине объективлă мар, тенденцилле пăхнине, çав çитĕнӳсене хурланине принциплă пулса çивĕч критиклени çинчен, хăш-пĕр çамрăк поэтсен — Евтушенкон, Вознесенскин тата ыттисен творчествинчи пиçсе çитмен, йăнăш шухăшсем, вĕсен формализмла произведенийĕсем пирки тĕплĕн калаçни çинчен ăнлантарса пачĕ.

— Пирĕншĕн çак тĕлпулу, — терĕ Г. Баширов,— писательсен речĕсенчи, пирĕн пĕтĕм совет литературинчи идейăллă тасалăхшăн кĕрешме вĕрентекен шкул пулса тăчĕ, вăл пире тепĕр хут çакăн çинчен аса илтерчĕ: идеологи фронтĕнче кĕрешӳ лăпланнă вăхăт çук, эпир писательсен, çак фронтăн малти ретĕнче тăратпăр, çавăнпа та пирĕн хамăрăн хĕç-пăшала яланах çивĕч тытмалла.

Эпир çакна шанса тăратпăр: чăваш писателĕсен произведенийĕсенчи геройсем нихçан та Вознесенскипе Евтушенко пек скептиксем, нăйкăш ачасем пулмĕç, вĕсем вăйлă, Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăннă патриотсем, çулăмлă поэт Çеçпĕл Мишши мĕнле пулнă, çавăн пекех, паттăр космонавт Андриян Николаев пек çынсем пулĕç.

В а с и л и й Д о л г о в критик хăйĕн сăмахĕнче чăваш литературинчи критикă çинчен чарăнса тăчĕ.— Литературăн çак кирлĕ жанрĕ чылай енчен писательсен Союзĕн ĕçне тата унăн членĕсен творчествин идейăпа художествă шайне кăтартса паракан барометр пулса тăрать,— терĕ вăл. В. Долгов чăваш критики мĕнле аталанса пыни çинчен кĕскен чарăнса тăчĕ, унăн хальхи ĕçĕсене тишкĕрсе тухрĕ. Вăл М. Сироткин, И. Кузнецов, В. Канюков, Н. Дедушкин, М. Юрьев, Н. Иванов тата ыттисем литературоведени ыйтăвĕсем çинчен çырнă ăнăçлă ĕçсене асăнчĕ. Çавăнпа пĕрлех, конкретлă тĕслĕхсем илсе кăтартса, оратор çапла каларĕ:— Пирĕн хаçатсемпе журналсенче хăш-пĕр чухне васкаса çырнă, произведенисене тĕрĕс мар хак паракан статьясем те пичетленеççĕ. Вĕсем литературăн пĕр-пĕр ыйтăвне пăтраштараççĕ, вулакана тĕрĕс мар çулпа илсе каяççĕ. Критикă, принциплă пулса тата тĕрĕс çулпа пырса, литературăна аталанма активлă пулăшса, çĕннине, малта пыраканнисене палăртса, ăна хӳтĕлесе, кăлтăксемпе йăнăшсене хирĕç кĕрешмелле.

Советлă Украинăри литераторсен йышлă отрячĕн представителĕ Ю р и й З б а н а ц к и й чăваш писателĕсен съездне чун-чĕререн, ăшшăн саламларĕ.

Украинă литературипе чăваш литератури хушшинчи, çавăн пекех ытти литературăсем хушшинчи пĕрмаях аталанса пыракан туслă çыхăнусем çинчен пĕтĕм кăмăлтан, чунтан хумханса каларĕ вăл.— Чăваш республикине Украинăпа пĕрлештерсе тăраканни нумай,— терĕ Ю. Збанацкий.— Вĕсене эпир Украинăра сирĕн заводсен продукцине илсе тăни те, сирĕн юрăпа ташă ансамблĕн концерчĕсене итлени те, чăваш писателĕсен произведенийĕсене вуласа, пуян, сăнарлă чĕлхешĕн, сирĕн халăхăн культуришĕн савăнни те пĕрлештерсе тăрать. Андриян Николаевпа Павло Попович космоса вĕçсе кайса унта виçĕ-тăватă талăк пулнă хыççăн Чăваш республики пирĕншĕн татах та çывăх, юратнă çĕршыв пулса тăчĕ.

Украинă писателĕ Çеçпĕл Мишши çинчен чĕререн хисеплесе каларĕ, икĕ халăх хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе поэт пысăк ĕç тунине палăртрĕ. Украинăра чăваш поэчĕн çулăмлă сăввисене мĕнле юратни тата ăна чĕререн хисеплесе асăнни çинчен, унăн вилтăпри çине кашни çул темиçе пин çын пыни çинчен каларĕ.

— Эпĕ Çеçпĕл çинчен роман çырмасăр чăтма пултараймарăм,— терĕ писатель.— Ку вăл манăн тивĕçĕм кăна мар, пĕтĕм Украинă литературин тивĕçĕ пулнă. Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕ паттăрлăх, ялан ялкăшса çунни, çутă пуласлăхшăн кĕрешни пулнă. Ун çинчен çĕнĕ произведенисем çырмалла. Вăл çакна тивĕç. Çитес вăхăтра Киеври киностуди «Çеçпĕл Мишши» ятлă художествăллă фильм ӳкерме палăртнă. Çак картинă валли сценари çырма мана хушрĕç. Çавăншăн эпĕ питĕ хавас. Çеçпĕл паян та пурăнать, вăл пирĕнпе юнашар, вăл паян та хăйĕн партиллĕ ĕçне тăвать, вăл, унăн сăввисем пирĕнпе пĕрле кĕрешеççĕ. Сирĕн улăп Андриян Николаев Çеçпĕл чĕлхипе çăлтăрсемпе калаçнă. Анчах унăн чĕлхи пирĕн литературăри пысăк идейăна пăтрашу кӳрекенсемпе калаçма та питĕ витĕмлĕ. Тĕлĕнмелле ĕç пулма пултарас пулсан, Çеçпĕл Евтушенкопа Вознесенский пек поэтсемпе тĕл пулас пулсан, вăл вĕ-

семпе тивĕçлипе, большевикла хĕрӳлĕхпе калаçнă пулĕччĕ, вĕсене пурнăç тĕллевне тупма, коммунизма чун-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентнĕ пулĕччĕ.

— Сывă пултăр чăваш халăхĕ, сывă пултăр чăваш халăхĕпе украинă халăхĕ хушшинчи çирĕп, вăйланса пыракан туслăх,— терĕ юлашкинчен Юрий Збанацкий. Вăл Украинăри писательсен ячĕпе, çак аслă туслăха палăртса, чăваш писателĕсене Тарас Шевченко сăнне ӳкернĕ пысăк вазă парсан, залра нумайччен тăвăллăн алă çупрĕç.

Сăмах илнĕ П. Осипов драматург реализмри романтикăна хирĕç пулнă çынсем çинчен, Совет çĕршывĕнчи кулленхи паттăрлăха кăтартса парас вырăнне усăсăр абстракционизма кăмăллакан литераторсемпе искусствă работникĕсем çинчен тарăхса каларĕ.— Формализм, буржуалла идеологи, шел пулин те, искусствăна кăна мар килсе кĕреççĕ. Идейăллă кĕрешӳри кăткăс лару-тăрура пирĕнтен кашни хăйĕн рольне, коммунизм тăвакансен пĕрлехи ретĕнчи хăйĕн вырăнне лайăх ăнланса илни кирлĕ,— терĕ вăл.

Съезда килнĕ хăна Тарас Хадкевич белорус халăхĕпе чăваш халăхĕ хушшинчи туслăх çинчен каларĕ.— Çак туслăх вăрçă вăхăтĕнче Белоруссири вăрмансенче çапăçнă чăваш салтакĕсене Янка Купала çĕрĕ çинче асра тытнинче те, Минскпа Шупашкарти трактор завочĕсен коллективĕсем ăмăртнинче те, белорус писателĕсен кĕнекисене чăвашла пичетлесе кăларнинче те палăрать. Чăваш çĕршывĕнчи пейсажсем Белоруссии пейсажĕсене аса илтереççĕ, чăваш юррисем, белорус халăхĕн юррисем пекех, чуна тыткăна илеççĕ... Пирĕн Совет çĕршывĕнчи наци литературисем коммунизм патне çĕнтерӳллĕн пыраççĕ. Вĕсем пĕрпĕрне пулăшаççĕ, пуянлатаççĕ, çывхартаççĕ,— терĕ Т. Хадкевич.

Вăл съезда Белоруссири писательсен çĕнĕ кĕнекисене парнелерĕ.

— Çеçпĕл пур халăхсен чĕлхипе те лайăх янăрать,— терĕ аслă Çеçпĕлĕн яншашĕ Б. Кокарев учитель.— Комсомольскинчи вăтам шкулти литературăпа драмă кружокĕн членĕсем К. Ивановпа М. Çеçпĕлĕн пурнăçĕпе творчествине вĕренеççĕ, чăваш литературине пропагандăлаççĕ. 1962 çулхи çулла кружок членĕсен ушкăнĕ Украинăра пулнă. Эпир украинецсене пирĕн Çеçпĕле асăнса пурăннăшăн тав тăватпăр.

Пушкăрт писателĕ Ф. Исангулов тухса каланине съезда пухăннисем ăшă кăмăлпа итлерĕç.— Пушкăрт АССРне халăхсем хушшинчи туслă республикă теççĕ. Тутарсем, пушкăртсем, чăвашсем, марисем, удмуртсем пĕр уйрах ĕçлеççĕ, пĕр сабантуйрах савăнаççĕ, телее пĕр тан валеçеççĕ. Тĕнчене Константин Иванова панă çĕршывран салам сире! Вак халăхсем пуян та ирĕклĕ пурăнччăр тесе, тарçă ывăлĕ сăвăсем çырма пултартăр тесе кĕрешнĕ, çавна ĕмĕтленнĕ Салават Юлаев çĕршывĕнчен салам сире! — терĕ Ф. Исангулов.— Пушкăрт республикинче чăваш литературине юратаççĕ. Пушкăрт АССРĕнче 130 пине яхăн чăваш пурăнать, вĕсем чăваш литературин произведенийĕсене оригинал тăрăх вулаççĕ. Чăваш писателĕсем çав вулакансем çинчен те ан манччăр.

В. Давыдов-Анатри поэт хăйĕн сăмахĕнче чăвашсен ача-пăча литератури майĕпен аталанни çинчен, ачасем валли лайăх та савăнăçлă кĕнекесем çырма кирли çинчен чарăнса тăчĕ.— Ачасене «Пионер сасси» евĕрлĕ лайăх хаçат питĕ кирлĕ. «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманахăн ача-пăча писателĕсене хăйсен страницисене хăюллăнрах памалла,— терĕ вăл.

Н. Терентьев драматург искусствăри пурнăç факчĕсемпе пурнăç чăнлăхĕ çинчен, драматург ăсталăхĕпе тавракурăмĕ çинчен каларĕ.— Эпир пурнăçра нумай курнă çынсемпе чĕререн калаçма пĕлместпĕр. Эпир хамăр вăхăтри ахаль геройăн характерне парти хушнă пек тĕрĕс те ăста кăтартса пама пĕлместпĕр. Лайăх герой сăнарне хăвна ирĕксĕрлесе çырмалла мар. Пирĕн çынсен интересĕсене, савăнăçĕпе хуйхине пĕлекен, хăйĕн интересĕсене парти интересĕсемпе çыхăнтаракан писатель «каллех лайăх герой ыйтаççĕ» тесе нихçан та каламасть,— терĕ оратор.

Г. Латыпов съезда тутар писателĕсен кĕнекисене парнелерĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл: сирĕн Андриян Николаевăн паттăрлăхне çырса кăтартма ĕмĕтленмен тутар поэчĕ çук, терĕ. Хусанта та чăваш писателĕсен секцийĕ ĕçлени çинчен, çав секци çинчен, хăйĕн тусĕсен çĕнĕ ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

В. Краснов-Аслипе Н. Мранька съездри çынсене пирĕн литературăн идейăллă тасалăхне сыхлама чĕнчĕç.

Пирĕн пата революци хулинчен— Ленинградран килнĕ П. Ойфа поэт литературăпа искусствă работникĕсен халăх умĕнчи тивĕçĕ çинчен каларĕ.

Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай хăйĕн сăмахĕнче революцичченхи чăваш писателĕсем мĕн тери йывăрлăхра пурăннине аса илтерсе, Совет çĕршывĕнче литераторсен ĕçĕ чи хисеплĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăни çинчен каларĕ.

Оратор тăван литературăри историлле романсене тишкерсе чарăнса тăчĕ. Çавна май асăннă романсен авторĕсене тăван халăх историне çителĕксĕр пĕлнĕшĕн хытă критиклерĕ. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕ пирки сăмах хускатса, вăл çак романра чĕлхери архаизмсем нумаййине тата унта революцичченхи чăваш ялĕнчи халăха «ытлашши мĕскĕнлетсе кăтартнине» палăртрĕ.

Ытти халăхсен литераторĕсем чăваш халăхĕн пурнăçĕпе, кун-çулĕпе питĕ интересленни çинчен те оратор нумай тĕслĕхсем иле-иле кăтартрĕ.

Я. Ухсай уйрăм поэтсен пултарулăхне тишкерчĕ. Ун хыççăн литературă критики çинчен сăмах хускатрĕ.— Критикăн пурнăçа писатель пекех лайăх пĕлмелле, унăн халăх хушшинче пулмалла, халăх калаçакан чĕлхене вĕренмелле, çынсен характерне, производствăна, çутçанталăка ăнланмалла, яланах хăйĕн кабинетĕнче цитатăсем пухса лармалла мар,— терĕ вăл.

Чăваш музыкăпа драмă театрĕн главнăй режиссерĕ Б. Марков, писательсемпе театр коллективĕ пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлени çинчен каласа, сценă искусствинчи çĕнĕ ĕçсем çинчен пĕлтерчĕ.— Тахçантанпах курма ĕмĕтленнĕ чăваш опери паян ăнăçлă вăй илсе пырать. Вăхăт çитĕ, республикăри сценă çинче эпир чăваш балетне те курăпăр,— терĕ вăл.— Çĕнĕ театр валли драматурги те çĕнни кирлĕ. Куракансен тавракурăмĕ куç умĕнчех ӳссе пырать, пурнăçран кая юлнă пьесăсем вĕсене ниепле те тивĕçтерме пултараймаççĕ. Пирĕн театрсемпе писательсем хушшинчи çыхăнăва малашне тата ытларах вăйлатмалла, пьесăсен пахалăхне ӳстерес тĕлĕшпе уйрăмах çине тăрса ĕçлемелле.

Истори наукисен кандидачĕ И. Кузнецов хăйĕн сăмахĕнче икĕ идеологи хушшинче пыракан кĕрешӳ çинчен нумай каларĕ. Ун хыççăн вăл чăваш литературин юлашки çулсенчи çитĕнĕвĕсем çинче чарăнса тăчĕ, чăваш писателĕсен кĕнекисене вырăсла тата ытти чĕлхене куçарса чылай пичетлесе кăларнине асăнчĕ. Юлашкинчен И. Кузнецов литературă критики çинчен каларĕ.

Оратор писательсен алçырăвĕсене пичетлесе кăларас умĕн вĕсене тĕплĕн тишкерме кирли çинчен асăрхаттарчĕ.

Куйбышевра пурăнакан чăваш писателĕ В. Иванов-Паймен съезда Куйбышеври писательсенчен тăванла хĕрӳллĕ салам каларĕ. Оратор писательсен аслă ăрăвĕпе çамрăк литераторсем хушшинче тачă çыхăну пуррине, çамрăк писательсене чăваш литературин таса традицийĕсене малалла аталантарма тĕрĕс çул кăтартса пымаллине палăртрĕ.

Ю. Чепурин драматург (Мускав) чăвашсен хальхи драмă искус-

стви епле шайра тăнине палăртрĕ.— Сирĕн драматургсен произведенийĕсем чаплă пуянлăх, ăна упрас пулать,— терĕ.

— Кремльте творчествă работникĕсемпе тĕл пулнă чухне Хрущев юлташ каланă сăмах тата ССР Союзĕпе РСФСРти писательсен Союзĕсен пленумĕсенче пуллă писательсем каланă сăмахсем,— терĕ чăваш халăх поэчĕ С. Элкер,— пире литературăпа искусствă енĕпе малашне мĕнле ĕçлемеллине кăтартса паракан лайăх программă пулаççĕ.

Оратор чăваш писателĕсем юлашки çулсенче çырнă пысăк произведенисем çинчен каларĕ. Вăл Н. Мранькана хăйне тĕрĕс критикленĕ пирки хытă кўреннĕшĕн ўпкелерĕ. «Ĕмĕр сакки сарлака» романăн 3-мĕш кĕнешинче чăваш халăхĕн историне тĕрĕс мар кăтартнине, чĕлхе енĕпе те çўп-çапсем нумаййине, ăна якатса çитерейменнине, кĕнекери уйрăм çитменлĕхсене палăртрĕ.

С. Элкер çамрăк писательсене халăха юратма, унпа пĕрле савăнма, йывăрлăхсене те унпа пĕрле тўсме, хăйсен произведенийĕсенче халăхăн ырă туйăмĕсене кăтартса пама, парти сассине тимлĕн итлеме чĕнчĕ.

Ун хыççăн чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай тухса каларĕ. (Унăн сăмахĕ альманахăн çитес номерĕнче уйрăммăн пичетленет.)

Съездра КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ И. Прокопьев юлташ сăмах каларĕ.

— Чăваш республикинчи писательсен съезчĕ,— терĕ вăл,— творчествăлла интеллигенци, рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм совет халăхĕ хушшинче пирĕн литературăпа искусствă аталанăвĕнчи питех те кирлĕ принциплă ыйтусем çинчен пысăк калаçу пынă кунсенче пулса иртет.

Илемлĕ литературă произведенийĕсем, вĕсенче партилĕх идейисем витĕмлĕ палăрса тăраççĕ пулсан, вĕсене содержани енчен те, формă енчен те ăнланмалла çырнă пулсан, кашни çынна хăйĕн вăй-халне шанса тăма пулăшаççĕ, пĕрлехи ĕçшĕн кĕрешме хавхалантарса çĕкленўллĕ гражданла туйăм çуратаççĕ. Чăваш писателĕсем те совет литературинчи лайăх традицийĕсене аталантарса пыраççĕ, халăхшăн чуна парса ĕçлеме, рабочисем, колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ ĕçленипе тунă ырлăха хăйсен произведенийĕсенче витĕмлĕ кăтартса пама тăрăшаççĕ.

Чăваш литературин çитĕнвĕсене палăртса, Прокопьев юлташ вулакансем ăшшăн кĕтсе илнĕ произведенисене — Куçма Турхан, В. Краснов-Асли, Мĕтри Кипек, Василий Алагер прозаиксен произведенийĕсене, халăх поэчĕсен — Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Якковĕн, Семен Элкерĕн, Георгий Ефимов поэтăн сăввисене, чăваш драматургĕсен Петр Осиповăн, И. Максимов-Кошкинскин, Николай Терентьевăн, Мария Ухсайăн, Николай Айзманăн тата ыттисен пьесисем тăрăх лартнă спектакльсене асăнчĕ.

— Анчах паян пирĕн,— терĕ малалла Прокопьев юлташ,— тăван литературăн хальхи пурнăçĕпе малашнехи аталанăвĕшĕн, идейăлăхĕпе ăсталăхĕшĕн ытларах тăрăшмалла, вăхăтпа халăх умĕнчи ответлăх туйăмне ўстермелле. Халĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пысăк çĕкленўпе коммунизм тунă тапхăрта, парти творчествăлла интеллигенцие кулленхи хастар ĕçе тўррĕнех хутшăнма чĕнет.

Совет çыннисем çĕр çинче те, космосра та халиччен пулман чаплă ĕçсем нумай тăваççĕ. Хамăрăн тăван Чăваш республикинех илер-ха. Мĕн тери хăвăрт, куç умĕнчех çĕнелсе улшăнать пирĕн хуласемпе ялсен сăн-сăпачĕ.

Писательсенчен кашниех заводпа е стройкăпа, колхозпа е совхозпа тачă çыхăннă пулсан, вăл унта темĕнле ăнăсăртран хăна пек çеç пырса каймасть пулсан, унта хăйĕн тăван килне пынă пек пырать пулсан,— мĕн тери нумай çĕнĕ романсемпе очерксем тата пысăк ыйтусем хускатакан статьясем çырнă пулĕччĕç вĕсем, çапла вара, çав коллективсене мĕн тери пысăк пулăшу панă пулĕччĕç тата хăйсем те пурнăçа лайăхрах пĕлнĕ пулĕччĕç. Пурнăça тимлĕн тишкерме шикленнине пула, пирĕн вăхăтри тĕп процессене сăнласа пама пĕлменнине пула хăш-пĕр прозаиксемпе поэтсем, уйрăмах çамрăккисем, интереслĕ мар, вактĕвек тĕмăсем суйласа илеççĕ. Çавăн пек авторсен произведенийĕсенче хитре сăмахсем, «тўлек кăçсем», «шăпчăк юрланисем» тата ытти çавнашкал сăмахсем нумай, анчах вĕсен произведенийĕсен нимĕнле общественнăлла пĕлтерĕшĕ те çук, вĕсем пессимизмпа тата пурнăç çине нигилистла пăхнипе палăрса тăраççĕ.

Пирĕн литературăра, уйрăмах драматургире,— терĕ малалла Прокопьев юлташ,— юлашки çулсенче сатирă юхăмĕ аталансах пырать. Писательсем пурнăçри çитменлĕхсене, киревсĕр явленисене общественноç умĕнче сивлеме тăрăшнине ырлас пулать. Анчах сатирă хĕç-пăшалĕпе тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Литературă, çав шутра сатирă та, пурнăçа пĕр енчен кăна — киревсĕр явленисене кăна кăтартса парать пулсан, эпир унпа килĕшме пултараймастпăр.

Сатирă хĕç-пăшалĕпе ăнăçлă усă курманнине кăтартса паракан тĕслĕх вырăнне Прокопьев юлташ В. Ржановăн «Ял кулли» комедине асăнать.

Прокопьев юлташ хăйĕн сăмахĕнче тăванла литературăсем хушшинчи туслă çыхăнусене малалла аталантарасси çинче нумай чарăнса тăчĕ.

Литературă умĕнче тăракан тĕп задачăсем çинчен каласа, Прокопьев юлташ писательсен идейăпа теори тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕсене пĕрмаях ўстерсе пыма кирлине палăртрĕ.

— Эпир, — терĕ юлашкинчен И. Прокопьев юлташ,—çакна шанса тăратпăр: VI съезд хыççăн чăваш литературипе искусствин деятелĕсем пирĕн вулакансене çĕнĕ романсемпе, хастар ĕçлеме хавхалантаракан очерксемпе, пурнăça савакан поэзипе, витĕмлĕ комедисемпе, çивĕч сатирăпа савăнтарĕç, çапла вара коммунизм тăвакан совет халăхне коммунизмла воспитани парас ĕçе тивĕçлĕ вăй хурĕç.

Чăваш писателĕсен VI съездне хĕрўллĕ саламласа, А. Волков (Мари АССРĕ), Ф. Васильев (Удмурт АССРĕ), П. Чичканов (Киевра пурăнакан чăваш художникĕ) тăванла литературăсем хушшинчи туслă çыхăну çирĕпленсе пыни çинчен хумханса каласа пачĕç, çак туслăха малашне тата вăйлатса пыма чĕнчĕç. Хăнасем съезда парнесем пачĕç.

Съезд ячĕпе Мускавран, Красноярскран, Хусантан, Кисловодскран тата çĕршыври ытти хуласемпе ялсенчен саламлă телеграммăсем килнĕ. Съезда Болгари писателĕсен Союзĕн генеральнăй секретарĕпе Г. Караславовпа А. Тодоров саламлă телеграммă янă.

Съезд сўтсе явнă ыйтусем тăрăх решени йышăнчĕ. Унта çапла каланă: «Н. С. Хрущев юлташ ертсе пыракан КПСС Центральнăй Комитечĕ тăван атте пек вĕрентсе каланипе хавхаланса, коммунизм тумалли аслă Программăра палăртса хунă задачăсене асра тытса, писательсен — партин шанчăклă помощникĕсен умĕнче хăйсен хисеплĕ тивĕçне пурнăçласа пырас ĕçре историллĕ пысăк задачăсем тăнине ăнланса, чăваш писателĕсен коллективĕ çак тапхăрта çине тăрса ĕçленĕ, çитĕнўсем тунă... Анчах чăваш писателĕсем коммунизм тăвакансен ăс-тăн тĕлĕшĕнчен ўссе пыракан ыйтăвĕсене пур чухне те кирлĕ пек тивĕçтерсе пыраймаççĕха...» Съезд решенийĕ чăваш писателĕсене партилĕхпе халăхлăхшăн, произведенисен пысăк идейăлăхĕпе художествă ăсталăхĕшĕн кĕрешме, коммунизм тăвакансен паттăрла ĕçĕсен чапĕпе илемне, пурнăçра çĕнĕ, коммунизмлă хутшăнусем çĕнтерсе пынине витĕмлĕ сăнласа кăтартма чĕнет.

Съезд чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕпе ревизи комиссийĕн çĕнĕ составне суйларĕ. Юлашкинчен съезд, чунтан хавхаланса, КПСС Центральнăй Комитечĕпе Н. С. Хрущев юлташ патне саламлă çыру ячĕ.

# *Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне тата Никита Сергеевич ХРУЩЕВ юлташа*

Эпир, Советлă Чăваш çĕршывĕнчи писательсен VI съездне пухăннă çынсем, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне писательсен ĕçне пысăка хурса хакланăшăн тата вĕсене чĕререн шанăшăн, партипе правительствă руководителĕсем литературăпа искусствă деятелĕсемпе тĕл пулса калаçнă чухне панă питех те ырă кăтартусемпе канашсемшĕн чĕререн тав тăватпăр.

Çав тĕлпулу вăхăтĕнче пулнă калаçура, Никита Сергеевич Хрущев каланă сăмахсенче пирĕн парти Совет Союзĕнчи нумай нациллĕ литературăпа искусствăна социализмла реализм меслечĕн никĕсĕ çинче малалла аталантарассишĕн чунтан тăрăшни палăрчĕ.

Чăваш совет литератури Октябрьти Аслă Социализмлă революци тивлечĕпе пуçланса кайнă. Совет Союзĕнчи ытти халăхсен литератури пекех, вăл буржуалла идеологие хирĕç пынă идейăлла хаяр кĕрешӳре чăмăртаннă, халăх пурнăçĕпе, Коммунистсен партийĕн политикипе тачă çыхăнса тăни ăна яланах вăй парса тăнă, малашне те вăл çак çыхăнуран вăй илсе тăрĕ. Ленинла партипе тата халăхпа пĕрле пирĕн литературă мухтавлă çулпа аталанса пычĕ, коммунизм идеалĕсене чунтан парăнса ĕçленине кăтартса пачĕ.

Партипе государствă пурнăçăн ленинла нормисене çĕнĕрен вăй илтерни Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин ĕçри хастарлăхĕпе политикăлла активлăхне нихçанхинчен вăйлăрах ӳстерчĕ. Çакă вăл — пирĕн партин, унăн Никита Сергеевич ертсе пыракан ленинла Центральнăй Комитечĕн историллĕ ĕçĕн результачĕ.

Пирĕн писательсен организацийĕ хăйĕн VI съездне идейăпа организаци тĕлĕшĕнчен тачă пĕтĕçсе кĕтсе илчĕ, прозăпа поэзире тата драматургире çĕнĕ паха произведенисем çырса хатĕрлерĕ.

Эпир Центральнăй Комитета тата Никита Сергеевич ХРУЩЕВА совет искусствин революциллĕ тата реализмлă традицийĕсенчен пăрăнса кайнă литераторсемпе художниксене вăхăтра критикленĕшĕн тата ăслă та принциплă кăтартусемшĕн чĕререн тав тăватпăр. Çав кăтартусем литературăпа искусствăра ĕçлекенсен пĕтĕм творчествишĕн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Пирĕн литературăн задачисене, унăн тасаран та таса тивĕçне — вăл совет çыннисен — коммунизм обществи тăвакансен шухăш-туйăмĕпе чаплă ĕçĕсем çинчен тĕрĕс те хавхалантармалла каласа пама тивĕççине — эпир лайăх ăнланатпăр. Икĕ тĕнче хушшинчи идеологиллĕ кĕрешӳре пирĕн литературă коммунизмăн аслă идейисене хĕрӳллĕ пропагандăлама тивĕç.

Эпир ăнланатпăр: социализмлă идеологипе буржуалла идеологи пĕр-пĕринпе килĕшсе пурăнма пултараймаççĕ. Çĕрсе пăнтăхнă буржуалла идеологин кирек мĕнле палăрăмĕсене хирĕç те пирĕн яланах çине тăрса кĕрешмелле. Партилĕхпе халăхлăхăн ленинла принципĕ, художествăлла творчествă валли анлă майсем туса парса, пире çунат хушнă пек хавхалантарать, çавăнпа пĕрлех вăл пире обществă умĕнче, хамăр халăхпа тăван Коммунистсен партийĕ умĕнче пысăк ответлăха туйса ĕçлеме хистет.

Эпир Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне çапла шантарса калатпăр: паттăр совет çыннисен — коммунизм тăвакан çынсен чаплă сăнарĕсене тума эпир пĕтĕм вăя, пĕлӳсене, ăс-тăнăмăрпа пултарулăха парса ĕçлĕпĕр. Эпир партие чăваш литературин произведенийĕсем пирĕн саманан чи пысăк ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултарччăр тесе хамăр мĕн тума пултарнине пурне те тума сăмах паратпăр.

Никита Сергеевич ХРУЩЕВ литературăпа искусствă деятелĕсене партин ленинла Центральнăй Комитечĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçме чĕнсе калани пире чунтан хумхантарчĕ, эпир çав чĕнĕве чĕререн хĕрӳллĕн ырлатпăр.

Эпир, чăваш писателĕсен VI съездне пухăннă çынсем, КПСС Центральнăй Комитетне çапла шантарса калатпăр: партипе тата халăхпа пĕрле яланах эпир — партин кĕрешӳри помощникĕсем — коммунизм тăвакансен малти ретĕнче пулăпăр.

Сывă пултăр КПСС — пире çитĕнӳсем тума хавхалантарса тата организацилесе пыракан парти!

*Чăваш АССРĕнчи писательсен VI съезчĕ.*

С. АНТОНОВ

# Ленин ҫинчен ҫырнă калавсем



## Пирĕншĕн пуриншĕн те

Совнарком...

Степан Васюков вăл пачах та урăхла пуль тесе шутланă: коридорсенче туп-тулли халăх тĕркĕшет, мужиксем, рабочисем, хĕрлĕ армеецсем, матроссем таҫта васкаҫҫĕ, вĕсен пуҫĕсем ҫийĕнче кăн-кăвак тĕтĕм йăсăрланать, пур енчен те шăв-шав, хыттăн калаҫни, кăшкăрни илтĕнет... Пĕр сăмахпа каласан, унăн килĕнче, стена ҫинче ҫакăнса тăракан «Смольнăй Октябрьте» ятлă картинă ҫинчи пек пулассăн туйăннă ăна.

Анчах та кунта пĕртте ун пек мар иккен.

Совнаркомра лăпкă, халăх сахал, ҫутă тата таса пулнă. Никам та ниҫта та чупман, тахăш пӳлĕмре, Васюковран инҫетре те мар, ҫырмалли машинкă хăвăрт шаккани илтĕннĕ.

«Йĕркеллĕ вĕсен кунта...»— шухăшларĕ Васюков.

Хăйне ниҫта кайса чикме пĕлмесĕр, вăл стена ҫумне тайăнса тăчĕ. Уринчи ҫĕнĕ хром аттисем ҫинче пылчăк йĕрĕсем пуррине асăрхаса, Степан хăйĕн вулăсĕнче ҫулсем ним латсăр япăххи, вĕсене часах йĕркене кĕртсе ҫитерейрес ҫукки ҫинчен сӳрĕкреххĕн шухăшласа илчĕ; пылчăкĕ вара ҫилĕм пекех: Совнарком ҫуртне кĕрес умĕн вăл аттисене тем пекех тăрăшса тасатрĕ, анчах пурĕ пĕрех йĕрсем юлнă иккен...

Майĕпе халăх пухăнма пуҫларĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн вăрăм коридорĕсенче ҫынсем йышланнăҫемĕн йышланчĕҫ, шавлăрах пулса пычĕ. Хăй именнине ирттерсе ярса, Васюков кунта пухăннă ҫынсене пăхса сăнама тытăнчĕ — пурте ун пекех ахаль ҫынсем иккен. Вара Васюков стена ҫумĕнчен аяккалла пăрăнчĕ те, юриех паттăрланнă пек пулса, коридор тăрăх ҫирĕппĕн утса кайрĕ. Вулăсри ĕҫтăвком председателĕ, вăл кунта хăйне ытла начар ҫынах тесе шутламарĕ. Мĕнех вара, унăн вулăсĕнче ĕҫсем питех хурланмалла мар: кооперативсем те пур, Озерки ялĕнче кивҫенлĕх юлташлăхĕ ĕҫлет, Красниковăра пăспа ĕҫлекен арман хута янă, шкулсем те ĕҫлеҫҫĕ. Пĕр шкулĕнче, ав, кашни эрнерех спектакльсем лартаҫҫĕ. Нумаях пулмасть ҫав Краснико-

вăрах леш... мĕнлеччĕ-ха! «Павлик, Павлик, эс вĕрен-ха, вăхăта сая ан яр...» тесе юрлаканнине лартса пачĕç.

Ирĕксĕрех, вăл кунта килекенсене хăйĕнпе танлаштарма тытăнчĕ. Вĕсем пурте ĕнтĕ чылай çулсене çитнĕскерсем, çемьеллĕ çынсем, атăсемпе, кĕписене йĕмĕсем çийĕн кăларса янă... Хăшĕсен — муркаллă пиçиххисем... Пурте лăпкă, сăпайлă курăнаççĕ, ăна-кăна тиркесе тăрас çук, тăхăнмалли мĕн пур — çавă та çитет, тав турра! Вĕсем хăйсен çаннисем саплăклă пулни çине те, тӳмисем тĕрлĕ тĕслĕ те пĕр пек марри çине те, пиншакĕсем кивелсе кайни çине те çаврăнса пăхман. Мĕнех вара уншăн!

«Эпĕ кунта чи çамрăкки тата хастарри, ыттисенчен лайăхрах мар пулсан та — чăн япăххи мар»,— тесе шутларĕ вăл.

Васюков тĕлĕпе Муравьевăри юлташлăхăн правлени членĕ Волков — кусăлăхне хăлхинчен çиппе кăкарнă çын — ăна паллаймасăр иртсе кайсан, Степан та ăна сас памарĕ, сывлăх сунмарĕ.

«Унăн хăйĕн малтан сывлăх сунас пулать»,— терĕ вăл.

Килте, хăйĕн вулăсĕнче, Васюков нихçан та çынсене хăй малтан сывлăх сунман, уезда е кĕпĕрнене кайсан кăна, пуçлăхсемпе тĕл пулсан, пуçласа саламланă. Вăл хăй малтан сывлăх сунсан, ал парсан, унăн пуçлăх авторитечĕ пайăн-пайăн катăлса, пĕтсе пырассăн туйăннă. Унталла та кунталла пăркаланса пурне те пуç тайма тытăнсан, мĕн авторитечĕ юлтăр вара!

Çук! Ун пек юрамасть...

Унтан та ытларах, çынсемпе çемçе кăмăллă пулни Васюкова этем хăй вăйсăррине кăтартнă пек туйăннă. Вăл учительсем пĕр-пĕрине еплерех кăмăллăн сывлăх суннине курнă, анчах вĕсем çемçешке те шанчăксăр çынсем вĕт. Шуйттан кышласа ятăрччĕ вăл интеллигенцие! Авă, Шиловкăри Цветков мĕн чухлĕ кутăнланса тăчĕ, совдеп влаçĕшĕн ĕçлесшĕн пулмарĕ. Пуп тата, ылханлă иртнĕ пурнăç юлашки, клас тăшманĕ, ваттисене те, çамрăккисене те пĕшкĕнсех пуç таять. Пĕлет хăйĕн шăнăрĕ çинçелсе юлнине... Анчах унăн, Васюковăн, мĕншĕн-ха кашни тĕл пулакан çынна пуç таймалла, пурин аллине те чăмăртамалла! Çук ĕнтĕ, вăл хăйĕн авторитетне ӳкермест.

«Çапах та нумай кĕттереççĕ...»— шухăшларĕ хăй çавăнтах.

Вăл стена çинчи сехете пăхса илчĕ. Тĕлĕнсех кайрĕ: канашлу пуçланасси тăватă минут кăна юлнă иккен. Тĕлĕннипе пĕрлех, вăл темле пăшăрханса, пăлханса илчĕ. Канашлура калаçу коопераци тата ял хуçалăхне электрификацилесси — коммунизм тумалли тĕп çулйĕрсем çинчен пулса иртмелле пулнă. Васюков унта хăйĕн вулăсĕнчи ĕçсем çинчен те кăшт-кашт каласа пама пултарнă. Мăн кăмăлланасах калама пултарнă.

Васюков каллех сехет çине пăхрĕ — халь ĕнтĕ виçĕ минут юлнă. Унтан сасартăк хăйсем патĕнче, вулăс Советĕнче, кавирсем сарсан лайăхрах пулмĕ-ши, тесе шухăшласа илчĕ. Пурĕ пĕрех кĕлетре çĕрсе выртаççĕ вĕт-ха вĕсем. Помещиксенчен конфискаци туса пырсан кĕлете пăрахнă та вĕсене, паян кун та çаплипех выртаççĕ. Вăл кавирсенчен темле клас тăшманĕлле шăршă çапать çав, вĕсем çине нихçан нисте курман пысăк зămоксем — керменсем, пăлансем, чечексем, çурри çарамас хĕрарăмсем ӳкерсе тултарнă. Васюков вăл кавирсем çинчен нихçан та аса илмен. Анчах та вĕсем кирлĕ пулма та пултараççĕ иккен. Кавирсем пирки шут туса çитерсен, вăл Польăна — вулăсри ĕçтăвком уборщицине саппун çĕлеме пĕр аршăн пусма парасси çинчен шухăшларĕ, атту вĕт лешĕ темле кив юбкăран çĕлесе çакнĕ саппунпа çӳрет...

Сасартăк çынсем калаçни, шăв-шав пĕтсе ларчĕ, пушмак хуллен чĕриклетни тата «р» саспаллине çемçереххĕн калакан сасă илтĕнчĕ. Степан Васюков вăшт кăна тепĕр еннелле çаврăнчĕ те хăйĕнчен ик-виç утăмра Ленина курах кайрĕ. Вăл темле çӳлĕ, курпунтарах, кĕске пальто тăхăннă кусăхлă çынпа калаçса пыратьмĕн. Çынни ун патне ĕçпе пынăскер пулмалла ĕнтĕ. Ленин ăна хăйĕн кабинетĕнчен ăсатса янă.

Васюков вĕсем мĕн калаçнине итлесе чарăнса тăчĕ. Ленина вăл кăшт çӳлĕрех пуль тесе шутланă, анчах пĕтĕмĕшпе илес пулсан — вăл портретсем çинчи пекех пулнă... Пĕтĕмпех тĕрĕс!

Тĕнчери пролетариат çулпуçĕ, Ленин хăй утса пынă вĕт-ха унăн, Васюковăн умĕпе. Ленинăн хура пиншак арки Васюкова сĕртĕнчĕ. Акă вăл, Ленин, юнашарах, ыттисем пек çынах!

Владимир Ильич çав хушăра сехечĕ çине пăхрĕ те, тем шут тытса, аллипе сулчĕ.

— Сывă пулăр. Кĕрсе тухăр, Василий Николаевич. Кĕрĕр, анчах та астăвăр,— Ленин сассине хăпартрĕ те, сăмахĕсене пат татса, малалла каларĕ:— Северцев хăйĕн йăнăшĕсене пĕтĕмпех йышăнмасăр пирĕн сирĕнпе ниепле те ĕç тухмасть. Ку вăл — государствă ыйтăвĕ, çавăнпа та ăна çурмаран татни пулма пултараймасть.— Ленин хăйпе юнашар утса пынă çынна ал парса, хăй каланисене çирĕплетнĕ пек пулса, ун аллине хыттăн чăмăртарĕ, унтан каялла çаврăнса утрĕ.

Кĕтмен çĕртен такама асăрхаса, Владимир Ильич аяккалла пăрăнчĕ.

— А-а, эсир-и-ха ку, Волков юлташ!— терĕ Владимир Ильич хавассăн, Муравьевăри юлташлăхăн правлени членне аллине тăсса парса.— Кĕрĕр тархасшăн, кĕрĕр, эпир сире халех ятлама тытăнăпăр. Хăратăр-и, батенька!

Степан пит лайăх курчĕ: çапла калаçнă май, Ленин Волкова хăй малтан алă тăсса пачĕ. Кама! Правлени членне. Кам! Ленин. Вăл унăн аллине хăй калаçса пĕтерicчченех хыттăн чăмăртаса тăчĕ, унтан тин аллине илчĕ те пурне те каларĕ:

— Кĕрĕр, юлташсем.

Владимир Ильич коридор тăрăх малалла хăвăрт утса кайрĕ, кабинетăн çиелтен клеенкăпа туртнă алăкне уçса ячĕ те сĕнчĕ:

— Вырнаçăр.

Чӳречисем Кремль еннелле пăхакан кабинетра питĕ тирпейлĕ, меллĕ те йĕркеллĕ пулнă. Йĕркеллĕ пулни пурне те темле асăрханулăрах пултарнă, харпăр хăйне типтерлĕ тыттарнă. Пӳлĕмре нимле ытлашши япала та çукки, пурте ансат пулни кунта ĕçлесе пурăнакан çынпа çывăхлатнă, çав хушăрах вăл çын мĕн тери аслă çын пулнине палăртнă.

Степан Ленинăн ĕç сĕтелĕнчен аякра та мар тăракан çемçе те тарăн хура кресло çине ларчĕ. Вăл самаях пăлханчĕ: Ленин хăй патне пыракансене кабинетран хăй ăсатса янă, палланă çынсене — вĕсем юлташлăх правленин членĕ кăна пулсан та — хăй малтан алă тăсса панă.

Владимир Ильич, кашнин ячĕпе хушаматне ыйтса пĕлнĕ хыççăн, халĕ вĕсене ятран чĕнчĕ, кашниччех тата:

— Ну, кун пирки эсир мĕн калăр тата!— тесе ыйтрĕ. Канашлăва вăл хĕрӳллĕн, сăмах тухса калакансене пĕр паллă ыйтуран тепĕр ыйту çине куçса пыма пулăшса ертсе пычĕ. Çынсене хăвăрт юхакан шыв урлă каçарнă чух çавăн пек ертсе пыраççĕ — пĕр чул патĕнчен тепĕр чул патне, леш енчи çыраналла, палăртса хунă тĕле çитиччен.

— Эпир армана туса çитерсе, хута ятăмăр, вăл пилĕк ял валли ĕçлет,— тесе пĕлтерчĕ сăмах тухса калаканни.

— Пит аван!— терĕ те Ленин, çавăнтах ыйтрĕ:— Кӳршĕ ялсенчи хресченсем кун пирки мĕн калаççĕ!

— Ăмсанаççĕ, Владимир Ильич. Вĕсем те тăвасшăн.

— Тăвасшăн! Эсир кооператива пĕрлешсе армана хута янă. Анчах кӳршĕсен кооператив пур-и-ха!

— Çук, Владимир Ильич.

— Кооперативсăр вĕсем хăйсен арманне епле тăвĕç-ха! Кулаксем патне кайса вĕсем умĕнче пуçĕсене тайĕç-ши! Вĕсем кооперацин тĕп тĕллевĕпе вăйне ăнланаççĕ-ши! Кооперативне туса хума пултаракан çыннисем пур-и-ха вĕсен!

Сăмах калаканни пĕр минут каялла кăна çак ĕçсем ăна нихăш енчен те пырса тивмеççĕ, тесе шутланă, унтан та ытларах — хăйсен ĕçĕсем кӳршĕсен ĕçĕсенчен авантарах пынăшăн мăн кăмăлланнă, анчах халĕ сасартăк хăйне пуриншĕн те ответлă тесе шутлама тытăннă, кӳршĕ ялсенче кооперативсем тума мĕнле майсем пурри çинчен калаçма пуçланă.

Ленин ытла пур чух та кăмăллă сăмахсем каламан пулин те, час-часах кама та пулин ĕçсене тăрăшса туса пыманшăн, ӳркеннĕшĕн хăтăрса тăкнă пулин те, Степан çакăнта ларакан вун пиллĕк-çирĕм çын хушшинче хăшĕ те пулин Ленинпа килĕшменнине асăрхаман. Ленин тĕрĕс калани, вăл каланинчен урăхла тума май çукки пуриншĕн те паллă пулнă.

Калаçу электростанцисем тăвасси, торф кăларасси çине куçрĕ. Владимир Ильич, хавасланса, Классон инженер шухăшласа тупнă çĕнĕ, гидравлически текен меслет çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— Ман пĕлес килет,— терĕ вăл тăрук, каласа пама чарăнса,— çакăн çинчен каласа кăтартакан кинокартинăна сирĕнтен хăшĕ те пулин курнă-и!

Нихăшĕ те чĕнмерĕç.

— Торфа гидравлически меслетпе кăларнине кăтартакан ятарласа тунă кинокартинă пур,— ăнлантарчĕ Ленин, ăна хăшĕ те пулин çапах та курнă пуль, тесе.

Çук иккен, ун пек картинă çинчен нихăшĕ те илтмен.

— Хм, хм,— тесе илчĕ те вара Ленин, кăранташĕпе сĕтеле шаккаса илсе, хăйĕн блокночĕ çине темскер паллă туса хучĕ.

Вăл тăрук ассăн сывласа илчĕ те Васюковран ыйтрĕ:

— Эсир калаçасшăнччĕ-и çав, Васюков юлташ!

Çак самантра хăй çинчен, хăйĕн ĕçĕсем çинчен шухăшласа ларнă Степан хăйĕнчен çакăн пек ыйтасса кĕтменччĕ.

— Çапла... эпĕ...— мăкăртатса илчĕ вăл.

— Тархасшăн, Васюков юлташ.— Владимир Ильич, вулăс ĕçтăвкомĕн председательне тимлĕн итлеме хатĕрленсе, кăштах ун еннелле сулăнса ларчĕ.

Степан ура çине тăчĕ. Хăй Ленин çывăхĕнчех пулнипе, унăн сăмахĕсемпе хавасланнăскер, Степан уйрăмах хĕрӳллĕ, ыттисем пек мар каласшăн пулчĕ — ан тив, кунта ларакансем пурте, пуринчен ытла Владимир Ильич хăй, вăл çĕнĕ пурнăçшăн хастаррăн кĕрешекен çын пулнине, кирлĕ пулсан — революцишĕн пурнăçне пама хатĕррине курччăр! Васюков çапла шухăшланă: ун умĕн калакансем пурте лайăх, тĕплĕ, кирлĕ ĕçсем çинчен калаçрĕç, анчах вĕсем ытла та пур чухнехи пек, çĕкленӳсĕр, шухăшĕсене çунатлантармасăр калаçрĕç, çавăнпа та халĕ унăн çак тарăхтаракан çитменлĕхе пĕтерес килчĕ. Ленин юлташ вырăнсенче ĕçлекенсем çинчен тĕрĕссине пĕлсе тăтăр, вĕсене тĕрĕс хак патăр...

Степан, хăйĕн шухăшĕсене йĕркелесе, пиçиххи айĕнчи кĕпине тӳрлеткелесе тăнă хушăра Владимир Ильич йĕри-тавралла пăхса илчĕ те:

— Ывăнтăр-и, юлташсем! Часах пĕтеретпĕр ĕнтĕ,— терĕ. Унтан Васюкова каларĕ:— Тархасшăн, калаçăр...

— Юлташсем!— терĕ Васюков хыттăн, хăйсен ялĕнчи çынсем умĕнче, митингра, трибунă çинчен калаçнă пек.— Халĕ, пĕтĕм тĕнчери революци çĕнтерес вăхăт çывхарса килнĕ чух, пирĕн, юлташсем...

Ленин, Васюковран тем кĕтнĕ пек ун çине тимлĕн пăхса ларнăскер, пуçне усрĕ. Унăн сăнĕ-пичĕ çинче вăл кăмăлсăр пулни, ывăнни палăрчĕ.

Владимир Ильич сăнĕ улшăннине Васюков асăрхарĕ те унăн пĕтĕм ăшчикки çав тери ыратмалла пăчăртанса илчĕ: эппин, вăл хăйне шаннине тӳрре кăлараймарĕ, Ленин умĕнче намăс курчĕ! Степан хăй кирлĕ пек каласманнине туйрĕ, çапах та урăхларах калаçма пурĕ пĕр пултараймарĕ. Çавăнпа та вăл часрах конкретлă ĕçсем çине куçма шут турĕ, анчах çав хушăрах Ленина хăй пĕтĕм чĕрипе парăннă аслă та чаплă ĕçсем çинчен каласа парайманшăн тата тек ĕнтĕ нихçан та каласа пама пултарас çуккишĕн чĕри ыратакан пуличченех ӳкĕнчĕ.

— Пирĕн ял тавраш ĕнчи шурлăхра ĕмĕр-ĕмĕр ним усăсăр выртнă торф кĕçех машинăсен топкисенче çунма тытăнĕ...— терĕ малалла Васюков. Халĕ вăл малтанхи пек кăшкăрмасăр, лăпкăрах калаçрĕ.— Хăватлă çутă ĕмĕрхи тĕттĕмлĕхе сирсе ярĕ, вара пурте пирĕн культурăпа коммунизм çинче никĕсленсе тăракан çĕнĕ пурнăçа куракан пулĕç...

— Сăмах майĕн, культурăпа коммунизм çинчен калаçса илер-ха,— терĕ Ленин.— Каçарăр, Васюков юлташ. Эп сире çапла ăнлантăм: эсир электричествă çутипе хăвăр тăрăхри пур ялсемпе саласене те çутатма ĕмĕтленетĕр вĕт!

— Çапла, Ленин юлташ!— пĕр тытăнса тăмасăр, хавассăн ответ пачĕ Васюков.— Каярахпа вара — пĕтĕм тĕнчипе çутататпăр, Ленин юлташ!

— Пĕтĕм тĕнчипе те çутатасшăн эппин!— терĕ Ленин ун хыççăн тепĕр хут.— Пит аван.

— Эпир ку таранччен тĕнчипе те пулман çĕнĕ пурнăç тăватпăр, кайран çавăн пек пурнăç тума пирĕнтен пĕтĕм тĕнчери пролетарисем те вĕренĕç,— пысăк туйăмпа каласа хучĕ Васюков.

— «Çĕнĕ пурнăç...» — хуллентерех каларĕ ун хыççăн Ленин,— «пролетарисем вĕренĕç...» Пит аван! Анчах та, Васюков юлташ, калăр-ха тархасшăн, сирĕн вулăсра мар-и-ха вăл Мурашевсен именинче картинăсен галерейине çаратса пĕтерме тапратнă!

— Картинкăсене-и!— хавасланса сăмах хушрĕ Васюков.— Пирĕн патра, Ленин юлташ.

— Ку ĕçе тума эсир хăвăр та пулăшрăр пулĕ-ха, Васюков юлташ!

— Ара, Ленин юлташ, вăл картинăсем çинче хăйсен пĕтĕм обмундированине тăхăннă генералсемпе графсем тата çаппа-çарамас хĕрарăмсем хăйсен ясар кĕлеткисене кăтартса тăраççĕ кăна вĕт! Чăн та, вĕсене хӳтĕлеме ман пата учитель чупса пычĕ, вĕсене питĕ чаплă сăрсемпе сăрланă, тет, анчах та эпĕ хама тĕрĕс çул çинчен пăрса яма памарăм: кивĕ тĕнче юлашкийĕсем кирлĕ мар пире, терĕм. Пурне те çунтарса яратпăр, пурне те...

Сасартăк Ленин ура çине тăчĕ.

— Эсир электричествăпа мĕн çутатма шутлатăр, Васюков юлташ!— çилĕпе, хыттăн ыйтрĕ вăл.— Хăвăрăн тискерлĕхе-и! Халăхăн художествăллă пуянлăхне епле пĕтерсе хунине-и! Е хăвăр çĕнĕ пурнăç епле тунине-и! Çитменнине тата — пĕтĕм тĕнче масштабĕпе!!

Ленин çапла калани Васюкова, вăл ытла хăракан этемех пулман пулин те, ăнран кăларсах ячĕ. Вăл таврара ларакан çынсем çине, Волков çине пăхса илчĕ. Лешĕ, хăйĕнпе кӳршĕллĕ вулăс ĕçтăвкомĕн председателĕ каланине итленĕ май, пуçне те пĕкрĕ, юри урайне пăхса ларнă пек пулчĕ.

— Ленин юлташ... Эпĕ ырă ĕç тăвасшăн-çке..— ним калама аптраса, мăкăртатса илчĕ Васюков.

— Пĕлетĕп!— терĕ Ленин çирĕппĕн.— Урăхла пулнă пулсан, пире тĕл пулма та кирлĕ марччĕ, Васюков юлташ. Анчах социализмччĕнхи Российăн культури те халăх пурлăхĕ вăл. Çитменне тата мĕн тери хаклă пуянлăх! Генералсемпе графсен портречĕсем, эсир каланă пек каласан — çарамас хĕрарăмсен сăнĕсем — вĕсем чи чаплă художниксен, Репинпа Маковский, Брюлловпа Тициан картинисем. Искусствăн чаплăран та чаплă произведенийĕсем, акă мĕн! Эсир генералсене çапса аркатăр, анчах Репина халăх валли упраса хăварăр!— Кăшт кăна чĕнмесĕр тăнă хыççăн, Владимир Ильич лăпкăраххăн каларĕ:— Сăмахăра пӳлнĕшĕн каçарăр, Васюков юлташ. Халь ĕнтĕ малалла калăр...

Васюков чĕнмерĕ. Вăл ниепле те хăйĕн ăс-тăнне йĕркене кĕртеймерĕ-ха, ним калама та пултараймарĕ, пĕрре Волков çине, тепре кўршисем çине, унтан Ленин çине пăха-пăха илчĕ.

Юлашкинчен çапах та вăл ўсĕрсе илсе пырне тасатнă пек турĕ те, хăй вулăсĕнчи çынсемпе ĕçсем çинчен малалла калама тытăнчĕ. Вăл каланă чух Владимир Ильич пĕрререн пĕрре кăна сăмах хушса хучĕ:

— Сирĕнпе пĕрле лайăх çынсем ĕçлеççĕ, Васюков юлташ. Питĕ пуçаруллă та тулкăллă çынсем. Эсир вĕсенчен вĕренсе пырăр.

Çакăн хыççăн часах канашлу пĕтрĕ. Тĕрлĕ çĕртен килнĕ юлташсем саланма пуçларĕç. Коридора тухсан, Васюков, хăйĕн майлă пулакан çынсем шыраса, пĕрре пĕринпе, тепре теприпе сăмах хушрĕ.

— Юлташсем, тăванăмсем,— терĕ вăл,— эпĕ пĕтĕм чунтан ыр тăвас шутпа вĕт-ха...

— Хăв мĕн каласси çинчен санăн малтан кăшт та пулин шухăшласа пăхмаллаччĕ,— кăмăллăн кăна асăрхаттарчĕ ăна Волков.

— Ара, эпĕ вĕт...— тўрре тухма тăрăшрĕ Васюков.— Эпĕ пĕтĕм тĕнчери революцишĕн тăратăп вĕт!

— «Эпĕ... эпĕ...» — терĕ ун хыççăн Волков.— Пит лайăх кăтартса пачĕ хăйне хăй Грибовăри председатель!

— Никита Иванович! — тархасланă пекех кăшкăрса илчĕ Васюков.— Санченков! Ăнланăр-ха ĕнтĕ эсир мана!..

Васюковпа калаçнă хыççăн Ленинăн кăмăлĕ самаях хуçăлчĕ. Вăл чăннипех пăшăрханчĕ: çав Васюков эпир мĕн тунине, мĕншĕн кĕрешнине ăнланса çитет-ши!

Темиçе самант хушши Владимир Ильич, куç харшисене пĕр сĕрелле пĕрĕнтерсе, пуçне кăштах чалăштарса, пăлхануллăн малалла пăхса тăрса, ниепле те ĕçе тытăнаймарĕ. «Ялта Васюков пеккисем тата нумай-ши! Вĕсене мĕнле пулăшмалла-ши! Кивĕ тĕнчене ишĕлтерни пĕтĕм çĕршывĕпех сапаланнă культурă пуянлăхĕсене епле сиен кўрĕ! Вĕсене çăлма паянах мĕн тума пулать!» Ленин сăн-пичĕ тăруках начарланнă, туртăннă пек пулчĕ.

Юлашкинчен вăл васкасах тумалли ĕçсене çырса хунă хут çине пăхса илчĕ те аллине ручкă тытрĕ.

Мĕн чухлĕ вĕсем, халех, васкасах тумалли ĕçсем! Иртнĕ çул вĕçĕнче, Советсен Пĕтĕм Российăри VII-мĕш съездĕнче, çĕнĕ Российăн халăх хуçалăхне ура çине тăратса тĕпренех çĕнетсе урăхлатмалли плана çирĕплетнĕ... Халĕ ĕнтĕ кашни кун, кашни сехетре çавăн пирки ĕçлеме тивĕ. Троцкистсем халĕ те-ха профсоюзсене «государствăллă» тăвасси, вĕсене «силлесе тасатасси» çинчен палкаççĕ... Троцкистсене пĕтĕм вăйпа, хыттăн пырса çапмалла, вĕсене «çарамас» тăратса хăварас пулать — пурте курччăр, пурте пĕлччĕр вĕсен суя лозунгĕсем мĕне тăнине. Çав хушăрах тата Кронштадтра пăлхав пулчĕ, революци тăшманĕсем каллех Совет влаçне пĕтерсе хума пикенчĕç. Кунсăр пуçне, çуркунне апатçимĕç, топливо, транспорт енĕпе çав тери пысăк йывăрлăхсем пуçланчĕç...

Тепĕр вунă-вун пилĕк минутран — Владимир Ильич темиçе пит те кирлĕ, васкавлă çырусем çырма, телефонпа ыйтнисене хирĕç ответсем пама тата хăй унтакунта шăнкăравлама ĕлкĕрнĕччĕ çеç — пўлĕме Анатолий Васильевич Луначарский пырса кĕчĕ.

Ленина хăйĕн çемçе те ăшă аллине тăсса парсанах, Анатолий Васильевич кăмăллăн кулкаласа каларĕ:

— Эсир ерçменнине куратăп, çапах та шăп хăвăр хушнă вăхăтра çитрĕм...— Ăна Ленин пĕррехинче вăл ун патне вăхăтра пыманшăн асăрхаттарнă-мĕн.

Луначарскин сасси çеç мар, вăл хăй те пĕтĕмпех хаваслă пулнă, унăн пенсни * те хавассăн çуталса тăнă пек курăннă.

Владимир Ильич Луначарскин çав иксĕлми, нихçан чакми хаваслăхне юратнă, вăл тем пулсан та ытлашши хуйхăрманнине, пăшăрханманнине, пурин çине те пур чух та кăмăллăн пăхнине юратнă. Ленин хăй вара пăшăрханмасăр пурăнма пултарайман.

— Ман шутпа, хисеплĕ Анатолий Васильевич, вăхăтра килсе кансĕрлени вăл эсир пĕркунне хăвăра кĕттерниичен авантарах! Эсир ку енпе мана сăмах тĕкеймĕр!— терĕ те Владимир Ильич хăй çыракан хута çырса пĕтерсе, кăмăллăн кулса илчĕ.— Ларăр тархасшăн.

Луначарский Ленинран сулахай енче тăракан хура сăран кресло çине çемçен вырнаçса ларчĕ.

— Малтан хăвăрăн ĕçĕрсем çинчен кĕскен каласа парăр,— ыйтрĕ Ленин.

— Ял валли кĕнекесем пулаççĕ, Владимир Ильич,— терĕ Луначарский.— Кун çинчен эп сире савăнсах пĕлтеретĕп.

— А эпĕ савăнсах итлетĕп,— кулнă пекрех хирĕç каласа хучĕ Ленин.— Тинех татăлчĕ эппин ку ĕç! Хăвăр шухăшланă тăрăх вĕсенчен хăшĕ лайăхрах — çавсене ман патăма ярса парăр.

— Юрать, Владимир Ильич, епле пулсан та ярса паратпăр.— Луначарский пĕр хушă чĕнмерĕ, унтан салхуллăн каласа хучĕ:— Вершков художникпе Аникин скульптор Америкăна тухса кайма визă пама ыйтаççĕ.

— Апла-ха эппин!— кăмăлсăр, хыттăн каларĕ Ленин.— Совет Российĕнче, паллах, творчествăллă ĕçпе ирĕклĕн ĕçлеме май çук,— терĕ вăл малалла, такам çавăн пек каланинчен мăшкăлласа,— революци художникĕн хăйĕн пултарулăхне путарса лартать, ăна ирĕккĕн ĕçлеме памасть, тата ытти те, тата ытти те! Тухса кайччăр!— терĕ вăл унтан, пачах та кĕтмен çĕртен.

— Эпир ун пеккисене ытла та сахал чаратпăр, эпир «бубновăй валетсене», искусствăри тĕрлĕ асамçăсемпе ирсĕрсене тўссе пурăнатпăр...

— Эсир хăвăр час-часах хўтĕлетĕр вĕсене, батенька, Анатолий Васильевич!— çирĕппĕн пўлчĕ ăна Ленин.— Хăвăр!

— Эпĕ сулахайрисене пурне те хўтĕлеместĕп, тата пурте сулахайрисем мар, Владимир Ильич!— хирĕçлерĕ Луначарский.

— Ну, юрĕ-ске!— килĕшсе çураçмалла каларĕ Владимир Ильич.— Çапла, эсир каланă пекех пултăр... Малалла калăр!

— Эпир сахал чаратпăр, нумайăшне тўсетпĕр,— терĕ малалла Луначарский,— анчах çапах та, революци интересĕсене хўтĕлесе, эпир мĕн те пулин чаратпăр пулсан, пире аларан ярса тытаççĕ: ăçта-ха ирĕклĕх!— теççĕ.

— Тухса кайччăр,— терĕ Ленин тепĕр хут,— анчах эпир ку таранччен мĕнле тунă — малашне те çавăн пекех тăватпăр.

— Паллах ĕнтĕ, Владимир Ильич, «кашни хăй тĕллĕн пытăр» текен принцип пирĕн политикăллă лозунг вырăнне пулма пултараймасть.

Çапла каласа, Луначарский кресло хыçĕ çине канлĕрех чавсаланса, сĕтел айĕнче урисене тăсрĕ.

— Халех, вăраха ямасăрах, тĕрĕс çул кăтартакан программă парас пулать! Пĕтĕм ĕç çавăнта! «Пролетариат çăварĕнчи пăкка кăларсанах, эпир ăна çийĕнчех капиталистсен çăварне чиксе лартатпăр».

— Кам каланă ăна! — ыйтрĕ Ленин.

— Бланки...* Буржуази идеологине, вĕсен культурине эпир пĕтерсе хурăпăр, анчах хамăр мĕн çинчен каласăпăр-ха! Мĕн çирĕплетсе парăпăр! Тата çирĕплетĕпĕр-и мĕн те пулин!

— Питĕ тĕрĕс калатăр!— кăшкăрсах илчĕ Владимир Ильич.— Хăш-пĕрисем шутланă тăрăх, эпир нигилистсем кăна, çитменнине тата алла пуртă тытнă!— Çавăнтах нумай та пулмасть Васюков тухса каланине аса илчĕ те

---

* Куçлăхĕ.

* Бланки — (1805—81) Францири революционер, утопист-коммунист.

хаяррӑн каласа хучӗ: — Программӑ парас пулать! Тата епле пулсан та хӑвӑртрах тӑвас пулать ӑна. Ку вӑл чи йывӑрри, калама та ҫук йывӑрри!

— Пирӗнтен час-часах ҫапла ыйтаҫҫӗ: «Мӗн вӑл пирӗн искусствӑ! Пачах та ҫӗнӗ, пушартан юлнӑ кӗлпе ишӗлчӗксем ҫинче ҫитӗнсе тухнӑ курӑк пек япала-и, е унӑн иртнӗ вӑхӑтсенчи искусствӑсемпе ҫыхӑннисем те пур-и! Тата ҫав ҫыхӑнусем мӗнлерех! Сирӗн искусствӑ ытти пур эпохӑсенчи искусствӑсенчен мӗнпе уйрӑлса тӑрать!» Кусемсӗр пуҫне тата вуншар ыйтусем параҫҫӗ!

— Ну, вара мӗн-ха! — куҫӗсене хӗссе ыйтрӗ Владимир Ильич.— Эсир, пурте ӑнланмалла брошюрӑ ҫырса ҫав пур ыйтусем пирки те ответ парас вырӑнне хӑвӑрӑн кивӗ статьясене пухса сборник кӑларатӑр пулать!

— Мӗн тӑвас-ха, Владимир Ильич! Брошюрӑ ҫырма ик-виҫӗ эрне кирлӗ. Анчах ӑҫтан тупас-ха вӑл вӑхӑта!

— Ҫапла ҫав...— терӗ Ленин шӑппӑн.— Вӑхӑтӑн аслӑ факторӗ... Пӗр сехетрен иккӗ тӑваймастӑн.

Темиҫе секундӑ хушши Владимир Ильич шухӑшласа, ним чӗнмесӗр тӑчӗ.

— Ҫапла ҫав, вӑхӑтӑн аслӑ факторӗ,— терӗ унтан тепӗр хут. Ун сассинче вӑл салхуллании палӑрчӗ.— Калӑр малалла, Анатолий Васильевич.

— Владимир Ильич, халь кӑна эсир вӑхӑт ҫинчен мӗн шухӑшларӑр!— калаҫу ахаль те вӑрӑма кайни ҫине пӑхмасӑрах, Луначарский Ленинпа ҫак философилле тата пурнӑҫри категори ҫинчен калаҫса илесшӗн пулчӗ.

— Вӑхӑт пирки-и!— терӗ Владимир Ильич, пуҫне Луначарский еннелле пӑрса.

Лешӗ, Ленин ҫинчен куҫ илмесӗр, вӑл мӗн каласса кӗтрӗ. Унӑн витӗрех курман куҫӗсем хӑйӗнпе калаҫакан ҫын ҫине тимлӗн, шӑтарас пек пӑхрӗҫ. Акӑ, вӑл халех ӑна пит кӗскен, анчах ҫав хушӑрах нумай каласа парать ӗнтӗ...

Ҫав вӑхӑтра кабинета секретарь кӗрсе тӑчӗ.

— Владимир Ильич,— терӗ вӑл,— ним тума та пултараймастӑп: Васюков юлташ хӑйне виҫӗ минутлӑх йышӑнма ыйтать. Ман патӑма икӗ хутчен пычӗ ӗнтӗ, сирӗнпе калаҫса илмесӗр тухса кайма пултараймастӑп, тет...

— Васюков!— терӗ те ун хыҫҫӑн Ленин, кӑмӑлсӑртараххӑн ӳсӗрсе илчӗ:— Хм... хм...

— Ӑна тӗрӗс мар ӑнланчӗҫ, тет,— малалла куларӗ секретарь.— Вӑл та пӗтӗм тӗнчери революцишӗн тӑрать, ҫавӑнпа та уншӑн кӳренмелле пулса тухнӑ...

— Кӳренмелле!— Ленин хӑвӑрт кӑна Луначарский еннелле ҫаврӑнчӗ те васкаса калама тытӑнчӗ:— Тӗрӗс, Васюков юлташ революцишӗн, коммунизмшӑн тӑрать, ҫав вӑхӑтрах картинӑсен галерейине аркаттарса тӑкасшӑн пулнӑ. Анчах унта, ҫав галерейӑра — Репин, Маковский, Брюллов картинисем упраннӑ! Пурне те ҫурса тӑкатпӑр, тет! Мӗнлерех пек туйӑнать сире ҫавӑн пек хур аҫи! Ҫитменнине тата ҫакӑ вӑл коммунизм пулать, пӗтӗм тӗнчери пролетариатшӑн пример пулать, тет. Епле!!

— Эсир ӑна хӑтӑрса илнӗ ӗнтӗ, ҫавӑнпа ӗҫӗ те пӗттӗр! — терӗ Луначарский татӑклӑн, пенсне кантӑкӗсене ҫутӑлтарса илсе.— Эсир пурне те икшер хут йышӑнма пултараймастӑр вӗт! Ахаль те тӗрлӗ вӗт-шак ыйтусемпе, ниме тӑман ӗҫсемпе сирӗн вӑхӑта виҫесӗр нумай сая яраҫҫӗ! Тӳсме ҫук кӳренмелле пулса тухать ку!

— Эппин, йышӑнас мар! — ыйтрӗ Ленин.

— Паллах, йышӑнмалла мар! Нумайӑшӗ тӑна кӗмесӗр хӑтланни, хӑйсен ӗҫӗсене кирлӗ пек туса пыманни тата ним именсе тӑманни эсир ытти нумай ӗҫсене тумалли вӑхӑта пӗтерет! Анчах эсир хӑш чух вӗсене хӑвӑр ирӗк паратӑр.

— Аха!— терӗ Ленин тӑрук.— Эппин, мана ятлатӑр!

— Хӑвӑрах куратӑр-ҫке, Владимир Ильич. Сирӗн вӑйӑра тата эсир ӗҫлемелли майсене усӑсӑр сапаласа яни ҫине лӑпкӑн пӑхса тӑма ҫук.

Чӑнах та, вӑл ҫаплах пулнӑ ҫав. Владимир Ильичӑн хӑйӗн хаклӑ вӑхӑчӗпе вӑйне тӗрлӗрен ниме тӑман ӗҫ-



сем, вак-тӗвек харкашусем, ведомствӑсем хушшинчи хирӗҫӳсем пирки мӗн чухлӗ усӑсӑр пӗтермелле пулнӑши! Тата ахаль ӗҫренех темле проблемӑсем тума пикенсе тулкӑсӑр хӑтланнисем мӗн чухлӗ пулнӑ! Хӑйсене хушнӑ ӗҫсене хӑшӗсем ҫав тери сӳрӗккӗн, тӑрӑшмасӑр туни, кашни ӗҫ пирки икшер, виҫшер, тӑватшар хут аса илтермелле пулни, ӗҫӗ ҫав-ҫавах вырӑнтан хускалманни мӗн чухлӗ вӑхӑт сая янӑ! Вырӑнсенче — уездсенче, кӗпӗрнесенче татӑлма пултарнӑ ыйтусенех унта татса паманни тата мӗн чухлӗ скен кӳнӗ! Анчах ҫав пур ӗҫсемпе паллашмасӑр, вӗсене тӗпчемесӗр, вӗсем ҫине ал сулса иртме те юраман: тепӗр чух ҫиелтен пӑхсан пӗчӗк кӑна ӗҫ пек курӑннӑ ҫӗртех обществӑшӑн пысӑк вырӑн йышӑнакан пысӑк ӗҫсем пулнӑ. Тата пуринчен те паллӑраххи акӑ мӗн: енчен, ҫынна чӑнах та ахалех кӳрентернӗ пулсан! Ӑна кам пулӑшма пултарать! Камӑн пулӑшмалла! Ан тив, ку ҫӗр ӗҫрен пӗри кӑна пултӑр, ҫапах та ун тӗлӗпе ахаль, ун ҫине ҫаврӑнса пӑхмасӑр иртсе кайма юрать-и-ха!

Кунсӑр пуҫне, кабинета пырса кӗрекен ҫын, вӑл хуть те мӗнле ӗҫпе пырсан та, унта чӗрӗ пурнӑҫ сывлӑшне, пурнӑҫра пулса иртнине илсе пынӑ, ҫакӑ вара, епле пулсан та, ӑна, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председательне, ҫӗнӗ Российӑн миллионшар гражданӗсемпе ҫыхӑнтарнӑ...

Владимир Ильич паян тумалли ёçсене кёскен çырса хунисем çине пăхса илчĕ те, секретаре:

— Васюков юлташа эп ăна йышăнатăп, тесе калăр,— терĕ. Унтан кăшт шухăшласа ларчĕ те хушса каларĕ:— Тепĕр çур сехетрен. Хăш вăхăтра йышăнассине тĕп-тĕрĕс каласа пама пултарайманшăн каçару ыйтăр, ытти ĕçсем хушшинче йышăнатăп, тесе калăр.

Секретарь пуçĕпе сулса илсе тухса кайрĕ, Луначарский вара тарăхнă пек пулсах ура çине тăчĕ.

— Ах, Владимир Ильич, Владимир Ильич,— пăлханнуллăн калаçма тытăнчĕ вăл, кабинет тăрăх уткаласа.— Хĕрхенместĕр эсир хăвăра хăвăр... Эсир — пирĕн пурин пуянлăхĕ, çавăнпа та хăвăрăн вăйăра çакăн пек сапаласа пĕтерме сирĕн нимĕнле правă та çук!

— Тĕрĕс мар!— терĕ ăна хирĕç Ленин хыттăн.— Пĕртте тĕрĕс мар! Ерунда! Çапла! Сапаласа пĕтерместĕп эпĕ, хамăн вăйăма кирлĕ çĕре яратăп, тесе шутлатăп. Эпир хамăрăн çĕнĕ обществăна пире валли малтанхи пурнăçран юлнă материалтан тăватпăр. Ытла пурте тап-таса, ытла пурте çав тери ăслă мар! Сирĕнпе, Чичеринпа тата Красинпа кăна коммунизм тăваймăн! Çапла, çапла! Ак ку Васюков вара вăл... Ун пекки — çĕршер, пиншер! Вĕсене пĕтĕмпех хамăра кирлĕ пек ĕçлекен тăвас пулать пирĕн! Вĕрентес пулать! Кашнинех, кашни кун вĕрентсе пырас пулать. Унсăрăн эпир çĕнтерейместпĕр!

Луначарский аллисене çĕклерĕ: парăнатăп, парăнатăп...

— Çапах та, Владимир Ильич,— терĕ вăл çавăнтах,— сирĕн хăвăр вăхăта çакăн пек вырăнсăр сая ямалла пулни мана кӳрентерет.— Хăй çав самантрах çак Васюков пирки унăн Ленинпа философилле калаçма май килменни çинчен шухăшларĕ.

— Çапла çав...— терĕ Ленин.— Вырăнсăр... Анчах та эсир,— терĕ унтан урăхларах сасăпа,— эсир, Анатолий Васильевич Луначарский, халăх комиссарĕ тата писатель, малта пыракан, тарăн шухăшлă çын, мана хĕрхенсе, упраса усратăр пулать!

Владимир Ильич тăруках пуçне Луначарский еннелле пăрчĕ те хавассăн, куçĕсене чеереххĕн çуталтарса каласа хучĕ:

— Анатолий Васильевич, батенька, апла пулсан — калăр-ха тархасшăн, эпĕ сирĕн пата пĕр васкавлă çыру янăччĕ мар-и!

— Мĕн çинчен вăл, Владимир Ильич! — ыйтрĕ Луначарский, хăйне тем пирки шак хунине сиссе тата çав çыру çинчен аса илме тăрăшса.

— Паян манăн пĕртте ăс памалла ятлаçас кăмăл çукчĕ, анчах та каçарăр, хăвăр айăплă!— терĕ ăна хирĕç Ленин, хутсем хушшинче тем шыраса.— Хăçан янăччĕха эп ăна, Анатолий Васильевич! Астумастăр-и! Пит аван! — кăшкăрнă пекех каларĕ Владимир Ильич.— Шутсăр лайăх!— Вăл тинех хăйне кирлĕ хут листине тупрĕ.— Эпĕ торфа гидравлически майпа кăларассине кино урлă анлăн пропагандăлас ĕçе йĕркелеме ыйтнăччĕ. Уйрăмах Ленинградра, Иваново-Вознесенскра тата торф кăларакан ытти вырăнсенче кăтартма ыйтнăччĕ. Хамăр торф çинче пурăнатпăр, анчах çав вăхăтрах кăмрăк çунтаратпăр!

— Э-э... Чăнах, чăнах, çапла!— аса илчĕ Луначарский.

— Çапла çав! Хăçан пулнă-ха вăл! — Ленин аллинчи хут çине пăхса илчĕ: — Христос çуралнă хыççăн пин те тăхăр çĕр çирĕмĕш çулта, октябрь уйăхĕн çирĕм çиччĕмĕш кунĕнче пулнă ку. Вара мĕн-ха! — Владимир Ильич пуçне вăртах Анатолий Васильевич еннелле пăрчĕ.

— Эпир ку ĕçе вăраха ятăмăр пулас, Владимир Ильич...— терĕ Луначарский айăпа кĕнĕ çын сассипе.

— «Вăраха ятăмăр!»— юри палăртса каларĕ Ленин тепĕр хут.— Унтанпа виçĕ уйăх иртет. Çирĕм пĕрремĕш çулхи январь уйăхĕнче эпĕ каллех торфа гидравлически майпа кăларас ĕçе пропагандăлассипе çинчен ыйтатăп. Анчах мĕн пулса тухать-ха!

Ленин пĕтĕм кĕлеткипе Луначарский патнелле сулăнчĕ.

— Çапла, Владимир Ильич, куншăн эп айăплă...

— «Эп айăплă!» Пит аван! Унтан тата виçĕ уйăх иртет те, эпĕ сирĕнтен каллех çавăн çинчен ыйтатăп. Кăштах вăхăт иртсен тата тепĕр хут аса илтеретĕп. Эп нимĕн те хушса каламастăп-и!

— Çук, Владимир Ильич...

— Суйса каламарăм-и!

— Çук...

— Ну, çак ĕç пирки халь мĕнле-ха, хаклă нарком!

— Япăх, Владимир Ильич.

— Апла-ха эппин...

Ленин пĕр хушă ним чĕнмесĕр кĕтсе тăчĕ, унтан тăрук ыйтрĕ:

— Ну, савнă та хаклă Анатолий Васильевич, эсир халь мĕн калăр-ха ĕнтĕ!

— Шуйттан пĕлет-и, тем каламалла!— терĕ Луначарский хыттăн, аллипе сулса илсе. Хăйне çĕнтернине пĕтĕм ăшчиккипе туйнă хушăрах вăл питĕ килĕшӳллĕ сăнпитлĕ пулчĕ. Янравсăртарах, çилĕллĕ сасăпа вăл хăйне хăй вăрçма тытăнчĕ:— Калама та çук намăс мана! Эп çĕр айне путса анса кайма хатĕр! Тĕпсĕр шăтăка чăмăттăм! Эп сирĕнтен каçару ыйтма та хăяймастăп. Намăс! Намăс!

Владимир Ильич хăйĕн хучĕсем çине тем паллă турĕ, хăй çав хушăрах Луначарские сăнарĕ.

— Сирĕнпе ĕçлемелле-и-ха ĕнтĕ манăн, е çук-и! — ыйтрĕ Ленин, хăй ĕçне тума пăрахмасăр.— Тен, лайăхраххине шырамалла! Çук çав, ĕçлес пулать, мĕншĕн тесен сирĕнтен лайăхрахххи халлĕхе çук-ха. Сирĕншĕнех, философпа наркомшăн, вăхăт çухатас пулать!

Владимир Ильич пуçне çĕклерĕ те Луначарский çине шăтарасла пăхрĕ.

Нимле мар пулса кайнă Анатолий Васильевич кĕнеке шкафĕ çумĕнче Ленин еннелле питпе те, çурăмпа та мар, темле хăяккăнтарах, çурри таран унран пăрăнса тăчĕ те, Владимир Ильич çине пăхма хăймасăр, пӳрнисемпе кантăка шăкăртаттарчĕ.

— Анчах та манăн сирĕнпе ĕçлемеллех пулсан,— терĕ Ленин малалла, кăшт кулнă пекрех,— эп сире питĕ вăйлă наказани паратăп. Акă, çапла тăрса асапланăр ĕнтĕ. Сире хăвăрăн совеç кышлатăр! — Ленин ятарласа тенĕ пекех аллипе хăварт кăна сулса Брокгауз словарьне уçрĕ те, унта хăйне кирлĕ сăмаха тупса, тем çырма тытăнчĕ.

Луначарский малтанхи пекех тăчĕ.

Ленин унпа Çутĕç комиссариачĕн ĕçĕсем çинчен малалла калаçма пуçласа çак халь кăна пулнă ĕç пĕтни çинчен систерме шут тытсан, сĕтел çинчи пĕчĕк лампочкă çуталса илчĕ: тахăшĕ телефонпа шăнкăравланă. Пит те вăхăтсăр пулчĕ ку! Владимир Ильич трубкăна илчĕ.

— Итлетĕп... Çапла...— терĕ вăл.— Сывлăх сунатăп...

Унтан Ленин вăрахчен итлесе тăчĕ те юлашкинчен хăй ыйтрĕ:

— Мĕн тумалла, тетĕр-и! Эсир хăвăр мĕн шутлатăр-ха тата, мĕн тумалла пек! Пĕлместĕр! Аха! Эсир кун пирки çур çул шухăшласа та татăклă шут туман, анчах мана çак самантрах ответ пама хушатăр! Çук, Смолянский юлташ! Эсир мана ун çинчен хăвăр килсе тĕплĕн каласа парăр, вара тин эпĕ сире мĕнле те пулин канаш пама пултарăп. Сывă пулăр.

Ленин трубкăна хучĕ те çилĕпе каларĕ:

— Рецептсем ыйтаççĕ! Халĕ те-ха пурнăçра пулакан пур ĕçсем валли те хатĕр рецептсем пур, тесе шутлаççĕ!— Унтан Луначарский еннелле çаврăнчĕ те ăна хыттăн сас пачĕ:— Анатолий Васильевич!

Вара Анатолий Васильевич патне пычĕ те, кăмăллăн кулкаласа, аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ. Лешин сăнĕ-пичĕ пĕтĕмпех улшăнса кайнă иккен.

— Пĕлетĕр-и, çак самантра эпĕ мĕн çинчен шухăшларăм, Владимир Ильич!— тесе ыйтрĕ Луначарский, темле питĕ пысăк ĕç çинчен пĕлтерессе систерекен сасăпа.

— Кăштах сисетĕп, Анатолий Васильевич,— терĕ ăна хирĕç Ленин, çемçен кулса илсе. Вăл Луначарский халĕ те хăйне хăй вăрçать е хăйне ят лектерне ĕççем çинчен шухăшлать, тенĕ.

— Ку вăл — конфликт вĕт!— терĕ Луначарский.— Пирĕн вăхăтри конфликт!— Унтан сасартăк, хăйне хаваслантарса, çĕклентерсе яракан шухăш пырса кĕнĕ пирки, савăнăçлăн каласа хучĕ:— Хăйĕн тивĕçне пуринчен те ытларах, тарăнрах ăнланса илекен совет çынни тата вăл ăнланулăх енĕпе хăйĕнпе танлаштарма тăрăшакан çынсем! Ку вăл пысăк, интереслĕ те оригиналлă драмă çырмалли темă! Епле пулсан та çыратăп эп ăна! Гениллĕ, çав тери çĕнĕ темă! Малта пыракан çыннăн драмипе телейĕ. Тĕлĕнмелле лайăх япала! Ăна пачах та çĕнĕ, ку таранччен пулман ĕççемпе çыхăнтарса çырас пулать! Пилĕк акт, ĕççем Мускавра пулса иртеççĕ! Мĕн кирлĕ тата! Шекспир тарăхнипе çурăлса кайĕ!

Малтанах кăшт тĕлĕннĕ пекрех тăнă Владимир Ильич сасартăк хыттăн, каçса кайса, каялла сулăнса, пуç пŷрнисене жилетăн çанă выранĕнчи çурăксене чиксе, пиншакĕ ăшĕнчен сиксе тухас пек чĕтренсе кулма тытăнчĕ.

— Ну, эсир те çав, Анатолий Васильевич!— терĕ вăл, çаплах кулма чарăнмасăр.— Конфликт эппин! Драмă шухăшласа хума та ĕлкĕртĕр пулать! «Пилĕк акт... Ĕççем Мускавра пулса иртеççĕ...» Анчах эпĕ!.. Эпĕ мĕн шухăшларăм!..— Ленин халĕ хăйĕнчен хăй кулчĕ.— Çук, Анатолий Васильевич, сирĕн чĕрере пуринчен ытларах художник ларать! Çырăр, епле пулсан та çырăр хăвăрăн драмăра!— Юлашки сăмахсене Ленин ним кулмасăр каларĕ.

Хăйне ăнланнăшăн кăмăллă пулса, Луначарский Ленина чунтан тав туса ун çине, кантăксем çине, хутсемпе кĕнекесем хурса тултарнă сĕтел çине пăхкаласа илчĕ. Çак сĕтел хушшинче Ленин талăкра вун тăватă-вунултă сехет хушши ĕçлет... Унтан тăрук унăн пуçĕнче шухăшсем çуралчĕç: «Хамăн кăмăлăма тултарма çырмалла-и! Анчах эсир пурин валли те ĕçлĕр-и! Кашни çынăннах хăйĕн кулленхи ĕçĕ-чăрмавĕсенчен канса илмелли мел пур. Пĕр сирĕн кăна канма вăхăт çук — эсир ялан, çĕрĕн-кунĕн ĕçре. Эпир хамăрăн вăхăта хамăр тумалли ĕççем тата мĕн те пулин урăххи валли пайлатпăр, анчах эсир нимĕн те пайламастăр, сирĕн пĕтĕм пурнăç — вĕçĕмсĕр ĕç... Драмă çырмалла...»

Анатолий Васильевич кăшт çеç сисĕнмелле çемçен кулса илчĕ: драмине вăл пурĕ пĕрех çырать-ха ĕнтĕ. Çыратех...

Луначарскипе калаçса пĕтерсен, Владимир Ильич паян тумалли ĕççене кĕскен çырса хунă хут таткине тупрĕ... Çапла, ĕç кунĕ пĕтсе пырать ĕнтĕ, анчах икĕ пысăк ĕç хут çинче кăна юлчĕç-ха: Луначарскипе кирлинчен ытларах вăхăт калаçма тŷр килчĕ тата Васюковпа тепĕр хут калаçас пулать. Кашни кун, кашни çынпах çавăн пек ĕнтĕ. Нумай, нумай çулсем хушши çавăн пек ĕçлес пулать... Çĕнĕ обществă тума, чăн малтан, çынсене çав обществă майлă воспитани парас пулать. Луначарский тата Васюков... Епле расна çынсем! Анчах, хăйсен вăйĕ çитнĕ таран, вĕсем пĕр пысăк ĕçех тăвасçĕ. Çапла, ĕç кунĕ пĕтсе пырать... Юлнă икĕ ыйтупа çĕрле, Совнарком ларăвĕ иртсен, статья çырнă хыççăн ĕçлемелле пулать... Çур çĕр иртсен пĕр икĕ сехетре...

Ленин аллинчи хут листине аяккалла хучĕ те, секретаре чĕнсе илсе, Васюков юлташа, Грибовăри вулĕçтăвком председательне чĕнсе кĕртме хушрĕ.

# Кремльте тĕл пулни

Ленин чŷрече умĕнче, аллисене брюки кĕсйисене чиксе тăчĕ. Икĕ чŷречеллĕ, авăнчăкрах çŷллĕ маччаллă кабинетра сивĕ те нŷрĕ. Хĕлĕн юлашки эрнисем уйрăмах сивĕ пулчĕç кăçал.

Владимир Ильича снарядсемпе çĕмĕрсе-шăйăрса пĕтернĕ Арсенал, хăмăр пĕлĕт çинче уççăн палăракан темĕн пысăкăш ăмăрт-кайăклă Троицки башньă, Кремль стенин пĕр сыпăкĕ тата казармăсен çурчĕ курăнчĕ. Площаде сарса тухнă чул выранĕ-выранĕпе путса ларнă та нумай тĕлте лакăмсем пулса тăнă, площадь хĕррипе, Арсенал çумĕн, Никольски башньă еннелле çинçе кăна хунарсен речĕ тăсăлать, вĕсем курăк тунисем пек туйăнаççĕ.

Троицки башньăпа Арсенал патнелле пымалли çул çинчи тата хунарлă площадьри юра таптаса лапчăтнă, çŷплентерсе пĕтернĕ. Çурт тăррисемпе Кремль стени çинче çеç юр тап-таса, пĕр пек тикĕс премĕксем пек выртать.

Кремль хыçĕнче хĕллехи сивĕ тытса лартнă çуртсем шăнса тăраççĕ. Лере, музейпа Румянцев библиотеки хыçĕнче, кăшт кăна мăрйесем палăраççĕ. Анчах тем чухлĕ пăхсан та тĕтĕм кураймастăн: хутмалли çук.

Хаяр хĕл Мускава сивĕ кăшăлĕпе хĕссе лартрĕ. Ахаль те вăйсăрланса, граждăн вăрçине пула халран каяс патне çитнĕ çĕршыва пур енчен те тапăннă тăшмансем çумне тата тепĕр тăшман хутшăнчĕ, вăл тăшман — сивĕ.

Тата тиф хăрушшăн сарăлчĕ.

Ленин ассăн сывласа илчĕ. Унтан вăл, сасартăк, сылтăм аллине карт! туртса кĕсйинчен кăларчĕ те сĕтел хушшине ларчĕ.

Шкулта вĕренекенсен ручки евĕрлĕ йывăç ручкă, сăмахсене вĕçне çитиччен çырса пĕтермесĕр тата вĕсене кĕскете-кĕскете, ют çын вулама пултармалла мар пуплевсем тăва-тăва, хут тăрăх çав тери хăвăрт чупма тытăнчĕ. Шухăшсем пĕринчен тепри мала иртсе пычĕç, çавăнпа та Владимир Ильич вĕсене питĕ васкаса çырса юлма тăрăшрĕ: ача çурчĕсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлесе панă-и... Çук,— çителĕклĕ хатĕрлесе памалла... Металлурги промышленноçĕнчи рабочисене сахăрпа сахарин паекне пысăклатмалла... Çутĕç комиссариачĕ ял валли кĕнекесем кăларассине чарса тăрать. Анатолий Васильевичпа калаçас, ăна ятлас... Декретпа юлташсене паллаштарса çирĕплетес... Каменева çыру çырса ярас... Ют çĕршывсем пулăшма пулни çинчен калаçас... Хамăр вăйпах майлашăпăр-ши, çук-ши!..

Перо пĕр самантлăха чарăнса тăчĕ.

Ларусем ирттермелли зала кĕмелли шурă клеенкăпа çапнă алăк хуллен кăна уçăлчĕ те унтан секретарь курăнчĕ.

— Владимир Ильич!..

Ленин пуçне çĕклерĕ те:

— Çапла, çапла,— терĕ, унтан çавăнтах тепĕр хут листи илчĕ.

— Владимир Ильич, сирĕн пата Коршунов юлташ килчĕ.

— Пит аван,— терĕ Ленин.

Секретарь алăка пĕр сассăр хупса каялла тухса кайрĕ, Владимир Ильич каллех хăвăрт-хăвăрт çырчĕ, вăл Сергей Сергеевич Каменев патне пĕчĕк çыру çырса пĕтерме васкарĕ. Анчах алăкра учонăйăн çŷллех мар типшĕм кĕлетки курăнсанах Ленин сĕтел хушшинчен тăчĕ те ăна хирĕç утса кайрĕ. Ку учонăя вăл ĕлĕкех



паллана, анчах учонăйĕ хăй питĕ именнĕ, алăк патĕнчех чарăнса тăнă.

— Иртĕр, Леонид Алексеевич, иртĕр!— Владимир Ильич ăна çемçе креслăсенчен пĕрин çине кăтартрĕ.— Ларăр тархасшăн...

Леонид Алексеевич Коршунов кресло патнелле темле тӳркессĕн, хăвăрт иртрĕ те, урисене Ленин сĕтелне хирĕç лартнă тепĕр сĕтел айне пытарчĕ. Кăна вăл питĕ васкаса турĕ те тата ытларах именсе кайрĕ. Анчах хăйĕн хулăран авса тунă кресли çине ларнă Ленин çине пăхса илсенех вăл лăпланчĕ те ун еннелле çаврăнса пăхрĕ.

— Сывлăхăр мĕнле, Леонид Алексеевич!— ыйтрĕ Ленин.— Ӳпкелеместĕр-и!

— Тавтапуç, Владимир Ильич. Ӳпкелеместĕп-ха.

— Пит аван. Вăхăчĕ йывăр, Леонид Алексеевич, пирĕн ăна епле те пулсан тӳссе ирттерес пулать.

Ленин калаçма чарăнсан, Коршунов хăй сăмахне пуçларĕ:

— Эпĕ Çĕпĕре экспедици яма май пуласси çинчен калаçасшăнччĕ, Владимир Ильич,— терĕ вăл.— Эсир, паллах, 1908 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче учонăйсемшĕн çав тери интереслĕ событи пулса иртни çинчен пĕлетĕр ĕнтĕ. Ку вăл самаях сайра пулакан, хăйĕн масштабĕпе питĕ анлă тата хăйĕн пĕлтерĕшĕпе те пысăк ĕç, темелле. Çĕпĕрти тайгана метеорит ӳкнĕ.— Коршунов Ленин çине пăхса илчĕ те Владимир Ильич питĕ тимлĕн пăхса итленине палăртрĕ.

Коршунова Ленин метеорит çинчен те, учонăй мĕн шухăшланине тата вăл мĕн тăвасшăн пулнине те питĕ лайăх пĕлнĕ пек, хăйĕн калаçăвĕпе вăл çав тери ерçмен çын вăхăтне ахалех сая янă пек туйăнчĕ. Коршунов сасартăк пӳлĕнсе калама чарăнчĕ.

— Çав метеорит вăл... Тепĕр тесен, эсир ун çинчен пĕтĕмпех пĕлетĕр...

— Кăлăхах ун пек шутлатăр эсир, Леонид Алексеевич,— асăрхаттарчĕ Ленин.— Таçта метеорит ӳкни çинчен илтнисĕр пуçне эпĕ урăх нимĕн те пĕлмен. Чăнах, чăнах...

Пуçне кăшт чалăштарса, вăл ученăй çывăхнерех сулăнчĕ те, çемçен кулкаласа, хуллен каларĕ:

— Хăш çулта ӳкнине те астумастăп.

Коршунов та кулса илчĕ.

— Тĕлĕнмелле япала!— терĕ малалла Ленин, кулма чарăнса.— Темшĕн, нумайăшĕ Совнарком председателĕпе наркомсем пĕтĕмпех пĕлесçĕ, тесе шутлаççĕ! Пустуй сăмах! Эпир питĕ сахал, намăс курмалла сахал пĕлетпĕр! Эпир сирĕнпе мĕн тери час-часрах тĕл пулăпăр, çав тери лайăхрах пулĕ! Калăр малалла, Леонид Алексеевич. Васкамасăр калăр.

Хавасланнă Коршунов хăй малтанах шутласа хунă тата Ленина каласа пама хатĕрленнĕ шухăшĕсене пĕлтерме тытăнчĕ.

— Чи пысăк метеорит — вăтăр ултă тоннă çурă таяканни шутланать пулсан, ун хыççăн — Мексикă метеоричĕ теканни — çирĕм çичĕ тоннă йывăрĕш хисепленет пулсан, пирĕн Çĕпĕр метеоритне вĕсемпе танлаштармалли те çук. Вăл эпир пĕлекен пур метеоритсенчен те тем териех пысăк пулма кирлĕ. Анчах та пĕтĕм хурлăх — эпир ку таранччен те çав метеорит хăш вырăна ӳкнине пĕлменнинче.

— Эсир вара çав метеорит патне каяс тетĕр-и! — ыйтрĕ Ленин, Коршунов пĕр вăхăтлăха калаçма чарăнсан.

— Çапла,— терĕ лешĕ.— Тĕп-тĕрĕс. Метеорит патне каяс тетĕп.— Çав самантрах çапла хушса хума васкарĕ: — Эп ăнланатăп ĕнтĕ, халь вĕсемпе аппаланмалли вăхăт мар... Эп питĕ сахал ыйтатăп. Питĕ кӳренмелле пулса тухать-çке-ха, ют çĕршывсенче пирĕн вырăс метеоритне тĕпчесе вĕренмелли обществăсем тăваççĕ, анчах эпир хамăр...

— Çук, çук, çук,— терĕ Ленин питĕ хăвăрт.— Ют çĕршывсем кунта ним тума та кирлĕ мар. Ан та ĕмĕтленччĕр. Мĕн кирлĕ сирĕн экспедици валли!

— Эп çырса хатĕрлерĕм-ха кунта...— Коршунов хăй пиншакĕн шалти кĕсйинчен икшер хут хуçлатнă листасем кăларчĕ.— Эпĕ хамăра мĕн кирлине питĕ перекетлĕ, сахал кăтартрăм, Владимир Ильич...

Ленин списока пăхма тытăнчĕ, анчах ăна мĕн тери ытларах вулана, унăн сăнĕ çав тери салхуланса пычĕ. Унтан Владимир Ильич çав хут листисене сĕтел çине хучĕ, вĕсене якатма сулахай аллипе шăлкаласа илчĕ те ученăй еннелле çаврăнчĕ. Коршунова унăн сăнĕ темле хаярланса, кичемленсе кайнă пек туйăнчĕ.

— Тепĕр тесен... списока кĕскетме те пулать,— терĕ вăл хăюсăррăн.— Çăкăрне сахалтарах илес... Приборсеменĕпе те чакарăпăр... Пĕр теодолитне кăларса пăрахма пулать, унтан тата...

Ленин халь учонăй çине мар, кабинетăн пĕр кĕтессинелле пăхса ларчĕ, вăл учонăя курман та, ăна итлемен те пек туйăнчĕ.

— Пĕр теодолитне пăрахма пулать,— терĕ вăл, хĕснĕ куçĕсемпе Коршунов çине пăхма тытăнса. Унтан, хăйĕн авнă креслине хăвăрт кăна аяккалла сиктерсе лартса, кăмăлсăр пулнă пек пӳрнисемпе хутсем çине çапса илсе, сĕтел хушшинчен тухрĕ.

Коршунов çине пăхасшăн мар пулса, вăл аллисене брюки кĕсйисене чиксе ячĕ, унтан, пĕр икĕ хутчен

чӳрече витӗр тулалла пӑхса илсе, кабинет тӑрӑх уткалама тытӑнчӗ.

— Унта тайга вӗт-ха,— ҫирӗппӗн те хыттӑн калаҫма пуҫларӗ Ленин, учонӑя унӑн ӗҫӗ мӗн тери йывӑр пулассине ӑнлантарса пама тӑрӑшнӑ пек.— Пиншер ҫухрӑм тӑсӑлакан ним йӗркесӗр, тискер тайга. Чарусӑр юхан шывсем. Тискер кайӑксем. Ҫул-мӗн ҫук. Тата ҫӗршер ҫухрӑм хушши пӗр ҫын та тӗл пулаймастӑн... Ҫавна ӑнланатӑр-и эсир!

Вӑл чарӑнса тӑчӗ.

— Эсир ҫакна пӗтӗмпех ӑнланатӑр,— терӗ те унтан Владимир Ильич чылай ҫемҫереххӗн, каллех список ҫине пӑхса илсе малалла каларӗ: — «Кунне пӗр кӗренкке ҫӑкӑр, пурин валли пилӗк кӗренкке сахӑр, табак...»

Ун сассинче вӑл кӑмӑлсӑр пулни те, тӗлӗнни те, ҫав хушӑрах хурланни те пулчӗ.

— Сахӑрне чӗрсе пӑрахма та пулать, анчах табакне илмесӗр май килмест, вӑл вӑрӑм тунасенчен хӑтӑлма пулӑшать,— ҫирӗппӗн каласа хучӗ учонӑй.

Ӑна илтмен пекех, Владимир Ильич ҫаплах малалла каларӗ:

— «Инструментсем хумалли футлярсем валли тирсем». Инструментсем валли!— терӗ вӑл тепӗр хут.

Коршунов ура ҫине тӑчӗ, вара унӑн куҫлӑхӗсем йӑлтӑртатса ҫутӑлса илчӗҫ. Халӗ вӑл юлашки татӑклӑ ҫапӑҫӑва кӗме хатӗрленекен ҫын пек курӑнчӗ.

— Владимир Ильич!— хыттӑн та ҫирӗппӗн калама пуҫларӗ вӑл.— Ленин юлташ! Каясах пулать! Ӑнланӑр эсир — пирӗн тӗле телей килсе тухрӗ. Такамсен ҫӗрӗ ҫине мар, шӑп та пирӗн ҫӗр ҫине килсе ӳкнӗ вӑл метеорит — космосран сайра килекен хӑна! Анчах эпир мӗн тӑватпӑр-ха!.. Енчен те вӑл Францире, Америкӑра ӳкнӗ пулсан, мӗн чухлӗ, миҫе тӗрлӗ экспедици янӑ пулӗччӗҫ-ши унта! Тӗрӗс, эпӗ килӗшетӗп, эпир халь ыйткалакансем, выҫӑ ҫынсем, пире интервентсем пӑвасҫӗ, анчах ҫапах та эпир пӗр хамӑр тӗле кӑна килсе тухнӑ майсемпе усӑ курма пултармалла мар-и-ха! Эпир ыйткалакансем пекех чухӑн пулнӑшӑн тӗнчери наукӑ айӑплӑ мар. Каяс пулать, Владимир Ильич!

Коршунов каласа пӗтерчӗ те кресло ҫине ларчӗ.

— Ах, турӑҫӑм!— терӗ те ӑна хирӗҫ Ленин, ун патнерех пырса тӑчӗ.— Паллах, каймалла, епле пулсан та каймалла, ырӑран та ырӑ ҫыннӑм, Леонид Алексеевич. Эсир мӗн ыйтнине эпир пӗтӗмпех парӑпӑр. Анчах та вӑл сахал вӗт! Ҫакӑн пек кӑна хатӗрленнипе Ҫӗпӗре тухса каяҫҫӗ-и вара! Эсир ыйтни вӑл Мускав ҫывӑхне экспедици ямалӑх кӑна! Тӗпренчӗксем ҫеҫ вӗт вӗсем! Кӳренмелле, пит те кӳренмелле!— икӗ хут каларӗ те Ленин, Коршунов Владимир Ильич чӗри мӗншӗн ыратнине ӑнланса илчӗ.— Эпир сирӗн пек хисеплӗ ҫынсене мӗн-мӗн тивӗҫлине пӗтӗмпех пама пултараймanni кӳрентерет! Анчах нимех те мар-ха! Вӑхӑт кӑна парӑр эсир пире!

— А-а... мӗн...— ним калама пӗлмерӗ Коршунов, Ленин ҫине ун сӑмахӗсене ӑнланман пек пӑхса. Унтан вӑл татах тем калама тӑчӗ, анчах каллех ним те калаймарӗ, ҫӑмӑллӑн сывласа илчӗ те ҫамки ҫине тапса тухнӑ тара ывҫӑ тупанӗпе шӑлса илчӗ ҫеҫ.

Ленин учонӑй патнех пырса кӑмӑллӑн ыйтрӗ:

— Леонид Алексеевич, эпир сире ҫакӑнта, пӗчӗкрен те пӗчӗк списокра ҫырса тухнине ҫеҫ парсан вара мӗн пулӗ!— Вӑл Коршунов хучӗсем ҫине кӑтартрӗ.— Тухса каятӑр-и!

— Владимир Ильич, эпӗ унтан ытларах илесси ҫинчен ӗмӗтленместӗп те! Акӑ, юр кайса пӗтет те, эпир хатӗрленсе ҫитсе тухса каятпӑр. Туршӑн та, пире унтан ытла нимӗн те кирлӗ мар. Сирӗнтен ахаль те пурте ыйтаҫҫӗ вӗт... Ӑҫтан тупса ҫитерес-ха сирӗн!

— Каятӑрах-и! — тепӗр хут ыйтрӗ Ленин.

— Каятӑп.

— Вара урӑх нимӗн те ыйтмастӑр-и!

— Ҫук, нимӗн те ыйтмастӑп.

— Вуҫех те-и, Леонид Алексеевич!— ҫине тӑрсах хистерӗ Ленин.

— Вуҫех те.

Ленин кӑмӑлсӑррӑн ӳсӗрсе илчӗ. Унтан вӑл таҫта аялалла, сӗтел айнелле пӑхса илчӗ те унӑн сӑн-пичӗ ҫинче чеерех кулӑ палӑрчӗ.

— Чимӗр-ха, батенька,— терӗ унтан хавассӑн, ӑшшӑн кулса,— ак ҫак чӳрече патне килӗр-ха, Леонид Алексеевич.

— Мӗн тума, Владимир Ильич!

— Эп килме ыйтатӑп, Леонид Алексеевич. Килӗрсем ӗнтӗ ҫак чӳрече патне, Леонид Алексеевич.

— Мӗн тума, Владимир Ильич!

— Тархасшӑн, Леонид Алексеевич, ман кӑмӑла хирӗҫ ан пулӑр ӗнтӗ. Килӗр чӳрече патне!— Ленин, чеереххӗн пӑхса, пӳрнипе юнаса илчӗ.— Пӗлетӗп эп сире!

— Ҫук, Владимир Ильич. Эсир эп ыйтнисемпе килӗшетӗр пулсан, тек эпӗ сирӗн вӑхӑта сая ярам мар, каям...

— Ҫук,— терӗ Ленин кӑмӑллӑн.— Эп килӗшсех ҫитеймен-ха. Тата тепӗр хут калатӑп, килӗр чӳрече патне, Леонид Алексеевич.

Коршунов хӑйне ирӗксӗрлесех ура ҫине тӑчӗ те, тем пуласса кӗтнӗ пек, Ленин ҫине пӑхрӗ.

Анчах Ленин та ун ҫинчен куҫ илмерӗ.

— Ну,— терӗ вӑл,— тухӑр сӗтел хушшинчен.

— Тархасшӑн.— Коршунов тӑрук хӑюлланчӗ те сӗтел хушшинчен тухрӗ.

Вара Ленин учонӑй урисем ҫине пӑхрӗ те:

— Тӗрӗс, эп шутланӑ пекех иккен,— терӗ.— Тайгана мӗнпе каятӑр-ха ӗнтӗ эсир, батенька! Ҫак ҫӗтӗк пушмаксемпе-и! Ара, вӗсем сирӗн Мускавран пилӗк ҫухрӑм кайсанах ураран тухса ӳкеҫҫӗ вӗт!

— Ма вара! Ку пушмаксемпе те кайма пулать,— терӗ Коршунов.— Эп вӗсене ҫиелтен кантрапа туртса ҫыхатӑп. Шалта пуртенкке пулать, ҫиелтен — кантра...

— Кайма пулать ҫав...— терӗ Ленин, шухӑша кайса.— Сирӗн тепӗр мӑшӑр пушмак ҫук ӗнтӗ!

— Ӑҫтан пултӑр-ха! Пурччӗ те, ҫӗтӗлсе пӗтрӗ. Ку мӑшӑрне эпӗ упраса усратӑп-ха...

— «Ку пушмаксемпе те кайма пулать»,— терӗ Ленин тепӗр хут.— Каҫарӑр, Леонид Алексеевич. Каҫарӑр.

Ленин аллине Коршунов хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ те ӑна каллех кресло ҫине лартрӗ. Питӗнчен пӑхса илчӗ — кӳренмест-и! — унтан вара, вӑл кӳренменнине курса лӑпланчӗ те пӳлӗм тӑрӑх уткалама пуҫларӗ.

— Пирӗн тӗлӗнмелле ырӑ ҫынсем пур,— калаҫма тытӑнчӗ вӑл.— Акӑ, сӑмахран, Циолковский. Юриех, хӑвӑр умӑрта провинцири вырӑс хулине курма тӑрӑшӑрха. Таҫта, кивӗ йывӑҫ ҫуртра, курӑк ӳссе ларнӑ урамра пулӗ-ха, хурсемпе сыснасем ҫӳренӗ ҫӗрте, математикӑна вӗрентекен ватӑ учитель пурӑнать. Вӑл хӑйӗн паёкне — ҫӑкӑр тата селедкӑ илет те, ҫав вӑхӑтрах тӗнче уҫлӑхне, планетӑсем хушшине вӗҫсе каяс ыйтусемпе ӗҫлет. Ҫитменнине тата вут хутман хваттерте ларать пуль-ха! Эсир те, батенька, ҫав ҫулпах пыратӑр: пин-пин ҫухрӑма, тайгана, Ҫӗпӗре ҫӗтӗк пушмакпа кайма хатӗрленетӗр!

«Анчах эсир хӑвӑр мӗнле тата,— шухӑшларӗ ҫав вӑхӑтра Коршунов,— эсир хӑвӑр мӗнле, Владимир Ильич! Ытла кашниех «социализм» тенӗ сӑмаха вуласа тухма та пултарайман ҫӗршывра социализм тӑвасшӑн!»

Унтан сасартӑк Коршунов ӑна хӑйне тата Ленина темскер пӗрлештерсе, пӗтӗҫтерсе тӑни, Ленин та, Коршунов хӑй те пӗр ӗҫех туни ҫинчен, ҫав ӗҫ — Калугӑра пурӑнса тӗнче уҫлӑхне вӗҫсе каяс тӗлӗшпе ӗҫлекен Циолковскин, юхӑнса кайнӑ заводсене юсаса ура ҫине тӑратакан выҫӑ рабочисен, ҫӗре сухапуҫӗпе сухаласа ҫӑкӑр тума тӑрӑшакан мужиксен пурнӑҫӗнчи тӗп ӗҫ, тӗп тӗллев пулни ҫинчен шухӑшларӗ.

Учонăй темле хавасланса, пĕтĕм чунĕпе ҫĕкленсе тухса кайрĕ. Вăл Кремль кил хушшипе чупса иртрĕ, Хĕрлĕ площаде тухрĕ, хăй ҫав вăхăтра пĕрмай ыранхи кун ҫинчен, епле пулсан та пурнăҫа кĕмелли хăйĕн ĕмĕчĕ ҫинчен шухăшларĕ.

...Вăхăт ҫитĕ — ҫĕршывра заводсем тĕтĕм кăларма тытăнĕҫ, халлĕхе ҫуккисем те — трактор, автомобиль завочĕсем ĕҫлеме пуҫлĕҫ. Вĕсене туса ĕҫе ярасси ҫинчен ҫак пысăках мар сивĕ кабинетра ĕҫлекен ҫын пуҫĕнче пысăкран та пысăк шухăшсем ҫуралнă ĕнтĕ... Пуриншĕн те Толстойпа Пушкин сăмахĕсем ҫывăх пулĕҫ, мĕншĕн тесен ҫурма тискер Россия пĕтĕмпех хут пĕлекен ҫĕршыв пулса тăрĕ... Тата паллах ĕнтĕ, наукă экспедицийĕсем Ҫурҫĕр полюсне ҫитĕҫ, унсăр пуҫне, тен, кам та пулин океан тĕпне анĕ, е атмосферăран ҫӳле те ҫĕкленĕ. Ун чухне ҫав экспедицисене ертсе пыракансен темĕн пысăкăш ҫĕнĕ государствăн организаторне чăрмантармалла пулмĕ, кунне пĕр чĕрĕк ҫăкăрпа пĕр чĕптĕм табак памалла тăвассишĕн чăрмав кӳмелле пулмĕ... Тата ҫын хăй пурнăҫĕнче тумалли ĕҫсем ҫинчен ҫĕнĕлле шухăшлакан ҫĕнĕ ҫынсем ҫитĕнĕҫ... Ҫаксем пĕтĕмпех пулĕҫ!

Анчах халлĕхе урамсенче хырман юр выртать, сивĕпе аптранă ҫынсем хутланса чупаҫҫĕ, ырхан лаша йывăр лавне аран туртать, ҫĕтĕк сăкман тăхăннă этем ăна: «Ут, шуйттан пуҫĕ, ут, кĕҫĕ муклашки!» тесе хăвалать, тимĕр вывескăсем ҫине: «Мартьянов», «Оптовая торговля Гурин и сыновья», «И. В. Кошкин. Скобяные товары» тесе ҫырнă лавккасем хупă тăраҫҫĕ. Ку вăл — халлĕхе.

...Урампа буденновкăсем тăхăннă хĕрлĕ армеецсен пысăках мар отрячĕ иртет, ҫунапа пĕтĕм урама янраттса кĕмсĕртетекен тимĕр трубасем турттарса пыраҫҫĕ: таҫта темскер юсаҫҫĕ е ҫĕнĕрен тăваҫҫĕ пулмалла, пĕр учреждени чӳречинчен Карл Маркс портречĕ тата «Сывă пултăр...» тесе пуҫланакан темле лозунг курăнса юлчĕ. Пĕр подъездран тепĕр подъезда пуҫне хĕрлĕ тутăр ҫыхнă хĕрарăм чупса каҫрĕ...

Кремльте, вĕҫĕ-хĕррисĕр анлă ҫĕршыв варринче, вăтам пӳлĕ, ҫирĕп кĕлеткеллĕ ҫын кабинет тăрăх каллĕ-маллĕ утать, вăхăтран вăхăта вăл чарăнать те ҫирĕппĕн, хăвăрт ҫырать, ҫав вăхăтрах вăл пĕтĕм Российăна пĕтĕмпех ҫĕнетмелли майсене курать, ҫĕршывра калама та ҫук чаплă ĕҫсем пулассине чунтан ĕненет.

Александр ЯНДАШ

# Тӑван кил



*П о в е ç*

ПОЕЗД ÇИНЧЕН ансан Андрей Петрович Чистов станцире çӳресе вӑхӑт иртterme шутламарӗ, тӳрех килелле çул тытрӗ. Кунта хӑй пулман çулсем хушшинче самаях улшӑннӑ, çӗнӗ çуртсемпе, хӗвел ӑшшипе киленсе ларакан сад-пахчисемпе капӑрланнӑ. Чулçырма витӗр тухсан çеç вӑл станцире магазинсем уçӑличчен те пулин кӗтмеллеччӗ, тесе ӳкӗнчӗ. Кантурсем ӗçлеме пуçличчен станцӑрах юлнӑ пулсан, унта Андрей Петрович пӗр-пӗр паллакана кураччех ӗнтӗ. Анчах вӑл шӑпах кама та пулса паллакана курас мар, тесе тухса утрӗ те унтан ир-ирех. Пӗлнӗ çынна курсан, паллах, вун тӑватӑ çула мӗнле иртterni, ӑçта-ӑçта çитсе курни çинчен сӑмах тапранатчех. Çук, киввине чакалани ун кӑмӑлне уçӑлтарма пултараймасть, йӑлтах урӑхла, çавнашкал калаçу Андрей Петровичӑн кӳренӳ-асапа пайтах тӳснипе пиншер хут касӑлса ыратнӑ чун-чӗрине татах пӑлхатни çеç пулӗччӗ.

Кӗпер урлӑ каççан вӑл çурӑм хыçне çакнӑ кутамккине хывса, ӑна çыран хӗрне симӗс курӑк çине хучӗ. Унтан вара чылаях кивелнӗ, шупкалса кайнипе хура тӗсне пачах çухатнӑ фуфайкине те хыврӗ, ӑна курӑк çине сарчӗ. Кутамккинчен кӑларнӑ шур çӑкӑрпа колбаса касса хурса, вӑл ирхи апата хатӗрленчӗ.

«Чим-ха, кунта, шыв хӗрринче, ӗлӗк питӗ палка çӑлкуçӗ пурччӗ. Халь пур-ши вӑл? Анса пӑхам-ха»,— аса илчӗ те вӑл, пысӑк симӗс кружкӑ йӑтса, çумӑрпа йӗпенсе типме ӗлкӗреймен курӑкла сукмакпа шыв патне анчӗ.

Çырма тӗпне анса тӑрна куç пек тӑрӑ шывлӑ, чылай тарӑн пулсан та, тӗпӗ курӑнакан çӑлкуçӗ патне утса пырсан, ун чӗри кӑлт-кӑлт тапса илчӗ. Çуллахи шӑрӑх кунсенче, ӳте пӗçертмеллех хӗрсе кайнӑ тусана çаруран шаплаттарса, станцӑран киле таврӑннӑ чухне ку сивӗ тӑрӑ шыва сахал ӗçсе киленнӗ-и-ха вӑл!

Халĕ те çав туйăмах тыткăна илчĕ ăна. Вăл темле ĕçе те курнипе кушăркаса çуркаланнă ал тупанĕсене пăрăх айне ывăçласа тытрĕ, сивĕ шыва тулли тултарса, тарласа нўрленме пуçланнă питне йĕпетрĕ. Шывĕ ытла сивĕ пулнипе, сивĕ тумламсем ярханах çуха витĕр кĕрсе ăшă ўт тăрăх чупса аннипе çўçенсе иле-иле, вăл, çăл шывне çине-çинех ăсса, кĕмĕл тумламсене сирпĕтсе, питне, тăнлавĕсем шуралма ĕлкĕрнĕ пуçне çума пуçларĕ. Çăвăнса пĕтерсен кĕсъерен сăмса тутри кăларчĕ, унпа питне шăлса типĕтрĕ, йĕпе çўçне хыçалалла тураса якатрĕ. Вара, çăл шывне кружкăпа тулли ăсса илсе, çырана улăхрĕ. Сивĕ шыва виç-тăватă сыпкăм ĕçсен вăл хăйне эрех ĕçнĕ чухнехи пек туйса, типĕ апата та техĕмлĕн çирĕ.

Апатланса пĕтерсен Андрей Петрович, мĕн юлнине пуçтарса, кутамккана чикрĕ. Чылай çўле хăпарнă хĕвел хытах хĕртме пуçланине туйса, фуфайкине тăхăнмасăр, ăна алла тытса, çул çине тухрĕ. Унтан, темиçе утăм тусанах, Андрей Петровича çатан урапа кўлнĕ лав хуса çитрĕ.

— Пуштă çўрететĕп эпĕ, çавăнпа чарăнма юрамасть манăн. Анчах çул çинче çурран çынна курсан чарăнмасăр иртме хăюлăх çитмест. Аякка каймалла-и? — ыйтрĕ пĕркеленчĕк питне янахран пуçласа хăлха таранах хупласа илнĕ, кăшт шуралма пуçланă хура сухаллă старик, тилхепене икĕ аллипе те туртса.

«Аякка» тет пулсан, ку хамăр ял çынни. Кам-ши вара ку?» — шутласа илчĕ те Андрей Петрович, лашине чарса тăратнă пуштă çыннине хуравласа каларĕ:

— Инçех мар та, утмалăх пур.

— Апла пулсан лар. Энĕшялне çитерме пултаратăп. Унта çитсен малалла мĕнпе каймаллине хăвăр пĕлĕр.

— Ку та лайăх, мана ултă çухрăм утассинчен хăтаратăр,— терĕ Чистов, резинă аттипе çатан урапа пускăчĕ çине пусса.

Лавçă-старик, урапа хыçĕнчи вырăна пушатса, ларкăч çине куçрĕ.

Андрей Петрович вара ку старик кам пулнине тин палласа илчĕ.

«Кукăр ура Михаля-çке ку! Мана палларĕ-ши вăл, çук-ши?» — шухăшларĕ те вăл хăй ăшĕнче, чĕнмесĕр пыма аван маррине туйса, сăмах хушрĕ:

— Лаша лайăх-çке сирĕн. Сăрталла та юртма хăтланать.

— Лашине хурлама çук. Но-о! — терĕ Михаля пичче, лаши чăнах та лайăх пулнине кăтартасшăн пулнă пек, тилхепене турткаласа.— Кăна çĕнĕ председатель пачĕ. Ĕлĕкхи пуштă çине çаврăнса та пăхмастчĕ.

— Апла, мĕн, председатель улшăнчĕ-им?

— Улшăнчĕ мар, улăштарчĕç. Шутлатăп-шутлатăп та эпĕ хăш-пĕр чухне,— çав, районта ларакансем чухласах та каймаççĕ пулĕ тетĕп.

— Мĕншĕн апла вара?

— Мĕншĕнни мĕнни, акă, хамăр колхозах илер-ха. Вăрçă пĕтсенех пире таçтан çăваран председатель ярса пачĕç. Пĕтеретчĕ колхоза, пĕтĕмпех салатса яратчĕ. Ик-виçĕ çул хушши ĕçкунне çуршар кило тырă илсе пурăнтăмăр. Ара, çакна малтанах пĕлмелле пулнă: ют çын ют ялшăн ма тăрăштăр-ха вăл?

— Халĕ кам вара председатель?

— Халĕ ăслă çын-ха. Хуçалăха тытма пĕлет, мĕншĕн тесен вăл çĕр çинче чакаланса ўснĕ. Павлов, хамăр ялсемех. Вăрçă хыççăн тăтăшах райкомра ĕçлерĕ. Ярла килнĕренпе икĕ çул çитет ĕнтĕ.

— Ах, Павлов! Мирон Иванович-и?

— Çавă çав. Мĕн, пĕлетĕр-им ăна?

— Ма пĕлес мар-ха Мирон Ивановича. Вăтăрмĕш çулсенче вăл райколхозсоюзра та ĕçлерĕ. Çавă пулĕ?

— Çавă, çавă. Самăй çавă.

— Ну, мĕнле ертсе пырать вăл колхоза?

— Мĕнле калас. Икĕ çул нумай мар-ха вăл. Чăннипе калас пулсан, тăрăшать пирĕн председатель: виçĕмçул пĕрер кило илнĕччĕ, пĕлтĕр — виçшер кило валеçрĕç.

— Эсир председатель ĕçне килопа хаклатăр апла.

— Килопа та хаклас пулать. Кило тырă та илмесен, маччана сурса выртнипех хĕл каçаймăн. Кило çеç сахал-ха вăл. Мирон Иванччă хуçалăха тытма та пĕлет, колхозниксене валеçмелĕх тырă та пур халĕ пирĕн. Выльăх йышĕ те ўсет колхозра. Авă, хуркăвакалне мĕн чухлĕ усратпăр тата,— терĕ Михаля пичче, çул хĕрринчех сарăлса выртакан кўлĕ еннелле чăпăркка аврипе тĕллесе.

Пуçне пăрсанах Андрей Петрович сип-симĕс лапсака тăраллă йăмра тураттисем витĕр тĕкĕр пек çутăлса выртакан шыв çине пăхса илчĕ: унта çĕршер хур-кăвакал ярăнса çўрет.

«Нимле кўлĕ те çукчĕ-çке кунта. Ăçтан сиксе тухнă вара ку кўлĕ?!» — тĕлĕнмесĕр иртме пултараймарĕ Чистов.

Вăл тĕлĕннине туйса илнĕ пекех, Михаля пичче сăмахне малалла тăсрĕ:

— Тем пекех лайăх пулчĕ ку кўлĕ. Ăна вăрçă пуçланас умĕн чавнăччĕ. Ку таринччен уссинех курса кайманччĕ унтан. Халĕ, Мирон Иванччă килнĕренпе, пĕве те тупăш пама пуçларĕ: хур-кăвакал нумай усратпăр, пулли те пур кўлĕре. Эсир председатель ĕçне килопа шутлатăр, терĕр-ха. Ара, килопа

шутламасан мӗнле пултӑр-ха вӑл? Колхозниксене тӑрантмалӑх тырӑ паман колхоз колхоз-и вӑл?

— Ку тӗрӗс. Колхознике тырӑ памаллах. Анчах эпӗ колхоз тӗрекӗ ҫинчен каласшӑн. Колхоз тӗреклӗ пулсан тырри те, ытти тыр-пулпа пахча-ҫимӗҫ те пулать.

— Ну, вӑт, ҫитрӗмӗр те. Калаҫса пынӑ хушӑра ҫулӗ те кӗскелчӗ, вӑхӑчӗ те хӑвӑрт иртрӗ,— терӗ Михаля пичче, ял хапхинчен кӗрсен пӗрремӗш ҫурт умӗнчех лашине тӑратса.

— Эпӗ те ҫитрӗм,— терӗ Андрей Петрович, урапа ҫинчен ҫӑмӑллӑн сиксе анса.

— Мӗнле ҫитрӗн!— чӑнласах тӗлӗнчӗ ларчӑк ҫинчен аннӑ Михаля пичче, Чистов патнелле лӑкӑштатса утса.

Вӑл ун питӗнчен тинкерсе пӑхрӗ, анчах унта палласа илмеллине нимӗн те курмарӗ пулмалла, ҫавӑнпа вӑл ахаль те хӗсӗк куҫне куҫ шурри пачах курӑнми пуличченех хӗстерсе пӑхрӗ, унтан вара, аптӑранӑ енне, ҫӑра сухалне аллипе шӑлкаласа илчӗ.

— Палламастӑн-и, Михаля пичче? Апла пуятӑп. Ҫапла калаҫҫӗ-и-ха ваттисем?

— Ӗҫлесен пуясси пулӗ-ха вӑл. Хӑть пуҫран ҫапсан та ниепле те палласа илейместӗп. Чӑнах, кам пултӑн вара эс?

— Петр Петрович ачи. Атте ҫук халӗ пирӗн: вӑрҫӑра пӗтнӗ. Анне пурӑнать.

— Таса Петӗр ачи-и?

— Самӑй ҫав. Энтри, теҫҫӗ мана.

— Ара, ӑна тӗрмере пӗтнӗ тетчӗҫ-ҫке. Темле, политикӑ пирки айӑпласа хупнӑ тетчӗҫ-и?

— Ҫапла, тӗрмере ларса курма тиврӗ. Анчах тӳссе тухрӑм унтан, вилмерӗм. Эсир авӑ епле сиенлӗ ҫынна лартса килтӗр, Михаля пичче. Ахаллине мар, политическине...

Михаля пичче каллех куҫне хӗсрӗ, йӗритавра ҫавӑрӑнкаласа пӑхрӗ, вара, такам илтесрен шикленнӗ пек, шӑппӑн каларӗ:

— Хӑть мӗн кала та, Андрей Петрович, ҫав, вӑрҫӑ умӗн лартнисене халӑх тӑшманӗ тесе шутлама пултараймастӑп эпӗ. Акӑ, Энтри, санах илер-ха. Ӑҫтан халӑх тӑшманӗ пулма ӗлкӗрнӗ-ха эсӗ? Ун чухне салтакран та тин ҫеҫ килнӗччӗ вӗт-ха. Ҫитменнине тата сирӗн ҫемьере кулак таврашӗ те пулман.

— Эс апла шутлатӑн, Михаля пичче, ыттисем урӑхла шутлаҫҫӗ. Атя, мӗн тӳсмеллине тӳсрӗмӗр ӗнтӗ. Малашне йӗркеллӗ пурӑнма май килӗ, тен.

— Ҫапла пултӑрччӗ ҫав. Сирӗн аннӳ халӗ Ҫутра пурӑнать. Вӑрҫӑччен аҫу ҫурт лартса хӑварма ӗлкӗрчӗ.

— Мӗншӗн Ҫутра?

— Ҫутра ҫав. Аслӑ урамри ҫурта правлени сутрӗҫ вӗсем.

— Апла имӗш. Ну, Ҫутра пулсан, унта пултӑр.Васкам-ха килелле. Спасибӑ сана, Михаля пичче. Лартса килнӗшӗн тем пекех тав.

Андрей Петрович ватӑ Михаля аллине хытӑ чӑмӑртарӗ, кутамккине тӳрлеткелесе, аслӑ урампа аналла утрӗ.

## 2

1937 ҪУЛХИ ҪУЛЛА та Андрей Петрович киле ҫапла таврӑнсаччӗ. Ял хапхинчен кӗрсен вӑл, ун чухне те хальхи пекех лав ҫинчен анса, урам тӑрӑх ҫурран утрӗ. Хӗрлӗ кӑшӑллӑ картус, хӗрлӗ петлицӑсем ҫине икшер кубик, ҫанни ҫине хӗрлӗ ҫӑлтӑр ҫӗленӗ симӗс гимнастеркӑ тӑхӑннӑ, пӗр хулли ҫине шинель ҫакса янӑ, тепӗр аллипе чӑматан йӑтнӑ хитре ҫамрӑка Турикасран пуҫласа Аслӑ урама ҫитиччен миҫе куҫ пӑхса ӑсатман пулӗ ун чухне!

Ҫара кайиччен тин ҫеҫ институт пӗтерсе тӑван ялти вӑтам шкулта ик-виҫӗ уйӑх ҫеҫ ӗҫлеме ӗлкӗрнӗ Чистов Мускаври пролетарски дивизире икӗ ҫул службӑра пулнӑ та, запасри кӗҫӗн политрук ятне илсе, киле таврӑннӑ.

Тӑван яла ҫитнӗшӗн хӗпӗртенӗ Андрей катмар йӑмрасен усӑнчӑк симӗс тураттисем хупӑрланӑ урам тӑрӑх савӑнса, васкамасӑр, тин ҫеҫ чул сарнӑ ҫула сӑран аттипе таплаттарса утать.

Килте ӑна яланхи йӑлапа кӗтсе илчӗҫ: кӳршӗсем пухӑнчӗҫ, таврӑннине паллӑ тума кӑшт ӗҫкелерӗҫ.

Пухӑннисем хушшинче Матвеев учителе курсан Андрей тӗлӗнмерӗ. Ара, ку ҫапла пулмалла та: Иван унӑн ҫывӑх юлташӗ вӗтха. Пӗр институтрах тӑватӑ ҫул пӗрле вӗреннӗ пулсан та, вӗсем пӗр-пӗринпе яла килсен ҫеҫ тӗплӗн паллашнӑ. Институтра литфакра вӗреннӗ Андрей ытти факультетсенчи, уйрӑмах физматри * студентсемпе хутшӑнсах кайман.

Яла килсен вӗсем туслашсах кайрӗҫ. Ҫара та пӗрле, пӗр чаҫех кайма ӗмӗтленсе пурӑнатчӗҫ. Анчах пӑхма Андрейрен чылай патвар та сывлӑхлӑ курӑнакан Матвеева призыв комиссийӗ темшӗн тиркерӗ. Ун чухне кӗре ҫамрӑксемех салтака каймасӑр юлни сахал пулман ҫав. Салтака лекессине телейлӗ ҫамрӑксен шӑпи тесе шутланӑ ун чух. Ҫавӑнпа пулӗ ӗнтӗ салтака илнисем хушшине пӗвӗпе ҫитӗнсе ҫитмен пӗр-пӗр хыткан ҫамрӑк лексен, ку вара пӗтӗм яла тӗлӗнтернӗ.

* Физикӑпа математикӑ.

Андрей Петровичпа та ҫаплах пулнӑччӗ. Ун чухне ялти салтак ҫулӗ ҫитнӗ ҫирӗм ытла ҫамрӑкран виҫҫӗшне ҫеҫ салтака илчӗҫ. Ҫав телейлисен шутне Андрей те лекрӗ.

— Вӑт, пӑх та кур эсӗ: мӗн чухлӗ паттӑр каччӑсем тӑрса юлчӗҫ. Ҫав Таса Петӗр ачи ӑҫтан лекме пултарчӗ-ха салтака! Вӑйӗ те ҫук, пӗвӗ те винтовкӑ тӑршшӗ пулмасть!— тӗлӗнчӗҫ ял ҫыннисем.

Халӗ, салтакра икӗ ҫул пурӑннӑ хыҫҫӑн йӑлтах улшӑннӑ, пӗвӗпе ашшӗнчен те иртсе кайнӑ Андрее курсан, ҫынсем пушшех те тӗлӗнчӗҫ.

— Салтак апачӗ авӑ мӗн тӑвать ҫынна!— сӑмах хушмасӑр тӳсеймерӗ, Андрей килнине чыслама пынӑ кӳршӗсенчен пӗри.

— Апачӗ ҫеҫ мар, салтакӑн пӗтӗм пурнӑҫӗ улӑштарать ҫынна. Хамӑр пулса курнӑ, пӗлетпӗр: ир-ирех тӑраҫҫӗ, кунӗпе ура ҫинче, кашни минут шутра. Вӗренетӗн, ӗҫлетӗн, вӑхӑтра ҫиетӗн, вӑхӑтра канатӑн. Пурте расписани тӑрӑх пулса пырать. Унта ӳсес мар тесен те ӳсӗн, вӑйӊе те хушӑн,— ӑнлантарса пачӗ тепри.

Иван Матвеев пӳрте кӗнӗ-кӗмен Андрее ыталаса илчӗ, ӑна питӗрленсе ҫӗклерӗ те, ҫийӗнчех ура ҫине тӑратрӗ:

— Айтуру, Андрюша! Эсӗ епле пулса кайнӑ: улӑп, чӑн улӑп!

Вӑл аллисене саркаларӗ, кӑшт айккинерех пӑрӑнса, Андрее вӑтантармалла ҫивӗч пӑхрӗ. Унтан вара ӑна каллех ыталаса илчӗ те, хӑй ҫумне хытӑ пӑчӑртаса, унӑн тутине виҫӗ хут чаплаттарчӗ.

— Ну, вӑт, килтӗн апла. Юлташсӑр пурӑнаттӑм-ха. Пирӗн шкулта вообще ҫамрӑксем ҫук. Халӗ пӗтӗм обществӑллӑ нагрузкӑна иксӗмӗр ҫавӑрттарӑпӑр ӗнтӗ...

3

ВӖРЕНӲ ҪУЛӖ пуҫланас умӗн районти учительсем канашлӑва пухӑнчӗҫ.

— Андрей, эпӗ сана пӗр секрет пӗлтерессӗн,— терӗ Иван Матвеев канашлу кӑнтӑрлахи апата салансан столовӑйне кайнӑ чухне.

— Мӗнле секрет?— тӗлӗнчӗ Андрей.

— Секрет ҫав. Ун ҫинчен эпӗ ку таринччен никама та каламан, никам та пӗлмест ӑна. Анчах сана килӗшмест пулсан та эсӗ ан кул вара,— юлташӗ куҫӗнчен айванла тилмӗрсе пӑхрӗ Иван.

— Ним те ӑнланмастӑп сана: мӗн килӗшмест вара мана? Мӗнрен кулмалла мар-ха манӑн?

— Манӑн пӗр паллакан хӗр пур, Туҫа хӗрӗ. Ну, тус темелле-и ӑна?— Иван вӑтаннипе хӗп-хӗрлӗ пуличченех хӗрелсе кайрӗ.— Эпир унпа пӗлтӗр паллашнӑччӗ. Вӑл та учительре ӗҫлет, хӑйсен ялӗнчи шкулта. Учительсен институтне пӗтернӗ, чӑваш чӗлхине вӗрентет.

— Ну, ку интереслӗ!— теме ҫеҫ пултарчӗ Андрей, ҫак ытла вӑтанчӑк Иван та хӗрпе паллашма пултарнинчен чӑннипех тӗлӗнсе.— Апла ӑна мана та кӑтартатӑн пулӗ-ха?

Иван ӑна Раиспа каҫхине клубра, кино пуҫланас умӗн, паллаштарчӗ. Хаклӑ йышши сенкер кӗпе ҫинчен хура пиншак тӑхӑннӑ, икӗ хура ҫивӗтне ҫурӑм хыҫнелле усӑнтарса янӑ Раис хӑй пекех хитре юлташӗпе калаҫса тӑратчӗ ун чух.

Андрейпе Иван хӑйсем умне утса пырсан хӗрсем шӑпӑртах пулчӗҫ.

— Рая, ку ман юлташ — Андрей Петрович Чистов. Халӗ ҫеҫ салтакран килнӗ те, тумне те хывма ӗлкӗреймен-ха, авӑ,— терӗ Иван, хӗрсем ҫине именнӗн пӑхса.

— Куратӑп, Ваня. Тӳррипе калас пулсан, эпӗ ҫар ҫыннисене питӗ кӑмӑллатӑп. О-о! Сире, кубиксемлӗ командире, мӗн сӑлтавпа киле яма пултарнӑ-ха тата? Сирӗн, авӑ, значоксем те кӑкӑр тулли.

Андрей ӑнланчӗ: Раис йӑпӑлти сӑмахсене ваклама юрататакан ҫын мар, вӑл пӗр вӑтанса тӑмасӑр, тӳрӗ кастарать. Ҫавӑнпа ун кӑмӑлне килӗшме тӑрӑшса, хӑй те мӗне те пулса тӑнине систерсе, каларӗ:

— Ку мӗн, комплимент-и?

— Ма комплимент пултӑр, чун-чӗререн калатӑп. Сире килӗшмерӗ пулсан, каҫарӑр тархасшӑн. Тӗрӗссипе каласан, ҫав ҫар ҫыннисем хама мӗншӗн пит килӗшнине ниепле те ӑнланса илеймestӗп.

Андрей асӑрхарӗ: Раисӑн тӗксӗм питӗнче ку хутра хӗрлӗ сӑр выляса илчӗ.

Унтан Раис хӑй тусӗпе темшӗн Андрее мар, Ивана паллаштарчӗ. Кино пуҫлансан та вӑл Андрейпе юнашар кӗрсе ларчӗ.

Кино хыҫҫӑн вӗсем Хресчен ҫурчӗ тӗлне ҫитиччен пӗрле утрӗҫ. Иванпа Раис тусӗ маларах утса пычӗҫ. Хыҫала юлнӑ Андрейпе Раис, утмалли сахал юлнӑ ҫулӑн вӑрӑмӑшне тӑсасшӑн пулса, васкамасӑр пычӗҫ. Малтан вӗсем пӗр-пӗрин ҫине пӑхкаласа, халь ҫеҫ курса тухнӑ кинокартинӑ ҫинчен калаҫкаласа утрӗҫ. Унтан Раис пӗр сисӗнкӗсӗрех Андрейӑн сулахай аллине чавсаран ҫаклатса илчӗ те, вара вӗсем, салтакри пек, урисене харӑссӑн ярса пусса утма пуҫларӗҫ.

— Тӗлӗнетӗп эпӗ сирӗнтен, арҫынсенчен. Салтакра та пулнӑ хӑвӑр, ҫапах хӗрпе аллаалӑн тытӑнса утма кирлине чухласа илейместӗр,— терӗ Раис, Андрей аллине чылаях хытӑ пӑчӑртаса.

— Айăплă, Рая. Кам мĕнлине пĕлместĕп, анчах хама илес пулсан çакна каламалла: хĕр умне лексен манран тавçăру кĕтме çук вара,— хуравларĕ качча, хăй сăмахĕнчен хăй вăтанса.

— Çапла пулĕ çав. Калăр, калăр, тата мĕн суйса парăр-ши? Калама ан вăтанăр. Эпĕ пурне те ĕненетĕп.

Каçхи тĕксĕмлĕхре Андрей Раисăн хура куç харшийĕ каçăрăлнине, çӳхе тăп-тăп тутисем çине чее кулă палли ӳкнине тĕсмĕртсе илчĕ.

## 4

ÇАВĂНТАН ВАРА Андрей Раис çинчен шухăшламан кун та иртмерĕ пулĕ. Хĕр çинчен ытла шухăшланипе аптăраса çитнĕ чухне Андрей: «Юратура Иван çулне пӳлес марччĕ-ха, юлташ умĕнче сысна пулас марччĕ»,— тесе хăйне хăй ахалех лăплантарма тăрăшнă. Раисăн пĕрре курсанах ĕмĕр манма çук сăн-пичĕпе кăмăлĕ Андрее ытларах та ытларах тыткăна илнĕ.

Шкулта вĕренӳ пуçлансан вăл уроксем пĕтиччен чип-чиперех çӳренĕ. Шкултан таврăнсанах ăна тĕрлĕ шухăшсем çаварса илнĕ, куç умне яланхи пек пĕр сăн — Раис сăнĕ тухса тăнă. Вара вăл, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр, урама чупса тухнă, урам кĕтессисенче кĕпĕрленсе тăракан çамрăксен пĕр ушкăнĕ патĕнчен теприн патне пыра-пыра кайнă, пӳрт умĕнчи каскасем çинче хăйсен вăрттăн ĕмĕт-шухăшĕсем çинчен шĕкĕлтетсе ларакан хĕрипраççемпе юнашар пыра-пыра ларнă.

Анчах лăпкăлăха ниçта та тупайман вăл. Ун пуçне пĕр шухăш ватнă: «Ăçта курас ăна? Эх, тепре те пулин курасчĕ!»— тесе, хĕрпе мĕнле те пулса курнăçмалли май шыранă вăл.

Раиса тĕл пуласси кĕтмен çĕртен килсе тухнă.

Вырсарникун тĕксĕм кăвак костюм тăхăннă Андрей ир-ирех Иван Матвеев патне пырса кĕчĕ.

— Ай-яй-яй, Ваня, епле намăс мар çак таранччен çывăрма?!— уçăлса кайнă чăлан алăкне юриех шаккарĕ вăл.— Кунсерен çакăн чухлĕ çывăрмаллăх ял кассан, урока хатĕрленме вăхăт ăçтан тупăнать сан?

— Э-э?.. Мĕн? Кам унта?— ним ăнланмасăр пуçне çĕклерĕ кравать çинче выртакан Иван. Вара, утиялне сирсе пăрахса, кравать хĕрне тăрса ларчĕ, куçне сылтăм ал тупанĕпе тем таран сăтăрса, юлташĕ çине тĕлĕнсе пăхрĕ:

— Эсĕ мĕн, хĕртсурт пек, çынсене ыйăхран вăратса çӳретĕн? Канмалли кун та тăраниччен çывăрма памастăн.

— Памастăп, Ваня, тем чухлĕ тилмĕрсен те çывăрттармастăп. Атя-ха, васкаса çăвăн та, вăшт-вашт тумлан, кравать çинче карăнса ан лар-ха.

Алăк патĕнче ларакан калуша тăхăнса, Иван труси вĕççĕнех тула тухса кайрĕ, крыльца çумне çакнă туталлă чӳлмеке шыв тултарса, «Ых, ых!»— текелесе, сивĕ шывпа питне çурĕ. Унтан çав шывпах ал шăлли пĕр вĕçне йĕпетсе, унпа ӳтне пилĕк таран сăтăрчĕ.

Çак вăхăтра кантăкран пăхса тăнă Андрей юлташне мухтас шутпа каларĕ:

— Ку аван, Ваня, ӳт-пĕве сивве тӳсме хăнăхтарас пулать. Пилĕк таран шывпах çăвăнсан татах лайăх пулатчĕ. Паян васкамалла, çавăнпа йĕпе ал шăллипе сăтăрни те çитет. Салтакра чухне эпир мĕнле çăваннине пĕлетĕн-и? Лагерьтен таврăниччененех, тĕрĕссипе, çĕр шăнма пуçлас таранах шыва кĕреттĕмĕр.

— Ай, эсĕ мĕнле тумланнă! Костюмпа, галстукпа. Картусне ма тăхăнмарăн тата?

— Халех картус ма тăхăнас? Сивĕ мар вĕт,— терĕ Андрей, ахаль те тирпейлĕ выртакан вăрăм хура çӳçне хыçалалла тураса.

— Мана мĕн тăхăнма канаш паратăн-ха апла?— ыйтрĕ Иван, юлташĕ çине чеен пăхса.

— Чи лайăх тума тăхăн.

— Мĕн сăлтавпа аплах тумланмалла-ха? Праçник мар пулĕ-çке паян?

— Праçник, праçник! Маншăн праçник. Салтакран килнĕренпе уйăх çитет пулин те пасара кайса курман-ха. Çакă йĕрке пулать-и?

— Ах, пасара! Ку — идейă. Ку шухăша эпĕ те тытсаччĕ, анчах сана калама манса кайнă,— терĕ юлташĕ, васкасах тумланса.

— Çырткаласа вăхăт ирттермĕпĕр, çимелли унта та тупăнĕ.

Çири костюмсене, пуринчен ытла çап-çутă пуличченех тасатнă тĕксĕм сарă туфлисене тусанпа варалас мар тесе, вĕсем Энĕш хĕрринче шыв юххине май кукăрăлса выртакан çеремлĕ симĕс сукмакпа утрĕç. Пасар ялне çитеспе, урапа çулĕ çине тухсан, туфлисене кăшт варалама тиврĕ-тиврех вĕсене. Çакна малтан пĕлнĕ пекех Андрей кĕсъене пĕчĕк щеткă чиксе тухнă. Ял хапхинчен кĕрсен ăна туртса кăларчĕ те вăл Ивана сĕнчĕ:

— На, тасат та, вара эпĕ те кăшт сăтăркаласа илĕп.

Пасарти икĕ рет ларса тухнă лавккасем хушшипе утса пынă чухне хăйсем çине хывнă вуншар куçа асăрхарĕç çамрăксем. Анчах

çакă пачах та тĕлĕнтермерĕ вĕсене. Ара, çав куççен, уйрăмах вĕсем хĕрсен пулсан, хӳхĕм тумланнă, хитре сăн-питлĕ икĕ каччăна курсан, вĕсем çине мĕншĕн ăмсанса пăхас мар-ха? Кун пекки эрнере пĕрре халăх хĕвĕшекен пасарта та час-час пулмасть вĕт-ха.

Хăйсене тĕрлĕ куççем сăнани каччăсене пĕртте вăтантармарĕ. Йăлтах урăхла, ку вĕсенче мухтавлă туйăм çуратрĕ, кăмăла çĕклентерсе ячĕ. Вĕсем вара йăл-йăл кулкаласа, пĕр-пĕрин çине куç айĕн пăхкаласа, сăмахъюмах перкелешсе утса пычĕç.

— Сывă-и, яш-кĕрĕмсем? — шăнкрав пек янăраса кайрĕ каччăсем хыçĕнче пĕр пит паллă сасă.

Çак сасă Андрей хăлхине кĕтмен çĕртен пырса кĕнипе вăл, шартах сиксе, тăп чарăнса тăчĕ, пĕтĕм пĕвĕпе чĕтресе илчĕ. Андрей, сасă илтĕннĕ енне çаврăнма хăяймасăр, самантлăха пĕр вырăнта хытса тăчĕ.

— Ха, вĕскĕнсем! Капăр тумланнă та хăйсем, пирĕн пеккисем çине çавăрăнса та пăхасшăн мар. Аван мар аплах мухтанма, аван мар. Паллакан çынсене те пулин манас марччĕ хăть.

Пĕр хут янранă сасса Андрей халь çеç илтнĕ тейĕн: сасă илтĕннĕ енне çаврăнсан, унта вăл малтанах нимĕн те курмарĕ. Куçне пĕрре хупса, тепре уçса илсе, умра чăнах та Раис тăнине курсан, именнипе пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайнине хăй те туйрĕ Андрей. «Тĕнчере çав тери хитре çын та пулать-ши вара?!» — чăнласах тĕлĕнчĕ вăл хăй ăшĕнче, Раисăн хура куç харши айĕнче йăлтăртатакан кăвак куçлă, кăшт пуклаках сăмсаллă, çӳхе туталлă тĕксĕмрех сăнпуçĕнчен имене те ытараймасăр пăхса. «Пĕвĕ, пĕвĕ тата епле яштака! Пулаççĕ те пулĕ çав ун пек хитре çынсем. Станцăра курнă чухне эпĕ унăн сăнне тĕттĕмре лайăххăн тĕсмĕртсе илеймен».

Кăштах хăюлăх килсе кĕрсен, каччă хĕре алă тăсса пачĕ:

— Сывлăх сунатăп.

Ыраттарас мар тесе, вăл Раисăн çемçе те ăшă аллине кăшт çеç чăмăртасшăнччĕ. Анчах хăй шутланă пек пулмарĕ: кĕтмен çĕртенех хĕр аллине вăл арçынла хыттăн чăмăртарĕ. Унтан Раис юлташне те ал парса, хăй ятне пĕлтерчĕ.

— Валя, — терĕ хĕр, питне именчĕклĕн пытарса.

«Юлташне те хăй пеккинех тупнă Раис. Сăн-пуçĕпе пĕртте хăйĕнчен кая мар» — асăрхамасăр иртмерĕ каччă куçĕ.

— Ну, ĕççем епле, учитель? — ыйтрĕ Раис, темшĕн Иван çине мар, Андрей çине уйрăмах ăшшăн та вичкĕн пăхса.

— Ĕççем-и? Ĕççем мĕнли халĕ мар-ха, хĕллехи каникул умĕн палăрĕ. Халĕ пĕр эрне çеç ĕçлерĕмĕр те, тути-масине чухласа илмелĕх те пулмарĕ, — хуравларĕ Андрей.

Çак самантра хăй юлташĕ Раис çине çисе ярасла, ахаль те хĕрлĕ питне татах хĕретсе, çамкине хут купăс пек пĕркелентерсе пăхнине асăрхамарĕ вăл.

Раис çакна сисрĕ: куç харшине сиктерсе илчĕ, тап-таса ӳтлĕ вăрăм çамкине пĕркелентерчĕ, Иван çине: «Эсĕ маншăн кам пулатăн вара? Аплах çиленме сан арăму мар вĕт-ха эпĕ», — тенĕ пек пăхрĕ те, унтан каллех Андрей еннелле çаврăнса, çаврашка пит çăмартисене путăклантарса, каларĕ:

— Ку тĕрĕс: ĕççем мĕнле пыни хĕлле палăрĕ. Анчах эпĕ ун пирки мар, ĕç килĕшнипе-килĕшменни çинчен ыйтасшăнччĕ. Хам шухăша уçăмлăнах пĕлтерейменрĕм пулас.

«Пит çăмартисем путăкланаççĕ. Ваттисем калашле, ку хĕр каччă тухсан упăшкипе килĕшӳллĕ пурăнать ĕнтĕ», — палăртмасăр иртмерĕ каччă.

— Ĕç мĕншĕн ан килĕштĕр-ха вăл? Хăнăхнă ĕç яланах килĕшет пулĕ, — калаçăва хутшăнмасăр тăма пултараймарĕ Иван.

— Ну, кăна эсир тĕплĕн шухăшламасăр каларăр пулас, Матвеев юлташ, — çинçерех сассине янратса каларĕ хальччен пачах сăмах хушмасăр тăнă Валя. — Ман шутпа хăнăхнă ĕç мар, юратнă ĕç ялан килĕшет.

Хĕрĕн пичĕ тăруках хĕрелсе кайрĕ, хăй каланин тĕрĕслĕхне пĕлесшĕн пулнă пек, вăл пĕрре Иван çине, тепре Андрей çине куç айĕн пăха-пăха илчĕ, унтан, пуçне Раис енне пăрса, часах шупкалма ĕлкĕрнĕ питне пĕчĕк аллипе сăлтавсăрах ик-виçĕ хут сăтăрчĕ.

— Эсир философла калаçма та пултаратăр-çке, Валя, — терĕ Андрей именнĕ хĕр çине тимлĕн пăхса. — Хирĕçлеме сăмах та тупас çук. Юратнă ĕç чăнах та ялан килĕшет. Вăл интереслĕ, ăна пысăк кăмăл-туйăмпа тăватăн.

— А-ха, лекрĕн-и, Ваня? Ку ыйтура эпĕ сан майлă пуласса ан кĕт. Сăмахна персе ятăн пулсан, уншăн хăвна хăв ӳпкеле.

Раис, пурин çине те пăхса, йăл-йăл кулчĕ, кăвак куçне ялкăштарса илчĕ, çӳхе тутине кăшт чалăштарса, куçне илемлĕн хĕсрĕ.

«Тĕксĕм сăн-пите кăвак куç мĕнле вырнаçма пултарнă-ха? Янкăр тӳпе пек!» — каллех тĕлĕнчĕ Андрей, Раис çине ытараймасăр пăхса.

Хĕр çакна сисрĕ пулмалла. Вăл пуçне çийĕнчех каччă çине çавăрчĕ те пĕр именсе тăмасăр каларĕ:

— Каплах пăхсан эсир, Чистов юлташ, куç ӳкерме те пултаратăр вĕт. Авă, ман юл-

таша епле хĕретсе ятăр. Кăштах та пулса шеллĕр ĕнтĕ пире.

«Куç ӳкерĕн сана,— шухăшларĕ Андрей, асăрхаттарнине шута илнĕ пек, пуçне Иван еннелле пăрса.— Хăй мĕн хак тăнине пĕлет вĕт, хăямат. Хăть мĕн кала ăна, хăть мĕнле пăх ун çине,— нăх та тумасть. Хĕрелмест те вĕт...»

Ун шухăшне Раисăн янравлă сасси пӳлчĕ.

— Мĕн кунта, халăх хушшинче хĕсĕнсе тăратпăр-ха эпир? Эсир, каччăсем пулса, пире пĕр-пĕр йĕркеллĕрех вырăна чĕнесчĕ хăть. Çавна та тавçăрса илейместĕн-çке эсĕ, Иван!

Пуçне вăштах Иван енне çавăрса, хĕр ун çине çиленсе мар, йĕкĕлтенĕ пек, тутине чалăштарса йăл кулчĕ.

Лешĕ, хăйне ӳпкелесе каланă сăмаха пачах кĕтменскер, хĕрелсе кайрĕ, хирĕç сăмах тупайманнипе аптăраса, пуçне çĕрелле чикрĕ, çутă туфли тăхăннă урине сиктеркелесе илчĕ.

Çакна асăрханă хĕр, каччă çинчен куç илмесĕр, тутисене каллех йăл-йăл култарса чалăштарчĕ, хăй мĕн шутланине пĕтĕмпех пĕлтересшĕн пулса, сăмахне малалла тăсрĕ:

— Ну, капла нумайччен кĕпĕрленсе тăрăпăр-и эпир? Е кăштах уçăрах вырăна тухса канăпăр? Чăннине калас пулсан, ура çинче кун чухлĕ вăхăт тăнипе ыванса та çитрĕм эпĕ.

— Ман пĕр идейă пур,— хăйне килсе кĕнĕ шухăша пĕлтерме васкарĕ Андрей.— Сире килĕшĕ-и вăл, çук-и, анчах пире, Ваньăпа иксĕмĕре, килĕшмелле.

Вăл, хĕр вăтантарнипе çаплах ăна кĕреймен юлташĕ çине шеллĕн пăхса, хăй сăмахне малалла тăсрĕ:

— Эпир килтен ирхи апат çимесĕрех тухнăччĕ. Шутлатăп та эпĕ, столовăйне кĕрсе кăшт çырткаласан пит лайăх пулмалла.

— Эсир ытла тавçăруллă этем-çке, Чистов юлташ. Сирĕн сĕнӳ мана калама çук килĕшет. Сана мĕнле, Валя? Эсĕ те хирĕç мар пулĕ?— юлташĕ енне çаврăнса ыйтрĕ Раис.

— Çынсенчен ма юлас,— терĕ Валя, паçăрхи пекех вăтанса.

— Апла пулсан, вĕçтертĕмĕр. Эсĕ мĕн, Ваня, ку сĕнӳпе килĕшместĕн-им? Мĕн пуçна усса тăратăн?— юлташăн янахне аллипе тытсах çĕклерĕ Андрей.

— Эпĕ мĕн, эпĕ килĕшетĕп-çке. С удовольствием,— тем хыпаланса ӳкрĕ лешĕ.

— Апла кайрăмăр,— пĕр харăс янăрарĕ Андрейпе Раис сасси.

Столовăйĕнче хăйсене апат пама хушсан, Андрей, буфетра мĕн пуррине кайса пăхма тесе, ура çине тăчĕ.

— Эсир ăçта каятăр?— Раис ăна хăй шутламан çĕртех аллинчен ярса тытрĕ.

Хăй хĕрĕн çемçе аллине тытнине туйсан, каччăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ чĕтресе илчĕ. Вăл, ыттисем сисмен хушăра ун аллине хыттăн, ыратмалла, пӳрнисем пĕлми пуличчен чăмăртаса, Раис çине куç айĕн пăхса илчĕ.

«Çук, ыратмасть, татах хытă чăмăртасан та тӳсетĕп»,— тенĕ пек пăхса, хĕр унтан тепĕр хут ыйтрĕ:

— Ăçта каятăр?

— Буфета. Тĕл пулăва палăртмалăх хĕрлĕ эрехпе сăра ĕçер хуть.

Хĕрсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç, хăйсем çак шухăшпа та килĕшнине палăртнă пек, ним те шарламарĕç. Иван та юлташĕ çине пăхрĕ, «Эпĕ килĕшетĕп»— тенине пĕлтересшĕн пулса, пуçне сулчĕ.

Хĕрлĕ эрех ĕçнĕ хыççăн Андрей пĕтĕм ӳтпĕв вĕриленсе кайнине туйрĕ. Эрехне Иванпа иккĕшĕн çеç ĕçме тивнипе ӳсĕрлес патнех çитрĕç вĕсем. Хĕрсене пĕрер черкке ĕçни те питсене хĕретрĕ.

— Халĕ ăçта çул тытăпăр-ха эпир?— ыйтрĕ Раис, пăчă пӳлĕмрен тухсан уçă сывлăша сăхăмлăн çатса.

— Манăн ăна-кăна туянас пулать, магазинсем тăрăх çӳретпĕр пуль?— хуравларĕ Валя.

— Манăн та,— терĕ Иван, Раис çине тилмĕрсе пăхса.

— Манăн ним илмелли те çук. Эпĕ пасарта тахçантанпа пулман та, курма çеç килтĕм. Сирĕн лавккасем тăрăх çӳремелле пулсан, эпĕ те пĕччен юлмастăп, — пĕлтерчĕ Андрей хăй кăмăлне.

— Акă тата! Хама ним те кирлĕ мар пулсан, мĕншĕн халăх хушшинче пăчăхса çӳресха ман? Ахаль те шăрăх. Атьăр эпир, Андрей Петрович, уçăлма çырма хĕрне кайса килер. Вальăпа Ивана хапха патĕнче кĕтсе илĕпĕр.

Кун пек сĕнĕве кĕтмен Андрей малтанах ним калама аптăраса тăчĕ. Унтан, хăюлăх çитерсе, хăй шухăшне пĕлтерсе каларĕ:

— Сирĕн кăмăл пулсан, Раис, эпĕ хирĕç мар. Анчах юлташсенчен уйрăлма аван мар-çке.

— Мĕн аван марри пур унта. Пирĕнсĕр аташса каймĕç.

Юлташĕпе Валя çине иккĕленӳллĕн пăхса тăракан Андрее Раис сăмах уçма та памарĕ: аллинчен ярса тытса, столовăй умĕнчен вăйпах туртса уттарчĕ.

5

— СТАНЦĂРИ КАÇА астăватăн-и, Раис?— ыйтрĕ Андрей, çырма хĕрринчи симĕс курăк çине сарнă хаçат çине хĕрпе юнашар ларса.

— Астăватăп-çке. Астумасăр, ун пеккине манма çук ăна,— хуравларĕ Раис, çырантан усăнтарнă сарă пурçăн чăлхаллă, çўлĕ кĕлеллĕ хура туфли тăхăннă урине сулласа. Вăл пăчăхпа хĕрелсе татах хитреленнĕ питне каччă еннелле çавăрчĕ, ун çине хăюсăррăн пăхса илчĕ, тутисене илемлĕн саркаласа, пит çăмартинчи путăксене палăртса, йăл кулчĕ:

— Ун пеккине манмаççĕ, Андрюша...

Хĕрпе юнашар ларакан Андрей, çак сăмахсене илтсен, ун çумне сисĕнкĕсĕр тĕршĕнчĕ, унăн аллине ярса тытрĕ.

Раис пĕр сăмах та шарламарĕ, хăйпе сĕвеленсех ларнă каччă çумĕнчен сикмерĕ, хăй аллине туртса илме те пикенмерĕ. Йăлтах урăхла, вăл Андрей çумне татах тĕршĕнчĕ, унăн чĕре таппине хăй кăкринче туйса, хăйĕн сулахай аллине ярса тытнă каччă аллине сылтăм алăпа шăла-шăла, ун çине ачашшăн пăха-пăха илчĕ.

— Эпĕ те манмарăм. Эпĕ çав ытарайми каç çинчен, санпа мĕнле те пулса курнăçасси çинчен кунĕн-çĕрĕн шутласа пурăнтăм. Чăннине калас пулсан, санпа тĕл пулас куна эпĕ ыйăха çухатсах кĕтрĕм.

Андрей хăйне пирвайхи хут «санпа» тенине илтсен, Раисăн кăмăлĕ çĕкленсе кайрĕ. «Чăннине ма пытарас, ăшра мĕн çуннине халех, çак самантрах пĕлтерес»,— тесе, вăл пуçне çĕклерĕ, каччă çине каллех куç айĕн, ачашшăн та именерех пăхса:

— Эпĕ те, Андрюша, çавăн пекех, эпĕ те ыйăха çухатрăм. Эсĕ пĕрре тĕл пулсах ман чуна тыткăна илтĕн. Халĕ унтан епле хăтăлмаллине пĕлместĕп,— терĕ.

— Пĕлме те, хăтăлма та кирлĕ мар, Раис. Эпир пĕр-пĕрне пĕрре курсах тупрăмăр пулсан, ваттисем калашле, ку «турă çырни» пулчĕ пулĕ.

— «Турă çырнă-и», мĕн-и,— кăна пĕлместĕп. Анчах хам чун-чĕрене шанатăп эпĕ, вăл улталамасть мана.

— Чăнах çапла-и вара, Раис? Иван мĕн калĕ?— те чăнласах, те шўтлесе каларĕ Андрей.

Хĕр вырăнтан та тапранмарĕ, ун пĕвĕ çеç чĕтресе илчĕ, вăл, çăл куçĕ пек тарăн куçне пысăклатса, каччă çине тĕлĕнсе пăхрĕ, анчах Андрей сăн-пичĕ кулăпа çиçсе тăнине курсан, лăпкăн каларĕ:

— Иван мĕн вăл: тĕл пулнă та куçран çухалнă. Аса та илместĕн ун çинчен. Акă, халĕ Вальăпа иккĕшĕ лавккасем тăрăх çўреççĕ пулĕ-ха. Тин çеç куртăмăр-ха ăна. Çапах та ун сăн-пичĕ мĕнлине ниепле те тĕсмĕртсе илейместĕп эпĕ. Çук, Андрюша, ман туйăма Иван пек тĕссĕр çынсем тивĕçтерме пултараймаççĕ.

«Тĕссĕр, сăнсăр çын». Пирĕн пеккисене авă мĕнле хаклаççĕ имĕш хĕрсем!»

Раис сăмахне илтсен кăшт тĕлĕнчĕ çеç мар, хăй юлташне хурласа тăкнишĕн кўренсе те илчĕ Андрей.

— Ун пек термина илтменччĕ çак таранччен. «Тĕссĕр çын». Чăнах мĕнле çын-ха вăл? Унашкал çын пур-ши вара çут тĕнчере? Тĕнчере хам нумаях пурăнма ĕлкĕреймен те, ун пек çын пуррине çавăнпа пĕлейместĕп пулĕ-ха.

— Акă тата! Иван пирки хам шухăша пĕлтерме хăй ыйтрĕ, халĕ çиленет тата. Çилен, ара. Эсĕ çиленни мана ним чухлĕ те пырса тивмест. Эпĕ хам шухăша çеç пĕлтертĕм. Чăн шухăша пытарса тăма, йăпăлтатса чееленме хăнăхман эпĕ,— терĕ хĕр, ура çине яштах сиксе тăрса.

— Ун пекех çиленетĕн-и вара?— Андрей те ура çине тăчĕ, хĕре аллинчен ярса тытрĕ.

Раис ку хутра та туртăнкаламарĕ, алран вĕçерĕнме пикенсе те пăхмарĕ. Вăл лăпкăн çеç каларĕ:

— Тен, сăмаххи тĕрĕсех пулмарĕ пулĕ. Вырăссем ун пек çынна «бесцветный» теççĕ. Çав сăмаха пĕлтерсе каласшăнччĕ эпĕ. Çитменнине тата эпĕ хам шухăша калатăп вĕт. Маншăн пулсан Иван чăнах та «тĕссĕр çын».

— Иван çинчен, урăххисем çинчен калаçни пире ним усă та памасть. Атя-ха, хамăра çывăх сăмахсене аса илер.

— Хамăра çывăх сăмахсем?.. Мĕнле сăмахсем-ши вĕсем?

Раис каччăна аллипе туртрĕ:

— Атя, кайрăмăр. Атту пире кĕтсе ывăнса та çитрĕç пулĕ.

Вара хĕрпе каччă ретĕн-ретĕн лартса тухнă лавккасем еннелле васкамасăр, алла-алăн тытăнса утрĕç.

Пĕр вăхăт ним чĕнмесĕр пычĕç вĕсем. Унтан, лавккасен речĕ патне çитеспе, Андрее сасартăк шухăш пырса кĕчĕ: «Акă, халĕ вĕсем патне çитетпĕр те, Раиспа Валя киле кайĕç. Пурăн вара асапланса. Татах хăçан тĕл пулăпăр-ха? Çук, капла юрамасть. Халех, çак самантрах пĕлтерес пулать хам шухăша».

Вăл чарăнса тăчĕ, хĕр çине шăтарасла пăхса илчĕ.

— Капла вăтантарма та пултаратăн вĕт эсĕ мана,— терĕ хĕр, утма чарăнса.

«Калас-ши? Калас мар-ши? Каламаллине халех калас. Килĕшмесен, килĕшмест вара. Мĕн пулать, мĕн килет»,— аллине сулчĕ Андрей.

— Вăтантарăп-и сана, çук-и, анчах пĕр сă-

мах каламаллах пулать манăн, Раис,— терĕ Андрей, хăй сассинчен хăй хăранă пек шăппăн.— Капла уйрăмшарăн пурăнса ĕç тухас çук пирĕн. Паянтанах ĕмĕрлĕхе пĕрлешмелле...

Раис ку хутра чăнах та хĕрелнĕ Андрей питĕнчен тĕлĕнерех пăхрĕ, унтан вара ахăлтатсах кулса ячĕ:

— Ну, Андрюша, çавнашкал пысăк ыйтăва эсĕ çавăн пек айванла татса пама шутлать, тесе никам та калас çук. Сан шутпа мĕнле-ха апла: çакăнтан, пасартанах пĕрле каймалла-и? Атте-анне пур вĕт-ха манăн. Вĕсен сăмахне те итлесе пăхас пулать.

— Аçу-аннÿ-и? Хăв килĕшсен вĕсем мĕншĕн хирĕç пулччăр. Атя, халех каяр сирĕн яла. Калаçса татăлар вĕсемпе.

— Айтуру, халех-и? Кирлĕ мара ан калаç-ха эсĕ, Андрюша,— хирĕçлеме пăхрĕ Раис.— Юлташсене пăрахса кайма аван марçке.

— Э, вĕсемшĕн çеç пулсан, ĕç тăрас çук!— хĕпĕртесех кайрĕ Андрей.— Тупатпăр та вĕсене, хамăр шухăша тÿрех пĕлтеретпĕр.

— Ан ухмахлан, Андрюша. Ун пеккине кам тÿрех калатăр. Вĕсене шыраса тупатпăр та, эпĕ Вальăна хăлхаран пĕлтерĕп.

Çапла калаçса татăлчĕç те вĕсем, Иванпа Вальăна тупсанах вĕсенчен тепĕр хут уйăрăлса, Туçаналла çул тытрĕç.

6

КУН ХЫÇÇĂН КУН иртет. Çамрăксем пĕрлешнĕренпе кĕр те, хĕл те иртсе кайрĕ. Тулли пурнăçпа савăнса, киленсе пурăнакан Андрейпе Раис йĕпе-сапаллă хăмăр кĕр кунĕсене те, пит-куçа тăм илтермелле чĕпĕтекен хĕл сиввисене те асăрхамарĕç.

Килте те, шкулта та ялан пĕрле вĕсем: пĕрле ир тăраççĕ, пĕрле пуçтарăнса, шкула каяççĕ, килнĕ чухне çеç Андрей кăшт каярах юлса таврăнать.

Раис çиленмест уншăн. Ку вĕсен пурнăçне пĕртте кансĕрлемест, илемлетет кăна.

Тин çеç çартан килнĕ Андрее пысăк ĕç пачĕç: осоавиахим ячейкине ертсе пыма уйăрса лартрĕç, ялти çамрăксене çар ĕçне вĕрентме хушрĕç.

Андрей кăмăлласах килĕшрĕ ку ĕçпе. Ара, çамрăк вĕт-ха вăл: унăн вăй-хал нумай. «Сывлăшра ĕнĕк шăрши килме пуçларĕ. Апла пулсан çамрăксене çар ĕçне вĕрентме вăя шеллемелле мар. Вăрçă та çитсе килме пултарать»,— шухăшлать вăл.

Пĕрлешнĕренпе пĕр-пĕрне нихçан сив сăмах каласа курманччĕ Андрейпе Раис. Анчах пĕрреччен, киле яланхи пек кая юлса таврăнсан, Раис тÿссе тăраймарĕ, упăшкине кăшт çиленерех каларĕ:

— Андрюша, халăх ĕçĕпе тăнран тухрăн ĕнтĕ эсĕ. Çемьене те курми пултăн. Çар ĕçĕ те, çар ĕçĕ. Курмастăн-им: пирĕн кĕçех ача пулать вĕт-ха!

Мĕн каласа хирĕçлеме пултарнă-ха Андрей арăмне? Раис — çамрăк хĕрарăм, унăн та хăйĕн интересĕ пур. Анчах Андрее те халăх ĕçĕнчен пăрăнма аван мар вĕт-ха. Уйрăмах халĕ, тĕнче çинче вăрçă çулăмĕ халь-халь явăнма пуçлас умĕн, кирлĕ ун ĕçĕ.

— Рая, эсĕ ан çилен мана. Сана валли чăнах та вăхăт сахал уйăратăп эпĕ. Анчах ман ĕç халăха питех кирлине хăвах куратăн-çке.

Раис упăшкине çиленмест, ÿпкелешме те сăмах тупаймасть. Вăл, йывăрскер, ăна ыталаса илет, питрен, сăмсаран, çамкаран чуп тăвать.

Вăхăт нумай та иртмест, Раис хĕр çуратса парать.

— Юлташа хисеп туса «Валя» ят парар мар-и?— ыйтать Раис, упăшки çине ăшшăн пăхса, больницă алăкĕнчен тухнă чух ăна шурă простыньпе, çÿхе утиялпа чĕркенĕ чăмакка тыттарса.

— Ма парас мар, «Валя»— пит аван ят,— тет Андрей, ытла хĕпĕртенипе чĕри хальхаль сиксе тухас пек тапнине туйса.— Аса илнĕ чух ыйтам-ха: Валя ăçта çухалчĕ вара, Рая? Хальччен кĕркелесе тухатчĕ, халĕ куçа та курăнмасть.

— Валя пирки эпĕ сана ку таранччен ним те каламан-и вара? Валя пысăк çын пулать. Институтра вĕренет вăл,— юлташне мухтаса илет ача çуратнă хыççăн пушшех чиперленсе кайнă Раис, хăйĕн ялан илемлĕ йăл куллипе пĕтĕм сăн-питне çуталтарса ярса.

— Маттур! Ай, маттур та Валя!

Больницă алăкĕ патĕнчен хăпсанах Андрей Раиса пушă аллипе ыталать, ăна вĕрипе çурăлса кушăрканă тутинчен чуп тăвать.

— Кай, намăса та пĕлместĕн. Йĕри-тавра халăх. Киле çитиччен те тÿсейместĕн-им?— упăшкине кăшт хăтăрнă пек туса, ун аллине вăйсăррăн сирет Раис.

Çакăнтан ырă пурнăçа ăçта тупăн-ха тĕнчере: вĕсен халĕ хăйсен çемйи пур!

7

ПĔРРЕЧЧЕН, учительсен çуллахи канашлăвне кайсан, Андрей Петрович хăйсен полкĕнчи аслă политрука — Михаил Васильевич Баранова курчĕ.

— Отпуска килтӗм-ха,— пӗлтерчӗ лешӗ.— Юратнӑ ӗҫ тунсӑхлаттарать. Ҫавӑнпа сирӗн канашлӑва пӗр сехет те пулса кӗрсе ларас килчӗ.

Баранов учитель пулнине пӗлет Андрей. Ку ҫынна вӑл пит лайӑх пӗлет. Ара, дивизири вӑл ертсе пыракан чӑваш хорӗн занятийӗсене сахал ҫӳренӗ-и-ха Андрей!

«Ах, ҫар тумӗ епле тӑп-тӑп ларать ун ҫинче. Яштака хӑй, сӑн-питпе те хитре»,— кӗвӗҫӳллӗ шухӑш вӗҫсе иртет Андрей пуҫӗнче.

Вӗсем столовӑя кӗчӗҫ, апатланма иккӗшӗ пӗр сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗҫ.

— Сана хӗрли кирлӗ-и е шурри ытларах килӗшет?— ыйтрӗ Баранов, меню пӑхма тытӑнса.

— Шурри пулсан, шурри пултӑр. Ҫӗр грамах аптӑратса ҫитермӗ-ха. Пӗрер кружкӑ сӑра илер тата,— килӗшсе хуравларӗ Андрей.

— Да, киле ахалех таврӑнтӑн эсӗ, Чистов,— терӗ Баранов, апат хыҫҫӑн «Пушки» пируса техӗмлӗн ӗмсе.— Гитлер авӑ мӗн хӑтланать: Австрине ярса илчӗ вӗт. Черетре — Чехословаки, Польша. Англипе Франци «невмешательство» политикине ҫаплах тытса пырсан, Гитлер салтакӗн аттисем кӗҫех пӗтӗм Европӑна таптама пуҫлӗҫ.

— Тӗрӗс калатӑр: сывлӑш хӗрсех пырать. Кун пекех пулсан ӗҫ ытла шала кайма пултарать.

— Кун пекех пулсан, пирӗн акӑ кӗҫех Европӑри ҫулсем тӑрӑх ҫӳремелле пулать.

— Ун пек самант ҫитсен, эпӗ те килте юлас ҫук,— терӗ Андрей, вӑрҫӑ тухас-мӗн пулсан, хӑй паян тесен, паян пӑшал тытма хатӗррине пӗлтересшӗн пулса.

— Ҫапли ҫапла та. Анчах вӑрҫӑ пулас пулсан, ҫапӑҫӑва хӑвӑн полкра, хӑв паллакан халӑхпа пӗрле кӗни аванрах пулӗ. Рапорт парса пӑх-ха эсӗ, тен, хамӑр полках илӗҫ.

— Ҫук, ун пек тума май ҫук манӑн, Михаил Васильевич. Арӑмпа ачана пӑрахса хӑварсах тепӗр хут ҫара пыма сӑлтавӗ те ҫук халлӗхе. Эпӗ кунта та ҫара вӑйлатас енӗпе сахал ӗҫлеместӗп: осоавиахимра ҫамрӑксене ҫар ӗҫне вӗрентетӗп.

— Ну, хӑвӑн ирӗк. Кайран ӳкӗнмелле ан пултӑр тесе ҫеҫ пӗлтертӗм хам шухӑша,— терӗ Баранов, сывпуллашнӑ май ал парса.

Баранов калани пӗтӗмпех чӑн пулса пынине 1938 ҫулхи кӗрхи кунсем кӑтартса пачӗҫ. Ун чухне Англипе Франци империалисчӗсем хӗтӗртесе пыракан Гитлер Австрипе ҫеҫ ҫырлахмарӗ: Мюнхенри кавар хыҫҫӑн вӑл Чехословакин пӗр пайне ярса илчӗ.

8

— АНДРЮША, сана тем сӑлтавпа ял Советне чӗнеҫҫӗ,— тесе, Раис упӑшкине тӗкетӗкех вӑратрӗ.

— Ҫӗрле мӗн ӗҫ тумалла-ши тата? Темле кампани иртерме чӗнеҫҫӗ пулӗ-ха.

Андрей куҫне сӑтӑра-сӑтӑра уҫрӗ, тулта сулхӑн та пылчӑк пулнине аса илсе, урине ӑшӑ чӑлхапа сӑран атӑ тӑхӑнчӗ. Питне ҫукаласа, кӑшт апат ҫыртсан, фуфайкӑ ҫинчен плащ тӑхӑнса, арӑмӗ патне пырса тӑчӗ.

Яланхи йӑлапа арӑмне хытӑ ыталаса чуптурӗ вӑл, унтан тутисемпе чаплаттарса ҫывӑракан хӗрӗ ҫине чылайччен пӑхса тӑчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн тин, пӳрт ӑшне йӗри-тавра пӑхса ҫавӑрӑнса, алӑка майӗпен хупса, тула тухрӗ.

Ял Советне кӗрсен унта ялти активистсем мар, хӑй пачах палламан ют ҫынсем ларнине курсан Андрей тӗлӗнчӗ. Ку наган ҫакнӑ ҫар ҫыннисем мӗншӗн алӑк умӗнче тӑраҫҫӗха тата? Пӳрте кӗртеҫҫӗ вӗсем ҫынсене, анчах кунтан никама та кӑлармаҫҫӗ.

Андрей пырса кӗрсен председатель пӳлӗмӗнчен шинельне сарӑ пиҫиххипе хӗреслетсе ҫыхнӑ, пистолет кобурӗпе сӑран сумкӑ ҫакса янӑ, хӗрлӗ картус тӑхӑннӑ темле начальник тухрӗ.

— Пурте пухӑнчӗҫ. Урама илсе тухӑр-ха вӗсене. Тул ҫутӑличчен станцине ҫитмелле пирӗн,— хушрӗ вӑл алӑк патӗнчи ҫар ҫыннисене.

Лешсем кобурсене вӗҫертсе ячӗҫ, ялсовета пухӑннӑ пилӗк-ултӑ ҫынна ҫавӑрса илсе, тула хӑвалама пуҫларӗҫ.

— Хӑвӑртрах, хӑвӑртрах! Мӗн сӗнксе ларатӑр! Астӑвӑр: тарма хӑтланакан пулсан, ӑна пульӑ хӑваласа ҫитӗ,— асӑрхаттарчӗ начальник, кобурне аллипе ҫатлаттарса илсе.

Тула тухсан кунта пухнӑ ҫынсене икӗ лав ҫине лартрӗҫ, лашисене хӑваласа, станци еннелле чуптарчӗҫ.

— Эсир мӗн те пулса ӑнланатӑр-и?— ыйтрӗ Андрей хӑйпе юнашар ларса пыракан пӗр аллӑсене ҫитнӗ интеллигентлӑ ҫынтан.

Вӑл ял Советӗнче чухнех ҫак ҫынна таҫта курнӑ пек астӑватчӗ, халӗ, ӑна учительсен районти канашлӑвӗнче курнине аса илсе, «ку пӗр-пӗр ҫывӑх ялти учитель пулӗ-ха»,— тесе шутларӗ.

— Ӑнланмасӑр. Ӑнланманни мӗн пур-ха кунта? Паянтан пуҫласа «халӑх тӑшманӗ» ятне илтӗмӗр ӗнтӗ,— хуравларӗ интеллигентлӑ ҫын, хӑй сассинчен хӑй хӑранӑ пек шӑппӑн.

— Пулма пултараймасть! Апла пулсан

пире мĕншĕн киле пырса тытмарĕç-ха? Ял Советне хамăрах пытăмăр.

— Чее вĕсем. Çар çынни килсем тăрăх çӳретĕр-ха, вара тытма пынă кашни çын пахчаналла тапса сикĕ. Капла мĕн? Капла дежурнăй пырса чĕнет. Активистсене сахал пуçтараççĕ-и: финплан тултармалла, колхозниксене патшалăха аш-какай, сĕт, çĕрулми партармалла. Ун пек ĕçе яланах ирхине, колхозниксем килте чухне тăваççĕ вĕт-ха. Вăт çапла пухса çӳреççĕ вĕсем хăйсене кирлисене.

— Çук, кăна ниепле те ĕненме çук. Мĕнле «халăх тăшманĕ»? Çӳç-пуç вирле тăрса каять. Мĕн айăп тунă-ха эпĕ? Çук, çук. Станцине çитсен пĕтĕмпех палăрĕ акă, вара пире киле ярĕç,— ку хăрушă ĕçпе килĕшме, ун пек пулассине ĕненме пултараймасăр хирĕçлерĕ Андрей юнашар çынна.

— Эпĕ те çаплах шутлатăп. Анчах шиклĕх майĕпенех тыткăна илет. Пĕлтĕр сахал çынна илсе кайрĕç-и? Вĕсенчен пĕри те киле таврăнакан пулмарĕ.

Пĕлтĕр ялта мĕн-мĕн пулнине пĕлмест Андрей, анчах хăй çарта чухне унта тĕлĕнтермелле ĕçсем пулса иртнине лайăх астăвать вăл. Пĕр çул хушшинче мĕн чухлĕ командир, миçе политработник пĕтмерĕç пулĕ! Паян чип-чипер заняти ирттерет пĕрпĕр командир, ыран — çук вăл. «Халăх тăшманĕ, çĕрле тытса кайнă», теççĕ.

Чăнах, хăйпе те çапла пулса иртсен мĕн пулĕ?! Раиспа Валя, ашшĕ-амăшĕ епле пурăнĕç? Андрей «айăпĕ» вĕсене те пырса тивме пултарать вĕт.

«Çук,— шутлать вăл, хăйне пусăрăнтарма капланса килнĕ усал шухăшсене сирсе яма тăрăшса.— Манра ниепле айăп та çукки такама та паллă. Станцине çитетпĕр те акă, пурте палăрĕ. Вара эпĕ киле таврăнăп».

9

ДОМЗАКРА пĕр талăк ларсан, унта хупнисене пĕрерĕн-пĕрерĕн таçта илсе кайма пуçларĕç.

Илсе кайнисенчен кунта пĕри те каялла килменнинчен тĕлĕнмерĕ Андрей: «Каларăм вĕт эпĕ. Авă, айăп çуккине пĕлеççĕ те, тӳрех кăларса яраççĕ»,— шутларĕ вăл, кунтан ирĕке тухас вăхăт халь-халь çитессе çирĕп шанса.

Кăнтăрла тĕлне хăйпе юнашар ларса килнĕ çынна чĕнчĕç.

— Ну, манăн та черет çитрĕ. Кунтан тухас-мĕн пулсан, ман çемьене пĕлтерĕр тархасшăн: эпĕ Туçари шкул завучĕ — Прохоров. Сана тӳрех палласа илтĕм эпĕ: эсĕ Раис упăшки вĕт-ха.

— А-а, Прохоров! Калатăп: питĕ паллакан çын тесе. Çемьене мĕн калас пулать вара? Эсир хăвăр та киле каятăр пулĕ? Кунта ларакансем пĕри те каялла килмерĕç-çке.

— Каялла килмеççĕ вĕсем, кунта пулакансем. Вĕсене валли урăх вырăн, пĕр кĕрсен каялла тухма май çук вырăн тупаççĕ. Ну, сывă пулăр-ха апла,— терĕ Прохоров, хăйĕн шăмăллă та сивĕ аллине Андрее тыттарса.

Андрей унăн ик-виçĕ талăк хушшинче шăртланма ĕлкĕрнĕ шĕвĕр янахлă, шывлăрах куçлă питĕнчен пăхрĕ те, çав питре хурлăхлă паллă пуррине тĕсмĕртсе, ăна шеллесе илчĕ. Çак туйăм ăна хăйне те сивĕ тытнă чухнехи пек çӳсентерчĕ.

Вăл гимнастеркă кĕсйине чиксе тухнă пысăк «кировски сехете» кăларса пăхрĕ. Сехет стрелки иккĕ тĕлне çитсе пырать.

— Чистов!— илтĕнчĕ домзак алăкĕ хыçĕнче.

Андрей шартах сикрĕ, алăк патнелле чупнă пекех хыпаланса утрĕ.

Тула илсе тухмарĕç ăна, домзакăн тепĕр пӳлĕмне илсе кĕчĕç. Хăйне халь çеç илсе тухнă камерă евĕрлех тимĕр решеткеллĕ пӳлĕме кĕрсен Андрей сĕтел хушшинче ларакан çар çыннине курчĕ. Унăн симĕс гимнастеркă петлицисем çинче тĕксĕмрех хĕрлĕ «шпала» асăрхаса илсен вăл:

«Ку НКВДăн районти уйрăмĕн начальникĕ пулĕ-ха. Калаçатпăр та унпа, пĕтĕмпех палăрĕ. Кунтан тухсан киле чупсах каятăп. Атту Раис пăшăрханать пулĕ-ха. Тен, Михаля пичче лартса кайĕ»,— тесе, хăйне хăй лăплантарма пикенчĕ.

— Кайма пултаратăр,— терĕ начальник, хуралçăна алăк çинелле кăтартса.— Эсир ак çакăнта ларăр.

Хăйне сĕннĕ пукан çине пырса ларсан, Андрей хут таткисем выртакан сĕтел çине ӳпĕнсе тем вулакан начальник çине куç айĕн пăхса илчĕ.

«Йĕркеллех-çке кунта. Кăшкăрса тăкмаççĕ, вăрçса калаçмаççĕ»,— хăй ăшĕнче паллă тумасăр иртмерĕ Андрей, кунта ĕçлекенсем çинчен хальччен тем-тем аван мар хыпара пайтах илтнĕскер.

Пĕр чĕнмесĕр чылайччен ларчĕç вĕсем. Кун каçа тем чухлĕ çынпа калаçса ывăннă начальник сĕтел çинчи хут таткисене пĕрерĕн-пĕрерĕн тытса пăхса, вĕсене каллех хăйсен вырăнне хучĕ. Унтан вăл сунтăхран хура папкă туртса кăларчĕ те, ăна уçса, шалтан пĕр хут татки кăларса хучĕ.

— Чистов апла. Андрей Петрович?— ыйтрĕ вăл, кăшт тӳрленерех ларса.

— Шăпах çавă. Энĕшяленчи вăтам шкул учителĕ.

— Учитель. Ачасене, çамрăксене вĕрентетĕн апла? Мĕне вĕрентетĕн-ха вĕсене?

— Мĕнле мĕне? Манăн пĕр профиль — вырăс чĕлхипе литературă.

— Вырăс чĕлхине çеç-и вара? Кун пеккине кама вĕрентетĕн?!

Начальник ура çине сиксе тăчĕ, хăй умĕнче выртакан хута Андрей умнерех сиктерсе, тепĕр хут кăшкăрса ячĕ:

— Ку мĕн тетĕп?! Кун пеккине кам вĕрентет?!

Ниме ăнланман Андрей те ваштах сиксе тăчĕ, хăй умне тĕксе хунă хута тинкерчĕ.

— Ку-и? Ку мишень. Эпĕ осоавиахим ячейкин секретарĕ вĕт. Çамрăксене пăшал пеме вĕрентетĕп. Тĕнчери лару-тăру йывăрлансах пынине хăвăр та куратăр вĕт. Каплах пулсан вăрçă та сиксе тухма пултарать. Вăрçа хатĕрленсе кĕтсе илмелле.

— Çар ĕçне вĕрентетĕн апла? — çаплах стандартлă сăмахсемпе калаçать начальник. — Ку мĕне вĕрентни пулать тата?! — хаçат çине çыпăçтарнă мишене Андрей сăмси айнех тытса, кăшкăрса ячĕ начальник.

Чистов, куçне чарса, пĕрре мишень çине, тепре начальник çине ним ăнланмасăр пăхапăха илчĕ.

— А-а! Кăна-и? Кăна эпир мишене çил ан çуртăр тесе çыпăçтарнăччĕ, — терĕ вăл начальнике ăнлантарса пама тăрăшса.

— Акă мĕн, Чистов гражданин, эсĕ кунта юмах ярса ан тăр. Лар та тĕплĕнрех шухăшла: Сталин портретне пăшалпа пеме кам вĕрентет унта сирĕн?

— Мĕнле портрета, начальник юлташ? Нимле портрета та пăшалпа пемен эпир.

— Пемен апла? Ку мĕн?! — каллех кăшкăрса ячĕ начальник, мишене çыпăçтарнă хаçат çинчи сăнÿкерчĕк çине тĕллесе кăтартса.

Хăй умĕнче выртакан хаçат татки çинчи пульăпа шăтарса пĕтернĕ портрета курсан, Андрейăн çÿçĕ-пуçĕ вирелле тăчĕ, пĕтĕм ÿтпĕвĕ çемçелчĕ, урисем ланчăрах кайрĕç. Вара вăл, ура çинче тăма та вăй çитереймесĕр, çĕрелле ÿпĕнсе, пукан çинчен урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ.

Çав самантра, начальник чĕннипе, пÿлĕме пасăрхи конвоир чупса кĕчĕ, урайĕнче выртакан Андрее çĕклесе тăратса, ăна пукан çине лартрĕ.

— Да-а... — таçтан инçерен пек илтĕнчĕ начальникăн сăмса айĕн ĕнерлешсе каланă сасси. — Кун пеккине тума кашни çынах ăс çитерес çук. Кăна пĕр-пĕр тĕллевпе çеç тума пултарнă.

— Мĕнле тĕллев, начальник? — хăйне алла илме тăрăшрĕ ăна кĕрсе çитнĕ Чистов. — Ку ăнсăртран пулнă япала. Хаçатне те хам çыпăçтарман вĕт. Вĕренекенсен ĕçĕ вăл.

— Кам-ха апла?

— Камне ăçтан пĕлем-ха эпĕ. Вĕсем пĕчченех туман вĕт ку ĕçе.

— Ну, кам çыпăçтарни ниме те пĕлтермест-ха вăл. Пире ку ĕçĕн руководителĕ паллă. Сталин портретне пăшалпа перес тарана çитнĕ пулсан, апла, ялта пĕр-пĕр контрреволюциллĕ организаци те тума ĕлкĕрнĕ пулĕ-ха?

— Мĕнле организаци, начальник! — тарăхмасăр тăма пултараймарĕ Андрей. — Эпир çамрăксем вĕт, пулас вăрçа тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленнинче мĕнле контрреволюци пултăр?

— Пĕлетпĕр эпир сирĕн пеккисене. Кашни: «Мĕнле контрреволюци?» — тет, тĕпчевре хăйне пăру пек тытать. Анчах хăй влаçа хирĕç кашкăр пек шăл хăйрать. Кунта ним те каламастăр-и апла?

— Ара, каламалли ним те çук та, мĕн калас-ха манăн, начальник? Тăшман мар вĕт эпĕ, коммунист. Ăна хăвăрах лайăх пĕлетĕр, — хирĕçлеме пăхрĕ Андрей.

— Парти билечĕ чиксе çÿрекенсем хушшинче те сирĕн пек халăх тăшманĕсем сахал мар-ха пирĕн. Пĕтĕмĕшпе çапла: кунта ним те каламарăр пулсан, хулара калаттарĕç, унта ачашласа тăмĕç. Унта живо-два кăларса хурăр мĕн пĕлнине. Петров! — чĕнчĕ начальник.

Пасăрхи çын кĕрсен, вăл ăна Андрей çине тĕллесе кăтартрĕ те, хушса каларĕ:

— Хулана ăсатăр!

Хăй пуçĕ çине кĕтмен çĕртен килсе ÿкнĕ хăрушă инкек пусарнипе халран кайнă Андрей патне хуралçă утса пычĕ:

— Ну, Чистов гражданин. Кайрăмăр!

Андрей шартах сикрĕ, тăруках йывăрланнă урисене аран-аран сĕтĕркелесе, алăк патнелле ÿсĕр çын пек тайкаланса утрĕ. Çак самантра ун пуçне сасартăк шанăç пырса кĕчĕ:

«Тĕрĕслĕх çав-çавах тупăнĕ-ха. Хулара ăнланĕç», — шутларĕ те вăл, тÿп-тÿррĕн тăрса, пÿлĕмрен çирĕппĕн утса тухса кайрĕ.

## 10

«ИНКЕК КУÇА курăнса килмест», теççĕ ваттисем. Çак сăмах мĕн тери тĕрĕс пулнине Андрей хăй пурнăçĕпе тĕрĕслерĕ.

Атăл хĕррине вырнаçнă илемлĕ хулара Андрей Чистов тăватă çул институтра вĕреннĕ, çавăнпа вăл кунта яланах савăнăçлă туйăмпа киле-киле кайнă.

Анчах ку хутра хула ăна сиввĕн кĕтсе

илнĕ. Кантăкне те хура пирпе карнă хура машинăпа илсе килнĕ çынсене пĕр пысăк мар чул çуртăн пĕчĕк пӳлĕмĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хупрĕç.

Андрей валли те пӳлĕм тупса пачĕç: хĕсĕк вăл, пуç маччана тивмелле. Тимĕр решеткеллĕ пĕчĕк кантăкран шăпах Андрейăн вырăнĕ çине тĕссĕр çутă пайăрки ӳкет. Вырăнĕ килти пек те, салтакри пек те мар унăн: хăмаран çапкаласа тунă кравать пекскерне стена çумне тĕршĕнтерсе лартнă; тӳшек те, минтер те çук ун çинче, çара хăма çеç. Юрать-ха вăл килтен ваткăллă пиншакпа плащ тăхăнса тухнă, атту хытах ĕнтĕркеме лекетчĕ кунта.

Виçĕ кубиклă çамрăк следователь малтанах йĕркеллĕ калаçрĕ унпа. Пурнăç çинчен, çемье çинчен, ĕç çинчен, çарти службă çинчен ыйтса пĕлчĕ.

— Паян çакăнпа çитĕ. Ыттисем çинчен тепĕр чух калаçăпăр,— терĕ вăл Андрее кăмăллăн ăсатса.

Çак калаçу хыççăн Чистовăн ирĕке тухас шанчăкĕ татах çирĕпленчĕ. «Эпĕ çакăнта лекни вăл — ăссăрла ăнсăртлăх. Кĕçех пурте паллă пулĕ акă»,— савăнăçлă туйăмпа пырса кĕчĕ вăл хăй камерине.

Анчах хăйпе каярах мĕн-мĕн пулса иртнĕ хыççăн, çамрăк та хитре следователь патĕнче ирттернĕ кашни сехет хăйшĕн тамăк пулнине курса ĕненсен, кунтан тухас шанчăк сĕвĕрĕлсе пычĕ те унăн, юлашкинчен пĕр хĕлхем те юлмарĕ.

Акă паян та вăл кăшт вырăнтан тапрансанах шăм-шакне ыраттарасран хăраса, ахлатса выртать.

Кăнтăрла тĕлне ун патне ватă надзиратель апат илсе кĕчĕ.

Андрейăн ăçта апат çиме унта! Пĕтĕм ăшчикĕ çунать унăн, вĕрипе ăшаланнă тутисем типсе кушăрканă, çăварĕ типсе кайнă.

«Эх, хамăр ял çырминчи çăл шывĕ пĕр кружкă пулсанччĕ çакăнта!— шутлать Андрей, типĕ тутисене кушăхнă чĕлхепе çуллаcа.— Кружкă мар, çур кружкă, пĕр сыпкăм пулсанччĕ».

— Çук, апат анмасть халĕ манăн, Павăл пичче,— тет Андрей, надзирателе сухалĕ пекех хура питĕнчен шывланнă куçпа пăхса.— Çăкăрĕпе чейне хăварма пултаратăр. Тен, каярахпа çийĕп те.

— Юрамасть, юрамасть капла, Андрей Петрович. Эсир çамрăк, сирĕн пĕтĕм пурнăç малта. Апачĕ тĕлĕ-йĕрĕ çук пулсан та, хырăма мĕнпе те пулин тултармаллах. Тӳсмелли мĕн чухлĕ пулассине кам пĕлет. Эх!— тет надзиратель алне сулса.

Çакăн пек самантсенче Андрей сивлерех сăн-питлĕ, лутрарах кĕлеткеллĕ надзирателĕн хура куç хĕрринче яланах çутă тумлам çакăнса тăнине асăрхать.

«Мĕнле ĕçлет-ха кунта Павăл пичче пек кăмăллă çын, çак тамăкри пек пурнăçа епле тӳсме пултарать-ха?»— шухăшлать Андрей надзиратель тухса кайсан.

Пĕрре вăл Павăл пиччене çав шухăша сиcтерсе калаçнăччĕ.

— Ан ĕçле-ха. Айăпсăр çынсене асаплантарнине çавăн чухлĕ куракана кунтан чипчипер кăларса ярĕç тетĕн-и эсĕ?— хуравларĕ ун чух надзиратель.

«Пирĕн асаплă пурнăçа куракан, пире шеллекен çын халĕ пĕтĕм çут тĕнчере те Павăл пичче çеç пулĕ. Вăл пулмасан, унăн йăпатса каланă сăмахне илтмесен епле тӳсме пултараттăмăр-ши эпир çакна?»

Павăл пиччесĕр пуçне çут тĕнчере ашшĕ-амăшĕ пур вĕт-ха Андрейăн, Раиспа пĕчĕк Валя пур. Инçе мар вĕсем, кунтан çитмĕл çухрăмра кăна. Анчах хăçан курĕ-ха вăл вĕсене? Курайĕ-ши?

Ку мĕн тата?

Хăй тĕршĕнсе выртнă стена çинче темскер кăштăртатнине илтсе, Андрей пуçне унталла çавăрать, куççульпе тулса ларнă куçне алăпа шăлса, стена çине тинкерсе пăхать.

Ку мĕн?!

Стена çинче майĕпен темле сăнӳкерчĕк шуса иртет. Шуса пырать-пырать те вăл, пĕр çĕре çитсен чарăнса, каялла шума тытăнать. Мĕнле тухнă-ха çак сăнӳкерчĕк стена витĕр? Ахăртнех унта çурăк пулĕ-ха. Çурăк пур çав! Авă вăл, шупка сăрлă стена çинче хура çип пек тăсăлса выртать. Çакна мĕнле асăрхаман-ха Андрей ку таринччен? Çăва патне-ха вăл, çурăкĕ. Андрее халĕ стена çинчи çурăк мар, ун тăрăх шуса иртекен сăнӳкерчĕк интереслентерет. Сăнӳкерчĕке куçран çухатас мар тесе, вăл ахаль те ыраттармаллах чарнă куçне тата чарать, унтан, халĕ ĕнтĕ ӳт-пӳ те, шăм-шак та ыратнине туймасăр, сăнӳкерчĕке ярса тытма хăтланса, ăна хыçалтан аллипе хăвалать. Анчах ниепле те тытма çук ăна: Андрей алли стена тăрăх чупнă хăвăртлăхпа шуса пырать те, вăл хăлаçланса та çитме çук тĕлте чарăнса, самантлăха таçта кайса çухалать, унтан, кăшт вăхăт иртсен, каллех малтанхи вырăнта шуса тухать.

«Мĕн ку? Кам ку?!»

Андрей куçне ыраттармаллах тинкерет: «Ара, Раиспа Валя вĕт ку!» Вĕсен Раиспа Валя пĕрле ӳкерттернĕ карточкă çукчĕ-çке, ку ăçтан килсе тухнă тата?

Сăнӳкерчĕк çаплах стена тăрăх шуса пырать, анчах хăй хыççăн хыпашласа пыракан алă хăваласа çитме пуçласанах вăл çурăк хушшине кĕрсе пытанать.

«Ой, асап!» — йынăшса ярать Андрей, аллине стена çинчен ӳкерсе.

Вăл йынăшнине илтнĕ пекех сăнӳкерчĕк таçта кайса çухалчĕ. Сăнӳкерчĕк халь-халь сиксе тухасса, арăмĕпе хĕрĕн сăнарне тепĕр хут та пулин курса илессе ĕмĕтленсе, Андрей мĕн таран тинкермерĕ пулĕ стенана, анчах унта вăл çип çапнă пек тăсăлса выртакан «йĕрсĕр пуçне урăх ниме те тĕсмĕртсе илеймерĕ.

Хĕненине те, теме те тӳсме пултарать вăл. Анчах кун пеккине тӳсме хал çитерес çук вăл. Ку фокуссене çынна тĕппипех тăнран кăларма, минрелетсе яма тăваççĕ пулĕ ĕнтĕ.

— Йышăн айăпна! — тет следователь.— Контрреволюцилле организацире миçе çын тата кам-кам тăнине кала! Атту тĕрмерех çĕртсе вĕлеретпĕр!

Мĕне йышăнмалла-ха Андрейăн? Мĕнле контрреволюцилле организацине пĕлет-ха вăл?

Çакна тӳсме тем пекех йывăр Андрее. Анчах ку пуçламăшĕ кăна вĕт-ха. Малалла мĕн пулĕ-ши?..

Ун пуçне хăрушла шухăшсем çавăрса илеççĕ: «Кун пек асап тӳсиччен çакăнса вилес хут...»

Хăрушă та усал шухăша çав самантрах куç умне сиксе тухнă Раиспа Валя сăнĕсем сирсе яраççĕ.

«Ах, эсĕ, пирĕн аттеçĕм. Апла юрать-и? Пире кам аллине пăрахса хăварасшăн вара эсĕ?» — юнашарах, хăлха çумĕнчех янăраНăн туйăнать Раисăн шăнкрав сасси.

«Çук, çук! Урăх тытмăп ку усал шухăша. Тĕп пултăр вăл, сирĕлтĕр ман умран! Сирĕншĕн темле асапа та тӳссе ирттерĕп эпĕ».

Анчах сирĕлмеççĕ усал шухăшсем, вĕсем унăн пĕтĕм пурнăçне хура пĕркеленчĕкпе карса илеççĕ.

## 11

КАЙРАН МĔН ПУЛНИНЕ астумасть Андрей. Следователь патĕнче пулнă калаçу хыççăн вăл, пĕтĕм ӳт-пӳ ыратнине тӳсеймесĕр, хăйĕн йывăç кравачĕ çине плащпа витĕнсе выртнăччĕ. Унтан ăна каллех юлашки кунсенче аптăратса çитернĕ, минутлăха та пуçран тухса ӳкмен усал шухăшсем пырса кĕчĕç. Вăл, ура çине тăма аран-аран хал çитерсе, гимнастеркине кравать çине хывса пăрахрĕ, аялти кĕпине те хыврĕ, ăна çурмаран çурса пĕтерчĕ, алăк сăлăпĕнчен çыхрĕ...

Мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ-ши çавăн хыççăн,— ăна астумасть Андрей. Куçне уçсан, хăй умне кукленсе ларнă Павăл пиччене курса илчĕ вăл.

— Ах ухмах! Епле айван! Санăн пĕтĕм пурнăç малта вĕт, а эсĕ пур, ухмахланса, çак тĕнчерен тарма хатĕрленнĕ,— тет вăл, Андрейăн сивĕ тарпа йĕпеннĕ питне сăмса тутрипе шăлса.

Тăна тин çеç кĕнĕ Андрей, хăй мĕншĕн урайĕнче выртнине те, Павăл пичче мĕншĕн ун умĕнче чĕркуçленсе ларнине те ăнланса илеймесĕр, хăй пекех, вăйсăр тĕксĕм куçĕпе мачча çине пăхса выртать.

— Кунта кăштах ăс пур-и санăн? — шĕвĕр пӳрнипе Андрей çамкинчен тĕртсе илет Павăл пичче.— Çамрăк, хитре, ăслă, çавах ачалла хăтланать. Вилĕмпе, унпа, кĕрешес пулать, а эсĕ пур...

— Кама кирлĕ ман пурнăç, Павăл пичче? — тет Андрей вăтанарах, хăйпе мĕн пулса иртнине тăруках ăнланса илсе.

— Кама кирлĕ?! Хăвна, арăмупа ачуна, çынсене кирлĕ.

— Çынсене! Эс тĕлĕнтеретĕн, Павăл пичче. Çынсене мĕн тума кирлĕ ман пурнăç? Вĕсем авă мĕн кăтартаççĕ мана.

Андрей йынăшса ячĕ, ура çине тăма хăтланса, чавсисемпе урая тĕреленчĕ.

— Акă мĕн, Андрей Петрович,— канаш парать надзиратель.— Пĕлтĕр ку путвалта миçе çын пулмарĕç пулĕ. Вĕсем те асапа сахал тӳсмерĕç. Анчах чи йывăр асапран хăйсен «айăпне» йышăннипе хăтăлчĕç. Эсĕ те çапла ту, «айăпна» йышăн.

Шăм-шакĕ ыратнине тӳсеймесĕр выртакан Андрей ура çине сиксе тăчĕ.

— Эсĕ, эсĕ, тĕрмеçĕ! Сана следователь хушрĕ-им ку ĕçе? — кăшкăрса ячĕ вăл, Павăл пичче енелле икĕ чышкине те чăмăрласа пырса.

Надзиратель вырăнтан та тапранмарĕ. Вăл Андрей аллисене тытса хуçлатрĕ те, ăна, хур тĕкĕ пек çăмăллăн çĕклесе, кравать çине пырса лартрĕ.

— Эсĕ лăпланса вырт-ха, итле. Эпĕ çут тĕнчере санран икĕ хут ытларах пурăнатăп, апла пулсан, пурнăçа санран икĕ хут ытларах курнă. Йышăн «айăпна», вара ку асапа та тӳсмелле пулмĕ.

— Ара, Павăл пичче, айăп çук та манăн, мĕнле «айăпа» йышăнас-ха?

— Çук пулсан та йышăн, туп ăна. «Айăпа» йышăнсан сана суд тăваççĕ те, хăвна «тивĕçлĕ» срок парса, лагере ăсатаççĕ. Йышăнмасан кунтах çĕрме тивет. Итле ман сăмаха, кайран ырăпа асăнăн.

Павăл пичче тухса кайсан Андрей нумайччен шухăша кайса выртрĕ.

«Тĕрĕс калать-ши ку надзиратель е следователь хушнипе «айăпа» йышăнма хистет?— иккĕленчĕ вăл.— Юриех хăтланма мĕн сăлтав пур-ха унăн? Ватă çын, пурнăçа нумай курнă. Сăнне те çак киревсĕр пурнăç хуратса янă пулĕ-ха унне. Çук, ултавлă çын пулас çук Павăл пичче».

Тепĕр виçĕ кунтан следователь патне чĕнсен Андрей пĕтĕм «айăпа» пĕр тытăнса тăмасăр йышăнчĕ.

— Совет влаçне хирĕç кĕрешме çынсем вĕрентсе хатĕрлеме шутланă апла?— ыйтрĕ следователь.

«Ах, мур илесшĕ. Хăй мĕн ыйтнине хăй те ĕненмест пулĕ-ха, çапах ыйтать вĕт ăна»,— шутласа илчĕ пуçĕнче Андрей. Анчах вăл пĕр хирĕçлемесĕр хуравларĕ:

— Шутланă.

— Кăна кам хушнипе тунă-ха?

— Кам хушнипе пултăр, хам ирĕкпе.

— Мĕнле хăв ирĕкпе? Центр хушнипе мар-и?

— Центра пĕлмен эпĕ, кайран тупма шутланă ăна.

— Пĕчченех тунă-и вара ку ĕçе? Никама та хутшăнтарман-и?

— Пĕчченех, никама та хутшăнтарман. Çамрăксене çар ĕçне вĕрентрĕм. Кирлĕ вăхăтра вĕсем пире пулăшасса шантăм.

Ĕненчĕ-ши следователь мĕн каланине, çукши? Çав калаçу хыççăн Андрей çакна ăнланчĕ: следовательшĕн пулсан çав-çавах, ăна хăй ĕçне туса пултăр. Айăп пур пеккине туйсанах вăл материал хатĕрлет те суда парать.

«Вунă çул! Унтан пилĕк çул ссылкăра пулмалла. Ой, мĕн чухлĕ!»— куçĕ хуралса килнипе кăштах тӳнсе каймарĕ Андрей.

— Вунă çул мĕн вăл? Ытла кулянма кирлĕ мар. Хурлăх сывлăха хавшатать. Сывлăх сана малалла тӳсме кирлĕ. Санăн пурăнас пулать...

Чыса тивĕç мар ĕçе тунипе те çынлăха çухатман çак ватă старике ыталаса чуп тăвас килчĕ Андрейăн. Анчах вăхăтра туйса илчĕ вăл: тĕрмеçĕ умĕнче кашни тĕрме çынни хăй кăмăлне палăртсан, ун пек тĕрмеçĕшĕн ыранхи кун ыррăн иртес çук.

Çавăнпа хăй япалисене васкаса пуçтарчĕ те вăл, алăк патĕнче кăнт хытса тăракан Павăл пичче патне çитсен, унăн пысăк аллине вăрттăн та хыттăн чăмăртаса, çамламас куç харпи айне пытаннă сивлерех хура куçĕнчен ăшшăн пăхса, вăрăм коридор тăрăх утрĕ.



МИÇЕ ÇУЛ иртрĕ-ха унтанпа? Вун тăватă çул. Ку çулсенчен тăваттăшĕнче çĕршыв хаяр вăрçа тӳссе ирттерчĕ. Вăрçă ку тавраран инçере пулчĕ пулсан та, хăй паллине кашни киле тенĕ пекех хăварчĕ вăл.

— Айтуру, кунти йăмрасем ăçта кайса кĕнĕ?!— тĕлĕннипе сасăпах кăшкăрса ячĕ Андрей Петрович, икĕ урама уйăракан тарăн вара анса çитсен.

Чăнах та, ăçта кайса кĕнĕ-ха кунти йывăçсем? Платна та лапсака йăмрасем ĕлĕк кунта, пĕве хĕрринче, вăрман пек кашласа ларатчĕç.

Ял пушанса, çаралса юлнине асăрхарĕ Чистов. Ĕлĕк, хăй астăвасса, кашни килте пекех сад пахчи пурччĕ. Халĕ ăçта çав садсем? Аслă урам тăрăшĕпе ларса тухнă лапсака йăмрасем ăçта кайса кĕнĕ? Хальччен пилĕк-ултă çухрăмран курăнса ларакан чăрăш та таçта çухалнă.

Нумай улшăннă ял. Вăрçă çулĕсем чылай юхăнтарнă ăна. Çавăнпах ĕнтĕ вăрçă пĕтнĕренпе вăхăт чылай иртрĕ пулсан та ура çине тăрса çитеймест-ха вăл.

Ара, ăçтан тăрса çитĕн-ха! Кашни кил пекех хăйĕн хуçине е кама та пулса çитĕннĕ çынна кĕтсе илеймен пулсан, кăшт сиплемелли те вăрăма тăсăлать. Арçын-арçынах вăл, унсăр хуçалăхра чикме лартма та çук.

Çырмаран улăхмалли нӳремлĕ сĕвек сукмакпа Андрее хирĕç пĕр хĕрарăм анать. Калуш тăхăннă ури ан шутăр тесе, вăл айккăнайккăн пусса утать.

Хĕрарăм хăй тĕлне çитеспе Чистов сукмак хĕррине, симĕс курăк çине тухса тăчĕ. Чечеклĕ кăвак кĕпе çине хура пустав пиншак тăхăннă, пуçне хăмăр тутăр çыхнă хĕрарăм хăйпе танлашсан, Андрей Петрович ăна тинкерсе пăхрĕ. Кăшт пĕркеленнĕ тĕксĕм сăн-питлĕ хĕрарăмăн пысăк куç харши айĕнче чакăр куç вылять.

Андрейпе тĕлпулсан хĕрарăм уттине вăрахлатрĕ, çамкине хупланă хура çӳç пайăркине тутăр ăшне тирпейлесе чикрĕ те, Чистова сăнаса пăхрĕ. Анчах палласа илеймерĕ пулас, çавăнпа иртсе кайсанах тепĕр хут çавăрăнса пăхрĕ те, унăн пичĕ сасартăк çуталса кайрĕ, хĕрлĕ çӳхе тутисем çине кулă палли ӳкрĕ.

«Палламарĕ пулас-ха. Ара, ăçтан паллан? Асаплă йывăр çулсем тăнлавне шуратнă, сăн-питне пĕркелентернĕ çынна ăçтан тăрукках палласа илĕн-ха?»— шухăш вĕçсе иртрĕ Андрей Петрович пуçĕнче.



Чистов пӗрре пăхсах палласа илчӗ ăна. Ара, кам паллӗ-ха ăна, хӗр чӳхне сахал мар çамрăксен ăшне çунтарнă Улькана!

Вăл тахçан авал, хăй яш чухне, ялта чи хитре хӗр пулнă, хӗрарăма тепӗр хут курас тесе, пуçне çавăрнăччӗ кăна,— шăп çав самантра хăй патнелле хăвăрт утса пыракан Улькана асăрхарӗ.

Тӗрӗссипе вăл утса мар, чупса пычӗ. Патне çитсен ăна икӗ аллипе те ыталаса илчӗ, унăн фуфайкине ӗсӗклесе хыпашлама тытăнчӗ. Ниме те ăнланман Андрей, хӗрарăмăн тăвăнса килнӗ кăмăлне лăплантарасшăн пулса, ăна çурăмӗнчен, тутăрӗ усăнса аннă пуçӗнчен ачашласа лăпкама пуçларӗ.

— Вăт çапла, Андрей: пурăнатпăр-пурăнатпăр та, çулсем иртсе кайнине те курса юлаймастпăр,— терӗ Улька, йӗпеннӗ куçне тутăр вӗçӗпе шăла-шăла.— Малтан паллламасăр иртсе кайнăччӗ санран. Унтан пуçа пырса кӗчӗ. «Андрей вӗт ку!»— тетӗп. Ун чух эсӗ те çавăрăнса пăхрăн та, палласах илтӗм вара.

— Улька! Эсӗ-и ку? Айтуру, епле улшăнса кайнă!— хӗрарăм тăсса панă хытанкă алла хыттăн чăмăртарӗ Чистов.

— Э, Андрей! Улшăнмасăр. Хӗрарăм пуçпа виçӗ ача ӳстер-ха эсӗ. Колхоз ӗçне те çӳремелле, килти ӗçе те тумалла. Юрать-ха пирӗн колхозра кăшт-кашт тырă паркаласа пычӗç. Ман упăшка вăрçăра хӗрӗх пӗрремӗш çултах пӗтрӗ вӗт...

— Çапла çав, тӳсмелли нумай тиврӗ пирӗн ăрăва...

«Çак çынна халăх тăшманӗ шутланă вӗтха. Çавна ӗненекенсем те тупăннă ялта,— шухăш пырса кӗчӗ Улькана.— Вăхăтпа йывăрлăх ун сăн-сăпатне улăштарма ӗлкӗрнӗ пулсан та, шухăш-кăмăлӗ çирӗп-ха унăн».

Вара вăл, ăшра мӗн шутланине вӗçне çитерме тăрăшса, сасăпа хушса хучӗ:

— Тӳссе курмалли сана та айккинче хăварман имӗш. Тăнлавсем авă епле шуралнă.

— Тӳссе курни пирки мӗн калăп-ха сана, Улька? Ăна, эпӗ пулнă çӗрте çынна мӗнмӗн тӳсме лекнине хăвах чухлатăн пулӗ-ха.

— Çаплах ӗнтӗ, ун пеккине урăх никам та ан куртăрччӗ.

Ку калаçу хăйӗн ылхана тивӗç пурнăçне аса илтерсе, чун-чӗрене йӗпленине тӳсеймесӗр, Андрей Петрович калаçăва урăх енне куçарма пикенчӗ.

— Тем-тем тӳсме те тиврӗ пулӗ сана, Улька? Ăна пит лайăх чухлатăп. Çапах та ытла улшăнман эсӗ, ӗлӗкхи пекех. Сăн-пуçу халӗ те пайтах каччăсен ăшне вăркатнă çулсене аса илтерет,— терӗ вăл, хăйпе тантăш хӗрарăмăн чакăр куçӗ айӗпе ӗлӗкхи пек вăтанса мар, хăюллăн пăхса.

— Эсӗ, Андрей, капла вăтантарсах ятăн мана,— кăшт хӗрелнӗ питне аллипе хупăрларӗ Улька.— Ман аслă ывăл вун пиллӗкe çитрӗ ӗнтӗ. Эсӗ пур çаплах хӗр чухнехине аса илтеретӗн.

— Чăнах, чăнах. Сан хыççăн халӗ те темле каччă усăнса çӳремелле.

— Апли-аплах мар та, çапах вăрçă çулӗсенче пӗр арçын самаях аптăратса çитернӗччӗ мана.

— Кам пулчӗ вара çав арçын?

— Камит Петти.

— Ан калаç-ха эсӗ. Ара, Камит Петти вăрçăччен тахçанах ялтан тухса кайнăччӗçке. Ăçтан килсе лекнӗ вара вăл кунта?

— Килсе лекнӗччӗ çав. Колхоз председательне те лартрӗç ăна. Ну камит кăтартрӗ вара ял çыннисене! Колхоза чутах юхăнтарса яратчӗ. Ман хыçран мӗн чухлӗ сӗтӗрӗнчӗ: хăратса та пăхать, йăпăлтатать те. Анчах, эсӗ хăвах пӗлетӗн, ман кăмăла хăратнипе те, йăпалти сăмахсем каланипе те çемçетме çук.

— Халӗ те ялта пурăнать-и вара Камит Петти?

— Çук. Председательтен кăларсан, вăрçă пӗтсенех ялтан тухса шăвăнчӗ. Ун пеккисем ялта пурăнаççӗ-и вара? Ăшă вырăн шырама çеç вӗреннӗ вӗт вӗсем.

— Авă епле: колхозра, апла, Камит Петти те председатель пулса курнă?

— Пулнă ара, пулнă. Çав çулсенче теме те курма лекрӗ кунта. Халӗ йӗркене кӗрсе

пырать-ха пурнăç. Колхозран тыррине те илетпĕр, укçан та паркаласçĕ. Пурăнма пулать.

Андрей çине пăха-пăха, Улька пĕр самантлăха чĕнмесĕр тăчĕ. Унтан, теме сасартăк аса илнĕ пек, хыпалансах каларĕ:

— Акă тата, калаçса тăрса мансах кайнă. Бухгалтер апата кайиччен правленине çитсе килмеллеччĕ манăн. Сводкă памалла.

— Мĕнле сводкă тата? — интересленчĕ Андрей.

— Ара, фермăсенчен сводкă ыйтсах тăраççĕ те. Эпĕ халĕ колхозри фермăсен заведующийĕ вĕт. Пуçлăх.

Улька куç шуррине вылятса илчĕ, ун тути йăл кулчĕ.

— Ну!— чăнласах тĕлĕнчĕ Андрей.— Тепĕр тесен, тĕлĕнмеллиех çук кунта. Шкулта вĕреннĕ чухне чи лайăххисен шутĕнчеччĕ вĕт-ха эсĕ.

— Çав шутра эсĕ те пурччĕ мар-и-ха?— çаплах йăл-йăл кулма чарăнмасăр чеен ыйтрĕ Улька.

— Çаплаччĕ те, анчах унтан мĕн усси пулчĕ-ха? «Халăх тăшманĕ» ятне илсе, таçта çăвара асап тӳсме çеç вĕренмелле пулчĕ çавăн чухлĕ.

— Кай, кирлĕ мара калаçса ан тăр-ха эсĕ, Андрей,— хирĕçлеме пикенчĕ Улька. Халĕ ун тути çинчен кулă палли çухалчĕ, вара вăл паçăрхи пекех сивлерех сăн-питлĕ, хĕрĕхелле çитсе пыракан хитре хĕрарăм пулса тăчĕ.— Сана «халăх тăшманĕ» тесе шутлаканни ялта пĕр çын та пулин тупăнĕ-ши?

— Ма тупăнмасть пултăр? Тĕрмене лартаканни тупăннă пулсан, мана панă çав усал ят чăн пулнине ĕненекен те тупăнатех ĕнтĕ.

— Çапла та пулĕ çав. Лартаканни тупăнчĕ пулсан, ĕненекенни пурах ĕнтĕ. Пĕр çын та пулса пур. Анчах халăх мар, халăх ун пеккине ĕненмест. Ку усал ĕçе халăх туман. Ăна сана курайман пĕр-пĕр путсĕр çын тунă.

— Эсĕ те çак, Улька, юмах юптарма хавас. Ара, ун чухне эпир хамăра çын курайми пулмаллăх пурăнма та ĕлкĕреймен вĕт.

— Эй, Андрей, ытла айван-çке эсĕ. Тепĕр-тепĕр чух чи çывăх юлташа та шанма çук. Авă эпĕ, Сантăра качча тухрăм та, манран чи çывăх туссем те сивĕнчĕç. Хăш-пĕрисем, тăшмансем пек, çисе яма та хатĕрччĕ. Эпĕ вĕсен каччине туртса илнĕ тейĕн.

— Ну, ман пирки никам та ун пек шутлама пултарайман. Эпĕ ют ял хĕрне качча илнĕ, çавăнпа кӳрентерекенсем пулман.

— Кам пĕлет, тен, урăх ĕçпе кӳрентернĕ пулĕ. Пур вĕт тĕнчере çавнашкал çын: эсĕ ун урине, ăнсăртран, чĕрне вĕçне çеç пусатăн, анчах вăл сана пур çĕртен те йĕплеме хатĕр. Кӳренӳ вăл çавăн пек япала, Андрей. Кашни çын пĕр евĕрлĕ кӳренмест: пĕри ниме тăман япалашăнах тарăхса кайма пултарать, тепри — тарăхмалли япала çине те ал çеç сулать.

— Ах, эсĕ, Улька, кун пек ăслă калаçусене те ăста-çке.

— Парти шкулне пĕтертĕм-çке. Ăс-пуçа кăштах тăрă тытмасан намăс та.

— Чăнах-и?! Ну кур, çар чĕлхипе калас пулсан, чăн-чăн «подвиг» вара. Виçĕ ача пур çинчех вĕренме вăхăт тупнă.

— Вĕренесси мĕн «подвиг» пултăр-ха вăл? Вăт сире, пĕр сăлтавсăр унта ларса тухнисене, «подвиг» тунă темелле. Чăнах, хăв айăплă маррине пĕлетăркачах çавăн чухлĕ асап тӳсме хурçă пек çирĕп çын пулас пулать. Ун чухлĕ тӳссе тăван çĕр çине ура ярса пусрăн пулсан, ытла ан кулян ĕнтĕ, Андрей. Тĕрĕслĕх çиеле тухатех.

— Спасибă, Улька. Спасибă мана ăнланнăшăн. Тĕрĕслĕх яланах хăйне тупнă, малашне те çаплах пулĕ-ха.

Хăй тантăшĕ патне юнашарах пырса тăнă Андрей Петрович Улькан хытанкă та ăшă аллине чылайччен чăмăртаса, ăна хитре сăнпуçĕнчен пăхса тăчĕ.

— Сăртран улăхатăн та, ял хапхи патнелле утатăн. Хапхи çук унта халĕ, вырăнĕ çеç пур,— терĕ Улька, арçын чăмăртанипе кăштах лутăрканнă аллине тепĕр аллипе сăтăрса.— Унта хăвах куратăн: пĕчĕккĕ те тăптăп çурт. Пирĕн пата кĕрсе кур, хаклă хăна пулăн. Эпир ĕлĕкхи çĕртех пурăнатпăр.

Улька аналла, çырма тĕпнелле утрĕ. Андрей ун хыççăн савăнса, хăй тантăшĕн хĕр чухнехи яштака пĕвне йывăр пурнăç та авма пултарайманнишĕн хĕпĕртесе пăхса тăчĕ. Улька çырмана анса çитсе сăмсах хыçне пăрăнсан, вăл курăнми пулсан çеç сăрталла васкамасăр утрĕ.

«Аван, питĕ аван: мана икĕ çын, Улькапа Михаля пичче, тăшман шутламаççĕ. Ман çине икĕ çын çынла пăхаççĕ. Апла, ун пек шутлакансем ялта татах та тупăнаççĕ пулĕха»,— хăй чунтанах савăннине ăшра палăртмасăр иртмерĕ Андрей Петрович.

## 13

САРТРАН УЛĂХСА çитсен вăл çеремлĕ сăмсаха тухса тăчĕ.

Ку сăмсаха пит лайăх астăвать вăл, кунта Микулай пиччесен тырă кĕлечĕ ларатчĕ. Çурхи, çуллахи кунсенче кунта çамрăксем вăййа тухатчĕç. Хăйсем Аслă урамра пурăннă пулсан та, Андрей кунти вăййа тем чухлех çӳренĕ.

Халӗ, авӑ, кӗлечӗ те, ун умне купӑсҫӑсем валли хунӑ каскасем те ҫук.

«Э-э!— шутлать Андрей Петрович, ытла чалӑшнипе халь-халь урам тайлӑкне ишӗлсе анас пек ӳпӗннӗ улӑм витнӗ ҫӗрӗк пӳрт умӗпе иртсе пынӑ чухне.— Микулай пиччесен ҫӗнӗ пӳрт лартма пултаракан ҫын та юлманши вара? Ҫапла та пулӗ ҫав. Микулай пичче ун чухнех ватӑччӗ те, халӗ вилнӗ те пулӗ. Ачисем, ачисем ӑҫта тата? Тӑват-пилӗк ачаччӗ вӗт вӗсен? Ывӑлӗсем вӑрҫӑра пуҫ хунӑ, хӗрӗсем качча тухса пӗтнӗ пулӗ-ха».

Ку тайлӑк-тӗйлӗк пӳртпе юнашарах, авӑ, сарӑрах шултра пӗренеллӗ, тӑррине симӗс тимӗр витнӗ пысӑк ҫурт салари пек сарӑлса ларать. Кантӑкӗсем, кантӑкӗсем епле илемлӗ! Рамӗсем тӗксӗм хӗрлӗ, касса эрешлентернӗ хашисем кӑн-кӑвак.

Симӗс курӑк ҫинче хӑю пек тӑсӑлса выртакан хура сукмакпа Андрей Петрович пӳрт умӗпех утса пынӑ чухне пӳртум тӑпри ҫинче хӗрӗнсе, тусанпа ҫӑвӑнса выртакан тӗрлӗ тӗслӗ чӑхсем, вӑшт ҫеҫ сиксе тӑрса, пуҫӗсене пӗшкӗртсе, мӑйӗсене тӑсса, хапха айнелле чупрӗҫ.

— Мӗн хӑратӑр, айвансем. Кӗркуннесӗр никам та тивмест сире,— ачашшӑн хӑтӑрса илчӗ те вӗсене Андрей Петрович, юнашар кил патнелле васкарӗ.

«Ҫурчӗ лайӑх ку, Тяпук Мӗкӗтин, анчах йӗри-тавра ҫап-ҫара. Кӑшт илем кӳмелӗх пӳрт умне ик-виҫӗ йӑмра лартса яринччӗ хуть»,— ӳпкелешсе илчӗ вӑл.

Ял ҫаралса юлнине, унта йывӑҫсем пӑтпат ҫеҫ тӑрса юлнине Андрей Петрович ял хапхинчен килсе кӗрсенех асӑрхарӗ.

Акӑ, ҫак урамрах-ха. Кунта, халӗ симӗс курӑкпа виҫ-тӑватӑ чаплӑ ҫурт илем кӳрекен урамра, ӗлӗк тӗрлӗ йывӑҫсем вӑрман пек чашкӑрса ларатчӗҫ, сад-пахчисем те кашни килтех пурччӗ. «Ӑҫта кайса кӗнӗ-ха ҫав йывӑҫсем? Сад-пахчана ӗмӗр-ӗмӗр тирпейлӗ пӑхнӑ, унти улма-ҫырла йывӑҫҫисене темрен ытла хакланӑ ҫынсем халӗ епле садсӑр пурӑнма пултараҫҫӗ-ха?»

Пӑхать Андрей Петрович, вӑл пӗчӗк тӑптӑп ҫурт патне ҫитсе тӑнӑ имӗш. Лерелле, кунтан лererехре, ял хапхи хӗрринче пысӑк ҫурт ларать.

«Ҫаках пулӗ-ха. Кунта пӗчӗк ҫурт урӑх ҫук та вӗт,— шутлать Андрей, тӑрӑсӑр хапха патне утса пырса.— Чи малтанах, кӗркунне пӳрт умне карта тытса, йывӑҫсем лартатӑп»,— хуҫалла плансем тӑвать вӑл, хапха шаршанкине ярса тытса.

Хапхине питӗрмен те, ӑна чип-чиперех уҫса кӗрет вӑл. Анчах тап-таса картлашкаллӑ крыльца умне пырса, вӑл чарӑнса тӑрать.

«Маттур, анне. Пӗччен пурӑнать, ватӑ хӑй, ҫапах киле тирпейлӗ тытать,— мӑн кӑмӑлпа асӑрхаса илет вӑл, крыльцан шап-шурӑ хӑмасемлӗ урайне тепӗр хут пӑхса. Унтан вӑл алӑк сӑлӑпӗнчен чикнӗ ухвата курать, крыльца ҫинчен анса сарайнелле утать.— Анне пахчара пулӗ-ха».

Йӑли ҫапла чӑвашсен: килтен ӑҫта та пулса кайсан,— ҫенӗх уҫҫине кӑларса илсе, ӑна ҫавӑнтах, крыльца ҫинчех пытараҫҫӗ (шырасан тупма та пулать ӑна); килтех, пахчана ҫеҫ тухнӑ пулсан,— алӑк сӑлӑпӗнчен патак е ухват-турчӑка чиксе хӑвараҫҫӗ.

Чӗриклетсе уҫӑлакан кайри хапхана хупсан, Андрей Петрович «Кун хӑлӑпӗсене тикӗт сӗрес пулать-ха»— тесе асӑрхарӗ те, шурӑ-кӑвак чечексемлӗ, сип-симӗс ҫулҫӑллӑ, вӑрӑм туналлӑ ҫӗрулми хушшипе хывнӑ сукмак ҫине тухрӗ. Сукмак хӗрне лартнӑ хӗвелҫаврӑнӑшсем Андрей Петровича ҫаврашка сап-сарӑ пуҫӗсене пӑра-пӑра кӗтсе илчӗҫ. Андрей Петрович пахчаналла утнӑ май вӗсем сарлака симӗс ҫулҫисене ҫатӑлтаттарса юлчӗҫ. Пахчана шаларах та шаларах кӗрсе пынӑ ҫемӗн Чистов ҫӗрулми хушшине пытаннӑ тӗрлӗ ҫимӗҫсен йӑранӗсене курчӗ: сухан, кишӗр, кӑшман, ҫарӑк, купӑста, хӑяр ӳсеҫҫӗ ҫав йӑрансем ҫинче.

«О-о, помидор та лартнӑ-ҫке анне! — сасӑпах кӑшкӑрса яратчӗ Андрей Петрович, йӑран ҫине ӳпӗнсе, унти ҫумкурӑкне пӗрерӗн-пӗрерӗн тӑпӑлтаракан амӑшне курса.— Ватӑ шӑм-шака кун пек ватма памастӑп эпӗ ӑна малашне, сапӑ тутарса паратӑп-ха»...

Амӑшӗ патне ҫитесси виҫ-тӑватӑ утӑм юлсан, Андрей Петрович тӑпах чарӑнчӗ. Чӗре таппи темле хӑйне хӑех хӑвӑртланнине туйрӗ вӑл, пыра, карланкӑ тӗлнех, таҫтан темле чӑмакка йӑкӑлтатса тухрӗ, куҫ тӑруках вӗриленсе кайрӗ, ӑна темле ҫутӑ шӗвек сийкарса илсен, вӗри тумлам малтан сӑмса кӑкӗнче пӑчӑртанса тӑчӗ, унтан, ҫав аялалла чупакан тумлама тытса чарас тесе, Андрей Петрович питне алӑпа сӑтӑрсан, пирвайхи тумлам хыҫҫӑн пӗр вӗҫӗмсӗр чупса пыракан ытти тумламсем, йӗпеннӗ тӗле ҫитсе, пӗтӗм пите сарӑлчӗҫ, вара Чистовӑн ирӗксӗрех сӑмса тутри кӑлармалла пулчӗ.

Мӗн чухлӗ тӑчӗ-ши вӑл пӗкӗрӗлнӗ пилӗкне тӳрлетме хӑтланса, тӗлпулу ытла ӑнсӑртран килсе тухнипе ура айне таптаннӑ помидор тӗпне те асӑрхамасӑр, пӗркеленчӗк питӗнчи путӑк куҫне ҫулӑмла ялкӑштарса тӑракан хӗрарӑм ҫине пӑхса? Ҫавна астумасть вӑл. Анчах амӑшӗ ҫӗрулми касси хушшипе чупса пырса, хӑйне ыталаса илнине, темиҫе кун хырӑнманнипе шӑртланнӑ йӗпе питрен чуптума пуҫланине пит лайӑх астӑвать.

Вара, ывӑлне ыталаса, ун питне хӑй куҫӗнчен тумлакан юлашки куҫҫулӗпе ҫуса, чулланса ҫитме пуҫланӑ чун-чӗрине ҫемӗҫтерсен, Укҫук инке сукмак тӑрӑх чупнӑ пекех утса кайрӗ.

— Эп халех, халех! Эсӗ, Андрей, хӑяр тат-ха, ик-виҫӗ тӗп сухан тӑпӑлтар,— хушрӗ вӑл ывӑлне, хапха патне ҫитсен пахчаналла ҫаврӑнса.

Тӗлпулу ҫапла, пӗр сӑмахсӑр пулса иртет тесе шутламанччӗ Андрей Петрович.

«Сӑмах-юмахӗ кайран пулӗ-ха»,— тесе шухӑшларӗ те вӑл, шултрах мар симӗс хӑярсене картус ҫине тултарма пуҫларӗ.

Паҫӑр крыльца ҫинчи сакӑ ҫине пӑрахса хӑварнӑ фуфайкине пӳрте илсе кӗмерӗ Андрей Петрович, урине пӗҫертекен резинӑ аттине те крыльца ҫинех хывса хӑварчӗ. Пӳрте чӑлха вӗҫҫӗн ҫеҫ кӗрсе, кутамккине нар ҫине хучӗ, унта чикнӗ шур ҫӑкӑрпа колбасине тӗпелти кӗтесре ларакан пӗчӗк лутра сӗтел ҫине кӑларса хучӗ. Вара хӑй те сӗтел патне пырса ларса, лутра маччаллӑ пӗчӗк пӳрт ӑшне пӑхса ҫаврӑнчӗ.

«Тирпейлӗ тытать анне пӳрт-ҫурта. Пур кӗтесре те тап-таса. Рамри сӑнӳкерчӗксем те тап-тасах авӑ».

Тӗрӗссипе Укҫук инке пӳртӗнче шӑнисем те ҫук. Ара, ӑҫтан пулччӑр-ха вӗсем: килкартинче тап-таса, пӳртре те ҫавах,— вӗсене пулма апат-ҫимӗҫ те ҫук кунта.



Андрей Петрович стена ҫине ҫакнӑ рамкӑ патне пычӗ. Кантӑк айӗнчи темиҫе сӑнӳкерчӗке темле тимлесе пӑхсан та, вӗсенче вӑл хӑйне пӗрин ҫинче ҫеҫ, шкултан вӗренсе тухнӑ чухне пӗтӗм класпа ӳкерттернинче ҫеҫ курчӗ.

Ку акӑ, салтак тумне тӑхӑннӑскер, хура уссине тирпейлӗн пӗтӗрсе якатнӑскер, ун ашшӗ ӗнтӗ. Ай-яй, кӑкринче орденсемпе медальсем миҫе унӑн! Икӗ орден та тӑватӑ медаль!

«Маттур, атте. Ҫемье чысне ҫӳлте тытнӑ».

Пӗр кӗтесре, авӑ, ачалӑха та ҫухатман шап-шурӑ питлӗ хӗр ларать.

«Ай, хитре пулнӑ-ҫке пирӗн Анук!— тин ҫеҫ асӑрхаса илет Андрей Петрович.— Куҫӗ епле ҫутӑ унӑн, куҫ харшийӗ епле хура! Ма «пулнӑ» тетӗп-ха эпӗ? Халӗ те пур вӗт-ха вӑл».

Ҫатӑртатса ҫунакан вучахра тем чӑшӑлтатнине илтсе, Чистов кӑмака патне чупса пычӗ, хуран айӗнчех пысӑк ҫулӑмпа ҫунакан вутпуҫне айккинерех туртрӗ.

«Хуранӗ те кӑмаки пекех пӗчӗккӗ. Пӗччене ҫитет-ҫке. Пӗччене ҫеҫ мар, иккӗне те ҫитет»,— шухӑшларӗ вӑл, хӑй ҫинчен те аса илсе. Унтан каллех рамкӑ патне пырса, сӑнӳкерчӗксене сӑнама пуҫларӗ.

— Хӑвна шыратӑн пулӗ-ха унта, Андрей?— терӗ пӳрте пӗр сассӑр кӗнӗ амӑшӗ, сӗтел ҫине чӳлмек лартса.— Эсӗ унта пӗринче ҫеҫ, ыттисене пӗтӗмпех пуҫтарса кайрӗҫ. Кӑна та темле хӑварчӗҫ: те ача чухне ӳкернипе паллаймарӗҫ.

Амӑшӗн сӑмахне илтсенех тарӑхса кайнӑ Андрей хӑйне темскер аван мар пулнӑ пек туйрӗ.

«Ниушлӗ вӗсем мана хама ҫеҫ мар, ман сӑнара та ҫӗр ҫинчен тасатма шутланӑ вара?!»— тесе, амӑшӗ ҫине тӗлӗнсе те сиввӗнреххӗн пӑхса илчӗ вӑл.

— Чӑнах, чӑнах. Анчах эсӗ ан хурлан. Хӑв пулсан, патречӗсем пулӗҫ-ха вӗсем,— терӗ Укҫук инке, ывӑлӗн кӑмӑлне ҫемҫетме тӑрӑшса.

— Ҫук, анне, ним те хурланмастӑп эпӗ. Хурланнипе иртнине каялла тавӑрма ҫук вӗт-ха.

Амӑшӗ ҫине куҫ вӗҫертмесӗр пӑхса тӑракан Андрей асӑрхарӗ: унӑн вӑхӑтсӑр ватӑлнӑ сӑн-питне тӑруках тӗксӗмлӗх ҫапрӗ, ҫӑмламас хура куҫ харши кӑвак куҫа ҫутатса илме каҫӑрӑлсан ун ҫамки хут купӑс пек пӗркеленчӗ.

— Акӑ, турӑх илсе килтӗм. Эсӗ пит юрататӑн вӗт-ха ӑна. Хамӑрӑн ӗне тавращӗ ҫук та, сӗтне колхоз ферминчен сутӑн илетӗп.

Кĕçех çĕрулми те пиçет акă. Пиçрĕ те пулĕ-ха,— пĕрне кăларса пăхам-ха...

Амăшĕ, хуранти шыва сăрхăнтарса, сĕтел çине лартнă чашăка пăсне маччаналла мăкăрлантаракан çĕрулмипе тултарчĕ. Çав хушăра ывăлĕ салат валли хăярпа сухан турарĕ, колбасана çаврашкан-çаврашкан касса, пĕчĕк тимĕр тӳрелкке çине хучĕ.

— Эй, эсĕ, Андрей, ан васка-ха. Кунта ман çур литр казенкă пурччĕ. Анук туйĕнченех юлнăччĕ-ха вăл. Паян тутанса та пăхма юрать ăна,— терĕ те амăшĕ, таçтан, кăмака хыçĕнчен илсе тухнă çут кĕленчене сĕтел çине лартрĕ.

Ку «шыва» хăçан ĕçнине те астуман Андрейăн пуçне пĕр черкке ĕçсенех сĕрĕм карса илчĕ. Черкке хыççăн эрехе урăх тĕкĕнмерĕ вăл, апатне ытларах çирĕ. Çавăнпа пуçĕ те часах тăрăлчĕ унăн.

— Ну, анне, кала-ха: мĕнле пурăнан эсĕ кунта?— ыйтрĕ Андрей, тăраннине туйса çиме чарăнсан.

— Эпир мĕн, эпир чиперех,— ĕсĕклесе ячĕ амăшĕ, сĕтел çине куççуль патлаттарса юхтаракан куçне мар, çав куççульпе йĕпенекен сĕтеле саппун аркипе шăлса. Эпир мĕн, эпир йĕркеллех пурăннă. Эсĕ, апăрши, мĕнмĕн асап тӳсмерĕн-ши? Çавă чуна кастарать.

Амăшĕ çавăн чухлех куççуль тăкни халĕ Андрее пăсăрхи пек, тĕлпулăвăн пирвайхи самантĕнчи пек имшерлетсе ямарĕ. Хăйне çапла хăнăхтарса çитернĕ вăл: е унăн кăмăлĕ самантрах ирĕлсе каять те, вара куççульне витрипех тултар, е ун чун-чĕрине нимпе те çемĕçтереймĕн.

Халĕ те çаплах пулчĕ: амăшне шеллесе макăрмарĕ вăл, унпа пĕрле куççуль тăкмарĕ. Апат хыççăн эрехе черкке хыççăн черкке тултарса, амăшĕнчен çине-çинех ыйтма пуçларĕ.

— Вăрçă вăхăтĕнче епле пурăнкаларăн, анне? Вут-шанки те, апат-çимĕçĕ те пулман пулĕ ун чухне.

— Вут-шанки хамăр пĕчĕк пӳрте хутса ăшăтмалăх пулнă. Аçу сарай тулли вутă хатĕрлесе хунăччĕ. Ĕлĕк вăрман çывăхрачче те, халĕ инçене кайрĕ çав. Апатран хĕсепĕсе пурăнкаларăмăр: колхозран тырă сахал леккелерĕ, пахчара лартса тунă çĕрулми питĕ пулăшрĕ. Пире мĕн? Эпир, Анукпа иксĕмĕр, чип-чиперех пурăнтăмăр. Мана халĕ те Анукпа кĕрӳ пулăшаççĕ-ха. Пысăк çемьеллисем, арçынсăр тăрса юлнисем мĕнмĕн тӳсмерĕç-ши! Айтуру!

— Вăрçă нумай нуша кăтартрĕ çав çынсене. Ял та çаралсах юлнă, авă. Кил-çуртсем юхăнса кайнă, йывăç тавраш çук, сад-пахчисем пĕтнĕ.

— Ай, мĕн чухлĕ нуша тӳсрĕç! Кашни килтен пекех таврăнманни пур вĕт. Хăш-хăш килтен икшер-виçшер çын та пĕтрĕç. Арçынсем çеç мар, çамрăк хĕрсенчен те пĕтни пур. Йывăççене вĕсене касса пĕтерчĕç. Вăрманĕ те çаплах пĕтрĕ. Сад-пахчисем сиввĕпе шăнса пĕтрĕç.

— Ара, сивĕпе пĕтнĕ садсене хунатма çук пулсан ма çĕнни лартмаççĕ вара?

— Кама кирлĕ вăл сад? Ытлашши укçа никамăн та çук. Кашни улмуççишĕн налук тӳлемелле вĕт. Кавруk Иванĕ чĕртнĕччĕ, халĕ вăл та тĕпренех кăклать тет.

— Пирĕн килте выльăх тавраш пур-и вара, анне?

— Пур-çке. Виçĕ сурăх пур, чăх-чĕп пур. Нумай усрама вăйĕ çитмест. Выльăха пăхас пулать вĕт ăна.

— Колхоз мĕнле тата?

— Колхозĕ халь лайăхланчĕ. Мирон Иванччă аван тытать. Хурлама сăлтав çук.

— Ну, анне, епле пулсан та кĕркунне сад лартатăпах.

— Эсĕ хăв пĕлнĕ пек ту ĕнтĕ. Малашне хăв хуçа пул. Мана хуçа пулса çитрĕ ĕнтĕ, виличчен кăшт кансан та çылăх мар.

— Ай, анне! Вилĕм çинчен ма халех калаçатăн эсĕ? Самăй пурăнмалли вăхăт халĕ.

— Калаçмăттăм та ун çинчен, ывăлăм, ара, çулĕсем малаллах чупаççĕ-çке. Утмăла çитрĕм вĕт ĕнтĕ.

— Эсĕ, анне, çулсем иртеççĕ тесе кулянса ан лар-ха. Утмăл çул мĕн вăл. Курăн акă: иксĕмĕр мĕнлерех пурăнăпăр эпир! Кĕçех Ольăпа Вова та килĕç.

— Тем пекехчĕ те. Эсĕ татах çиетĕн-и? Çимесен пуçтарас пуль,— терĕ амăшĕ, хыççăр пукан çинчен тăрса.

— Çук, çук, анне, урăх çиместĕп. Пуçтарма эпĕ те пулăшам-ха сана.

— Пулăшма кирлĕ мар, Андрей. Кунта пуçтармалли те çук вĕт. Эсĕ ывăннă пулĕ-ха. Çенĕхе тухса кан. Унта сулхăнрах, кравачĕ те пур, вырăнне те сарнă.

— Чăнах, кăшт выртса илсен пит лайăх пулатчĕ. Ку эрех ĕçнĕ хыççăн ыйăх пусса кайрĕ мана,— терĕ Андрей, сĕтел çинчи тӳрелккесене кăмака патĕнчи сак патнелле йăтса утакан амăшĕ çине ăшшăн пăхса.

— Выртса канах, кан. Вăрăм çул ывăнтаратех вăл. Тухса вырт, лайăх унта. Мĕн чăлха вĕççĕн çӳрен. Авă, сак айĕнче аçун туфли пур. Тăхăн çавна.

Андрей ашшĕн хытса кайнă туфлине тăхăнса çенĕхе тухрĕ. Сарăнсах тăракан çемçе вырăна выртса пĕрре карăнса илсен, вăл, киле таврăннăшăн хĕпĕртесе, кăшт шухăша

кайма çеç ĕлкĕрнĕччĕ. Шăп çав самантра ăна пĕр сисĕнкĕсĕр капланса килнĕ йывăр ыйăх пусрĕ.

14

КОЛХОЗ ПРАВЛЕНИНЕ, хăйĕн ачалăхне ирттернĕ çурта кĕрсен Андрей Петрович сисмен çĕртенех тем çÿçенсе илчĕ. Ашшĕ-амăшĕ çурта укçалла сутнă пулсан та темле аван мар туйрĕ вăл хăйне.

Кунта пурте хальчченхи пекех: пÿлĕмсем те çавсемех — иккĕ, кăмака та ĕлĕкхи вырăнтах, алăкран кĕрсен сулахайра ларать, анчах вăл хальчченхи пек катмака мар, тăп-тăп çаврашка, çавăнпа малти пÿлĕм пысăклансах кайнă. Сылтăм енчи стена çумне вăрăм хĕрлĕ сак лартнă. Плакатсемпе тĕрлĕ картинăсем çыпăçтарнă стена çине телефон çакса янă.

Пÿрт ăшĕнче улшăнусем пур пулин те, вăл хăй ăшĕпе ĕлĕкхине аса илтерчĕ.

Чăланăн уçă алăкĕнчен Андрей Петрович сĕтел хушшинче ларакан хура сухаллă çынна, ун умĕнче тăракан комбинезон тăхăннă çамрăка асăрхаса илчĕ.

— Халĕ те хистетĕп, Мирон Иванччă, анчах тĕрлĕ пайсем çитмеççĕ-çке. Тума май пуррисене хамăрах тăватпăр. Пурне те тума пирĕн мастерской — завод мар-çке!

— Ах çав, машинă пайĕсемпе, ĕмĕр аптратаççĕ вĕсем. «Сельхозснаба» кĕрсе тух-ха, тен, унта пур. Гордей Павлович аса илĕ: какникак хамăн заместитель пулнă вĕт. Вĕçтер-ха киле, Саша, станцине кайма хатĕрлен. Çав хушăра эпĕ ун патне ăшă сăмах çырса хатĕрлĕп.

«Саша. Мĕнле Саша? Эй, вун тăвата çул хушшинче ялта пĕр Сашă çеç ÿссе çитĕннĕ-и? Эпĕ те вĕсене палламастăп, вĕсем те мана палламаççĕ», — шухăшларĕ Чистов, ниепле те вырăнта выртман сарă вăрăм çÿçне пĕрмай аллипе шăла-шăла илсе, алăк патнелле утакан тăрнаккай çамрăк çине пăхса.

Алăк патне çитсен, сасартăк теме аса илнĕ пек, йĕкĕт чарăнса тăчĕ, хыçалалла çаврăнса, Андрей Петрович çине кăвак куçне вылятса пăхрĕ. Çав самантра унăн шуранка илемлĕ пичĕ темшĕн тăруках хĕрелсе кайрĕ.

— Здрасте, пысăк калаçу пулнипе кунта çын ларнине те асăрхаман,— терĕ вăл, питне татах ытларах хĕретсе.

— Сывлăх сунатăп. Хĕрÿ ĕçсем çитсе пыраççĕ те, ун пекки пулать вăл,— çамрăка кăмăллăн пăхса ăсатрĕ Чистов.

Малти пÿлĕмри сасăсене илтсе пулмалла, Мирон Иванович алăкран пĕр урипе ярса пусса ыйтрĕ:

— Ман пата-и? Тархасшăн! Атту тухса кайма та пултаратăп.

— Сирĕн патаччĕ çав...

Андрей Петрович сак çинчен хыпаланса тăчĕ, чăлан алăкĕ патнелле утрĕ. Шала кĕрсен вăл, тĕпеле иртме хăюлăх çитереймесĕр, алăк патĕнче резинă атăллă урисене сиктеркелесе, сĕтел хушшинчен тухнă, сăрă гимнастерки çине орденсен планкине çакнă хура çын çине пăхса тăчĕ.

— Ма аплах пăхатăр? Пукан çине ларăр. А-а, гимнастеркă-и? Ку моднă. Халĕ вĕт гимнастеркă тăхăннă çынна çеç мар, погонсем çакман çынна та сайра хутра куратăн.

— Гимнастеркăран тĕлĕнместĕп эпĕ, Мирон Иванович. Гимнастеркăллă, погонлă çынсене эпĕ кунне вуншар, çĕршер курса пурăннă та-ха, вĕсенчен мĕн тĕлĕнĕп-ха. Сире палласа илме тăрăшса тĕлĕнтĕм эпĕ. Ĕлĕк çап-çара янахлăччĕ, халĕ, авă, епле сухал ÿстерсе янă.

— Ĕлĕк тетĕн. Ĕлĕк çамрăк пулнă. Халĕ, авă, алла çитсе пыратăп. Тĕнчере ун чухлĕ пурăнакан çынна сухалсăр çÿреме простă намăс.

Мирон Иванович хура кăтра сухалне сылтăм аллипе якаткаласа илчĕ, унтан, кăкăр кĕсйинчен пĕчĕк симĕс тура кăларса, ахаль те тирпейлĕ выртакан хура çÿçне, кăшт-кашт кăвак пĕрчĕсем эрешлентернĕскерне, ик-виçĕ хут турарĕ.

— Пастай, пастай!— кăшкăрсах ячĕ вăл, турине чикнĕ кĕсъене ниепле те тÿмелеймесĕр.— Кампа калаçатăп-ха эпĕ? Чистов, эсĕ-и ку? Андрей Петрович?!

Мирон Иванович сĕтел тавра ачалла çăмăллăхпа чупса çаврăнса, Чистова вăйлă аллисемпе ыталаса илчĕ, унтан, ăна хулпуççинчен ярса тытса, ик-виçĕ хут турткаласа силлентерчĕ.

— Ну, лар-ха, лар. Каласа пар: мĕнле кун-çулпа, мĕнле майпа?

— Мĕнле майпа? Вăт, тĕрмерен ларса тухрăм, ссылкăра пултăм. Халĕ, акă, киле ячĕç.

— Ку аван, аван. Тĕрĕслĕх чăнлăха тупатех апла. Ай, нумай тÿсме лекрĕ пуль! Вăрçă вăхăтĕнче пире те, ирĕкрисене те çăмăлах пулмарĕ. Анчах эсир мĕнле тÿссе ирттернĕши çав йывăр çулсене? Миçе çул тÿсме тиврĕ-ха?

— Кĕçех вун тăваттă çитет.

— Ну, юрать-ха, сывах, чип-чиперех килнĕ, ку — лайăх,— терĕ Павлов, калаçăва урăх енне куçарасшăн пулса.— Мĕнле плансем пур санăн, ăçта пурăнма шутлатăн?

— Ма ăçта? Ман тăван кил те, анне

те пур вĕт. Аннепе пĕрле пурăнатпăр. Кăшт вăхăтран çемье килет акă: арăмпа ача.

— Ах, да, сан аннӳ пурччĕ-çке. Аçу вăрçăра пĕтрĕ пулмалла. Ой, мĕн чухлĕ çын пĕтмерĕ вăрçăра! Уксах-чăлах мĕн чул!

— Вăрçа яма ыйтса эпир те тем чухлĕ çыртăмăр. Унта çĕрсе пĕтиччен çапăçу хирĕнче пуçа хывни лайăхрах пулĕччĕ. Çук, ямарĕç пире. «Халăх тăшманне» вăрçа епле ярăн, вăл фашистпа «туслашма» та пултарать вĕт.

Андрей Петрович председатель кăкăрĕ çине ăмсануллăн пăхрĕ: икĕ «Слава» та татах икĕ орден, медальсем мĕн чухлĕ! Маттур Мирон Иванович, ял ятне яман».

Хăй çине тинкерсе пăхнине сисрĕ те председатель, аллипе орденсен планкине сăтăрса илчĕ:

— Э-э, Андрей Петрович, ман çине мĕн пăхмалла. Ялта, тусăм, кăкăр тулли орденлĕ çынсем те пур. Авă, кунтан тухса кайнă çамрăка куртăн пулĕ? Вăрçа вун саккăрта кайрĕ вăл, пĕр çулталăк хушшинче «Слава» орденĕн кавалерĕ пулса килчĕ. Танкист вĕтха вăл.

— Кам ачи вара вăл, ун пекех паттăрскер?

— Паллаймарăн-и? Впрочем, паллама çук та пулĕ çав. Эсĕ хăв миçемĕш çултиччĕ-ха?

— Вун виççĕмĕш. Вырăссем калашле, «чертова дюжина». Çавăнпа телейсĕр пулчĕ пулмалла ман пурнăç.

— Ха, сана тĕшмĕш çыпăçма пуçланă-çке. Ĕлĕк ытла активлă çамрăкччĕ-çке эсĕ, Андрей Петрович.

— Вăл ĕлĕк, тахçан аван пулнă, Мирон Иванович. Халĕ эпĕ çамрăк та мар, коммунист та мар, пĕр сăмахпа каласан, чиркĕве кайса, çӳлти турра пуç çапса, лайăх пурнăç ыйтасси çеç юлчĕ.

Чистов йăл-йăл кулчĕ, председателĕн йăлтăркка куçĕнчен пăхрĕ.

— Эсĕ шӳтлеме те ăста-çке,— тути çине кулă палли хыврĕ лешĕ те.— Паçăрхи çамрăк — Саша Гурьев вăл. Пирĕн аслă механик. Тури касри Куртук Ваççи ачи вăл.

— Ну! Ай, епле ӳссе кайнă! Кăшт астăвкалап ăна. Манран вун виç-вун тăватă çул кĕçĕнрех те-ха вăл, ăçтан тӳрех палласа илен.

— Çамрăксем ӳсеççĕ вĕсем. Тӳррипе калас пулсан, вăрçă вăхăтĕнче колхоз хĕрарăмсемпе ача-пăчасем çинче тытăнса тăчĕ. Спасибă вĕсене колхоза юхăнтарма паманшăн.

— Çынсем калана тăрăх пирĕн колхоз самăй тĕрекли мĕн...

— Ничево, аптрамастпăр. Пирĕн халăхĕ лайăх ĕçлет, колхоз ĕçне ватти-вĕтти те тиркемест... Тарăнçырма юнашарах авă. Вĕсен çĕрĕ те пирĕннинчен лайăхрах. Анчах çапах та вăрçă пĕтнĕренпе тырă парса курман-ха. Выçăлла кам ĕçлетĕр колхозра. Çын та юлман унта: хулана та чукун çул çине тарса пĕтнĕ. Яла юлнисем те колхозра ĕçлемеççĕ. Пахчара чакаланнипе, кăшт-кашт выльăх усранипе тăранкаласа пурăнаççĕ. Çемье çинес сĕт-çăва станцăна кайса сутаççĕ те хĕрарăмсем, унтан ик-виçĕ кун пурăнмалăх çăкăр илсе килеççĕ. Станцăра сĕт-çу, çăмарта сутакан хĕрарăмсене курсан, пассажирсем: «Ай, ку колхозниксем епле лайăх пурăнаççĕ!» — теççĕ пулĕ-ха. Чăнах, лайăх пурăнакансем те сахал мар. Анчах çав станцăна сĕт-çу йăтакан хĕрарăмсем сĕт-çу тутанса пăхаççĕ-ши хăть? Çĕр улми пултăр вĕсене, яшка-шӳрпепе çиме çăкăр пултăр. Унтан лайăх пурнăç çук вара вĕсемшĕн.

— Каймалли пур теттĕрччĕ-çке эсир, Мирон Иванович. Эпĕ тытса тăмарăм-и сире?

— Ах, чăнах та-çке. Эсĕ, Андрей Петрович, хăвăр çуртра правлени вырнаçнишĕн çиленместĕн-и?— сасартăк аса илтерсе, Чистовăн чун-чĕрине тепĕр хут ыраттарчĕ председатель.

— Çиленместĕп-çке, ма çиленес. Йăлтах урăхла, анне каланă тăрăх, пысăк çурта сутса пĕчĕк çурт туни вĕсемшĕн çăлнăç пулнă,— терĕ Андрей Петрович хăй хумханнине палăртасшăн мар пулса.— Мирон Иванович, эпĕ сирĕн пата ĕçпе килнĕччĕ...

— Мĕнле ĕç тата?— ыйтрĕ председатель, ура çине тăрса.

— Мĕнле ĕç. Кирек мĕнли пултăр. Шкула кайсан, мана унта илес çук ĕнтĕ. Ачасене вĕрентме юрăхлă çын мар эпĕ. Эсир, шанатăр пулсан, кирек мĕнле ĕç парăр.

— Кирлĕ мара ан калаç-ха эсĕ, Андрей Петрович. Мĕнле «шанатăр пулсан»? Ыранах кил, эпĕ сана настоящи ĕç тупса парăп...

Урама тухсан, Андрей Петрович: «Председатель мĕнле «настоящи» ĕç тупса паратьши вара?» — тесе чылайччен шутласа пычĕ. Унтан вăл: «Эй, мана çавах мар-и? Ку таринччен мĕн-мĕн туман пулĕ: çĕр те чавнă, чул та каснă, кирпĕч пӳрт те купаланă, вăрман та каснă, шахтăра та ĕçленĕ, шурлăх та типĕтнĕ...»

15

ПĂРÇА ХУРАЛÇИНЕ лартсан, чи малтан Андрей Петрович хăйне вýртса-тăма хӳшĕ турĕ. Хӳшшине вăл ытти хуралçăсем пек хӳтĕ айлăм вырăна мар, Энĕш хĕрринчи мăкăра туса лартрĕ.

Çамкара пурте курăнать хуралçăна: ялтан пĕр çур çухрăмран пуçланакан пăрçа

пусси те, Энĕш хĕрринчи айлăма лартнă хăярпа помидор йăранĕсем те. Купăста та нумай унта. Купăстине никамах та тивес çук ĕнтĕ, анчах хăярпа помидорне пĕрер те пулин татса пăхмасăр иртекен пулас çук. Хăярпа помидор укçа-тенкĕ паракан япаласем вĕсем. Колхоз эрнере пĕрер машинă тиесе яратех вĕсене станцăна. Унта çав çимĕçсемпе суту-илӳ тăвакан çук: поездсемпе çӳрекен пассажирсене те лайăх, колхоз та сахал мар пайта илет.

«Ах, пултарать-çке, Мирон Иванович! Ăс çитернĕ вĕт ку çимĕçсене çавăн чухлĕ лартма».

Андрей Петрович хăярпа помидор йăранĕсене уйрăмах сыхлăн хураллать: кăнтăр кунĕнче хăйне пулăшакан Петюк Энĕш хĕрринчен те хăпма пĕлмест.

Çынсене пĕтĕм пуссипех ешĕрсе выртакан пăрçа та илĕртет. Халĕ вăл, симĕскер, сапакисем тулса çитнĕскер, уйрăмах сĕтеклĕ. Çавăнпа Энĕше шыва кĕме пăрçа хушшинчи çулпа çӳрекен ачасем ăна тымарĕпех татмасăр иртме пултараймаççĕ.

«Сапакине çеç татчăрччĕç хуть, сапакине татса çинипе нумай пĕтес çук: симĕс пăрçана нумай çиме çук ăна,— шутлать Андрей Петрович.— Шельмă ачисем, тымарĕпе тăпăлтараççĕ вĕт. Ӳссе çитменнине мĕн чухлĕ сая тăваççĕ».

Пĕрреччен çапла, шăрăх кун, пĕр ушкăн ача пăрçа хушшипе Энĕш хĕрнелле аннине асăрхарĕ вăл. Лешсем пăрçа ăшнех кĕрсе кайрĕç те, ăна тымарĕпех тăпăлтарма пуçларĕç. Андрей Петрович хӳшĕ патĕнчен çул çине чупса тухрĕ, ачасене хирĕç утрĕ. Ăна курсанах ачасем тăпăлтарнă пăрçана ывăтма пуçларĕç. Андрей Петрович вĕсем тĕлне çитсен ачасем ним пулман пек пĕр-пĕринпе пакăлтатса утса пычĕç.

Андрей Петрович пăрахнă пăрçа тымарĕсене çĕклеме пуçтарчĕ те, ачасен ушкăнĕ патне тухрĕ.

— Найăр, илĕр. Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ пăрçа сая каять кунта. Татрăр пулсан çисех ярăр,— терĕ вăл тăп чарăнса тăнă ачасем çине сиввĕн пăхса.

— Урăх тăпăлтармастпăр, Энтрей пичче, — пуçне çĕклеме хăяймасăр хуравларĕ путек çăмĕ пек кăтрашка хура çӳçлĕ кăнттам ача.

— Ку аван. Ăнлану пур мĕн сирĕн. Сапакине çеç татнă пулсан, тен, сире нимĕн те каламăттăм. Капла мĕн чухлĕ пăрçа сая каять-ха. Кăна илĕр ĕнтĕ, ку ахалех пĕтет.

Ачасем хăюсăррăн утса пычĕç, Андрей Петрович аллинчи пăрçа тымарне именсе илчĕç. Вара, ун патĕнчен кăшт пăрăнсанах,



пĕчĕк тихасем пек сиккелесе, Энĕш хĕрнелле чупрĕç.

Кăнтăрла умĕн, хĕвел самаях хĕртме пуçласан, пĕр аллипе вăлта аври, тепринпе котелок йăтнă Петюк Энĕш хĕрринчен улăхрĕ те котелокне хӳшĕ умне пырса лартрĕ.

— Э-э,— терĕ Андрей Петрович, котелокри шывра ярăнса çӳрекен сарă карас чĕппине курсан.— Пулли пит вĕтĕ-çке Энĕшре.

— Вĕтĕ сана. Пĕркун Ваççа пичче атмапа ай-ай мĕн пысăкăшшисене тытрĕ! Пĕве хысĕнче ишсе çӳрекен партассем пекех,— хирĕçлерĕ Петюк.

— Эсĕ мĕнпе тытрăн вара вĕсене?

— Ăманпа.

— Э-э, тусăм! Караса ăманпа тытмаççĕ. Ăна пиçнĕ çĕр улмипе хутăштарса чăмаккаланă çăкăрпа тытас пулать. Шăрши техĕмлĕрех пулма çăкăр чăмаккине кантăр çăвĕпе лӳшкĕнтерсен аван. Ну-ка, вăлтине кăтарт-ха.

Андрей Петрович ача вăлтине алла илсе пăхрĕ.

— Çук, Петюк. Ку вăлтапа пулă тытаймăн. Çиппи вĕрен пек хулăн, вăлти якăр пек пысăк. Пулла улталама çинçе çип, пĕчĕк вăлта кирлĕ, вăлта хăмине хур шăмминчен тусан пит лайăх пулĕччĕ.

— Хур шăмми-и? Хур шăммине Энĕш хĕрринче тем чухлех тупма пулать. Кайса пуçтарас-и? — терĕ Петюк ура çине сиксе тăрса.

— Вĕçтер-ха, пуçтарса кил. Эсĕ киличчен эпĕ çиппине çыхса хатĕрлĕп. Вăлта аврисем вăрăмрах пулсан пит аванччĕ. Ну ăна эпир хăвалăхра тепĕр чух касăпăр. Халлĕхе кусем те юрĕç-ха. Хур шăмми илсе килсен йĕркеллĕ вăлта тăвăпăр та, кăнтăрла иртсен пулă тытма кайăпăр.

*(Юлашки пулать)*

# Çĕр сурăнĕ

Куçма ТУРХАН

*Роман**

Дневник вĕçĕнче аслашшĕ чăтайман, хăйĕн тĕп шухăшне тепĕр хут çырнă:

«Çапах та, ман шутпа, çитес çулсенче çутçанталăкăн халиччен этеме парăнман вăйĕсене парăнтарас ĕçре, вăл шутра çырма-çатрасемпе кĕрешес ĕçре те, çĕнĕ тапхăр пуçланмалла пек; ку тапхăр вăл пирĕн умма тухса тăнă пысăк задачăсемпе çыхăннă, вĕрçĕнĕ техникăпа çыхăннă. Яла кунсеренех хăватлă машинăсем килеççĕ. Колхозсене кирлĕ тĕлĕнмелле машинăсем кăларасси — малашĕ. Пĕлсе усă курсан, вĕсем этем алă вĕççĕн вуншар çул хушшинче аран-аран тунă ĕçе темиçе эрнере е темиçе кунта туса парĕç. Пирĕн çĕр-анне сурансенчен тасалĕ. Çынсем çĕрĕн кашни пĕчĕк лаптăкĕпе усă курма тытăнĕç. Пур çĕрте те ешĕл курăк, илемлĕ чечек, улма-çырла йывăççи куçа çисе ларĕ. Пур çĕрте те сад, вăрман кашлĕ. Этемпе çĕр пĕр-пĕрне юратакан, пĕр-пĕрне чунтан хисеплекен арăмĕпе упăшки пек туслă пурăнĕç...»

Никодим сĕтел çинчен кăранташ илчĕ те юлашки тетрадьне сиркелеме тытăнчĕ. Таçта çакăнта тĕрĕсех мар калană вырăн пурччĕ аслашшĕн, паллă туса хумалла ăна манса кайиччен, кайран старике кăтартмалла. Акă вăл страницă. Унта аслашшĕ тип варсене мĕнле пĕтересси çинчен çырать. Темскер, килĕшсех каймасть Сидор Васильч сĕнекен меслет Никодима. «Май пулсан, мĕн пур тип вара пĕр çултах йывăç лартса хăварма вăй çитсен, ма унашкал черет тумалла вара?— тет вăл, çав диалог тĕлне пысăк ыйту палли лартса.— Тип варсенче çӳретнипе нумаях тăрантараймăн выльăха. Ку ыйтăва урăхларах татса парас пулать. Ак эпир тип варсене ним карта тытмасăр, йывăç лартмасăр пĕтеретпĕр, курса тăрăр».

Çавăнтах Никодим ластик илет те хăй лартнă ыйту паллине тăрăшса хуратма пуçлать. Мĕнле тивĕç пур унăн аслашшĕн дневникне кăранташпа тĕрлесе тухма? Пăртак та пулин пулăшнă-и вăл Архип Лукича çырмаçатрасемпе кĕрешме? Тепĕр тесен, вăл тетрадьсене те вăрттăн çеç вуларĕ, тĕрĕссипе, ним шарлама та юрамасть-ха ун çинчен.

«Çапах та пултарать ман асатте,— шутларĕ Никодим, мĕн пур япалине хăй вырăнне хурса.— Çырнă вĕт-ха, тăрăшнă. Пĕр-пĕр романа кĕртме кичемрех ĕнтĕ, анчах пĕлсе çырнă. Старик темерĕн, тепĕр çĕрте танлаштарусемпе çавăрттара-çавăрттара хурать! Аристарх Петровича кăтартасчĕ ку дневника. Мĕн каланă пулĕччĕ-ши? — Çавăнтах вăл хăйĕн шухăшне сирсе ячĕ.— Çук, ăна кăтартма юрамасть. Унта калани нумайăшĕ председателе пырса тивет, мана пырса тивет. Пирĕн пек çĕре муталакан пуçлăхсемпе специалистсене хирĕç çырнă асатте ку тетрадьсене».

Темшĕн-çке, çамрăк агроном хăйне çавăн пек çынсемпе пĕр виçене лартмасть. Шухăш тĕллĕн вăл ĕнтĕ аслашшĕне хӳтĕлекен, ăна пулăшакан çын пулса тăнă. Анчах камран хӳтĕлемелле старике? Тепĕр чух ăна нимпе те ăнланасшăн пулман председательтен-и? Вĕсем пĕр-пĕрин тĕлĕшĕнчен тăшмансем-ши вара? Çук пуль, тет Никодим. Ав Яштайкин çулла Архип Лукичпа пĕрре те вăрçса пурăнмарĕ, звено валли ялан машинсем парса тăчĕ ăна. Çамрăк агроном старике мĕнле пулăшмаллине пĕлет: нимрен ытла бульдозер кирлĕ Архип Лукича. Ак правление каять те вăл, председательпе бульдозер пирки тепре калаçать. Чăнах, бульдозер питĕ çăлнă пулĕччĕ вĕсене. Аслашшĕ тĕрĕс çырать, унпа тем тума та пулать колхозра. Тип варсене ун йышши машинсемпе тикĕслenине курман-ха Никодим, кам пĕлет, тен, ку ĕçе те пултарать вăл хăватлă машинă.

* Юлашки.

Хăй тĕллĕн сĕмленсе ларнă майăн, агроном ҫитес вăхăтра, уй-хир кăшт пушансан тумалли ĕҫсене палăртать: бригадирсемпе пĕрле хирсене тепре тĕрĕслесе тухса, мĕн пур ҫырма-ҫатрана пĕр утăм сарлакăш канавсем таран шута илмелле, аслашшĕ валли те, хăйне валли те ҫĕнĕ карттă тумалла. Ҫав карттă ҫинче тип варсемпе ҫырма-ҫатрасем йывăҫ тупанĕ ҫинчи пек курăнса тăччăр.

Тата тепĕр шухăш ҫуралчĕ унăн ҫав тетрадьсене вуланă хыҫҫăн: ҫырма-ҫатрасемпе кĕрешес ыйтăва ял Совет сессинче лартмалла. Ялти актив каласҫăр ун ҫинчен, колхозниксем хăйсем сӳтсе явччăр.

## ВУН ВИҪҪĔМĔШ СЫПĂК

I

— КĔР, КĔР, МĔН АЛĂКРАН пăхса тăратăн? — терĕ Лукьяненко, Яштайкина ҫурăмĕнчен кăт-кат тĕксе.

— Эпĕ темиҫе хутчен шаккарăм — никам та сасă памасть, ҫавăнпа уҫса пăхрăм, — именнĕ пек хуравларĕ Аристарх Петрович. — Секретарь помощникĕ те ҫук сирĕн...

— Ача ĕмĕртме килне чупрĕ-ха. Хам сирĕн Шевлене ăсатса ятăм, — ăнлантарчĕ райком секретарĕ.

— Таврăнчĕ апла пирĕн старик?

— Килсе ҫитрĕ. Эс кунтине пĕлмен, хам машинăпах леҫме хушрăм.

— Вăл ман пек начар ҫынпа ҫӳремест, Николай Платонович. Хулара тĕл пултăм та ăна виҫĕм кун, яла хамăр машинăпа таврăнма сĕнтĕм. Ун пек ҫемҫе машинăпа ҫӳреме хăнăхман эпĕ, автобуспах каятăп, тесе хучĕ. Кăшт кутăнрах ҫын вăл, пирĕн Архип Лукич.

— Кутăнрах тетĕн?

— Ҫавнашкал пулмасăр! Пуҫне пĕр-пĕр ухмах шухăш пырса кĕрет те вара, тинкене илет манăнне старик. Кирек те мĕнле ĕҫе вăл шутланă пек тумасан — юнтарать. Новосиле те юнтарса тухса кайрĕ. «Ма каятăн унта?» — тетĕп. «Кирлĕ», — тет. Мĕн тума кирлĕ-ши ăна — пĕлместĕп. Специалист мар, ученăй мар, нимле институт та ямасть ăна...

— Ман шутпа, ҫапах та специалист, — сăмах хушрĕ Лукьяненко. — Штатра тăмасть, должноҫĕ ҫук унăн, анчах специалист. Хăйĕн ĕҫне лайăх пĕлет.

— Ĕҫре маттур ĕнтĕ. Вут пек ҫунса тăрать, — терĕ Яштайкин. — Кăҫал мана лайăх кукурузă ӳстерсе пачĕ. Ватăрах пулмасан, эп ăна хам заместитель туса хунă пулăттăм, Николай Платонович. Ҫулĕ ытларах-ҫке старикĕн.

— Кирлĕ мара каласатăн, — терĕ Лукьяненко. — Шевле ăҫтан ватă пултăр? Вăй питти ҫын темелле халь ăна.

— Ҫапах та чирлекелет. Куратăн пуль, ҫын утмăлтах кукăр патак тытнă. Тепĕр тесен, кĕркунне шутласа пăхас пулать. Мана шăп ҫавăн пек заместитель кирлĕ, вут пек ҫунса тăраканни.

— Ку шухăш мана та килĕшет, председатель. Ĕҫлеттересчĕ, ытларах ĕҫлеттересчĕ Шевлене. Вăйлă пулăшнă пулĕччĕ вăл сана. Анчах, заместителе лартсан, килĕштерейĕн-и эсĕ унпа? Хивре этем-ҫке эсĕ пит...

— Ну, ĕнтĕ ун чухне ман хамăн кăмăла ҫемҫетмелле пулать. Хальхи пек тӳрккесленме юрамасть.

— Халь чăртмахрах хăтланатăн апла?

— Пулкалать, — тунмарĕ Яштайкин. — Шевлене те ахалех кӳрентертĕм пĕр эрне каялла. Вăл ĕнтĕ ăна ĕмĕр манмасть. Ҫу-ук, куна вăл каҫармасть!

— Каласа пар-ха, каласа пар, — терĕ Лукьяненко ăшпиллĕн.

— Мĕн каласси... Новосиле кайма укҫа памарăм.

— Ан тĕлĕнтер, Аристарх Петрович!

— Чăнах, ара. Пырса кĕчĕ те пуҫларĕ ҫырма-ҫатрасем пирки тем те пĕр лăпăртатма. Эпĕ ун пек сăмаха юратманнине пĕлет, пурĕ пĕр чарăнаймасть. Темле майпа: эс мана хăвăн ҫырму-ҫатрусемпе йăлăхтарса ҫитертĕн, тесе хутăм. Апла каламалла марччĕ, паллах. Ну, вăл йăлтах вирелле тăчĕ. Этемле пуплеме те пĕлместĕн эсĕ, председатель, апла та капла, тет. Ҫавăнтах тата хăй командировкă ыйтать. Тарăхнă вăхăт пулчĕ пулĕ манăн. Хут туса паратăп, укҫа параймастăп, терĕм. Тавтапуҫ, ырă председатель, хутне ăна сансăр пуҫне те туса парĕҫ-ха, тесе тухса кайрĕ.

— Чипер калаҫнă пулсан, тупса параттăнччĕ-и укҫа? — ыйтрĕ Лукьяненко.

— Параттăм. Колхозра пĕр ҫынна Орел облаҫне ямалăх укҫа пурах ĕнтĕ вăл.

— Эп те ҫапла шутлатăп. Ну, халь мĕн тăвас тетĕн ĕнтĕ Шевлепе? Яла ҫитсен мĕн калас тетĕн ăна?

— Тӳлемелле пуль, — терĕ Яштайкин.

— «Пулĕпе» мар, тем тесен те тӳлемелле, Аристарх Петрович. Йăлтах парса тат ăна, мĕн пур расхутсемшĕн тӳле. Питĕ хитре мар пулса тухнă санăн, председатель. Кун пек райкома та намăс. Шевлене юнтармăш ҫын тетĕн те, ҫук, вăл мар, эс ху юнтармăш. Курăр-ха, тупăннă председатель: майлă калаҫсан — парать укҫа, кăшт хирĕҫме тăрсан — памасть, хăваласа кăларса ярать. Ун пек принциппа ĕҫлесен, пĕтрĕмĕр пуҫ, тăванăм. Эппин, сан пирки кунта пĕр ҫын питĕ тĕрĕс

коларĕ: Яштайкин ҫынсемпе ĕҫлеме пĕлмест, терĕ.

— Кам-ха вăл, ун пек калаканни?— кăсăкланса ыйтрĕ Аристарх Петрович.

— Хăвăр ял ҫынни. Ятне каламасан та пырĕ.

— Шевле-и?

— Ҫук, пачах урăх ҫын. Пĕр ĕҫпе ман пата кĕҫĕ те, калаҫса кайрăмăр. Нумай интереслĕ япала каласа кăтартрĕ вăл мана.

— Хурлать апла Яштайкина?

— Хурланăран мар,— чарчĕ ăна Лукьяненко.— Ан васка эсĕ, йĕркипе итле. Секретарь юлташ, ут тени тĕрлĕ пулать,— терĕ вăл,— хăшпĕр ута тĕпе кӳлме юрать, тепĕрне пичеве кӳлме юрать. Ак эсир пирĕн Яштайкина тĕпе кӳлнĕ. Анчах вăл, тĕрĕссипе илсен, пичев лаши кăна. Тĕпре, турта хушшинче, вăл ĕрĕхсе кайса урапана ҫĕмĕрсе пăрахма пултарать. Пичевре ун усси пысăк пулма кирлĕ, мĕншĕн тесен — вăйлă лаша, терĕ. Сисетни, мĕнле тĕртет вăл сана, Аристарх Петрович?

— Сисетĕп. Влаҫ пама юрамасть мана, пуҫлăх тума юрамасть, ялан ҫын хӳттинче ĕҫлеттермелле, тилхепене хытă тытса пымалла.

— Итле, вăл тата каларĕ-ха сан пирки. Пирĕн Яштайкиншăн ялти халăх ĕҫ вăйĕ кăна, тет. Ҫуркунне тырă акса хăварма кирлĕ ăна эпир, ҫулла — тырă вырма, кĕркунне — авăн ҫапма, тет. Пире пуҫ ҫапман та пулĕччĕ те вăл, анчах халлĕхе машинăсем ҫынсемсĕр ĕҫлейменҫĕ-ҫке, пĕтĕм ĕҫе машинă вăйĕпе тăвасси патне ҫитмен-ха наукă. Эпир унщăн винтик, кирек ăҫта лартмалли, кирек ăҫта кăларса ывăтмалли винтик, тет.

— Ҫаплах калать эппин?

— Ҫаплах калать.

— Эс мĕнле шутлатăн, Николай Платонович?— терĕ Яштайкин куларах.

— Эп — секретарь. Манăн ҫын каланине те итлемелле, хамăн та пăртак тĕшмĕртмелле. Хамăр хушăмăрта каласан, ҫав ҫын сăмахĕсенче тĕрĕсси те сахал мар пек туйăнать. Ҫынсен ĕҫне хакламасăр тăни пурах санăн. Лайăх организатор ху, вĕренессе те нумай вĕреннĕ, анчах пурнăҫран каярах тăрса юлнă. Халăхпа ĕҫлеме пĕлместĕн. Тепĕр председатель пулсан, Шевлене алă ҫинче йăтса ҫӳремелле, май пур таран кашни утăмра пулăшмалла ăна, эсĕ ялан ура хурса пыратăн. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен эс ку таранччен те Шевле чунне ăнланса ҫитеймен-ха, председатель юлташ, вăл канăҫне ҫухатса, ҫыврас ыйхине татса камшăн ҫӳренине пĕлме тăрăшман. Шевле пеккисен халăх ĕҫĕпе ăҫта та пулин каймалла-тăк, укҫа шел саншăн, ху каяс пулсан, укҫа та, тем те тупăнатчĕ-ха. А вĕт ҫав ҫынсем, Архип Лукич пеккисем, пирĕн колхозсемшĕн чунне параҫҫĕ. Асту, хăвна ҫапла улпутла тытсан, инҫе каяймастăн, председатель. Сана эп юлташла асăрхаттарса хуратăп...

— Тавах ыр сăмахушăн. Ӳлĕмрен асра тытăп.

Те шӳт туса, те чăнласа каларĕ ҫак сăмахсене Яштайкин, Лукьяненко ăна сиссе юлаймарĕ. Сĕтел ҫинче телефон чăнкăртатрĕ. Секретарь такампа хыҫлă тенкел ҫине вырнаҫсах, аллинчи кăранташĕпе тем ҫырса пырсах калаҫрĕ, унтан каллех Аристарх Петрович ҫумне пырса ларчĕ.

— Обком секретарĕпе сăмахларăм. Шевле пирки ыйтать,— терĕ вăл.

— Шевле пирки ыйтать? Унта та кĕрсе тухнă-ши старик?

— Кĕнĕ пулмалла. Обком секретарĕ: «Мĕнле этем вăл?»— тет. Эп мĕн тавăрса каланине илтрĕн пуль?

— Илтрĕм.

— Вăт ҫавăн пек, председатель. Эс старике хĕсĕрлеме пăрах. Вăл пысăк ĕҫ тăвать. Обком секретарĕ те ҫаплах каларĕ. Сисетĕп эп, сана Архип Лукичăн чĕлхи йĕплĕрех пулни, старик сăмаха ялан тӳрĕ пени кăмăла каймасть. Унран хăрама кирлĕ мар, Аристарх Петрович. Ятлатăр тепĕр чухне пире. Ҫавăн пек хастар ҫынсем кашни утăмра тĕрткелесе, хускаткаласа тăмасан, пухусемпе конференцисенче пит хĕреличчен, ҫамкана вĕри тар тапса тухиччен критиклемесен, эпир санпа иксĕмĕр тахҫанах хулăн тирлĕ пулса кайса ҫĕрсе пăнтăхма пуҫланă пулăттăмăр.

— Вăл стариксен вăйне пăртак ӳстермесне, секретарь?— хирĕҫлеме тăчĕ ăна Яштайкин.

— Ҫук, пĕрре те ӳстерместĕп. Ним чухламан этем пек ан тыт хăвна. Эп кунта Шевле ҫинчен мар, стариксем ҫинчен мар, урăххи пирки калатăп. Эпир тепĕр чух «пĕчĕк» ҫынсен сăмахне, халăхран тухакан пуҫарăва ним вырăнне те хумастпăр. Хамăр ҫеҫ ăслă, хамăр ҫеҫ пурне те пĕлсе тăратпăр имĕш. Пурнăҫра ав пĕтĕм ĕҫ пуҫлăхсенчен кăна килмест. Нумай чаплă ĕҫсем халăхран тапранса каяҫҫĕ. Сан Шевлӳ ҫырма-ҫатрапа кĕрешме пĕтĕм район халăхне ҫĕклесшĕн. Ак эпир ҫитсе курман-ха, вăл ҫак таврари мĕн пур ял ҫĕрне ҫитсе курнă, ҫĕре хăш ялта мĕнле тытнине колхоз председателĕсенчен лайăх пĕлет. Паян калама пуҫларĕ те, тĕлĕнсе итлесе лартăм.

— Вара мĕн?— терĕ Яштайкин.

— Вара ҫапла калаҫса таталтăмăр: уй-хир ĕҫĕсенчен кăшт пушансан, районра мĕнле те пулин канашлу ирттеретпĕр. Унта Архип Лукич доклад туса парать. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм.

— Ну, апла пулсан, хăвăн ĕçӳсем мĕнле пынине каласа кăтарт. Тыр вырса пĕтертĕр-и?

— Пĕтертĕмĕр.

— Тухăçлăхне тепĕр хут тĕрĕслерĕр-и?

— Тĕрĕслерĕмĕр, акă, курăр...— Яштайкин ялан хăйĕнпе пĕрле илсе çӳрекен сăран папкинчен таблицă туса çырса тултарнă хутсем кăларса пачĕ. Секретарь кăçалхи цифрăсене пĕлтĕрхи цифрăсемпе танлаштарчĕ, вĕсенчен хăшне-пĕрне блокнотне çырса хучĕ.

— Ну, патшалăха памалли парăмсене тататăр пуль? Сирĕн парăмсем нумай вĕт. Ун çинчен шутласа пăхман-и правлени членĕсемпе?

— Шутланă. Вăй çитмест, Николай Платонович. Эпир кăçал, хавхалантарас тесе, колхозниксене ытларах валеççе парасшăн. Ку маншăн, çĕнĕ председательшĕн, çав тери кирлĕ.

— Кивçен илнине хăçан паратăр?

— Тепĕр çул.

— Тепĕр çул та çаплах юрламăна?

— Мĕнле калас...— турткаланчĕ Яштайкин.— Эпир хамăр тĕллĕн çапла йышăнтăмăр: мĕн пур парăма каçарма ыйтас тетпĕр. Вăй çук пирĕн кивçен илнине парса татма, Николай Платонович!

— Сасăласах йышăнтăр-и ăна?— питĕ ĕçлĕн ыйтрĕ Лукьяненко.

— Сасăласах.

— Питĕ хитре решени шутласа кăларнă! Ыттисем пулăшрĕç-и е хăвах ăс çитертĕн ун пек тума?

— Ушкăнпа канашларăмăр,— терĕ Яштайкин.

— Камран ыйтатăр куна? Райкомран-и?

— Сиртен, Николай Платонович. Пулăш пире, тархасшăн. Ĕмĕр манмăпăр. Кăçал, тем тесен те, тырă ытларах валеçесчĕ. Пĕлсе тăччăр: Яштайкин кунта ахаль килмен, колхозниксене çăкăр çитерме килнĕ.

— Çавăншăн çеç-и?

— Вăл сахал-и вара?

— Сахал!— терĕ Лукьяненко.— Яштайкин авторитечĕшĕн кăна каçарсан, вăл парăм патшалăха ытла та хакла ларнă пулĕччĕ. Çук, эс патшалăх интересĕсем çинчен шутла. Начартарах колхозсем пурте парăмсене каçарăр тесе ыйтма пуçласан, мĕн пулса тухĕ вара пирĕн?

Аристарх Петрович ун сăмахĕсене хăлхана чикесшĕн пулмарĕ-ха.

— Эх, кăçал пулăшсан эсир мана!— терĕ вăл.— Тепĕр çул эп сывлăш çавăрнă пулăттăм. Яштайкин мĕн тума пултарнине кăтартса парăттăм! Мĕнле, Николай Платонович?

— Мĕн «мĕнле»?

— Каçаратăр-и пирĕн çылăхсене?

— Райком секретарĕн ун пек правă çук!— терĕ тытăклăн Лукьяненко, Яштайкин çав териех куçа кĕнине кăмăлламасăр.

— Эс туп! Пирĕншĕн, Хĕрлĕ Çыршăн, тума май çук япалана ту.

— Чăнласах калатни эс çакна, Аристарх Петрович?

— Чăнласах.

— Апла каллех тăн пама пуçлас-и? Ятлама пуçлас-и? Ну, давай, эппин. Эс мана хисеплеместĕн пулсан...

Яштайкин хăвăрт ура çине сиксе тăчĕ. Секретарьтен хӳтĕленнĕ пек пулса, папкине кăкăрĕ тĕлне тытрĕ.

— Кирлĕ мар, кирлĕ мар, Николай Платонович! Халех тухса таратăп. Çиллес эсир паян, тепĕр чухне килĕп.

— Вăт çавна кала та,— терĕ Лукьяненко.— Анчах ку сăмаха тек ан хускатнă пул. Унсăрăн иксĕмĕр вăрçмаллипех вăрçса каяттăр. Паянхи калаçу пĕрре те кăмăла каймарĕ мана, Аристарх Петрович.

— Каçар. Тепре килсен ăслăрах калаçма тăрăшăп,— пуç тайрĕ Яштайкин.

Райком секретарĕ ăна çийĕнчех: «— Ăслă калаçни кирлĕ мар, эс манпа ĕç çинчен калаç»,— тесе тӳрлетесшĕнччĕ, анчах председатель алăк патнелле утнине кура, шарламарĕ. «Кайтăрах, паян унпа калаçса вĕçне тухас çук»,— шутларĕ вăл.

## 2

ШЕВЛЕ ТĔРЛĔ ПУÇЛĂХСЕНЕ ЙЫШĂНСА вĕсене ял тăрăх, пахча тăрăх кăтартса çӳреме юратмасть. Старик сăнакаланă ĕнтĕ, çав пуçлăхсенчен чылайăшĕ хăйсем пысăк вырăнта тăнине кабинетра кăна мар, хирте е пахчара, унтан та ытларах — хăнара та манаймаççĕ. Анчах паян килекен хăнана йышăнмасăр тăма юрамасть: Лукьяненко — çак ял кĕрӳшĕ, арăмĕнчен илсе шутласан, ăна Хĕрлĕ Çыр этеммиех теме пулать. Тата çынни те питĕ лайăхскер райком секретарĕ. Шевле чунтан кăмăллать ăна. Вăл, яла килсен, апла тăвăр та капла тăвăр тесе кăтартусем парса çӳремест, хăйне ыттисемпе, ахаль колхозниксемпе, пĕр тан тытать.

Паян Шевлен килен-каяна ырă кăмăлпа кĕтсе илсе ырă кăмăлпа кăларса яма хистекен тепĕр сăлтав пур: çуралнă кун. Никодим систерсе хучĕ ĕнтĕ, Николай Платонович сана валли парне илме лавккана чупрĕ, терĕ.

— Ма каларăн эс ăна асаттен çуралнă кунĕ тесе? Сана чĕлхӳнтен туртмарĕç пуль вĕт?— вăрçасшăн пулчĕ мăнукне старик.— Каснăлартнă пĕчĕк ача эсĕ, Никодим. Чăтайман, правление çитнĕ-çитмен персе те янă.

— Эпĕ мар, сăмах майăн Мархва персе ячĕ ăна. Лукьяненко: «Архип Лукича чĕнтересчĕ»,— терĕ те, Мархва: «Вăл килеймест те пулĕ-ха, паян унăн — çуралнă кун»,— тесе хучĕ .

— Мархва ăçтан пĕлет?— тĕпчерĕ аслашшĕ.

— Ăна эп каланăччĕ,— йышăнчĕ Никодим.

— Вара кунта килетпĕр терĕç-и?

— Лукьяненко: «Апла пулсан, старике чăрмантарма кирлĕ мар, çуралнă кун ячĕпе саламлама хамăр каятпăр»,— терĕ.

— Ну, эппин, кĕтсе лар. Килсен, хăнала вĕсене. Эпĕ хире çитсе курасшăн...

Хире каясси пулмасть-ха аслашшĕнчен, ăна вăл хăратмалла калать. Сĕтел çине пĕр тирĕк пан улми лартнă ĕнтĕ вăл, помидорпа хăяр та хатĕрленĕ. Апла пулсан, такам килессе кĕтет. Эрехĕ курăнмасть. Çуралнă кун ячĕпе пĕр черкке эрех те ĕçмĕ-ши старик? Ун пек аван мар пулнă пулĕччĕ. Çынсене те пулин хăна тумалла-çке унăн.

Райком секретарĕпе правлени членĕсем Шевле патне икĕ машинăпа пырса çитрĕç. Аслашшĕпе мăнукĕ хыпаланса хăнасене хирĕç чупса тухрĕç.

— Машинăсене картишне лартăр, паян эпир кунтан ниçта та каймастпăр,— терĕ Лукьяненко шоферсене.— Тахçанах вăйлă ĕçсе çиесшĕнччĕ-ха эпĕ Шевлесен килĕнче. Туя килес тенĕччĕ—Никодим Федорович авланмасть, халь сăлтав тупăнчĕ ак. Ну, миçе çул тултартăн-ха, Архип Лукич? Аллă-и, утмăл-и?

— Аллă-утмăлпа калаçмастпăр та!— хуравларĕ старик, юри паттăрланнă пек пулса.— Çӳлерех кармаш, унсăрăн çитейместĕн!

— Çапах та миçере ĕнтĕ?

— Каламастăп. Ватă, йӳтенĕ теме пултаратăр. Манăн ватăлас килмест-ха...

— Ну, хăвăн кăмăлу,— алă сулчĕ Лукьяненко.— Пӳртре ак, шампански уçнă чух, пурĕ пĕр калаттаратпăр.

Сĕтел хушшинче, кулса та шӳт туса, Архип Лукича хăй хăçан çуралнине ĕнентерекен хут кăтартма хушрĕç, унсăрăн юбиляр валли илсе килнĕ парнесене памассипе хăратрĕç. Старик вĕсене нимле хут та кăтартмарĕ, хăй миçе çул тултарнине сăмахпа та пĕлтермерĕ.

Ĕçес кăмăл никамăн та пулмарĕ курăнать, çавăнпа та кăшт шавлакаланă хыççăн хăнасем пахчана тухрĕç. Кунта вĕсен куç умне курăннă пĕрремĕш япала чӳрече умĕнчи чечек клумби пулчĕ. Клумбă йĕри-тавра хĕрлĕ те сарă чечексем лартса тухнă, варринче, çӳлĕрех вырăнта, лутра çеç кăвак чечексемпе шап-шур «салтак тӳмисем». Вĕсене хуçа мĕнле йĕркепе лартнине чи малтан Яштайкин асăрхарĕ.

— Курăр,— терĕ вăл.— Архип Лукич миçе çул тултарнине пĕлетĕр-и ĕнтĕ халь?

Пурте вăл кăтартнă çĕре, клумбă варрине пăхрĕç. Чăнах, унта «62» цифрă тăрать.

— Кашни çул çапла улăштарса пыратни эс ку цифрăна?— кăсăкланса ыйтрĕ райком секретарĕ.

— Çук, эп унашкал пули-пулмипе аппаланмастăп. Ăна ак ман мăнук тăвать.— Шевле аллинчи кукăр патакне Никодим еннелле çĕклерĕ.— Вăрçатăп ялан, итлемест мана. Вунă çул каялла хам вĕрентрĕм те ăна чечекрен цифрă тума, халь вăл нимпе те чарăнмасть.

— Ма, ку пит интереслĕ,— терĕ ун çумĕнче тăракан Мархва.— Хуласенче вара клумбăсене вăçĕмсĕр çавăн пек тăваççĕ. Варринче яланах «1 Май», «Мир» сăмах вĕсен е пĕрпĕр цифрă. Пăхăр-ха, хĕрлĕпе сарă чечексем хушшинче кăвакпа шурă тĕс мĕнле килĕшсе тăраççĕ. Ахаль мар художник вăл, сирĕн мăнукăр. Пĕлсе тунă...

— Ну, эппин, ку цифрă çĕре çиттĕр,— сăмах хушрĕ Лукьяненко.— Çĕр çул та виçĕ кун пурăн, Архип Лукич, çут тĕнчере!

— Виçĕ кунĕ мĕн тума?— пĕлесшĕн пулчĕ Шевле.

— Ара, çĕр çул пурăнатăн та виçĕ кун хушши шутласа пăхатăн: малалла пурăнма кирлĕ-и, кирлĕ мар-и? Ăна валли сана виçĕ кун хушса паратпăр.

— Э-э, ку юмаху сан кивелнĕ, Николай Платонович! Ӳлĕмрен çын çĕр çул пурăннипе ватăлмасть, вилсен лайăхрах мар-ши тесе шутласа тăма та тӳр килмест унăн.

— Çавăн пекех пулĕ-ши?— тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Лукьяненко.— Нумай-çке вăл, çĕр çул. Йăлăхтармасть-и ун чухлĕ пурăнсан?

— Йăлăхтармасть.

— Ну, апла эс каланă пек пултăр. Атяха, хыçалти пахчуна кăтарт пире. Эп унта санăн тĕлĕнмелле йывăçсем ӳсеççĕ тенине илтнĕччĕ.

Хыçалти пахчана çитсен, кил хуçи экскурсовод пекех пулса тăчĕ. Вăл кунти кашни йывăç историне, ăна хăçан, мĕн ятпа тата кам лартнине, ӳснĕ хушăра вăл миçе хуçăлнине е миçе хутчен хăрма тăнине тĕплĕн ăнлантарма пикенчĕ.

— Чи малтан лартнă йывăç ак çакă пулать,— хĕрринчи хурăн вуллине патаккипе тĕкрĕ Шевле,— ăна эпир аттепе 1922 çулта выçлăхран хăтăлнă ятпа лартса хăвартăмăр. Ун чух эпир ĕнене сутса ырхан кăна лаша илнĕччĕ. Çав лашапа пахчана аран-аран сухаларăмăр та тем ĕçпе иксĕмĕр те вăрмана кайрăмăр. Лайăх астăватăп: эп пĕр уçлан-

кăра çамрăк кăна хурăн курнă та ытараймасăр пăхса тăратăп. Атте çавна асăрханă та калать: «Мĕн, пит чипер-им?» — тет. «Çав тери чипер», — тетĕп. «Кăларса каяр мар-и ăна?» — тет. Çавăнтах кĕреçе илсе чавма тытăнтăмăр. Йăтса килсе лартрăмăр хайхи. Малтан хăрма тăчĕ вăл, анчах аттепе иксĕмĕр çăлса хăвартăмăр.

— Ку мĕнле йывăç? — терĕ Мархва, хурăнпа юнашар ларакан тĕмĕ патне сиксе ўксе.

— Курмасним: шĕшкĕ йывăççи! — кулма пăхрĕ Никодим.

— Эпĕ: «Мĕн сăлтавпа лартнă?» — тесе ыйтасшăнччĕ...

— Ăна ахаль кăна лартнă, — терĕ Шевле. — Нимле уяв та, паллă кун та марччĕ ун чух.

— Ак çакна?

— Ăна Чкалов çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна вĕçсе кайнă ятпа лартнă, ак çакна, — Шевле япун чăрăшĕ çине кăтартрĕ, — çĕнĕ конституци йышăннă ятпа, ку вĕренене Хĕветĕр вăрçа каяс умĕн лартса хăварчĕ...

Аллейăри пек икĕ рет йывăç. Темле йывăç та пур вĕсен хушшинче: юман, хыр, çĕмĕрт, пилеш, çўçе, уртăш йывăççи, палан. Пĕрне ялта колхоз тунă çул лартнă, теприне — Никодим институт пĕтернĕ ятпа, тепĕрне вăрçă пĕтнĕ ятпа, тата тепĕрне Гагарин тĕнче уçлăхне вĕçсе кайнă ятпа...

Пахча тăрăх утса тухсан, хăнасем ун вĕçĕнчи вăрăм тенкел çине ларса канчĕç, унтан, пўрте кĕрсе, юбиляр сывлăхĕшĕн тепрер курка сăра ĕçрĕç.

— Ĕнтĕ салансан та юрать, — терĕ хăйне пасăртанпах чĕмсĕррĕн тытакан Лукьяненко. — Сирĕн ĕçсем те пулĕ-ха? Астăватăр-и, мĕнле юрлаççĕ юрăра:

Вăрманта хăва кăна,
Эп кунта хăна кăна,
Нумай лартăм, каяс пуль...

Лукьяненко хăйĕн шоферне тата пăртак кĕтме хушрĕ, вăл пĕр килнĕ япала Архип Лукичпа пĕрле Тамăк çырми патне çитсе курма шутларĕ. Çул çинче вĕсен çумне Албутов хутшăнчĕ, вĕсем вара вăрăм та тарăн çырма тăрăх виççĕн анчĕç.

— Пĕви ăçта пулать, ку вĕçĕнче-и е правлени патĕнче? — ыйтрĕ райком секретарĕ, чăнкă çыран хĕррине çитсе чарăнсан.

— Ку вĕçĕнче пĕр пĕве, кăшт леререх тепĕр пĕве пулать, — ăнлантарчĕ Шевле. — Иккĕ юнашар. Вĕсен хушшине çырма тĕпне йăлтах йывăç лартатпăр тата малтанлăха çатан картасем тăватпăр. Тăмлă çырана чылай çĕрте çерем касса витетпĕр, чул саратпăр. Чулĕ çырмарах нумай пирĕн, таçтан турттарма кирлĕ мар.

— Çапах та кăçалах пулса пĕтмест-ха вăл сирĕн.

— Çук, кăçал ăçтан пĕтерен? Çырансем мĕнле ишĕлсе тăраççĕ иккен те, вĕсене тўрех мĕнле чарăн? Тата пĕве пуçĕ те çўлĕ пулать пирĕн, ав мĕн сарлакăш. Кунта çĕр нумай чыхмалла, çапă та тем чул турттармалла. Пĕве пуçне кăçал ытла çўлĕ купаламастпăр, ăна çыран çўллĕшне çитиччен тепĕр çул хăпартатпăр. Пĕверен шыв юхса тухнă çĕрте темиçе валак пулать, вĕсем аялалла пусма евĕр анса пыраççĕ. Çўлти валакпа юхса тухнă шыв аяларахри тепĕр валака анать, унтан тепĕр валака, юлашкинчен çырма тĕпне çитет. Иккĕмĕш пĕве пуçне çапла тăватпăр: вăл Тамăк çырмине лаппăшпех хупласа тămасть, ун сарăлса кайнă юппине çеç пўлет. Пĕрремĕш пĕверен юхса тухнă шыв урлă вырттакан иккĕмĕш пĕве пуçĕ умĕн иртет, ăна пĕрре те çĕмĕрмест.

— Ку сирĕн чăн-чăн гидросооружени пулма тивĕç, — терĕ Лукьяненко.

— Пĕвесене пысăк тăвасшăн эпир, нумайлăха тăвасшăн. Тамăк çырмине виç çуллăха мар, ĕмĕрлĕхе тытса чарасшăн. Çитет, ахаль те нумай мăшкăллаттартăмăр ăна. Шыв ан çитĕр тесе, пĕве пуçĕсене бетонпах хытарасшăн. Ман килте чертежсем, плансем пурччĕ унта, кăтартмаллаччĕ пĕреххут сире...

— Ма кăтартмарăн?

— Мухтаннă пек пулса тухасран хăрарăм. Чертеж вăл — пĕве мар-ха. Пĕве пултăр тесен, пĕтĕм ялпа ĕçлеме лекет.

— Халăхпа каласнă-и?

— Каласнă. Халăх ратлансах килĕшет.

— Питĕ лайăх. Вара пĕвесем те пулаççĕ.

— Тăвасшăн та-ха, анчах кунта материал нумай кирлĕ-çке, транспорт кирлĕ. Ăна пире кам парĕ? Колхоз-и? Яштайкин пĕве пирки сăмах хускатнă-хускатман сăмсине тепĕр еннелле пăрать.

— Машинсем те парасшăн мар-и?

— Вăл парап тесе те, памастăп тесе те каламасть. Ак ку таранччен пĕр лав çапă та турттарса килеймерĕмĕр-ха. Ялан пĕр сăмах: «Машинăсем пушă мар».

— Ун пирки правленире каласса тatăлăпăр, — терĕ райком секретарĕ. — Яштайкин ун пекех ăнланман çын мар-ха вăл. Яла, колхоза кирлине курсан, машинă та, ытти япала та парĕ, çынсем — строительсем те уйăрĕ пĕве валли. Пысăк ĕç пуçланă эсĕ, Архип Лукич, Албутовпа тата Никодим Федоровичпа пĕрле. Кашни ялта çапла ĕçе пикенсен, парăнтаратпăр эпир тамăк çырмисене.

— Парăнтаратпăр, — терĕ ун сăмахĕсемшĕн хĕпĕртенĕ Албутов. — Ав шкул сад тăвать пирĕн Тамăк çырми тăрăх. Çуркунне йывăç

нумай лартса хӑвартӑмӑр, карта тытрӑмӑр. Ӳлӗмрен, ну, тепӗр виҫ ҫултан тейӗпӗр, Тамӑк ҫырми тавраше ялти чи хитре вырӑн пулать, Николай Платонович. Каларӗ тесе калӑр...

— Ӗненетӗп,— пӗр сӑмахпа ҫеҫ тавӑрчӗ Лукьяненко.

Тип ҫырма йӗри-тавра ҫаврӑнса кайса, вӗсем ҫыран хӗрринчех ларакан пӗчӗк пӳрт патне пырса тухрӗҫ. Пӳрт умӗнче пӗр карчӑк хӗрелсе кайнӑ ут кӑшкарӗн вӑррисене йӑваласа, катка пек савӑта силлесе ларать.

— Ун вӑррипе мӗн тӑватӑн, кинемей?— сӑмах хушрӗ Лукьяненко карчӑка.

— Чӑхсем лайӑх ҫиессӗ ӑна пӑтратса парсан, ҫавсем валли хатӗрлетӗп,— юрласа каланӑ пек хуравларӗ хӗрарӑм.

— Пӳртӳ ҫырмана каять вӗт, ма тармастӑн кунтан?

— Кайтӑр. Пур пӗр ишӗлес патне ҫитнӗ.

— Хӑрамастӑн апла?

— Хӑрамастӑп.

— Ӑна пӳлӗхҫӗ сыхлать, юмӑҫ карчӑк вӑл пирӗн,— сӑмах тӗртрӗ Шевле.

— Пайпике те Пайпике теҫҫӗ. Ҫакӑ пулчӗ-и-ха вӑл?— терӗ Лукьяненко.

— Ҫакӑ.

— Юмӑҫ пӑхса памасна, кинемей? Инкек кӗтмест-и, пӗр-пӗр тӑшман ҫук-и манӑн?

— Ут, ут хӑвӑн ҫулупа,— терӗ карчӑк.— Сан пек яка ҫынсем юмӑҫ пӑхтармаҫҫӗ. Турӑ — турӑ мар сирӗншӗн, шуйттан — шуйттан мар. Ниме те ӗненместӗр эсир...

Ҫурт айккипе пӑрӑнса кайнӑ чухне арҫынсем тӗлӗнмелле япала курчӗҫ: Пайпике карчӑк ҫырма пуҫне лартнӑ мӗн пур ҫамрӑк йывӑҫа тӑпӑлтӑра-тӑпӑлтара тӑкнӑ, вӗсенчен шултраракхисене вутӑ тума вакласа пӳрт хыҫне купаланӑ.

— Вӑт сана Пайпике!— терӗ аптраса ӳкнӗ Шевле.— Вӑт сана юмӑҫ карчӑк! Петр Иванч, кур-ха, миҫе йывӑҫа пӗтернӗ вӑл...

Вӗсем йывӑҫ лартнӑ вырӑнсене шутласа кайрӗҫ.

— Вун икӗ йывӑҫ!— терӗ Албутов.

— Вун икӗ йывӑҫ!— чунтан вӗчӗрхенсе, ун хыҫҫӑн тепӗр хут каларӗ Архип Лукич.

Виҫ арҫын юмӑҫ карчӑк патне каялла пырса тӑчӗҫ.

— Эс мӗн хӑтланатӑн, Пайпике?— терӗ Шевле ҫиллес сасӑпа.— Пирӗн йывӑҫсене ма тӑпӑлтара-тӑпӑлтара тӑкрӑн ҫырма хӗрринчен?

— Эсрел алли лартнӑ вӗсене!— кӑшкӑрчӗ Пайпике.— Ҫавӑнпа тӗп турӑм! Ҫырмана турӑ ишет пулсан, этем тытса чараймӗ. Тасалӑр кунтан! Мӗн выҫ кашкӑрсем пек пӑхса тӑратӑр ман ҫине?

— Ну, юрӗ,— шӑл витӗр тавӑрчӗ ӑна Албутов.— Куншӑн эпир сана ахаль тумастпӑр. Суда памалла ҫав йӳтене карчӑка, Архип Лукич!

— Суда паратпӑр та. Вӗрентетпӗр ӑна сӑтӑр туса пурӑнма!

— Парӑр, парӑр! Хӑрать тетӗр пуль, сехӗрленсе тӑрать тетӗр пуль!— ҫатӑлтатрӗ Пайпике.— Тата килсе лартатӑр — татах тӑпӑлтаратӑп! Йывӑҫ тӗсӗ те ан пултӑр ман ҫурт умӗнче, эсрел алли ан варалатӑр таса ҫӗре...

— Ара, йывӑҫ лартмасан, хӑвӑн пӳртӳ тепӗр ҫуркуннех ҫырмана чикеленет!— ӳкӗтлеме тӑчӗ Шевле.— Мӗнле ҫавӑн ҫинчен шутласа пӑхма пӗлместӗн-ха эс ухмах пуҫупа?

— Чикелентӗр!— парӑнмарӗ карчӑк.— Сан ирӗкӳпе мар, турӑ ирӗкӗпе каять ҫырмана. Пӗтӗмпе турӑран килет, пӳлӗхҫӗрен килет. Эс те, эп те, пурсӑмӑр та турӑ аллинче...

— У-у, кив тӗнче тункати!— терӗ Албутов.— Кашни сӑмахра турра та пӳлӗхҫе асӑнать. Хӑвӑн ҫылӑху мӗн чухлӗ пулнине пӗлетӗн-и эсӗ? Миҫе ял халӑхне улталарӑн кӑҫал ҫу каҫиччен?

— Ан тавлашӑр унпа,— чарчӗ Лукьяненко.— Мӗн тумаллине хӑвӑрах каларӑр-ҫке. Суда парӑр та, ӗҫӗ те пӗтрӗ. Унта ҫатӑлтаттӑр. Ак правление ҫитетпӗр те акт ҫыратпӑр.

...Ялтан тухса каяс умӗн райком секретарӗ Яштайкинпа колхозри ӗҫсем ҫинчен вӑрах калаҫса ларчӗ. Кӑшт ятларӗ те ӑна, вӗрентсе те илчӗ.

— Шевле мӗнлине куртӑн-и?— терӗ вӑл, пасӑр хускатнӑ калаҫава малалла тӑсса.— Килти пахчи хӑй мӗне тӑрать, тупата!

— Эп ӑна тахҫанах курнӑ.

— Хӑйне-и е пахчине-и?

— Хӑйне те, пахчине те.

— Вӑл ҫителӗксӗр. Эс ӑна пулӑшма пӗл. Ҫапӑҫма пӑрах.

— Мӗн ҫапӑҫмалли пур ман унпа?— терӗ Яштайкин.— Эпир тӑшмансем мар. Тӗллев пӗрре пирӗн — хамӑр колхоза ҫӗклесси...

— Тӗллев пӗрре те, анчах, ман шутпа, эсир ҫав тӗллев патне иккӗн икӗ тӗрлӗ ҫулпа пыратӑр. Ҫавӑнпа ӑнланаймастӑр та пӗр-пӗрне.

— Икӗ тӗрлӗ ҫулпа пыратӑр тетӗн? Эпӗ ӑна туймастӑп.

— Тӗплӗрех шутласа пӑх, тен, туйса илӗн. Ҫӗр ӗҫӗ ҫине, вӑйлӑ тыр-пулшӑн кӗрешесси ҫине вӑл мӗнле пӑхать, эсӗ мӗнле пӑхатӑн. Ҫутҫанталӑка вӑл мӗнле юратать, эсӗ мӗнле юрататӑн. Шайлаштар. Вӑйлӑ тыр-пул пире пурне те кирлӗ. Анчах ӑна мӗнле туса илмелле? Паянхи куншӑн ҫӗрӗн юлашки вӑйне, юлашки сӗткенне ӗмсе-и е ӑна ыранхи кун

валли те сыхласа хăварса, хăватлатса пырса? Кирек мĕн кала та, Шевле çутçанталăка пиртен лайăхрах туять, Аристарх Петрович.

— Мĕн тума кирлĕ вăл ăна туйни?

— Ну, ку ĕнтĕ ытлашши ыйту! Сана ўкĕтлес вырăнне эпĕ пĕр поэт сăмахĕсене çеç аса илме пултаратăп. Хамăр таврари çĕршыва юратман çын халăх чунне те ăнланма пултараймасть, тет вăл. Ман шутпа, питĕ тĕрĕс калать. Таврари çĕре-шыва юратман çын вăйлă тыр-пулшăн мĕнле кĕрештĕр-ха? Йышăнмасть ăна çĕр, эс асаплантарнине тўсейместĕп тесе, хăваласа ярать. Шевлене хăваламасть, мĕншĕн тесен вăл уншăн тăван ывăл пекех.

— Чăн-чăн паттăр туса хутăн апла Шевлене?

— Çук, вăл паттăр мар. Ахаль çын кăна. Орден те çук унăн, чаплă титул та çук, тен, хаçатра та ырласа курман пулĕ ку таранччен. Пурăнать çын, ĕçлет. Йывăç лартать, чечек ўстерет. Ăна кура, ыттисем те йывăç лартаççĕ. Ишĕлсе пыракан çырмана питĕрет. Ăна кура, ыттисем те питĕреççĕ.

— Темскер, курăнсах каймасть-ха ыттисем питĕресшĕн пулни,— сăмах тĕртрĕ Яштайкин.

— Ну, куншăн Шевлен айăп çук. Куншăн эпир, санпа иксĕмĕр, айăплă. Çын тăрăшнине хаклама пĕлместпĕр. Пулăшмастпăр ăна. Кансĕрлеме тăратпăр-ха тепĕр чух.

— Ман пек-и?

— Мĕн, тĕрĕс мар-им? Сан пек çав. Эс ăна пулăшса курман-ха, чăн сăмаха пытармасăр калас пулать. Хаклама та вĕренеймен. Ак халь те чĕрре кĕрсе, тавлашкаласа ларатăн. Эп тўсетĕп. Мĕншĕн тўсетĕп-ха? Ма хыттăн вăрçса тăкмастăп сана? Мĕншĕн тесен — пĕр пытармасăр калатăп сана — малтан эп Шевле çине хам та сан пекех пăхнă. Ялсенче çавăн пек стариксем пулаççĕ-çке: пухусенче тытса чармалла мар шавлаççĕ вара, тем синчен те палкама юратаççĕ, садсем ĕрчетесси, çырма-çатрасемпе кĕрешесси çинчен калаçаççĕ, тĕрлĕ жалобăсем çыраççĕ, хăйсем вара пĕр пуслăх ĕç те тумаççĕ. Эп Архип Лукич та çавăн йышши пулĕ тенĕ. Кайран куратăп — ку урăхларах этем. Пухусенче те ытлашши пуплемест, вăрçса, ўпкелешсе жалобăсем те çырмасть, анчах хăйĕн ĕçне тăвать. Пулăш эс ăна кĕркунне пĕвесене туса çитерме. Хăйĕншĕн мар, ялшăн тăрăшать старик. Бульдозер та туянса пар. Илтетĕн-и мана?

— Илтетĕп,— терĕ Аристарх Петрович.— Вăй çитернĕ таран пулăшăп. Пўлмесене тултарар-ха, кăçал мĕн чухлĕ тупăш илессине пĕлер, вара куç курĕ. Тен, бульдозер илме те укçа тупăнĕ унта...

Юлашкинчен Лукьяненко колхоз председательне тепĕр ыйту пачĕ:

— Çитес эрнере сирĕн отчетпа суйлав пухăвĕ пулмалла. Эсĕ партбюро секретарьне кама лартасси пирки никампа та канашласа пăхман-и?— терĕ.

— Çук-ха, аса та илмен,— хуравларĕ Яштайкин.— Секретарьне тупăпăр-çке ăна, уншăн ĕç тытăнса тăмĕ. Мĕн, Халапсин йăлăхтарчĕ-им сире?

— Йăлăхтарнăран мар, ара. Нимĕн те тумасть-çке сирĕн Халапсин. Ун мĕн пур ĕçĕ те пухусем ирттересси те протоколсем пырса парасси кăна. Ытла пуçарусăр этем.

— Ну, урăххине суйлатпăр. Темиçе врач пур пирĕн, агрономпа ветеринар пур, бригадирсем. Механизаторсем те сахал мар.

— Кала-ха, çав çамрăк Шевле пултарнă пулĕччĕ-и?— терĕ райком секретарĕ.

— Ма пултармасть? Кăçал пит лайăх ĕçлерĕ вăл. Çынсем те хисеплеççĕ ăна.

— Ман шутпа та пултармалла пек. Сĕнсе пăхар-ха апла. Халăх мĕн калать. Парти ĕçне юсамалла сирĕн ялта. Кун пек ĕçленипе нумай малалла каяймăн. Хальхинче ĕнтĕ секретаре маттуртарах этеме суйлама тăрăшăр. Кунтах-и, правленирех-и вăл, сирĕн агроном?

— Чĕнес-и?— терĕ Аристарх Петрович.

— Чĕн-ха, эппин. Май килнĕ чух калаçса пăхам эпĕ унпа...

## 3

«ШАННĂ ЙĂВАРА КАЙĂК ÇУК»— аса илчĕ Яштайкин ваттисен сăмахне. Çапла калатчĕç пулас ун пек чухне яланах. Илтнĕ, нумай илтнĕ Аристарх Петрович ункашкал тенеше, анчах вăл чăннипе мĕне пĕлтерет тата ун пурнăçĕнче хăçан та пулин çав сăмаха чунтан тарăхса каламалли самант килсе тухма пултарать-и — ку шухăш нихçан та пуçа пырса кĕмен. Çав хитре янăракан тенеш Яштайкин шучĕпе нимле татăклă япалана та уçса паман ăнлану çеç пулнă, вăл ăна çынсенчен илтнипе çеç теплере пĕрре шăл йĕрсе, вырăнлипе вырăнлă маррине чухламасăр, кала-кала хунă.

«Шаннă йăвара кайăк çук». Ав мĕскере пĕлтерет иккен ку сăмах, Яштайкин тĕлĕшĕнчен уйрăммăн илсен. «Гальă, Гальă, мĕн туса хутăн эсĕ! Мĕнле пăрахса кайма пултартăн мана çакăн пек вăхăтра? Епле чăтса ирттерĕп ку инкеке? Çынсен умне мĕнле куçпа курăнăп?»

Аристарх Петрович сĕтел çумĕнчи тумбочкине уçрĕ те унтан темиçе çыру кăларчĕ. Галина Михайловна нумай пулмасть янă

ăшă çырусем. Вунă хут, çĕр хут вуласан та, пĕр суя сăмах та тупаймастăн вĕсенче. Пĕтĕмпе чунтан çырнă. Кун пек çырусене упăшкине вĕçĕмсĕр юратса тăракан, уншăн тунсăхлакан хĕрарăм çеç çырма пултарнă. Вун çич çулхи каччă пек, пурнăçра малтанхи хут юратса пăрахнă çамрăк ача пек хĕпĕртесе вулатчĕ вĕсене Яштайкин. Витьăна каласа хунăччĕ ĕнтĕ, çав кун хулана арăма илме каятпăр, тенĕччĕ. Унтан кĕтмен çĕртен çак пăтăрмахлă çыру килсе çитрĕ. Вăл Аристарх Петровичшăн уяр çанталăкра аçа çапнă пекех пулчĕ, йĕркеленсе, майлашăнса çитнĕ пурнăçа йăлтах пăсса пăрахрĕ. Мĕнле Валентин тупăнма пултарнă Галина Михайловнăшăн хулара? Ĕлĕкхи савнийĕ тĕл пулсан та, мĕнле тӳрех упăшкине пăрахма шут тытнă вăл? Нимĕн те ăнланмасть Аристарх Петрович. Вăрçса пурăннă пулсан е кайнă чух çиленсе тухса кайнă пулсан, апла-каплаччĕ хăть. Мăшăрланнăранпа пĕрре харкашса курман-çке, пĕрре урлă сăмах каламан. Эп сана хисеплетĕп, Аристарх, тетчĕ, санăн ăсна, санăн вăйлă характерна юрататăп, нихçан та кичемленсе ларма памастăн эсĕ мана. Ан иккĕлен, эп сана нихçан та улталамăп, тетчĕ. Халь ак вăл тĕлĕнмеллипех тĕлĕнет: мĕншĕн çапла юрама тăрăшнă-ха арăмĕ, мĕншĕн йăпăлтатнă ун умĕнче, кăмăл çук çĕртен ма ĕнентересшĕн пулнă хăйне юрататăп сана тесе? Эппин, чăн-чăн туйăм пулман вăл, ĕлĕкхи савнине сухатнăран çеç çĕнĕ юрату патне туртăннă Гальă, хăйне улталаса телейлĕ çемье тума ĕмĕтленнĕ. Çапла, ку ĕмĕт çеç пулнă, юрату мар. Таса туйăмне вăл чĕре патĕнче пытарса усранă. Ак малтанхи савнине çĕнĕрен тĕл пулнă те, ку туйăм каллех çиеле тухрĕ.

**Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ халь — чуна пусармалла çитсе килмелле-и хулана?** Юлашки хут та пулин калаçса пăхмалла-и Галина Михайловнăпа? Тен, чĕркуçленсе ларса, тархасласа пăхмалла пуль ăна? «Çук,— терĕ Аристарх Петрович, çырусене каялла тумбочкăна ывăтса,— ун пек улталакан çынна хыçран хăваламаççĕ. Ниçта та каймастăп, никама та пуççапмастăп. Мана çав териех мĕскĕн çын тесе ан шутлатăр. Шăпа ман тĕлĕшрен çавăн пек синкер ячĕ пулсан, ăна арçын пек йышăнмалла, тем пек йывăр пулсан та, чăтса ирттермелле!»

Яштайкин халь хăйне пĕр япалашăн çеç каçарма пултараймарĕ: темиçе кун каялла вăл, Гальă чирлĕ тенине ĕненсе, хулана кайса килчĕ. Суя телеграммă панă иккен арăмĕ ун чухне, пĕрре те чирлĕ пулман, пурнăçра вăйлă драмă пуçланнăран çеç аптраса ӳкнĕ вăл. Пĕлмен-çке, ара, пĕлнĕ пулсан, колхозри ĕççене пăрахса каймастчĕ, паллах. Халь ак çынсенчен те аван мар. Ялта тӳрех калаççĕ ĕнтĕ: арăмĕ патне çупа çăмарта, пылпа ытти çимĕç йăтрĕ-йăтрĕ те, юлашкинчен лешĕ, чеескер, вăйлă тав турĕ ăна, икĕ пӳрне хушши кăтартрĕ, теççĕ. Калаччăр, мĕн тăвас тетĕн. Чавса çывăх та çыртма çук. Çын кулать тесе, ялтан тухса тармалла-и унăн? Ĕçлес пулать, пуçа усса ларма юрамасть...

Кун каç енне сулăнсан, правленирен Наташă чупса килчĕ.

— Сире пасăртанпах пĕр фотограф кĕтсе ларать унта, Аристарх Петрович,— терĕ вăл.— Районри хаçатран килнĕ, тет. Сире хăвăра тата темиçе çынна ӳкерсе илме хушнă, тет, ăна.

— Халех пыратăп, Наташă, темиçе минутранах çитетĕп,— кăмăллăн калама тăрăшрĕ Яштайкин. Хĕрача тухса кайсан, хăй тĕллĕн шутласа илчĕ: «Ĕнтĕ манăн пусăрăнчăк кăмăла пăхмасăр çапла юри çемçен калаçма лекет малашне. Çынсем: арăмĕ пăрахса кайнă та, тулхăрса кăна тăрать, тесе ан калаччăр. Ак хайхи пуçланчĕ маншăн тамаша! Инкек çине синкек тенĕ евĕр, фотограф килсе çитнĕ ав. Нихçан та мар, шăп çак вăхăтра тухмалла ĕнтĕ ман сăнăм хаçатра. **Пурте пӳрнисене тĕллесе кăтартчăр: ак вăл, леш Яштайкин, унăн арăмĕ заочниксен сессине кайнă та ĕлĕкхи савнине тĕл пулнă, упăшки патне таврăнман, теччĕр».**

Правление пырса çитсен, Аристарх Петрович вăрăм сĕтел хушшинче тĕлĕрсе ларакан фотографа курчĕ те ăна сăмах чĕниччен малтан Халапсин патне кĕчĕ. Телее, бухгалтер пӳлĕмре пĕчченех ĕçлесе ларатчĕ, çавăнпа председатель унпа пĕр именмесĕр калаçрĕ.

— Пăхсах паллă, бухгалтер, сан паян мухмăр,— терĕ вăл, Халапсин ĕнер ĕçкĕ тунине асра тытса.

— Пăртак пур, çук тесе каламастăп,— йышăнчĕ Халапсин, председатель ку сăмаха мĕншĕн пуçланине ăнланмасăр.— Тен, кайса килетпĕр иксĕмĕр пичке тĕпне тĕрĕслеме? Ĕнер чĕнсе те пымарăн ху...

— Мана мар, урăх çынна илсе каятăн халь «пичке тĕпне тĕрĕслеме». Куртăн-и, фотограф килнĕ унта райхаçатран?

— Куртăм. Пасăртанпах ларать. Мана çак çынсене чĕнтерĕр тесе список туса пачĕ. Акă вăл, ун спискĕ...

Бухгалтер председатель умне авторучкăпа çырнă хут татки кăларса хучĕ. Яштайкин ăна алăра нумайччен çавăркаласа тăчĕ.

— Ĕçет-и вăл фотограф?— ыйтрĕ юлашкинчен.

— **Пĕлместĕп вара. Сан питĕ хăна тăвас килет-и ăна?**

— Çав тери хăна тăвас килет. Ак укçине те чиксех килтĕм.— Яштайкин кĕсъерен хут укçа кăларса кăтартрĕ.— Малтан çусан, сăн ўкерчĕкĕ лайăхрах пулаканччĕ-çке, тусăм.

— Ия, вăл çаплах ĕнтĕ,— терĕ Халапсин.

— Анчах ман вăхăт çук. Çавăнпа ку ĕçе сана хушатăп. Эс ăна çĕр каçмалăх хваттер тупса пар, унтан хăвăн патна хăнана чĕн. Ак сана укçа. Çак укçана ĕçтерсе ямасăр сĕтел хушшинчен ан кăлар. Вăл фотограф ыран пирĕн ялтан вил ўсĕр тухса каймалла. Ăнлантăн-и?— Çапла каласа председатель бухгалтера вун тенкĕлĕх укçа тыттарчĕ.

— Çук, чухлаймарăм-ха. Ия, ăнланаймарăм,— терĕ Халапсин.— Мĕншĕн кўптермелле ăна, мур хырăмне?

— Кирлĕ çав, ĕçтермелле. Унсăрăн хăваласа яраймастăн ăна, капла вăл хăех тухса тарать. Сăн ўкермелли вăхăт мар халь пирĕн, секретарь. Сисетни çавна? Ав райком секретарĕ мĕнле ятласа хăварчĕ иксĕмĕре...

Халапсин нимĕн те чĕнмерĕ, Яштайкин çине тĕлĕнсе пăхса илчĕ те хăйне тыттарнă укçана бухгалтери кĕнеки хушшине чикрĕ. Председатель фотограф куриччен правленирен тухса кайма васкарĕ.

Ĕçсем çук марччĕ-ха унăн, çитсе курмалли вырăнсем чылайччĕ. Анчах Аристарх Петрович çак самантра пысăк ĕçсене те, пĕчĕк ĕçсене те маннă пек пулчĕ, кукăр-макăр тăкăрлăкпа тўрех вăрманалла утрĕ. Ывăнччен, мĕн пур хуйхă-суйхă манăçа тухиччен çўрес терĕ пулмалла. Вăрманта вăл темле çинçе сукмак çине ўкрĕ, пĕр тĕллев тытмасăр ун тăрăх таплаттарчĕ. Сукмак ик айккипе хуртланнă пулсан та пăхма çав-çавах илемлĕн ларакан кăмпасем тĕл пулчĕç, унта та кунта пилеш хĕп-хĕрлĕн курăнчĕ, пиçнĕ кĕтмел ура айне пулса таптанчĕ. Яштайкин ниçталла та пăхмарĕ, нимскере те асăрхамарĕ. Çакăнта чашлаттарса çумăр çума тытăнсан, ăна туйнă пулĕччĕ-ши вăл?

Гальăпа çыхăннă шухăшсене çине тăрса хăваларĕ Яштайкин пуçран. Аса илмелле мар. Пăшăрханмалла мар. Ўкĕнмелле мар. Вăхăт чи лайăх эмел, теççĕ, сыватать акă, сиплет аманнă чĕрене. Ялан çын çинче, халăх хушшинче пулмалла, вара пуçа усса, хуйхăрса ларма вăхăт тупăнас çук.

Темшĕн-çке, çак икĕ кун хушшинче вăл райком секретарĕн сăмахĕсене манаймасть. Кур-ха, мĕн терĕ ăна Лукьяненко: халăхпа ĕçлеме пĕлмесен, хăвăн вайна кăна шанса тăрсан, санран путлĕ председатель те, ытти руководитель те пулса пĕтмест, терĕ. Пыр та ăнлан Лукьяненкона: ун сăмахĕпе, пĕр енчен лайăх организатор эпĕ, нумай вĕреннĕ çын, тепĕр енчен халăхпа ĕçлеме пĕлместĕп, ахаль çынсене ним вырăнне те хумастăп. Ыйтасчĕ унран, тупата, халăхпа ĕçлеме пĕлмен çын лайăх организатор пулма пултарать-и вара? Çак пĕр япала тепĕр япаларан тухса тăмасть-и ĕнтĕ, пĕри тепринпе çыхăнман-и?

Яштайкин райком секретарьне нимĕн чухлĕ те çиленмест. Çывăх юлташ, авалхи тус пулнă май, вăл хытăрах та каласа тăкма пултарать. Сăмахран, Архип Лукич пирки ытларах та вĕрентрĕ пек туйăнать ăна. Унашкал пысăк çын пулса кайман-тăр-ха Архип Лукич, халлĕхе Шевле умĕнче ташласа тăмасан та юрĕ.

Партбюро секретарьне Лукьяненко çамрăк Шевлене суйласшăн. Мĕнле пулса тухрĕ ку — председатель килĕшрĕ унпа. Сисет Яштайкин, çапăçмалла пулсан, никампа та мар, агрономпа çапăçмалла пулать колхозра. Çавă чапланса кайрĕ çак çулталăк хушшинче. Курмасть мар, курать вăл: çынсем юлашки вăхăтра ытларах агроном патне кĕреççĕ. «Мана Никодим Федорович кирлĕччĕ». «Манăн Никодим Федоровичпа калаçмалли пурччĕ». «Чăнах, мĕн çитмест мана?— тет председатель. — Мĕнрен лайăхрах манран Никодим? Темскер пур ман характерта çынсене сивĕтекенни. Хир енче те ытлашши кулянмарĕç эпĕ хамăр яла ĕçлеме куçатăп тесен, çук, кунта юл тесе питех ўкĕтлемерĕç». Мархва тесен, Мархва та агрономран уйрăлма пĕлмест. Председательтен сивĕнчĕ. Малтан ун пўлĕмĕнчен пачах тухмастчĕ, урамра е фермăра-мĕнре тĕл пулсан та каçса кайса сăмахлатчĕ вара. Мĕнпе юраймарĕ ăна Яштайкин? Çурт лартма та пулăшрĕ-çке ĕнтĕ председатель бригадира...

Вăрманта чылаях тĕттĕм пулса çитрĕ. Йывăççем мăналанса тискеррĕн курăнакан пулчĕç. Сывлăш нўрленчĕ. «Килелле тухма вăхăт»,— шутларĕ Аристарх Петрович, паçăрхи сукмака шыраса тупса. Кăшт тăрсан, кунта аташма та пулать. Хăйне кура пĕчĕк мар колхоз вăрманĕ. Хыр тесен хыр, юман тесен, юман пур. Варнелле вĕтĕрех-ха, анчах хĕрринче тата çулсем тăрăх лаппăшпех шултра йывăççем лараççĕ. Хăçан кастарнăши ку вăрмана юлашки хут? Тата срок тăрăх миçе çултан касма юрать-ши ăна?

Чунтан çăмăлланнă пек, шăмшакран кăшт ывăннă пек пулса, Яштайкин хăйĕн хапхи умне пырса чарăнчĕ. Аллине шашулкка çине хурса, шухăша кайса тăчĕ. Тем парсан та кĕрес килмест халь пўрте. Пушă унта, кичем. Тумбочкăра Галина Михайловнăн усал çырăвĕ выртать. Çўлĕк çинче — ун кĕнекисем. Кашни кĕтесре ун япали. Каллех çĕрĕ-

пе çыврасси пулмасть ĕнтĕ. Çĕрĕпе шухăш вĕçтермелле çав ултавçă хĕрарăм пирки...

Анатран урампа ачасем шавласа килеççĕ. Яштайкин вĕсем çитиччен кĕçĕн алăкран кĕме тăнăччĕ, анчах кĕмерĕ, пысăккисен йăлипе лешсем мĕншĕн шавланине пĕлесшĕн пулчĕ.

Ачасем çул варрипе виççĕн кӳме урапи туртса пыраççĕ. Вутă турттармалли кӳме урапи çине темле ӳсĕр çынна хунă.

«Халапсин ачисем,— чухласа илчĕ председатель.— Фотографа хваттере леçеççĕ. Çапах та маттур ман бухгалтер, эп каланинчен нихçан та иртмест...»

4

Кун хыççăн колхозра тĕлĕнмелле ĕçсем пуçланса кайрĕç. Вăрмана кайса килнĕ каç мар, тепĕр каçхине Яштайкин правленире хупă лару иртерчĕ. Унта вăл, малтан тĕплĕ шутласа хурса, икĕ ыйту лартрĕ: колхоз валли çĕнĕ машинăсем илесси тата ĕç кунĕсем тăрăх укçа валеçесси. Кун йĕркинче питех те кирлĕ ыйтусем тăчĕç пулин те, ку лару юлашки вăхăтра иртернĕ чи кĕске ларусенчен пĕри пулчĕ. Председатель бульдозер илме сĕнчĕ — ыттисем хирĕçмерĕç, председатель кăçал ĕç кунĕсем тăрăх тырă çеç мар, укçа та валеçме сĕнчĕ — ыттисем хавасланса килĕшрĕç. Кăшт ыйтса пĕлкелерĕç ĕнтĕ: мĕн чухлĕ тăрать вăл машинă, колхозăн мĕн чухлĕ укçа пуçтарăнать кĕркунне, парасах пулсан, миçе пус тивме пултарать кашни ĕç кунĕ пуçне? Бухгалтер тухса куççуль тăкрĕ — унăн ĕç кунĕсем тăрăх валеçме мар, парăмсене татма та укçа çук иккен.

— Тупатпăр,— терĕ ăна итлесе пĕтернĕ-пĕтермен Яштайкин.

— Ăçтан килет-ха вăл укçа? Фермă нумай памасть, çăмарта сахал сутрăмăр кăçал,— тавлашма тăчĕ Халапсин.— Курăс укçи пур пăртак, ак халь хулана темиçе тоннă пан улми ăсатма хатĕрлерĕмĕр. Çавă çеç пирĕн мĕн пур укçа. Парăмсем вара темĕн чухлех пуçтарăннă.

— Тупатпăр!— çирĕппĕн каларĕ Аристарх Петрович.— Чармастăр-и мана, эп колхоза миллионер туса паратăп. Калăр, чармастăр-и?

Правлени членĕсем председатель шӳт тăвать пулĕ тесе шутларĕç курăнать, нихăшĕ те пĕр сăмах чĕнмерĕ.

— Ĕненместĕр апла? Ну, кирек мĕн тăвăр. Эп майне тупнă, ним мар пуйтаратăп сире.

— Мĕнле тăвăн-ши çавăн пек пысăк укçана, Аристарх Петрович?— чăтаймасăр ыйтрĕ Халапсин.— Кам парĕ-ши ăна пире? Хăш пĕр колхозсем ав хăмла сутса, йĕтĕн-кантăр акса е махоркă лартса пуяççĕ. Пирĕн ун пек япала çук-çке...

— Бухгалтер пулса, эс чармасна?— хавхаланма пăрахмарĕ председатель.

— Эп мĕскер... манран чару çук. Анчах çумăрпа пĕрле çӳлтен ӳкмест-çке вăл укçа. Ăна ĕçлесе тăвас пулать...

— Эп те вăрра каймастăп. Çапах та колхоза укçаллă тăвас килет. Пĕрер тенкĕ, икшер тенкĕ илччĕр колхозниксем ĕç кунĕ пуçне. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх вăйне шанса тăччăр. Тырă лайăх пулчĕ кăçал, ăна халиччен-хинчен ытларах валеçетпĕр. Ун çумне укçа хушса парсан, халăх савăнмаллипех савăнĕ, сире, правлени членĕсене, пурте ырă ятпа асăнĕç...

Правлени ларăвĕ пĕтсен, председатель пӳлĕмне Яштайкинпа Халапсин иккĕшĕ çеç юлчĕç. Пӳлĕме ăнсăртран никам та килсе ан кĕтĕр тесе, Аристарх Петрович алăка та çаклатса хучĕ.

— Айăп ан ту, бухгалтер, эп санпа лару умĕн пуплеймерĕм,— терĕ вăл, темле вăрттăн япала пĕлтернĕ евĕр, шĕвĕр пӳрнине Халапсин сăмси тĕлĕнче вылянткаласа.— Çавăнпа эпир сăмаха иккĕн ик тĕрлĕ çаптартăмăр. Ну, пĕр енчен ку лайăх та пулса тухрĕ, мана хама кирлĕ пек решени йышăнса хăварма пулăшрăн... Укçа тумалли май пур пирĕн, ырă çыннăм. Эп ăна шыраса тупнă. Пĕлетĕн-и, мĕн тăватпăр? Ял çумĕнчи Тавăт вăрманне касатпăр. Аллă гектар вăрман халь пирĕншĕн — чăн-чăн çăлăнăç.

— Чим-ха, Аристарх Петрович...— тем каласшăн пулчĕ бухгалтер. Яштайкин ăна, чарăн тенĕ пек, каллех шĕвĕр пӳрне кăтартрĕ.

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп, ун пек япалана пĕтĕмпех саккунлă тумалла. Ан хăра, эп вăрман хуçалăхĕпе калаçса татăлнă. Вĕсем: хăвăра ирĕк, пирĕн вăрман мар, эпир сирĕн ĕçе хутшăнма пултараймастпăр, теççĕ. Вăт çавăн пек, бухгалтер. Паянтан эсĕ пирĕн колхозра вăрман кастаракан подрядчик шутланатăн. Санпа халех килĕшӳ хучĕ — «Трудовое соглашение» текенни çырса хатĕрлетпĕр. Ик çĕр — виç çĕр тенкĕ укçа ĕçлесе илетĕн пĕрик эрне хушшинче, ну, тата пĕр пуралăх пĕрене те пама пулать. Анчах асту, вăрмана питĕ хăвăрт кастарса пĕтермелле, тĕрлĕ карма çăварсем кăшкăрашма тапратиччен унта пĕр шултра йывăç та юлмалла мар. Пĕлетĕп эпĕ, пур пирĕн çутçанталăк илемлĕхне сыхлатпăр тесе çӳрекенсем. Вĕсен сăмахне хăлхана ан чикнĕ пул. Пире халь укçа кирлĕ. Вăрманне ăна колхоз валли ӳлĕмрен татах та ыйтса илетпĕр...

— Мĕн-и, Аристарх Петрович, куншăн пире айăпламĕç-и? Эс çавăн çинчен шутласа пăхнă-и?

— Çĕр çывăрмасăр шутларăм. Районри пуçлăхсемпе те калаçрăм паян. Никам та айăпламасть. Вăрман колхозăн, хамăр хăçан кастарас тетпĕр çавăн чухне кастаратпăр.— Яштайкин сĕтел çинчи хут купинче пĕр таса листа шыраса тупрĕ те ăна Халапсин еннелле тăсрĕ.— Ак çыр договор пекки. Эп сана мĕн çырмаллине каласа пыратăп...

Халапсин иккĕленме пăрахмарĕ-ха, çавăн чухлĕ вăрмана касса тăксан ялта мĕнле шăвшав хускалассине вăл лайăх пĕлсе тăчĕ, анчах каялла чакма та вăйĕ çитмерĕ ĕнтĕ унăн. Ытла пысăк укçа сĕнет-çке колхоз председателĕ! Укçасăр пуçне пӳрт лартма пĕрене те кăларса юлма пулать ав. Айăплас енне кайсан, ăна нимĕнех те тăваймĕç-ха: вăл туртса кăларман ку япалана, ун ирĕкĕпе касмаççĕ вăрмана. Бухгалтер ĕçĕ — председатель хушнине итлесси, вăрман укçине колхоз счечĕ çине пуçтарса пырасси. Хăй кĕсйине Халапсин пĕр пус та чикес çук.

Çапла шутласа илсе, бухгалтер аллине ручкă тытрĕ, председатель каласа пынипе хăвăрт-хăвăрт çырма пикенчĕ. Яштайкин ĕçлĕ хута çавăнтах алă пусса çирĕплетрĕ.

— Ыран пирĕн пата кӳршĕ колхозсенчен çынсем килсе çитеççĕ,— терĕ вăл.— Вĕсемпе кашнинпе договор тăватăн та укçине банкри счет çине куçарттаратăн. Договор икĕ экземпляр пулмалла, пĕри пире валли, тепри вĕсене валли. Ну, сана вăл тĕлĕшпе вĕрентме кирлĕ мар, бухгалтери ĕçне эс мансăрах лайăх пĕлетĕн.

— Пĕлекенччĕ,— терĕ Халапсин, çамки çинчи тарне шăлса.

— Тарларăн та-и, бухгалтер?— кулма пăхрĕ Яштайкин.— Иртерех мар-и пăртак? Кун пек ыран лачкам шыва ӳкетĕн пуль? Тепĕр эрнерен вара чĕлхӳне кăларса аран-аран чупакан пулатăн.

— Темле пулать ĕнтĕ, председатель. Пит теветкел ĕç пуçларăн. Инкек сиксе тухмасан юратчĕ. Вăрманта унта тунката нумай, такăнса ӳкмелле ан пултăрах иксĕмĕрĕн.

— Такăнса ӳкместпĕр. Чиперех вырнаçтаратпăр Тавăт вăрманне. Ĕлĕкхи хисеппе шутласан, пирĕн миллион тенкĕ укçа пулать!

— Çавăнпа бульдозер илме сĕнтĕн-и эс пасăр? Пурте тĕлĕннĕ çав, райком секретарĕ ялта пулнă хыççăн мĕнле ырăланса кайнă пирĕн председатель, теççĕ.

— Эп пурне те шута илнĕ, тăванăм,— кăшт мухтаннă евĕр хуравларĕ Яштайкин.— Ку ĕçе мĕнрен пуçламаллине те, кам çăварне хупламаллине те, подрядчикне кама тумаллине те... Каларăм-çке, çĕрĕпе куç хупмарăм тесе. Ун вырăнне кĕçĕр ĕнтĕ сухаран тавраннă çын пекех тутлă çывăратăп. Эсĕ те шикленкелесе ыйхуна вĕçтерсе ан вырт. Пирĕн ир-ирех ĕçе тытăнмалла. Ну, халь киле кайсан та пырать. Сан каллех мухмăр пулĕ-ха? Киле çит те пĕр черкке йăвантар ĕç тунă ятпа...

— Пасăр пурччĕ те, ку калаçу хыççăн мухмăр мар темскер те иртсе кайĕ,— тĕрĕссине каларĕ Халапсин.

Тепĕр кун ирхине Аристарх Петрович колхоз вăрманне сыхласа усранă леснике чĕнсе илчĕ, унпа тепĕр договор турĕ. «Кунта лесниксĕр май килмест. Эпир Халапсинпа колхозсене участоксем уйăрса пама та пĕлес çук»,— шутларĕ вăл.

Çав кунах Тавăт катинче Яштайкин куçĕ умĕнче пĕрремĕш юман йăванчĕ. Хурçă пăчкăсем, таврана йывăç кĕрпи сапаласа, шăхăрса та юрласа, ĕçлеме тытăнчĕç. Вăрмана лавсем нумай килсе тулчĕç, вĕсене таптаса каяс пек кĕрлесе, унталла та кунталла машинăсем иртрĕç.

Яштайкин çак вăхăтра темле тутлă симпыл ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ çын пекех çӳрерĕ. Савăннипе-ши е юлашки вăхăтра йĕркеллĕ канса курманран пăртак пуç çаврăнчĕ унăн, алă пуснă чухне пӳрнисем вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕç, анчах вăл ăна сисмен пек пулчĕ. Председатель машини ялтан вăрмана, вăрмантан яла хутларĕ. Пур çĕрте ăна кӳршĕ колхозсенчен килнĕ çынсем тыта-тыта чарчĕç, йӳнĕ хакпа панă вăрманшăн тав туса, çĕнĕрен те çĕнĕ участоксем ыйтрĕç. Малтанхи кун ăна пĕр çын та: «Ма кастаратăн эсĕ вăрмана?»— тесе каламарĕ. Ял халăхĕ Яштайкин вăрмана пĕр-пĕр строительствă валли кастарать тесе шутларĕ пулмалла. Иккĕмĕш кунĕнче ун патне пӳлĕме Никодим Федорович кĕрсе тăчĕ.

— Мĕн пулса иртет пирĕн колхозра — эп нимĕн те ăнланмастăп,— терĕ вăл.— Ма ют ялсем касаççĕ пирĕн вăрмана, Аристарх Петрович?

— Кĕркуннеччен кăшт укçа тăвас пулать, правленире калаçса татăлтăмăр-çке,— май пур таран çемçен сăмахлама тăрăшрĕ колхоз председателĕ.

— Эс çапла майпа укçа тума шутларăн-и? Çавăн пирки каларăн-и пĕркун ларура мана чармастăр-и тесе?

— Эс чарасшăн-и?— йĕкĕлтенĕ пек ыйтрĕ Яштайкин.

— Эп мар, колхоз ирĕк паман сана хăйĕн вăрманне пĕтерме! Ăна нимле председатель те, нимле правлени те кастарма пултараймасть. Халех чарма хуш, Аристарх Петро-

вич,— çав тери вĕриленсе калаçрĕ агроном.

— Ан кансĕрле,— терĕ Яштайкин, ăна сĕтел патĕнчен сирсе. Çавăнтах вăл телефон трубкине тытрĕ те кӳршĕллĕ пĕр колхоза чĕнсе илчĕ.

— Митрофанов-и ку? Салам сана, Иван Митрофанович. Эс каснă пек йывăçна хăçан турттарса пĕтеретĕн? Эрнерен? Çук, Иван Митрофанович,васкат хăвăн çыннусене. Хăш-пĕрисем мана вăрмана касма чарассипе хăратаççĕ. Хăвăртрах турттар. Унсăрăн... Юрĕ, юрĕ. Кил, тата пăртак хушса парăп. Тепĕр чух эс те мана пулăшăн. Юрĕ, сывă пул...

Калаçса пĕтерсен вăл Никодим Федорович еннелле çаврăнчĕ те ăна хăрах аллипе хулпуççинчен тытсах ӳкĕте кĕртме пикенчĕ.

— Тархасшăн, эс çынсен сехрине хăпартса ан çӳре, Никодим Федорович. Санăн, агрономăн, вăрман ĕçне хутшăнмасан та юрать. Ытах хутшăнас тетĕн пулсан, çакна пĕлсе тăр: вăрмана эпĕ кастаратăп, эпех ун вырăнне колхоза çĕнĕ участок илсе паратăп.

— Кам парать пире çĕнĕ участок? Кам пăхса ӳстернĕ ăна сан валли?

— Ан хăра, тупатпăр. Министр патне çитетĕп, анчах колхозăн вăрман пулать. Аса илнĕ те ака кӳлнĕ тетне? Çук, малтан тĕплĕ шутланă эпĕ ĕçе тытăниччен. Халь урама тухса хурах кăшкăрсан та чараймастăн мана. Пуçлăхсемпе пупленĕ, правлени членĕсене систернĕ. Сире аслаçăрпа иксĕре çеç калама май килмерĕ...

Ку сăмахсем агронома нимĕн чухлĕ те витмерĕç.

— Хитре мар хăтланатăн, Аристарх Петрович,— терĕ вăл.— Правлени пухам пекки турăн, улталарăн пире. Анчах асту, эпир сана вăрман касма ирĕк парас тесе йышăнман.

— Мĕн тесе йышăнтăр?

— Укçа валеçесси çинчен сăмах хускатнă май, председательпе бухгалтера сутмалли япаласене сутса ытларах укçа тума хушрăмăр. Вăрман пирки никам та çăвар уçман. Ку вăл пĕтĕмпех эс шутласа кăларнă авантюрă!

— Ăна тепĕр правленире кала.

— Çук, унчченех калатăп. Ак çакăнтах калатăп! Вăрмана касма чармасан, эпир, темиçен пуçтарăнса, халех райкома каятпăр.

— Кай, часрах чуп,— терĕ Яштайкин.— Мана ан кансĕрле. Райкомпа эсĕ çеç мар, эпĕ те калаçма пултаратăп. Тен, калаçса илнĕ те-ха хăш-пĕр çынсем санран маларах...

Никодим Федорович, суятăн эсĕ тенĕ пек, карт! хускалчĕ те пĕр сăмахсăр алăкран тухса çухалчĕ.

...Кун хыççăн тепĕр эрне иртрĕ, ял çумĕнчи вăрман йăлтах çаралса, пушанса юлчĕ. Нимле ката та çук ĕнтĕ кунта. Шап-шур турпаспа çапă çеç купаланса выртать. Тата çиелтен сарăхма пуçланă тункатасем тин вырнă ыраш пуссинчи тĕмсем пек курăнаççĕ. Çамрăк йывăççем тесен, вĕсем те пĕтĕмпех тĕшĕрĕлсе пĕтнĕ вăрман каснă чухне.

Çаралса юлнă вăрман кати еннелле тунсăхлăн пăхакан Шевле халран кайнипе юман тунката çине пырса ларчĕ. Чăнах, хаклă çынна пытарнă пекех пулчĕ старикшĕн Тавăт катине аркатса тăкни. Вăй чакрĕ пек унăн сасартăк, чĕре те ытларах йăшкама тытăнчĕ пек.

— Пĕтерчĕ, пĕтерчĕ,— терĕ хăй тĕллĕн Архип Лукич.— Мĕн тери вăрмана хаяр çил-тăвăл тӳнтернĕ пекех туласа тăкрĕ. Хăçан тасатса тухмалла ĕнтĕ ку катана? Мĕнле ӳстермелле ăна?

Кăшт каннă хыççăн Шевле каснă вăрмана шаларах кĕчĕ, шултра йывăççене йăвантарнă чух хуçăлнă пилешсемпе хурамасене, уртăшпа шĕшкĕ тĕмĕсене кукăр патаккипе тĕккелесе çӳрерĕ. Çамрăк хурăнсене те нумай сиен тунă вăрмана тирпейсĕр каснине пула. Пĕрисем тăррисĕр юлнă вĕсенчен, теприсене тĕпĕпех тăпăлтарнă, хăшĕ-пĕрисене ӳкекен йывăççем çаклатса пĕкĕ пек ава-ава хунă. Тăрри вĕçерĕнеймен пирки халĕ те çавăн пекех авăнса тăраççĕ мĕскĕнсем.

Чылайччен тӳрлеткелесе çӳрерĕ Шевле аманнă йывăççене, вĕсен çакланнă тăррисене вĕçерте-вĕçерте ячĕ, анчах ку йывăççене пĕр çын мар, пин çын та тӳрлетсе пĕтерес çук.

— Эх, эсрел, эх, эсрел,— чунтан тарăхса вăрçрĕ Архип Лукич колхоз председательне.— Мĕн туса хутăн эсĕ пирĕн вăрман катине? Мĕнле аллу çĕкленчĕ çакăн пек хитре вăрмана укçашăн муталама? Пуйăн-и ĕнтĕ халь? Миллионер пулса тăтăн-и? Пырна лартăр санăнне ку вăрман, эсрел пуçĕ? Пĕтĕм ял ылханĕ тивтĕр сан пуçна çапла ĕмĕтсĕр хăтланнăшăн! Эпĕ те чĕререн ылханатăп сана, пирĕн яла çакнашкал инкек илсе килнĕ ăнман этем!

Аристарх Петрович Яштайкин ку ылхана илтмерĕ. Вăл çак вăхăтра Шевле старикрен аякра пулчĕ. Унăн çăмăл машини, яка çул тăрăх хăвăрттăн ыткăнса, район центрнелле çывхарса пычĕ.

Кăмăлтан çав тери пусăрăнчăк Яштайкин. Хăй те пĕлмест-ха: ма каять вăл района, кам патне каять? Тахçанхи тусĕ Лукьяненко патне-и? Ара, чĕнмен вĕт-ха ăна райком секретарĕ, эп сана хытă вăрçса тăкасшăн тесе шăнкăртаттарман. Машинă çине ларса ялтан тухнă чухне вăл çапла шутланăччĕ: хам мĕн

тунине хамах каласа паратăп, ятлатăр, çăлас пулсан, çăлтăр мана, теněччě. Ак çул çинче ун шухăшěсем пачах пăтрашăнса кайрěç. Шоферпа юнашар ларса пынă май, вăл пурте курайми пулнă Яштайкина хăй тěллěн айăпласа та, тÿрре кăларса та пăхрě. Хăвăн ěçÿсене мухтама та, тиркеме те йывăр иккен. Кам калама пултарать ăна: мěн тери айăплă, мěн тери айăплă мар колхоз председателě? Тата, айăплă пулсан, ма Лукьяненко патне çул тытмалла унăн? Вăл судья мар пулě вěт? Каçарас пулсан, халăх каçартăр. Çавăнтан каçару ыйтмалла.

Яштайкин, Витьăна урама хăварса, райком çуртěнчи буфетра икě стакан компот ěçрě те çийěнчех каялла тухрě.

— Лукьяненко çук,— суйрě вăл шофера.— Килни ахалех пулчě пирěн.

Витьă, Яштайкин сăмахне ялан ěненекенскер, хальхинче председатель çине «тата мěн калатăн?» тенě пек куç айěн пăхрě, унтан моторне чěртсе ячě те машинине вăрт! çавăрчě, газ пачě. Аристарх Петровичăн тем пулсан та шофера ма улталарăм-ха тесе ÿкěнсе илмеллеччě ěнтě, вăл ăна тума та пěлмерě, хăй çухатнă питě кирлě япалана тупасшăн пулнă пек, вěçěмсěр малалла, машинă умěнчи такăр çул çинелле пăхрě.

...Каçхине, пурте çывăрма выртсан, Пигенешова Варвара килне пěр çÿлě те тěреклě арçын пырса кěчě. Ку кам пулнине Варук инке çын пÿртре мěнле утса çÿренинченех уйăрса илчě.

— Кам унта?— терě вăл, вырăн çине тăрса ларса.

— Эпě-ха, Варук,— терě хулăн сасă.— Ма ир çывăратăр эсир?

— Мěнле ир пултăр ěнтě? Çурçěр çитет. Эс çěр хута ěçпе çÿретěн пулě-çке?

— Эп санран каçару ыйтма килтěм, Варук. Нумай йăнăш туса тултартăм пурнăçра, ак каллех сан патна килмелле пулчě. Çÿле вěçсешěнччě эпě, вăй çитмерě. Айăп ан ту мана...

Пěр вăхăт хушши тěттěмре нимле сас-хура та илтěнмерě. Унтан Варук йывăррăн сывларě, ирěксěртен тенě пек каласа хучě:

— Манран ан ыйт ăна, Аристарх. Эп каçарăп, ман чěре çемçе, пěлетěн. Анчах хěрÿ каçарě-и сана? Элтюкка каçарě-и?— терě.

5

ТИН ÇЕÇ ÇАКĂНТА вěлтлетсе илчě Мархва тутăрě. Вěлтлетсе илчě те çухалчě. Ăçта кайса кěме пултарчě бригадир пěр минут хушшинче? Чăнах, ниçта курăнмасть. Никодим фермă йěри-тавра тытса тухнă çěнě карта патне çитсе пăхрě, тин çеç тăкнă пěрене купи хыçěнче кампа та пулин каласса лармасть-и тесе, унта пырса тěрěслерě. Марфа Осиповна çав-çавах курăнмарě. Качака пек, карта урлă сиксе каçса кěмерě пулě-çке вăл фермă картишне? Ун пек пулма пултараймасть. Тем тесен те тупмалла Никодимăн Мархвана, питě кирлě ěç çинчен калаçмалла унăн хěрарăм бригадирпа.

Сукмак сěвек вырăнпа вěçěмсěр аналалла анать. Кантăр пусси хыçа юлчě, умра хěпхěрлě çыранлă Чакак çырми кăна ěнтě, урăх нимěн те çук. Унта мěн тума антăр-ха Мархва? Пит çума е ура çума-и? Пěр тумлам шыв та çук-çке Чакак çырми тěпěнче.

Çапах та тупрě-тупрех агроном хăй шыракан çынна. Мархва çыран хěрринче çеремлě вырăн тупнă та шухăша путса ларать. Пуçне пěкнě, тутăрне сÿсе илсе çерем çине хунă. Аллине темле хыт-хура тытнă — хуçать те хуçать ăна ěçсěр аптранă çын евěр. Çÿçне кăвак хăюпа тыттарса çивěтленě вăл. Шкула çÿрекен хěрача пекех туйăнать хыçалтан пăхсан бригадир.

Никодимăн çак вăхăтра Мархвана ним сассăр пырса ыталаса илес килсе кайрě. Анчах, теме туйнă пек пулса, ăна хăратма шутламарě. Те юрать-ха ун пек выляма? Кам пěлет, тен, мěнле те пулин инкек пулнă бригадирăн,— питě мěскěннěн ларать-çке вăл.

— Мěн, шыраса тупрăн-им?— терě Мархва, Никодим ун çывăхне пырса тăрсан.

Айккинчи тутăрне вăл хăйěн чěрçиттийě çине илсе хучě.

— Тупрăм. Эс çаврăнса пăхмасăрах палларăн-и мана?

— Чунпа сисрěм.

— Пултаратăн апла. Мěн туса ларатăн кунта? Питě майлă вырăн тупнă-çке эсě...

— Шухăшлатăп.

— Мěн пулчě? Инкек мар пулě те сан?— терě каччă, ун çивěтне алăпа тěкěнсе.

— Упăшка таврăннă. Çавăнпа шухăша кайса ларатăп.

— Йышăнатна ěнтě?

— Пěлместěп.

— Çавăн чул ларса нимěн те шутласа кăлараймарăн-и? Мěн те пулин аларăн пулěха. Пěрле пурăнатпăр терěн-и?

— Каламан. Нимěн те каламан. Хам та пěлместěп. Мěн ыйтса тăратăн манран? Ма килтěн эс кунта?— Мархва ура çине сиксе тăчě те куçпа çисе ярас пек Никодим çине пăхрě.— Кала-ха, мěн кирлě сана? Мěн кирлě?

— Ну, юрě ěнтě, Мархва. Эп айăплă марçке упăшку таврăннăшăн. Эп сана пěр ěç

пирки шыраса ҫӳретӗп,— йӑпатма тӑчӗ Никодим.— Ну, тавраннӑ тейӗпӗр. Мӗнех вара? Пурӑнас тетӗн — пурӑнатӑн унпа, пурӑнас темерӗн — шӑпӑр ил те хӑвала ӑна...

— Хӑвала... Калама ҫӑмӑл — хӑвала. Эп ак иртенпе ниҫта кайса кӗрейместӗп. Курассӑм килмест ман ӑна, тӗнче тӑрӑх янтине ҫеҫ шыраса ҫӳрекен ҫав кӗлмӗҫе... Пурнӑҫ-и ку манӑн, ҫапла асапланни? Эс, эс...— Мархва каласа пӗтерейменрӗ, ун куҫӗсем темиҫе хутчен хӑвӑрттӑн мӑчлатса илчӗҫ, унтан ик пит ҫӑмарти тӑрӑх шӑпӑр! ҫеҫ куҫҫуль юхса анчӗ. Бригадир питне тутӑрпа хупларӗ, вӑл хӑйне сасӑпах макӑрма пуҫласран тытса чарасшӑн пулчӗ курӑнать, анчах ӑна тума вӑй ҫитереймерӗ, хулпуҫҫийӗсене чӗтретсе, хӗрарӑмла хыттӑн ӳлесе ячӗ.

**Петӗр ХУСАНКАЙ**

# ШЕЛЕПИ

Хуп-хура, кӑтра сухаллӑ,
Куҫлӑ-пуҫлӑ ҫын чухнех
Вӑл мана парсаччӗ алӑ,
Яр уҫса япшар чунне...

Ват Ялак — аслашшӗ пулнӑ,
Ват асламӗш — Шелепи.
Ҫавӑнтан яланлӑх юлнӑ
Хушамат — йӑран юпи.

Вилӗмпе кун-ҫул йӑранӗ,
Манӑҫпа мухтав чикки...
Шелепи! Кампа пӑтранӗ!
Ҫук тек урӑх ун пекки.

...Ӗмӗрсем иртсе çухалнӑ.
Хӗҫ янранӑ. Юхнӑ юн.
Ялаксем ҫаплах усраннӑ,
Йӑх ӗрчетнӗ, хушнӑ чун.

Вӗсене хӑмсарнӑ хыттӑн:
«Киремет! Тӗнекӗмен!»
Вӗсене хӑш тапхӑр ылтӑн
Сӗнсе илӗртнӗ иккен.

«Кӗр тӗне!» Ирӗксӗрленӗ,
Хӑваланӑ ҫырмана.
Ялаксем ут йӗнерленӗ,
Тухса тарнӑ вӑрмана.

Кӗртнисем те вӑркӑнтарнӑ
Хӗресне хыва-хыва.
Пин ҫулхи пекех пуҫҫапнӑ
Хӗвеле, Ҫӗре, Шыва...

«Ҫавсенчен килет-ҫке пурнӑҫ:
Хӗвелтен, Ҫӗртен, Шывран.
Тӑшмансем ураҫҫӗ, урӗҫ,
Пирӗн — хамӑрӑн, ан ман!

Чӑваш чунӗ, чӑваш танӗ
Пӗтмӗ, каймӗ вӑл вӑйран,—
Шаларах кӑна пытанӗ
Ҫиҫӗмле тухма кайран!..»

Ҫаплалла вӗрентнӗ ватӑ
Ялаксем ҫамрӑксене.
Эпӗ халӗ астӑватӑп
Шелепи каланине...

Шелепи... Хӗрарӑм ячӗ...
Асанне те кукамай
Ачаран пире пахаччӗ
Чи ачаш сӑмахпа шай.

Шелепи юрланӑ юрӑ,
Вӑл упранӑ вут чӗлхе
Тӑхӑмне мухтавлӑ турӗ
Чӑвашра ӗмӗрлӗхе.

Ҫавӑнпа пур сӑвӑҫ-терӗш
Варринчи ҫак ӗмпичче
«Шелепи сӑввисем» терӗ
Ҫырнине пӗррехинче.

Кӗнеке пӗлмен асламӗш —
Ҫарӑмсан тавраш пики —
Пулчӗ, паҫӑр хам каларӗш,
Манӑҫпа мухтав чикки...

Тусӑм, мал ӗмӗтлӗ тантӑш!
Манӑҫран эс ан хӑра:
Халӑх шутлӑ ҫын нихҫан та
Манӑҫ пулмӗ халӑхра.

Калаҫаҫҫӗ тӗрлӗ-мӗрлӗ
Халь чӑваш чӗлхи ҫинчен...
Тухӗ тав та, шав та кӗрлӗ,
Илтмен мар ӑна хальччен.

Йӑвине сурас килет-тӗр
Аслӑ ятшӑн хӑшӗсен.
Хӑррӑн ҫеҫ пӑхса иртетпӗр
Ун пеккисене ҫӳлтен.

Ҫеҫпӗл куҫӗпе пӑхатпӑр,
Иванов куҫӗпеле.
Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!
Шанманни — чӗрӗ виле.

1961

ÇĔНĔ САВАСЕМ

**Николай САНДРОВ**

# ВĂХĂТ

Ача чухне велосипед
Пĕрремĕш хут курсан,
Калаттăмăр: «Епле вĕçет!»
Чупаттăмăр хыçран.
Çаплаччĕ эпĕр пĕчĕк чух.
Анчах та самана
Пĕр вырăнта вăл тăрас çук,
Вăл вирхĕнет кăна.

Хальхи ачасене илсен,
Мĕнпе тĕлĕнтерен!
Тек тĕлĕнмеççĕ спутникрен,
Ун хăвăртлăхĕнчен.
Вĕсем ĕмĕтленеççĕ Марс,
Венерăсем çинчен.
Ĕмĕтленмесĕр юрамасть

Халь пирĕн ачасен.
Халь Вăхăт чуппипе пĕр тан
Пырас пулать ялан.
Унпа пĕр тан, пĕр шай пырсан,
Тин ĕмĕт çитĕ сан.
Вара эс космосран анан,
Кавир çулпа утан!..



«Салам сана, Çĕр!»— Н. Овчинников худ. картинĕ.

# ТЕЛЕЙ

Телей тени мĕскер!— Тĕнче кисренменни,
Çĕр чăмăрĕ хыпса çунса кĕлленменни.

Телей тени мĕскер!— Россия сыв пулни,
Вăл Ленин çулĕпе хавхаланса утни.

Телей тени мĕскер!— Вăл маншăн çĕнĕ сăвă,
Тата пĕлен-тăран пулни чипер те сывă.

Телей тени мĕскер!— Туссем пăрахманни,
Калас сăмах пулсан, ăна пытарманни.

Телей тени мĕскер!— Эс ман çумра пулни,
Эс ман çине пăхса вăтаннăн йăл кулни.

# ЙĔР

Библиотекăра илетĕп çĕн журнал.
Епле хавасланса ăна тытатăп халь.

Çĕн сăвăсем те калавсем, роман.
Вула, этем, пуш вăхăту пулсан.

Анчах часах кăмăл хуçăлчĕ ман,
Хура пӳрне йĕррисене курсан.

Те тикĕт вăл, те хăрăм,— кам пĕлет.
Мĕнле-ха çын çав алсемпе кĕрет
Ăс-хакăлăн çап-çутă тĕнчине!

Ман шутпала, ăна, Кĕнекене,
Тытас пулать (çакна астумалла!)
Ачашшăн тытнăн чĕчĕ ачине,—
Унччен алла хирург пек çумалла!

# ЮЛТАША

Эс нумай çырнишĕн савăнатăп,
Нумай çеç-и — сăввусем аван.
Хам сахал ларнишĕн кулянатăп,
Чылай чух эп пултăм çав наян.

Паянхи ĕçе хăваркаларăм
Час-часах эп темшĕн ырана.
Ӳснĕçемĕн ӳсрĕ манăн парăм —
Туйса илтĕм халь тин çеç ăна.

Эс нумай çырнишĕн савăнатăп,
Нумай çеç-и— сăввусем аван.
Хам та халь кăвак çутпах тăратăп,
Сăвăпа кĕтсе илеп ире.

Манăн сăввăм-юррăмра этемĕн
Савăнăçĕ ялкăштăр тулли.
Хуйхăран та пăрăнса иртеймĕн...
Ут, поэт, нумай сан курмалли!

●

Иван МАЛГАЙ

# ЧУЛЛĂ ТУ УМĔНЧЕ

Тарла-тарлах утса эп çитрĕм
Чи çӳлĕ чуллă ту умне.
Пирус кăлартăм, шăрпăк чĕртрĕм
Пăхса тăратăп ун çине.
Пĕччен пĕр ту. Пĕлеп: чĕлхесĕр,
Пуçарас çук сăмах-юмах.
Çавăнпала та ним чĕнмесĕр
Тăратăп. Шухăшăм кăна
Çак чуллă ту пекех çĕкленчĕ
Сиксе тухса ман пуçăмран.
Чул-ту тавра чупма пикенчĕ
Паллах, ытла та пысăкран.
Ларать кĕрнеклĕн сарăлса вăл
Хаяррăн, тĕксĕммĕн пăхса.
Çĕнтерес çук ăна çил-тăвăл
Тепле килсен те тапăнса.
Те ватăпа, те хытă шăннă
Пиншер-пиншер çулсем тахçан
Сăн-пичĕ унăн кăвакарнă,
Сăн-пичĕ — тĕссĕр тип тусан.
Шутлаççĕ пулĕ: чул-ту вилнĕ,
Чăнах вăл ним те сывламасть,
Ăна кичемлĕх пусса илнĕ,
Йĕркеллĕ курăк та шăтмасть.
Пирус вăраххăн çунса пĕтрĕ,
Тĕпне сӳнтертĕм таптаса.
Ак çĕнĕ шухăш персе çитрĕ:
— Чул-ту çумне пăхас выртса...
Пырса выртатăп питĕ тачă,
Туятăп: чĕрĕ вăл, вилмен.
Шалтан пĕр шавсăр сасă пачĕ,
Шалта шыв çулĕ пур иккен.
Шăнкăртатса юхать тӳлеккĕн
Ту шывĕ. Лайăх илтĕнет.
Ăçта каять! Ăçтан килет!
Анчах çавна паян пĕлеймĕн.
Ăнлантăм: çӳлĕ чул-ту чĕрĕ,
Çара пулсан та пурăнать.
Ахальтен мар-мĕн кунти нӳрĕ
Саланнă сассăр таврана.
Хĕрӳ çав пурнăçăн хăвачĕ —
Сӳнми хăват, вĕри хăват.
Унпа утсассăн çывăх, тачă
Сана та вилĕмсĕр тăвать.




Арк. АЛЕКСАНДРОВ

# ЫЛТАНРАН ÇУТАРАХ

1

Ĕçрен Мария Григорьевна каç сĕмĕпе тин таврăнчĕ. Ĕнтĕ хытах ывăннă, ĕшеннĕ. Хăйсен çенĕк алăкĕ çумĕнчи пуштă ещĕкĕнчен вăл çĕнĕ хаçатсем кăларчĕ: «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия», «Медицинский работник»... Ха тата, харăсах икĕ журнал килнĕ иккен — «Медицинская сестра», «Фельдшер-акушер». Тепле ывăннă пулин те, Мария Григорьевна вĕсене пăхса тухмасăр тӳсеймерĕ. Хăй куç чирĕсен уйрăмĕнче аслă сестрара ĕçленĕ май вăл медицинăри çĕнĕ хыпарсене вăхăтра пĕлесшĕн.

Упăшки, Иван Харитонович, таврăнайман-ха. Вăл Йĕпреç поселокĕнчи вун пĕр çул вĕренмелли шкулта ĕçлет. Шкул директорĕн заместителĕ. Ара, хуçалăх тĕлĕшĕпе. Куллен çаппа, тĕттĕмрен тĕттĕмчен килте çук. Ун аллинчи хуçалăх пысăк, ĕçĕ нумай.

Вĕсем, Мария Григорьевнăпа Иван Харитонович, иккĕнех пурăнаççĕ. Кам та пулин вĕсен кун-çулĕ пирки ыйтсан, вĕсем: «Пурăнатпăр çав икĕ тăлăх-турат», теççĕ, салхуллăн кулкаласа...

Мария Григорьевна хăй пысăк çемьере ӳссе çитĕннĕ. Вăл тăван ашшĕ каласа кăтартнине паянхи пекех астăвать.

Халиччен Куславкка районне кĕнĕ Çĕнĕ Куснар ялĕнче вĕсен пĕрремĕш ывăл çуралсан, кӳршĕрен пĕр кинеми-карчăк пырать те ĕмĕрхи йăлапа тĕпчеме пикенет.

— Ачине мĕн ят хутăр-ха?

— Петĕр тесе чĕнес терĕмĕр. Çав ят килĕшрĕ те ĕнтĕ.

Унтан кинеми пӳрт варринче çакăнса тăракан сăпкана йĕри-тавра питĕ тимлĕ куçпа пăхса çаврăнать.

— И-и, сăпкине ама хупран тунă-ха,— тет вăл, пĕрĕннĕ тути хĕррисене саппун вĕçĕпе шăлкаласа.— Питĕ аван, питĕ аван. Йыш пысăк пулать. Тата малтанхи ачиех ывăл.

Карчăкăн, паллах, хăйĕн тĕшмĕшĕ пулнă. Тăрăхла турат кусла сăка хупне чăвашсем ама хуп теççĕ. Сăпкана çавăн пек ама хупран тусан, çемьере ача нумай пулать имĕш, тата вĕсем пурте таса, çирĕп сывлăхлă пулаççĕ. Малтанхи ывăл — пысăк савăнăç. Ывăл пур — ят çĕрĕ пур. Йĕрки çавнашкал пулнă ĕлĕкхи саманара.

Кӳршĕри кинеми суннă пекех, вĕсен кил-йышĕнче пурĕ çичĕ ача ӳссе çитĕннĕ: тăватă ывăл, виçĕ хĕр. Чăн кĕçĕнни вара Марье пулнă, хальхи Мария Григорьевна.

Сăмах май çакна та асăрхаттарса хăварар: Марье хăйĕн тăван амăшне астăваймасть, унăн амăшĕ вăл виçĕ çула çитиччен вилсе çĕре кĕнĕ. Вĕсене вара ама çури амăшĕ, ялти пек каласан — Алтатти аппа, пăхса çитĕнтернĕ. Анчах ăна никам та тăван мар амăшĕ тесе шутламан,— ачасене вăл çав тери лайăх пăхнă. Тăватă ывăл та виçĕ хĕр хăйсен пĕвĕпе те сăнĕпе куç тулли курăннă, чуна савăнтарнă.

Чăн та, пурăна-киле çак шĕкĕр çемье те тĕрлĕ çĕрелле сапаланчĕ. Кашта пек икĕ ывăл вăрçăра пуç хучĕç. Марьен пиччĕшĕ, Алексей Григорьевич, Канаш районĕнчи «Мотор» колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Сакăр вун тăхăр çулхи ашшĕ Григорий Егорович, ун патĕнче пурăнать.

Кăшт пушă вăхăт тупăнсан, Мария Григорьевна ашшĕ патне çитсе курмасăр чăтаймасть. Ĕмĕртен ăс пухса пынă ватă çынпа халапланса ларма, пурнăçра хуйхă-суйхă килсе тухнă чух чуна йăпатма тем пекех паха. Хĕрĕ ашшĕн нумай сăмахне асра тытать.

— Ырăшăн пурăн — хăвах ырă курăн,— тенĕччĕ ашшĕ пĕринче. Çак сăмах вара хĕрĕн чĕрине уйрăмах витĕмлĕ кĕрсе юлнă. Çапла, çынсен ырлăхĕшĕн, халăх ырлăхĕшĕн пурăнмалла, унсăрăн тĕнчере саншăн та чăн-чăн ырлăх çук.

Мария Григорьевна хăйĕн пĕтĕм савăнăçне, чун канăçне кулленхи ĕçре тупать. Хăй вăл пысăк йышра шăкăлтатса ӳснĕ пулин те, хăйĕн кун-çулĕ çемье тĕлĕшĕпе ăнăçлах пулаймарĕ. Унăн малтанхи упăшки вăрçă хирĕнчен таврăнаймарĕ. Хальхи упăшкин, Иван Харитоновичăн, çемйи вара 1941 çулхи кĕркунне Мускав çывăхĕнче фашистсен бомби айĕнче пĕтнĕ (вĕсем унта пурăннă пулнă). Çавăнпа ĕнтĕ Мария Григорьевнăпа Иван Харитонович хăйсене «тăлăх-туратсем» тесе шутлаççĕ.

Стена çумĕнче, авă, çап-çамрăк хĕр портречĕ. Вăл тахăш енчен çамрăк чухнехи Мария Григорьевнăна аса илтерет...

«Ах, аса илмелĕх кăна çав»,— амăшĕн ахлатмасăр пĕр кун та сывлăш тухмасть. Стена çумĕнчи портрет — хĕрĕн портречĕ. Зойă вăл, Зойă... Тăхăр çул каярах вăл вăтам шкул вĕренсе пĕтерчĕ те хăйĕн хĕр-тусĕпе Ритăпа пĕрле Шупашкара тухса кайрĕ. Иккĕшĕ те вĕсем учительницă пулма ĕмĕтленетчĕç. Педагогикă институтне кĕме заявлени панă хыççăн хĕр-туссем Атăл леш енне кайма шут тытнă иккен. Кунĕ тӳсме çук шăрăх. Çынсем пурте шыва кĕреççĕ. Хĕр-туссем те çитнĕ-çитменех шывалла чăмаççĕ. Ритă самаях шала ишсе каять. Кĕçех чуна çуракан сасă:

— Пулăшăр!.. Путатăп...

Зойă, пулăшас тесе, хĕр-тусĕ патне ишсе пырать... вара иккĕшĕ те...

Йывăр хуйха ĕç çĕклет, тенĕ ваттисем. Ĕçре, пĕр ĕçре кăна пусарать амăшĕ çулăмсăр кăмрăкланса çунакан чĕрине.

Больницăна çамрăк врачсем ĕçлеме килеççĕ. Тин çеç институтран вĕренсе тухнă хĕрсем. Вĕсем пурте Мария Григорьевнăна хăйĕн Зойин тантăшĕсем пек туйăнаççĕ. Пурнăçра инкек-синкек тӳссе курман-ха вĕсем. Курма та никам ан сунтăр. Анчах ĕçре йывăрри сахал мар тупăнать.

Куç чирĕсене сиплекен кабинетра уйрăм тĕттĕм пӳлĕм пур. Унта куç шăрçине, «куç тĕпне» сăнаса тĕрĕслеççĕ. Нумаях та пулмасть-ха çав тĕттĕм пӳлĕмрен тахăшĕ ĕсĕклесе макăрнă сасă илтĕнсе каять. Мария Григорьевна чупса кĕрет те хайхи курать: çамрăк хĕр-тухтăр макăрать иккен. Аслă сестра ăна çавăнтах хăй кăкăрĕ çумне пăчăртаса тытать.

— Лăплан хĕрĕм, лăплан... Пурăнан пурнăçра ун пекки çеç пулать-и!.. Лăплан, ан хуçăл...

2

Йывăр операци ăнăçлах иртрĕ. Халь акă, чирлĕ çынна палатăна ăсатнă хыççăн, пурте сасартăк ĕшеннине туйса илчĕç. Сестрасенчен пĕри Шупашкартан килнĕ куç тухтăрне хыççăр пукан сĕнчĕ.

— Тархасшăн, Анна Демьяновна.

— Чимĕр, хĕрсем, эсир Мария Григорьевна валли те пукан тупăрха,— терĕ окулист-хирург, йĕри-тавралла пăхкаласа.— Ăна пуринчен йывăртарах лекет. Малтан унăн операцие хатĕрленмелле, операци вăхăтĕнче вăл — хирургăн сылтăм алли, операци хыççăн — инструмент пухмалла, çумалла, тасатмалла. Килĕр, Мария Григорьевна, ларса канăр!

— Тавтапуç, Анна Демьяновна, ырă сăмахăршăн,— терĕ аслă сестра,— анчах хăвăрах куратăр...

Унăн ларса канма вăхăт çук, халех тепĕр операцие хатĕрленмелле. Ăна кура ытти сестрасем те именчĕç, самантрах аслă сестрана пулăшма пикенчĕç.

— Хĕрсем, вĕренĕр Мария Григорьевнăран, тăрăшсах вĕренĕр,— асăрхаттарчĕ окулист-хирург.— Унăн кашни утăмне сăнаса пырăр. Çамрăк чух эпĕ хам та унран вĕреннĕ.

— Ах, Анна Демьяновна,— вăтаннипе пуçне пĕкрĕ аслă сестра,— калатăр та çав...

— Тĕрĕс мар-им? Аса илĕр-ха Канаш хулине...

Чăваш хĕрĕ Мария Григорьева медицинă сестри ĕçне вăтăр çул ĕлĕкрех Канаш хулинче тытăннă. Вĕренессе вăл ытла нумаях вĕренеймен. Малтан — ултă уйăхлăх курс, кайрантарах — икĕ çуллăх медицинă техникумĕ. Ун чухне вăхăчĕ çавăн пек пулнă, кадрсем çитменнипе питĕ васкавлăн вĕренме тивнĕ.

Ч‹› аслă шкул — кулленхи ĕç, пурнăç. Ялтан тин çеç килнĕ çамрăк хĕр хăй «лекĕр ĕçне» тытăннишĕн пĕр савăнать, пĕр тĕлĕнет, кăшт шикленесси те пур хăйĕн, анчах вăл пур ĕçе те тимлĕ тăвать, пурне те пĕлме, кашни «вак-тĕвеке» асра тытса юлма тăрăшать. Кĕçех хăй ăнланса илет: этем организмĕнче «вак-тĕвек» тени çук. Пурте кирлĕ, пурте вырăнлă. Тепĕр чух этем сывлăхĕ пĕчĕк кăлтăкранах хавшаса каять. Калăпăр, куçа çӳп кĕчĕ. Çӳпĕ те мар-ха, тусан пĕрчи кăна. Çынни малтанах ăна асăрхамасть те, куçĕ тем кансĕрленнине çеç сискелет. Э-э, нимех те мар, иртсе кайĕ-ха!— тет вăл аллине сулса. Анчах куçĕ унăн хĕрелет, пӳрленет, пиçĕхет. Вăраха ятăн — куçа шур илме те пултарать.

Мария Григорьевнăн «ĕçри биографийĕ» çырăнма пуçланнă вăхăт— тăвăллă, çĕкленӳллĕ вăхăт. Индустриализаци, коллективизаци, культурă революцийĕ — çак сăмахсем хаçатсемпе плакатсенче пĕр вăйлă çулăм пулса ялкăшаççĕ. Çĕршыври мĕн пур тăванла халăхсен ывăл-хĕрĕсем пекех, чăваш çамрăкĕсем те çĕнĕ пурнăçшăн, çĕнĕ йăла-йĕркешĕн, çĕнĕ культурăшăн аслă похода тухаççĕ. Пур çĕрте те **çĕнĕ** сăмах пĕрремĕш вырăнта. Паян пĕр ялта, ыран тепринче çĕнĕ вулав çурчĕ, çĕнĕ клуб уçăлать. Вулав çурчĕпе юнашар е çав çуртрах — трахпункт (çаплаччĕ ун чухне ялти санитари пункчĕн ячĕ).

Чăваш халăхĕшĕн кивĕ тĕнчерен юлнă чи йывăр инкексенчен пĕри трахомă пулнă. Патша саманинче çав чирпе кашни çĕр çынтан сакăр вунă çын асапланнă. Тĕрĕссипе, пĕтĕм чăваш халăхĕ хĕвел çутине ĕмĕрлĕхех куçран çухатас хăрушлăх умĕнче тăнă. Трагедилле шăпа!..

Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче кашни ял Совет территорийĕнчех трахпункт ĕçлеме тытăнать. Трахомăпа кĕрешес ĕçе пĕтĕм республикипе ертсе пыма Канаш хулинче трахоматознăй институт уçăлать. Хăйне евĕр штаб. Мария Григорьевна курсран вĕренсе тухнă хыççăн шăпах çавăнта ĕçлеме кĕрет те ĕнтĕ.

Куç тени — питĕ кăткăс, питĕ черченкĕ те ачаш орган. Вăл пуç мимипе тачă çыхăнса тăрать. Унта çĕр тĕрлĕ тымар. Нерва тымарĕсем, юн тымарĕсем. Куç патне пыма уйрăмах типтерлĕ те çаврăнăçуллă алă кирлĕ.

Пурне те пĕлме тăрăшакан, çивĕч ăс-тăнлă хĕр çак кăткăс ĕçри йывăрлăхсене ăнăçлă çĕнтерсе пырать. Ăсталăха алла илет. Акă ĕнтĕ вăл йывăр операцисем тунă çĕрте врачсене пулăшать.

Анна Демьяновна Васильева ун чухне хăй те çамрăк врач пулнă. Пĕлӳ пур, опыт çукрах. Малтанхи утăмсенче ăна, паллах, Мария Григорьевна та чылай пулăшнă. Акă мĕнле вĕренӳ пирки калать ĕнтĕ халь Шупашкартан килнĕ окулист-хирург.

Вĕсем, çамрăк врачпа çамрăк медсестра, Канашри трахоматознăй институтра пĕрле ĕçленĕ. Кайрантарах, 1936 çулта, институт Шупашкара куçнă, институтпа пĕрле Анна Демьяновна та куçса кайнă. Мария Григорьевна вара Канашри куç лечебницинче юлнă.

Вăрçă кунĕсенче ку лечебницă çуртне госпиталь йышăннăчĕ. Ăста пултăр-ха çавăн пек йывăр вăхăтра канăççăр чĕреллĕ хĕр? Вăл — госпитальте, хирурги уйрăмĕнчи аслă сестра. Вăрçă хыççăн вăл — Канашри поликлиникăра, куç чирĕсен уйрăмĕнче. Этем куçне ĕнтĕ мирлĕ ĕç валли сиплемелле. Ан тив, вăл чечекленекен садсемпе ешерекен уйхирсем çине пăхса савăнтăр, хăйĕн çутă малашлăхне курса хавхалантăр, пурнăçра ырăран ыррине ĕмĕтлентĕр.

Ĕнтĕ вун улттăмĕш çула яхăн Мария Григорьевна Йĕпреç больницинче ĕçлет. Йĕпреç Канаш мар, кунта больници те пĕчĕкрех, оборудованийĕ те чухăнрах, ĕçĕ вара нумайрах.

Куç чирĕпе аптракансем хушшинче куç-пуç хытах сарăпланса-пăсăлса юлнисем тĕл пулкалаççĕ. Ун пеккисене операци тума тивет. Йĕпреç больницинчи куç тухтăрĕ Надежда Алексеевна Луговская питĕ çамрăкха. Вăл институт сакки çинчен тухтăр пуканĕ çине тин çеç куçса ларнă. Çавăнпа йывăртарах операцисем тумалла чухне кунта куç чирĕсен Гельмгольц ячĕпе хисепленекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институтчĕн Шупашкарти филиалĕнчен опытлă специалистсене чĕнсе илеççĕ. Çавна май ĕнтĕ Анна Демьяновна Васильева Йĕпреçре час-часах пулать. Кун пек чухне операци тумалли пӳлĕме мĕн пур сестрасем пухăнаççĕ.

— Анна Демьяновна,— тет вара ăна аслă сестра,— эсир килни — пирĕншĕн чăн-чăн университет. Пирĕнтен мĕн вĕренмелли пур!.. Вăт эсир операци тунă чухне мĕн курнине нимле кĕнекере те тупса вулаймăн.

— Юрĕ, юрĕ,— пӳлет ăна Анна Демьяновна,— пĕрле ĕçлĕпĕр, пĕрле вĕренĕпĕр.

— Анна Демьяновна, — лăпланмасть çапах та аслă сестра,— Шупашкарти куç институтне чĕнĕр-ха пире... Эрнелĕхе те пулин. Курăттăмăр, вĕренĕттĕмĕр.

— Ку акă питĕ ăслă шухăш,— килĕшет окулист-хирург.— Шупашкара таврăнсанах аслисемпе калаçса пăхăп.

Иртнĕ вăтăр çул хушшинче Мария Григорьевна нумай врачпа пĕрле ĕçлесе курнă. Йĕпреç больницинче вăл акă вун улттăмĕш çул ĕçлет, терĕмĕр. Çав хушăра кунта главнăй

врачсем сакăр хутчен улшăннă. Хăй тӳррĕнех пăхăнса тăракан куç тухтăрĕсем те час-часах улшăнаççĕ. Халĕ вăл пиллĕкмĕш окулистпа ĕçлет. Сăмаха вылятарах каласан, çапла пулса тухать ĕнтĕ: врачсем килеççĕ те каяççĕ, аслă сестра тăтăшах хăй вырăнĕнче.

Пытарса тăмăпăр, хăш-пĕр çамрăк специалистсем Йĕпреç пек поселоксене халĕ те-ха «тĕттĕм кĕтес» е «сĕм вăрман» тесе шутлаççĕ. Вĕсемшĕн хула пултăр, рентген кабинечĕ, электрокардиографи! Вĕсен çепĕç чунĕ «тĕттĕм кĕтесселле» питех туртăнмасть.

Йĕпреç больницинче куç тухтăрĕ пачах пулман вăхăтсем те килсе тухкаланă. Ун пек чух Мария Григорьевнăн врач вырăнне ĕçлеме тивнĕ. Эрне е уйăх кăна мар, çулталăкĕ-çулталăкĕпех.

Тăваткалрах сăн-питлĕ, тĕксĕм хура куçлă, пĕчĕкрех пӳ-силлĕ хĕрарăм ывăнма пĕлмест тейĕн. Ĕçе вăл пуринчен те ир тухать, килне вара чи кая юлса таврăнать. Вăл аслă сестра-çке-ха! Ирхине унăн куç чирĕсен уйрăмĕнчи мĕн пур ĕçе йĕркене кĕртсе ямалла, каçхине ĕç кунне вĕçлемелле, мĕн пур япалана пуçтармалла. Ыран валли ĕç вырăнĕ каллех хатĕр пултăр.

— Чĕлхи те унăн — чĕкеç чĕлхи,— теççĕ ăна пĕлекенсем.

Ватă çынпа вăл — ватă çынла, çамрăккипе — çамрăкла калаçать. Ачапăча валли вара уйрăмах ăшă сăмах тупма пĕлет. Хăш чухне шалт аптрамалла çав ачасемпе, култараççĕ те вĕсем, пăшăрхантараççĕ те. Илсе килет, калăпăр, амăшĕ пĕр-пĕр «космонавта» (халь пурте вĕсем хăйсене «космонавт» тесе çӳреççĕ!), эсĕ ăна: «ачам, куçна уç-ха»,— тетĕн лăпкăн. Вăл пур, куçне хупать те... çăварне уçать.

— Асту, çерçи вĕççе кĕрет,— тетĕн эсĕ шӳт туса.

Куç!.. Мĕн каласси ĕнтĕ, пахаран та паха япала. Çемьере пĕр-пĕр ача çуралсан, «тепĕр чун кун çути курчĕ» е «тĕнче çути курчĕ» тенĕ чăваш çынни мĕн авалтанах. Этемшĕн куç — ирхи шуçăм, хĕвел çути, уйăх çути, çĕрлехи тĕксĕм сенкер тӳпери мĕльюн-мĕльюн çăлтăр хĕлхемĕ, ешĕл улăхри пин-пин чечек чĕнтĕрĕ, Атăл урлă çĕкленнĕ асамат кĕперĕ...

Куç çути — чун çути, тенĕ ваттисем. Куçран пĕрре пăхсан, эпир çыннăн шалти кăмăлне, чунне-чĕрине куратпăр. Мĕншĕн тесен куç вăл — чун тĕкĕрĕ. Куç этемĕн сăн-питне илем кӳрет. Мĕн чухлĕ юрă хывман-ши çамрăксем савни куçĕ çинчен, поэтсем мĕн чухлĕ сăвă шăрантарман-ши!..

Куç-пуçа, чыса упранă пекех, мĕн пĕчĕкрен, мĕн çамрăкран сыхламалла. Халь акă аслă сестра умĕнче ларакан ача, куçне уçма хушсан çăварне уçаканскер, ӳссе çитĕнĕ те, тен, чăнласах инçетри çăлтăрсем патне вĕçекен паттăр космонавт пулĕ?! Ан тив, унăн куçĕ те çăлтăр пек ялкăштăр!..

Куллен-кун çак шухăш-кăмăлпа ĕçлет аслă сестра. Халăх умĕнчи ырă ĕçшĕн — ырă хисеп. 1961 çулта Совет правительстви Мария Григорьевна Григорьева медсестрана «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль парса чыс турĕ. Ваттисем каларĕш, ырă ят ылтăнран та çутăрах.

3

Вăл тин çеç лăпкăн сывăрса кайнăччĕ. Çĕрле алăка килсе шаккарĕç.

— Тăрăр-ха, Мария Григорьевна... Инкек,— сывлăш çавăраймасăр пĕлтерет больницăран чупса килнĕ сестра.— Тумланăр хăвăртрах...

Аслă сестра ыйтса-тĕпчесе тăмасть. Йăпăр-япăр тумланать те дежурти сестра хыççăнах тухса чупать.

Пĕр пуçтах ача, хăй тунă «пугач» пăшалпа ашкăнса, куçне сарăмсăр амантнă иккен. Ачан пĕтĕм питне тар-труп хăрăмĕ хупласа лартнă. Куçне уçаймасть. Врач килсе çитиччен аслă сестра ачан аманнă питнекуçне çуса тасатать те лайăх тирпейлесе çыхать.

Ирхине — операци. Аслă сестра ачан куç шăрçи çинчи тарпа хăрăм пĕрчисене хăй аллипе пĕрер пĕрчĕн суйласа тасатать. Малалли кăткăсрах ĕç ĕнтĕ — врач ĕçĕ. Çапла тимленипе ача куçĕ сыхланса юлчĕ-юлчех.

Ан тив, сывă çитĕнтĕр ача, тĕнче илемне курса савăнтăр. Усăллă çын пултăр!..

Йĕпреç—Шупашкар.

●

**Александр КАТТАЙ**

# АСАТТЕ ПУКАНĔ

Çĕр çул иртсессĕн, асатте
Çурхи юр евĕр кăвакарчĕ.
Ват çын, курсан та асапне,
Хысăлă пукан туса хăварчĕ.

Ăна вăл лартрĕ ял вĕçне.
Кунта — çулсем хĕресленеççĕ,
Çынсем çӳреççĕ. Ун çине
Ларса, канса çĕн вăй илеççĕ.

Çилсем хăртмарĕçĕ вĕрсе,
Çырусемпе кăна йĕрленнĕ...
Пĕррехинче, çул май кĕрсен,
Ăна мухтарĕ аслă Ленин.

«Ытла та лайăх, çав тери
Ăспа тума пултарнă»— терĕ.
Эп куртăм: çисрĕ ун чĕри —
Ман асаттемĕм хĕпĕртерĕ.

Кайран, каймарĕç тиесе,
Ун музейне кĕртсе лартмарĕç.
«Кунта вăл кирлĕрех»— тесе
Вырăнĕнчен те хускатмарĕç.

Ют çĕршывран килеç кунта.
Çанталăк пирĕн тăрă, ăшă...
Хĕвел ансассăн çакăнта
Ĕмĕтленет юратнă мăшăр.

Ахальтен мар ĕнтĕ ăна
«Туслăх пуканĕ»— теççĕ халĕ.
...Тăвасчĕ ырă ман çынна,
Ыр тумасан — ман ĕç çухалĕ.

# Ачасем валли

Герасим ХАРЛАМПЬЕВ



*Герасим Дмитриевич Харлампьев писатель-художник 50 çул тултарчӗ. Вӑл 1913 çулхи февралӗн 25-мӗшӗнче, хальхи Çӗмӗрле производствӑ управленине кӗрекен Мӑн Тукташ ялӗнчи чухӑн хресчен çемйинче çуралнӑ. Ӑна, мӗн ачаранах картинӑсем ӳкерме вӗренесшӗн тӑрӑшнӑскере, «телей» çулӗ Мускаври Художествӑ техникумне илсе пынӑ.*

*1935—37 çулсенче Г. Харлампьев Хӗрлӗ Çар ретӗнче службӑра тӑнӑ. Тӑван Çӗршывӑн Аслӑ вӑрçинче вӑл, совет офицерӗ, фронтра пулнӑ.*

*Художник ӗçне Г. Харлампьев 1934 çулта Чӑваш АССР кӗнеке издательствинче тытӑннӑ. Унта ӗçленӗ темиçе çул хушшинче нумай-нумай кӗкенесене ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ вӑл. Çавӑнпа пӗрлех унӑн кӗнекесем çырас шухӑш-туйӑм çуралнӑ. Унӑн малтанхи кӗнекисем вӑрçӑ çулӗсем хыççӑн пичетленсе тухрӗç. Халӗ Г. Харлампьев пьесӑсем çырас тӗлӗшпе ытларах ӗçлет. Куракансем уйрӑмах вӑл çырнӑ «Çурхи кӗвӗсем», «Юрату вилӗмсӗр», «Юлашки тӗлпулу», «Кӑмӑл уçӑлсан» пьесисене юратрӗç.*

*Герасим Харлампьевӑн ачасем валли çырнӑ кӗнекисем те пур: «Тӑрна ташши», «Пӗчӗкçеç юмахсем», «Палюк мучи кӗнеки», «Илемлӗ ир» т. ыт. те. «Тӑрна ташши», «Кӑвакарчӑн чӗррисем» ятлӑ кӗнекесене вырӑсла куçарса Мускавра, «Пӗчӗкçеç юмахсем» кӗнекене украинӑ чӗлхипе Киевра пичетлесе кӑларнӑ.*

*Кунта эпир Г. Харлампьевӑн ачасем валли çырнӑ çӗнӗ калавӗсенчен иккӗшне пичетлетпӗр.*

## Тимлӗ хуралçӑ



Пирӗн колхозӑн чӑх-чӗп ферми пысӑк. Унта чӑхсем çеç мар, хурсем те, кӑвакалсем те тем чухлех! Чӗррисене инкубатортан илсе килеççӗ. Кӑçал иртнӗ çулхинчен те нумайрах илсе килчӗç.

Вӑл фермӑра Кольӑн аккӑшӗ — Марина ӗçлет. Эпир Кольӑпа ун патӗнче час-часах пулатпӑр, ӑна ӗçре те пулӑшатпӑр: чӑхӑсене, хурсене, кӑвакалсене, вӗсен чӗррисене апат паратпӑр, тислӗк тасататпӑр. Ку ӗç пирӗншӗн ним чул та йывӑр мар, ӗçленӗрен ӗçлес килет. Чӗррисем вара!.. Çав тери илемлӗ! Сап-сарӑ, мамӑк мечӗк пекскерсем пӗтӗлт! пӗтӗлт! туса çӳрени инçетренех курӑнать. Хайсем, Кольӑпа иксӗмӗре курсан, тӳрех пире хирӗç чупаççӗ: «Чип-чип!.. Твик-твик!.. Чвик-чвик!..» Паллах, çимелли пама ыйтаççӗ.

Пӗррехинче эпир çапла фермӑна пытӑмӑр та, Марина акка пире:

— Эпӗ правление кайса килетӗп. Çав хушӑра эсир чӗпсене асӑрхӑр-ха. Лайӑх сыхлӑр, пӗрне те куçран ан çухатӑр. Атту тилӗ илешрӗ, ӗнер икӗ чӗпӗ тытса кайрӗ,— терӗ.

— Тилӗ ӗнкертрӗ?!. Ах, вӑрӑ! Ну, эпир ӑна!.. «Вӗрентӗпӗр» чӗпӗ вӑрлама, тепре кил-

тĕр кăна!..— хаваслансах килĕшрĕмĕр эпир.

Пĕр пытармасăр каласан, чĕпĕсене сыхлассипе пĕрлех тиллине курасси те илĕртетха пире. Эх, курасчĕ ăна! Хамăр куçпах курасчĕ!..

Коля чăх чĕпписене сыхлама пулчĕ, эпĕ — хурпа кăвакал чĕпписене.

— Иксĕр те чăх чĕпписене сыхлăр. Хурпа кăвакалсен вĕсен хуралçи хăйсен пур. Питĕ тимлĕ хуралçă,— терĕ Марина акка.

— Мĕнле хуралçă?

— Авă тăрать,— терĕ те Марина акка, унтах, чĕпĕсем патĕнче тăракан хур аçи енне кăтартса, хăй çав самантрах кайрĕ.

Кольăпа эпир нимĕн ăнланмасăрах тăрса юлтăмăр.

— Мĕншĕн «хуралçă» терĕха вара Марина акка ку хур аçине? Чĕпĕсене тилĕрен мĕнле сыхлама пултартăр вăл?..

Хурсемпе кăвакалсем чĕпписемпе пĕрле вăл вăхăтра кӳлĕре ишсе çӳретчĕç. Те шыврa сивĕ пулчĕ вĕсене, те ишсе йăлăхрĕç, кӳлĕрен çерем çине тухрĕç. Хурĕсемпе кăвакалĕсем сăмсисене çунаттисем айне пытарчĕç, чĕпписем вĕсем тавра кӳпĕрленчĕç. Акă халь ăшă хĕвел айĕнче шăппăнах лараççĕ, ваттисем те, чĕппиcем те канлĕнех, куçĕсене хупсах, тĕлĕреççĕ.

Анчах леш, Марина акка кăтартнă хур аçи, чи пысăкки, лармасть-ха. Ыттисенчен кăшт аяккарах пăрăнчĕ, вăрăм мăйне тăсрĕ те, куçĕсемпе чăрр! чăр!.. унталла та кунталла пăхса тăрать.

— Мĕн курчĕ-ши вăл? Мĕне пăхать-ши?..— пуринчен ытла пире халь çак тĕлĕнтерет-ха.

Чылай иртрĕ-и вăхăт, сахал-и... кӳлĕ хĕрринче, хăва тĕмĕсем хушшинче, темскер, хĕрлĕрех тĕслĕскер вĕлтлетсе курăнса кайрĕ.

— Чим, тилĕ!..

Кольăпа эпир хăвăрт вăшт! кăна лăпчăнса выртрăмăр.

Пурте паллă: хурпа кăвакал чĕппиcене вăрлама килчĕ ку.

— Ну,— тетпĕр хăйхисем, тăхтар-ха, сăнаса выртар, чĕпĕсене мĕнлерех вăрлама шутлать вăл. Хăй кунта, чĕпĕсем патне килсен, аванах, вирлĕнех лектеретпĕр ăна, акă, чулсем те çывăхрах выртаççĕ.

Çак тилĕ пире асăрхамарĕха. Хуллен, майĕпен йăпшăнса килет хурсемпе чĕпписем патнелле.

Эп пĕр чулне тытрăм, Коля тепĕрне...

«Вĕлересси пулмĕ, анчах малашне ку тилĕн пирĕн ферма патне килес çула манма тивет»,— пĕррех вăркăнтарма хатĕрленсе выртрăм эпĕ. Коля та çапла шутлать, куçĕнчен пăхсах куратăп.

Тилĕ хурсемпе кăвакалсене курчĕ те тата хуллен, пĕр сас тумасăр шăвăнса килме пуçларĕ. Акă, хăва хĕррине тухрĕ, хурсемпе кăвакалсем патне пĕррех сиксе ӳкме хатĕрленсе тăчĕ. Унччен те пулмарĕ.

— Квик! Квик!..— кăшкăрса ячĕ хур аçи мĕн пур сассипе.

— Квик! Квик!..— кăшкăрашма тытăнчĕç мĕн пур хурĕсем.

— Нарт-нарт-нарт!..

— Нарт-нарт-нарт!.. — пуçларĕç шавлама кăвакалсем.

Чăмпăлт! кăна сикрĕ пĕр хурĕ шыва. Ун хыççăн тепри... Кăвакалсем, чĕпписем...

Чăмпăлт!..

Чăмпăлт!..

Авă халь чи варринче ишсе-ярăнса çӳреççĕ, пыр та тыт вĕсене.

Тилĕ хур аçи сасартăк кăшкăрса янипе йытăсем те вĕрме пуçланинчен хăрарĕ те каллех тĕмсем хушшине «чăмрĕ».

Эпир Кольăпа ун хыççăн чупрăмăр, э-э, çук уш, йĕрĕ те юлман.

Вăт мĕнле тимлĕ хуралçă вăл, хур аçи.



# Шăнкăрчă — юрăçă



Пирĕн яла кашни çуркуннех тем чухлĕ шăнкăрчă вĕççе килет! Эх, юрлаççĕ те вара вăл шăнкăрчăсем! Çав тери савăнăçлăн, çунаттисене ал çупнă пек çапса хавасланса шăрантараççĕ хăйсен юррине.

Эпир, ачасем, вĕсем валли йăва çавăрма кашни çулах çĕнĕрен-çĕнĕ вĕллесем туса хатĕрлетпĕр. Ку çуркунне эпĕ виçĕ вĕлле турăм. Пĕр вĕллине урамри йăмра çине, тепĕрне — килкартинчи вĕрене çине вырнаçтартăм, виççĕмĕшне — анкартинчи хурăн тăррине çыхрăм.

Пирĕн тĕлте, урамăн тепĕр енче, Нилыч мучи пурăнать. Ĕнтĕ ватă вăл, Нилыч мучи, сакăр вунă çултан та иртнĕ пуль. Нилычăн пӳрчĕ умĕнчи йăмра çинче те пур шăнкăрчă вĕлли, вăл вĕлле пирĕн чӳрече витĕр те курăнсах ларать.

Нилыч мучи вăл вĕллене туса çыхни темиçе çул та иртнĕ ĕнтĕ, çыхнă кантăри те çĕрсе кайнă. Çавăнпа пĕррехинче таçтан вăйлă çил-тăвăл килсе тухсан çав çĕрĕк кантăра татăлса кайрĕ те шăнкăрчă вĕлли çĕре ӳкрĕ.

Эпĕ вĕлле ӳкнине чӳрече витĕр куртăм та тӳррех урама тухса чупрăм. Пырса çитсен пăхатăп, вĕллен тĕпĕ çĕмрĕлнĕ, шăнкăрчă йăви те тухса ӳкнĕ, йăва патĕнче тăвата чĕпĕ хăрани-мĕнĕпе чĕриклетеймеççĕ те, çăварĕсене уçса: «Ан тивĕр пире! Ан тивĕр!» тенĕ пек выртаççĕ. Пĕчĕкçеç кăна-ха вĕсем, çунаттисем те ӳсмен, тĕк вырăнне шурă хăвăл пĕрчĕсем кăна шăтнă. Шăнкăрчĕсем — амăшĕпе ашшĕ — мана кĕç-вĕç сăхса илес пек вĕçе-вĕçе анаççĕ, чĕриклетсе кăшкăраççĕ, вĕсен вĕллипе йăвине çак сын çĕмĕрчĕ, теççĕ пулмалла.

Эпĕ тухса ӳкнĕ йăвине каллех шала хутăм, тĕпне çапса юсарăм, шăнкăрчă чĕпписене кĕртсе лартрăм та, йăмра çине улăхса вĕллине малтанхи вырăнах, анчах хальхинче çирĕп пăявпа çыхса хăвартăм. «Чĕрик! Чĕрик!.. Чĕрик! Чĕрик!..» чĕвĕлтетсе ларса юлчĕç пĕчĕк чĕрчунсем. Халь каллех йăмра çинчи вĕллене кĕрсе пăхсан, чĕпписем те пур иккенне курсан, амăшĕпе ашшĕ тинех лăпланчĕç, чĕпписене васкасах хурт-кăпшанкă çĕклесе çитерме тытăнчĕç.

Вăхăт иртнĕçем иртрĕ, тăрçулла килсе çитрĕ. Ку хушăра çак вĕллери шăнкăрчă чĕпписем те ӳссе çитрĕç.

Пĕр ирхине эпĕ çак шăнкăрчăсем — амăшĕпе ашшĕ — темшĕн çине-çине чĕриклетнине илтрĕм те чӳрече витĕр пăхрăм. Шăпах çак вăхăтра, ĕнтĕ ӳссех çитнĕ пĕр чĕппи вĕлле шăтăкĕнчен пуçне кăларса пăхса ларчĕ-ларчĕ те, вĕлт! вĕççе тухрĕ, турат çине, амăшĕпе ашшĕ патне кайса ларчĕ, ун хыççăн тепри, виççĕмĕшĕ... Тăваттăмĕш чĕппи те тухрĕ, анчах çук, ыттисем хыççăн вĕççе каяймарĕ, çĕре ӳкрĕ. Кунта çывăхрах, карта юпи çинче пирĕн кушак аçи Нăрлăш ларнине курсан эпĕ пӳртрен çав самантрах тухса шăнкăрчă чĕппине пырса тытрăм; атту Нăрлăш вăл чĕппе пĕррех çыртса туртса çурма пултарать.

Пăхатăп, хайхи чĕппе... Эх, епле инкек! Çак чĕпĕн пĕр çунатти хуçăк иккен. Паллах ĕнтĕ, çуркунне вĕлле çĕре ӳксен хуçăлнă вăл çунат.

Хĕрхентĕм, шеллерĕм эпĕ çак шăнкăрчă чĕппине. Пӳрте илсе кĕтĕм те лăпă хуллинчен читлĕх туса хупрăм. Ирĕкре усрама çук ăна, Нăрлăш тытса çиесрен хăрушă.

Халь читлĕхри шăнкăрчă чĕппи малтанхи кун нимĕн те çимерĕ: хăрать-ха вăл. Иккĕмĕш кунне хăйне хурса панă чĕрĕ ăмансенчен пĕрне хыпрĕ, тепĕрне... Виççĕмĕш, тăваттăмĕш кунне хăнăхса çитрĕ те парса тăма ĕлкĕр кăна! Вăрăм ăман лексен урипе пусать те пĕррех сăхать, тепрех туртать,— ăман ăçта пулнине курса юл! Кайран вара!.. Нимĕнле апата та тиркеми пулчĕ. Пуринчен ытла пĕçерсе панă вермишел çиме юратать, шурă йышши тутлă ăман тесе шутлать пулмалла. Вермишелне эпир çу та сĕретпĕрçке-ха.

Мĕн тетĕр, ӳссех çитсен юрлама та пуçларĕ çак шăнкăрчă. Юрри вара!.. Урамра е садра мĕнле кайăк юрланине илтет, шăпах çавнашкал юрласа парать. Юрлать кăна-и! Çын пек те шăхăрать, шапа пек те квақлатать, кăвакал пек те нартлатать. Кунĕ-кунĕ

пе: «Ши-и-и! Ши-и-!.. Квак-кăвак-квак!.. Нарт-нарт-нарт!..»

Ку темех мар-ха, кушак аçине — Нăрлăша тăрăхлама та вĕренчĕ çак шăнкăрчă. Нăрлăша курсанах: «Нррр!.. Хррр!..» нăрлатма-хăрлатма тытăнать. Куна илтсен Нарлăш кӳреннĕ пек пулса кукăр хӳрине усать те çав самантрах кăмака çине улăхса пытанать.

Кĕркунне килсе çитрĕ, ытти шăнкăрчăсем кăнтăра вĕçсе кайрĕç, пирĕн шăнкăрчă читлĕхрех ларса юлчĕ. Ăçта çити вĕçме пултартăр ĕнтĕ вăл халь хуçăк çунатпа.

Хĕлле пирĕн яла Шупашкартан колхоз ферминчи дояркăсем мĕнле ĕçлени çинчен хăйсем каласа панине çырса илме радио корреспонденчĕ килчĕ. Манăн акка Валя та дояркă. Валя акка каласа панине çырса илме корреспондент пирĕн пата килех пычĕ. Пӳрте кĕме ĕлкĕрчĕ çеç çак корреспондент, шăп çак вăхăтра пуçларĕ, тытăнчĕ пирĕн шăнкăрчă хăйĕн юррине шăрантарма!.. Мĕнле ăста юрланине илтсен, шăлтах тĕлĕнсе хытса тăчĕ çак корреспондент.

— Тăхтăр-ха,— терĕ пире,— вăхăтлăха шăп пулма ыйтатăп. Шăнкăрчă юрă мĕнле шăрантарнине çырса илетĕп.

Эпир шăплантăмăр. Шăнкăрчă юрри-кĕввине каллех янратса ячĕ. Корреспондент çак вăхăтра аллинчи арчине лартса кнопкă пекки çине пусрĕ те шăнкăрчă юрлама чарăнсан:

— Пулчĕ! — терĕ.— Çак эрнерех сирĕн шăнкăрчă радиора мĕнле юрланине итлĕр.

Чăнах та. Çав эрнерех, пĕр ирхине радиопа ачасем валли каланă чух çак корреспондент калаçни илтĕнсе кайрĕ. Вăл малтан эпĕ шăнкăрчă чĕппине мĕнле çăлса хăварни çинчен каласа пачĕ, шăнкăрчă халь мĕнле юрланине итлеме сĕнчĕ.

Ух, шăрантарчĕ те вара радиопа пирĕн шăнкăрчă юрра! Килтинчен те янравлăрах юрларĕ.



●



# Сатирăпа юмор

**Аркадий ЭСХЕЛЬ**



## Пăкăрмак

*(Пурăнса курнă фельетонист каласа кăтартни)*

Ан тавлашăр. Тепĕр чухне, тусăмăрсем, çилсĕрех тăвăл тухать, тăптăрă уяр кунах аçа çапать. Ахальтен каламастăп, хам тÿссе курнă. Çутçанталăкра ун пекки, тен, сайра-тăр, этем пурнăçĕнче вара час-часах пулкалать. Чип-чипер çĕртен урăм-сурăм пăтăрмах.

Эсир мана мухтанчăк тесе ан шутлăр-ха. Эпĕ кăштах çыркалакан çын. Çамрăк чухне сăвăсем çыраттăм, пурăна-киле калавсем кармаклама пуçларăм. Манашкал этемĕн кун-çулĕ çавнашкал: малтан — поэзи, унтан — прозă, юлашкинчен — драмă е комеди.

Çывăх çынсем мана Андрей Иванăч тесе чĕнеççĕ. Вăрттăн хушаматăм, ара, псевдоним текенни,— Уланкай. Илтетĕр-и, самаях янравлă. Апла пулин те, литературăра ман ятăм ытлашши паллах мар, чаплисемпе хисеплисем хыççăн «тата ыт. те» тенĕ шута кĕрекенскер.

Юрĕ-ха, малалла кайăпăр. Пĕрпĕр çын пурнăçĕнче мыскара сиксе тухсан, кун пирки фельетон çырма нимех те мар. Анчах мыскара серепине хăв çаклансан, вара епле? Мĕн тумалла? Кама евитлемелле?

Çапла, тусăмсем, ĕçĕм-хĕлĕме кура манăн ытларах килте — сĕтел хушшинче ларма тивет. Тĕрлĕ сюжетсем эрешлетĕн, хăв шухăшласа кăларнă çынсемпе тавлашатăн, тăрăхлатăн, кулатăн вĕсенчен, ним каласси те çук, пурнăçăм кичем мар. Çапах та, кĕтмен çĕртен кĕтмел çырли тенĕ пек, маншăн пĕррехинче чăнласах путишле «сюжет» килсе тухрĕ. Кулмалла та, тарăхмалла та. Каласа кăтартам-ха эппин...

Яланхи пекех, çав ирхине те манăн хурçă перо яка шурă хут тăрăх ирĕклĕн юртса пыратчĕ. Теплерен, сывлăш çавăрнă самантра, сехет çине пăхса илтĕм: вун пĕр çывхарать. Ĕнтĕ çĕнĕ хаçатсем килмелле. Кулленхи хыпар-хăнара вăхăтра пĕлмесен, тем çитмен пек. Хайхи сĕтел хушшинче епле ларнă, çаплипех чи аялти хута — пуштă ещĕкĕ патне чупса антăм. Çиййĕмре йăрăм-йăрăм пижамă, сăмса вĕçĕнче — тачка турталлă куçлăх. Илетĕп хаçатсене, çавăнтах уçатăп та пăхкалама тытăнатăп. «Чим-ха, чим, Англи арăсланне «пĕрлехи пасара» кĕртеççĕ-и, çук-и? Иракри лару-тăру мĕнлерех унта? Агрессорсем Кубă тавра еплерех эрешмен карти караççĕ?..» Утнă маях пĕр хыпар хыççăн тепĕрне вулатăп. Тĕнче сăмала хуранĕ пек вĕресе тăрать. Куллен мĕн те пулин çĕнни — ырри е усалли. Пур хыпара та вăхăтра пĕлес килет.

Эпĕ, сăмсапа хаçат çине тăрăннăскер, хайхи сисмен те, хамăн хваттер тĕлĕнчен иртсех кайнă — виççĕмĕш этаж вырăнне тăваттăмăшне çитнĕ. Куçăма хаçат çинчен çаплах илейместĕп-ха. Хăнăхнă йăлапа «акăлчан уççине» пижамă кĕсйинчен кăларатăп та çăрана уçма пикенетĕп,— пĕр пăхмасăрах, ал сĕмĕпе. Пăратăп — алăк уçăлмасть. Çав вăхăтрах хам тепĕр хыпар вуласа тухма васкатăп: Франко генерал унта авă НАТО çуртне хыçалти алăкран пырса кĕресшĕн. Хам çăраççине каллĕ-маллĕ хытăрах пăркалатăп — усси çук. Унтан пуçăма çĕклетĕп... Аçа çаптăр! Алăк çинче ман хваттер номерĕ мар, пачах ютти. Манăн — 32, кунта — 36. Сасартăк çак цифрă тем пысăкăш ÿссе кайрĕ — урайĕнчен маччана çити! Çын курсан мĕн калĕ-ха? Кăнтăр кунĕнчех вăрра килнĕ, тейĕ.

Халь ĕнтĕ эпĕ «акăлчан уççине» хăвăртрах кăларса илесшĕн тăрмашатăп. Халех тармалла, пытанмалла, çĕр тĕпне анса каймалла. Анчах ман уçă ниепле те тухасшăн мар. Туртатăп, хиретĕп — хăнк та çук. Хваттер хуçисем, паллах, чакăртатнă сасса илтмесĕр юлман ĕнтĕ. Шăп çак самантра хайхи алăк яриех уçăлса каять. Умра чиперкке хĕрарăм тăра парать. Сехре хăпнипе эпĕ ăна малтан палласа та илеймерĕм. Çук çав, вăл юмахри сар пике мар, çамрăк артисткă Лирă Михайловна пулчĕ. Вĕсем, упăшкипе иккĕшĕ, пирĕнтен пĕр этаж çÿлерехре, шăпах пирĕн «пуç тăрринче» пурăнаççĕ.

Тĕлĕннипе пулас, Лирă Михайловна та малтан сăмах чĕнеймерĕ.

— Каçарăр,— терĕм эпĕ, пăрланнă чĕлхене аран-аран çавăркаласа.— Йăнăш пулчĕ... Каçăрăр, тархасшăн...

Ман сăмса вĕçĕнчи куçлăха, аллăмри хаçатсене курсан, Лирă Михайловна (артисткă-çке-ха!) кунта мĕн пулса иртнине тÿрех тавçăрса илчĕ. Кĕмĕл шăнкăрав пек сассине янратса, хулпуççине вылянтарса кулса ячĕ.

— Ха-ха-ха!.. Эсир, Андрей Иванăч, ман патăма улаха килмен-и?.. Упăшкам командировкăра... Сисрĕр пулать?!. Ха-ха-ха...

Пирĕн подъездра çирĕм хваттер. Çынсем тăтăшах иртсе çÿреççĕ — улăхаççĕ, анаççĕ. Мĕнешкел камит! Эпĕ ют хваттер умĕнче пижамăпа тăратăп. Ман умра — сарă кăтра çÿç-

лĕ, кăн-кăвак куçлă пике. Артисткă! Ун çийĕнче те килти çи-пуç кăна — çўхе пурçăн халат. Кимоно теççĕ-иха çавна?! Тăпăл-тăпăл çара хулĕсем чăкăт пек шурă. Мăйĕ — акăш мăйĕ. Вăл чарăнаймасăр кулать. Ăна кура эпĕ те кулатăп, хам çаплах çăраççипе аппаланатăп.

Кĕçех пусма картлашки çинче Гермоген Ильич курăнса кайрĕ. Персональнăй пенсионер. Ĕç çукран шўт тума юратакан этем.

— Ну, тытрă-ă-ăм сана, Андрей Иванăч,— ула курак пек тăстарса илчĕ вăл сассине.— Асту-у-у, йăлтах арăмна каласа кăтартатăп.

Эпĕ те хирĕç шўтлеме хăтлантăм:

— Лекрĕм эппин капкăна!.. Пĕтрĕ пуç!

Анчах ку путиш-мыскара эп шутланă пекех иртсе каймарĕ. Тепĕр кунран вара чăн-чăн пăтăрмах пуçланчĕ.

Эпир пурăнакан çурт пилĕк хутлă, кашни хутăн пусми умне (вырăсла каласан — площадкăна) тăватă хваттер алăкĕ тухать. Эпĕ çавнашкал супъяхланнă вăхăтра мана пĕр-пĕр алăк хушăкĕнчен е çăраççи шăтăкĕнчен вăрттăн куç сăнаса тăма пултарнă. Пĕр куç çеç мар, темиçе куç! Темиçе хăлха! Чĕмере тесен, чĕмсĕр хўмене те чĕм кĕрет, теççĕ. Тата тăваттăмĕш хутран хамăр паталла аннă чухне эпĕ пусма картлашки çинче пĕр сарă тутăр курса юлтăм. Кĕрхи çулçă çилпе варкăшса ўкнĕ пек, вĕлт кăна çухалчĕ вăл куçăмран. Тутăр хуçине палласа ĕлкĕреймерĕм, çапах та шухăшларăм: «Вăлах пулсан, вара...»

Эп ача чухнех пирĕн ялта пĕр шўтле халап çўретчĕ. Ирхине пĕри хăйĕн кумĕшне тĕл пулать те:

— Эх, кум, тĕлĕнмелле япала куртăм,— тет.— Хрисан мучин «кайри касĕнчен» чакак тухса кайрĕ.

Касчен çак хыпар пĕтĕм ялĕпе çаврăнать. Чакак йышĕ вара акăшмакăш ўссе каять. Хрисан мучин «кайри касĕнчен» ĕнтĕ пĕр чакак çеç мар, хĕрĕх чакак вĕççе тухнă иккен!

Манăн ĕç-пуç та çавнашкал араслланса кайрĕ. Ним çукран вĕри нимĕр. Çав кунах, касхи апата ларсан, арăм мана шăтарасла куçран тинкерсе пăхрĕ те:

— Епле-ха унта, юттисен тути тутлăрах пек-и?— терĕ.

Эпĕ çўçенсе илтĕм. Арăм сăн-пичĕ аслатиллĕ çумăр пĕлĕтĕнчен те тĕксĕмрех. Ырра мар. Çийĕнчех сиспрĕм, çапах та палăртма шутламарăм. Тĕлĕненçи кăна пултăм.

— Ăнланаймастăп, мĕнле юттисен тути?

— Йăлтах пĕлетĕп! Ан тун, ан пытар!— газ çулăмĕ çинче вĕрекен чейник пек чашкăрчĕ ман арăм.— Намăссăр! Кĕçсе пит! Наччаслăх çеç магазина антăм, вăл пур — тапса та сикнĕ. У-у, ват ăйăр!..

Эпĕ арăма лăплантарма хăтлантăм. Анчах сăмахăм кăвар çине бензин сапнă пекех пулчĕ. Тапранчĕ вара асар-писер тăвăл!..

Эпĕ — пĕр сăмах, вăл мана хирĕç — çĕр сăмах. Чăн-чăн автомат. Унччен те пулмарĕ, кухньăри япаласем вырăнтан хускалчĕç. Чашăкĕсем чанклатаççĕ, çăпалисем çатлатаççĕ, тарелкисем ташлаççĕ, кашăкĕсем каталаççĕ, чейникĕсем чĕтреççĕ... Турăçăм, кунта мĕн пулса иртнине никам та ан куртăрах!..

Çав касхине эпĕ вуçех сывăраймарăм. Пўлĕме кĕтесрен кĕтессе çĕрĕпе кумрăм. Ир еннелле выртса пăхрăм. Тўшек-минтер çинчи пек мар, кăвар çинчи пек ăшталантăм. Вĕри çатма çинче ăшаланакан чĕрĕ



уланкă та ман чухлĕ асап курмантăр. Мĕскĕн Уланкай, мăнтарăн Уланкай,— хама хам хĕрхенсе те илетĕп. Пуç мимине, тутăх пăта евĕр, çаплах пĕр шухăш пăралать: «Неушлĕ Гермоген Ильич?.. Сумлă та курăмлă çын... Неушлĕ вăлах элеклесе панă ман арăма? Çук, пулма пултараймасть!.. Ĕненместĕп!..» Çак самантра мана ĕнсерен такам вĕри пăшатанпа пырса тĕкрĕ тейĕн. Эпĕ вырăн çинчен яштах сиксе тăтăм. «Ара, кĕрхи çулçă пек сарă тутăр!.. Вĕлт çеç çухалчĕ... Анчах кам пулчĕ-ха вăл?.. Чăнах... Çавă мари-ха чакакĕ?.. Хай чăн та, леш халапри пек, пĕр чакакран туххăмрах хĕрĕх чакак...»

Ĕнтĕ манăн килти лару-тăру Хĕвеланăç Берлинринчен те хăрушăрах сивĕчленчĕ. Эпĕ чун канăçне çухатрăм. Нимĕн те ĕçлейместĕп. Сывăраймастăп. Çĕрĕпе кĕтесрен кĕтессе утатăп. Шăппăн çеç хурлăхлă юрă ĕнĕрлетĕп: «Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт та вĕлле хурчĕ ылтăн хурт...»

Куççуль хăй тĕллĕнех пăчăртанса тухать. Апат анми пулчĕ, ăшă сĕт те карланка капланать. Шыв кăна ĕçетĕп. Ăшăм çунать. Çăвартан вĕри сывлăш тухнипе тута хĕррисем çунăхса кăмрăкланчĕç. Вăт мĕн тери киревсĕр япала вăл элек!

Арăм хăлхине çĕнĕрен çĕнĕ сасхура килсе кĕрет иккен. Пĕри тепринчен усалрах. Эпĕ çамрăк артисткă патне тахçантанпах «çўретĕп» пулать. Мана «ют алăк патĕнче тытнă» чухне те эпĕ «çавăнтах» çĕр каснă-мĕн. Ман арăм та çав касхине килте пулман имĕш. Чăн та, унччен кăшт маларах çеç ман савнă мăшăрăм районра ĕçлекен аслă хĕр патне кайса килнĕччĕ. Халь, авă, усал чĕлхесем, кун шучĕсене пăтраштарса, вырăнтан вырăна куçарчĕç, пĕтĕмпех пĕр пысăк купана купаларĕç. «Ара, артисткă упăшки командировкăра, Уланкай арăмĕ те килте çук, иртĕхме питĕ ирĕк пулнă вĕсене! Ара çав, ара...»

Тўс, Уланкай! Вĕри çатма çинче ăшалан! Газпа çунакан плита çинче!..

Çапах та чи йывăрри маншăн артисткă упăшки куçĕ умне курăнасси пулчĕ. Мĕн калас-ха ăна? Епле тўрре тухас? Епле хўтĕлес хамăн чысăма? Çав вăхăтрах ун арăмĕн ятне те варалама памалла мар. Айăпсăр çынна мĕншĕн айăпа кĕртес? Айăпĕ йăлтах ман çинче — эпĕ çав ир супъяхланса çўренĕ. Анчах камăн пулма пултараймасть-ха унашкал мыскара? Тĕрĕссипе, айăп та мар вăл, йăнăш. Çын асăрхамасăр ют алăк патне пырса перĕннĕ. Суккăр пăван пек. Туртса çурăр, çисе ярăр халь ăна!

Артисткă упăшкипе эпĕ пусма çинче тĕл пултăм. Эх, эсĕ, пурнăçра тем те пĕр курса ирттернĕ пусма! Кунта тĕл пулмасан та май çук. Эпир вĕсен хваттерĕ айĕнче пурăнатпăр. Вĕсем пирĕн алăк умĕнчен кунне çирĕм хут та иртсе çўреççĕ.

Тĕл пултăмăр хайхи. Иксĕмĕр те тăпах чарăнса тăтăмăр.

— Шутламанччĕ,— терĕ вăл, çўхе тутине çĕлен пек авкалантарса.— Фельетонсем çыратăр, хăвăр мăй таран пылчăкра тăратăр!.. Этем... Ку ĕçе эпĕ ахаль хăвармастăп, тивĕçлĕ çĕре çитеретĕп... Çавнашкал çынсемпе пĕр çуртра пурăнма та намăс!..

— Чимĕр-ха, тăхтăр,— пўлме хăтлантăм эпĕ.— Пĕр сăмах çеç...

Анчах артисткă упăшки,— ăна пирĕн çуртра пурте çавăн пек чĕнеççĕ,— çапла, артисткă упăшки урăх пĕр секунд та тытăнса тăмарĕ. Каласмалли çук имĕш. Шĕвĕркке вăрăм сăмсине вăл пистолет евĕр касăртса тытрĕ те ман умран мăнаçлăн кăна таплаттарса иртрĕ. Эпĕ, хăйăр çине кăларса пăрахнă уланкă майлă, çăвара карса юлтăм.

— А-а, çапах та...

Акă хайхи кўршĕсем хушшинчи лару-тăру та пăсăлчĕ. Усал утпа çў-

рет тесе ахаль каламан çав. Ирсĕр элек, ламран лама тенĕ пек, хваттертен хваттере, çуртран çурта, унтан пĕтĕм урама, юлашкинчен пĕтĕм хулана сарăлчĕ. Паллаканĕ — пĕри ман çине куç айĕн е йĕрĕнсе йĕкĕлтенĕн пăха пуçларĕ. «Уланкай — йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнă этем...»

Тата мĕн таран арканса-тăлланса пĕтетчĕ-ши çак муталанчăк çăмха, калама та пĕлместĕп. Эпĕ хама, артисткă упăшки кларĕш, «тивĕçлĕ çĕре» хаиь-халех чĕнтерессе кĕтсе пурăнаттăм. «Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт, мĕншĕн эсĕ нăрлатан?..» Ан тив, чĕнтерччĕр! Эпĕ кирек епле суд умне те тăма хатĕр. Нумай шухăшларăм çак кунсенче: çук, айăплă мар! Йăнăшăм та пĕчĕк йăнăш кăна: ют алăк патне ăнсăртран пырса лекнĕ, тăн-пуç сапаланчăк пирки. Çапах та чăн-чăн айăплине тупмаллах. Кам çăмхаласа тултарчĕ çак ирсĕр элек çăмхине?

Кун пек чухне айăпсăр çынна айăпласа каллех тепĕр йăнăш тума пулать. Ахаль мар çав: вăрлакаНăн — пĕр çылăх, çухатаканăн — çĕр çылăх, теççĕ.

Вăхăт шунă май килти лару-тăру ĕнтĕ пирĕн кăшт тикĕсленчĕ. Арăмпа харкашмастпăр, кунĕ-кунĕпе çăвара шыв сыпнă пек çÿретпĕр. Çавă çеç. Паллах, кунашкал шăплăх та чуна тăвăр-ха, анчах мĕн тăвăн — тÿсмелле. Тĕрĕсси хăçан та пулин çиеле тухатех. Ўсес хунав чула шăтарсах ÿсет.

Пурăнатпăр çапла. Пуçăмра «вĕлле хурчĕ» ерипен нăрлаткалать. Тен, иртсе кайĕ-ха. Историре кунашкал событисем кăна мар манăçа юлаççĕ, тет манăн пĕр юлташ. Анчах чăлханса пĕтнĕ çăмхари çип вĕçĕ, куçран çухала пуçланăскер, хăех килсе тупăнчĕ,— пăтăрмахĕ епле тапраннă, çавнашкалах кĕтмен çĕртен.

Пĕррехинче пире, арăмпа иксĕмĕре, Гермоген Ильич хăнана чĕнчĕ.

— Çĕнĕ йышши телевизор туянтăм, пырса курăр,— терĕ вăл.— Таврари мĕн пур япала ал тупанĕ çинчи пек курăнать,— хăй тем чеен кулкаласа, куç хĕсрĕ.

Эпĕ арăм çине пăхса илтĕм. Вăл ним пулман пекех:

— Сăпаççипă, Гермоген Ильич,— терĕ.— Пырăпăр ара, пырăпăр.

Сисрĕм: Гермоген Ильичпа ман арăм тем кавар тунă. Темскер эп пĕлменнине пĕлеççĕ вĕсем. Чунăм вĕчĕрхенсе кайрĕ. Каллех пĕр-пĕр серепе! Пенсионерăн урăх мĕн ĕç — телевизор пăхса лар та çынсене пăтраштарса çÿре,— шутлатăп хам ăшăмра. Анчах турткаланса тăмарăм. Манăн çав «çĕнĕ йышши телевизора» улăхса курасах килчĕ. Кăмăлăм кăсăкланчĕ.

Хăнана кайнă чухнехи пек тумланса чăрманмарăмăр. Килти маях килтен тухрăмăр. Пыратпăр хайхи... Ак япала! Эпĕ тĕлĕннипе шаках хытса тăтăм. Гермоген Ильич хваттерĕнче, çемçе диван çинче, Лирă Михайловнăпа упăшки лара параççĕ. Эпĕ çийĕнчех каялла тухса вăркăнасшăнччĕ. Намăс! Çавнашкал пăтăрмах хыççăн мĕн тери намăс!..

Гермоген Ильич ман кăмăла сисрĕ пулас, вăл мана хулран тытрĕ те сĕтел хушшине çавăтса пырса лартрĕ.

— Пĕр çуртра пурăнатпăр, пĕрпĕринпе хутшăнмастпăр, шăкăл-шăкăл калаçмастпăр,— терĕ вăл.— Чипер пĕлĕшсем çĕр çухрăма та хăнана çÿреççĕ.

Эпĕ хирĕç ним калама та аптрарăм. Артисткăпа упăшки те чĕнмесçĕ. Ман арăм та шăпăртах. Гермоген Ильич арăмĕ кухньăра апат-çимĕç хатĕрлет. Чăн та, мĕн калăн-ха кун пек чух? Эпир пурте хамăра пăрлă шыва кĕртсе лартнă пек туятпăр. Хул-çурăм та хускалмасть, чĕлхе те чĕмсĕр.

Юлашкинчен тÿсеймерĕм.

— Ăçта вара сирĕн çĕнĕ йышши телевизор?— тесе ыйтрăм.

— Халех, халех,— икĕ аллине те дирижер пек харăссăн çĕклерĕ кил хуçи.— Каçарăр, кăшт кĕттерме тивет. Кухньă...

Çав вăхăтра Гермоген Ильич арăмĕ, кухньăран тем пысăкăш çатма йăтса тухса, ăна залри çавра сĕтел çине лартрĕ.

— Килĕр-ха пурте сĕтел хушшине,— чĕнчĕ пире кил хуçи.— Апат умĕн пĕрерĕшне ÿпĕнтерсен те пăсмасть. Килĕр, килĕр, хăюллăрах куçăр.

Пысăк çатма çинче тин çеç ăшаланă аш ырă шăршă кăларса пăсланать. Ăçтан тутанса пăхмăн-ха! Хăнасен кăмăлне пĕлнĕ пекех, Гермоген Ильич сăмах хушмасăр юлмарĕ.

— Паян аш-какай магазинне кĕтĕм те тĕлĕнсех кайрăм,— терĕ вăл.— Чĕлхе сутаççĕ. Ĕне чĕлхи. Пĕр купа! Тачка-а-аскерсем. Тавай туянас! Сĕтеклĕ апат. Унччен, паллах...



Эпир пĕрер черкке сыпрăмăр. Гермоген Ильич питне-куçне кулăшла пĕркелентерчĕ те:

— Ăшаланă чĕлхе — чи лайăх закускă,— терĕ.— Ахаль пĕçерсен те аптрамасть. Антон Павлович Чехов шучĕпе те, чи лайăх чĕлхе — пĕçернĕ чĕлхе. Ман халь вăхăт пур, кĕнекесем вулакалатăп. Питĕ тĕрĕс калană Антон Павлович. Хамăр майлă каланă.

Сăнĕнчен, пĕркеленчĕк питне-куçне чеен выляткаланинчен куратăп: каллех тем шахвăртать ватă пенсионер, сăмаха каллех таçталла кукăртать.

— Ара çав,— тĕртсе хутăм эпĕ,— пĕçернĕ чĕлхе сиенсĕр... ытлашши пакăлтатмасть.

— Тĕп-тĕрĕс,— хаваслансах килĕшрĕ кил хуçи.— Эпĕ шăп та лăп çавна каласшăнччĕ.

Вăл вара текех хĕтĕхлентерсе ларрĕ пире.

— Иртни иртсех кайтăр,— терĕ.— Халь ун çинчен асăнма та аван мар. Çапах тĕрĕссине каламалла. Эс акă, Андрей Иванăч, ман çине тÿртĕн пăха пуçларăн. Лирă Михайловнăпа мăшăрĕ те... Каçарăр тархасшăн,— кулса илчĕ ватă пенсионер, хирĕç ларакан артисткă тутине канăçсăр пăркаланине асăрхасан.— Тархасшăн каçарăр, Лирă Михайловна. Ман никама та кÿрентерес килмест. Тĕрĕссипе, кунта сирĕнтен пĕри те айăплă мар. Сăлтавсăр сăлпăран. Чăн та, эпĕ ун чухне сирĕн умăртан шÿт тукаласа иртрĕм...

— Ан тăсăр, Гермоген Ильич, калăр тÿрех,— сасартăк ура çине сиксе тăчĕ артисткă упăшки, сăмси айне кăшт хăрăмпа тивертнĕ пек пĕчĕкçĕ хура мăйăхлă япшар арçын.— Водевильсем кĕскерех пулаканччĕ... Сирĕн ав темиçе эрнене тăсăлать.

Упăшки хыççăн артисткă та сĕтел хушшинчен тухрĕ. Тăпăл-тăпăл пĕвĕ çийĕнче ахаль те çыпăçуллă курăнакан сенкер платйине кăрт-карт туртkаларĕ.

— Кайăпăр, Сержик!..

— Чимĕр-ха, чимĕр,— пÿлчĕ вĕсене ватă пенсионер.— Вĕриленни сăмавара çеç килĕшет, тенĕ ĕлĕк тахăшĕ. Халь пирĕн сăмаварĕ те пăрахăçа тухнă. Чейне газпа вĕрететпĕр. Тăхтăр. Эсир пĕрне-пĕри сăлтавсăрах çиленсе çÿретĕр. Ларăр, çамрăк тусăмăрсем, ларăр. Пĕр самант çеç. Çапла, эпĕ ун чухне сирĕн умăртан шÿт туса иртрĕм. Кăшт пăрăнтăм кăна, пусма кукăрĕнче пĕр инке тăнине асăрхарăм. Шăнăрлă вăрăм мăйне çÿлелле тăснă, куçне-пуçне чармакласа пăрахнă — тăнлать. Эсир мĕн калаçнине касăхса кайсах тăнлать. Мана та курмасть. «Здрасте, Степанида Кирилловна!» терĕм эпĕ юриех хыттăн. Вăл шартах сикрĕ те, пĕрре — çÿлелле, тепре — аялалла,

унтан каллех çӳлелле ывтăнчĕ. Капкăна çакланнă йĕке хӳре пек. Кĕç çаврăнса пăхатăп хайхи: вăл ман хыççăнах картишнелле чупса тухрĕ.

— Пуçĕнче сарă тутăр!— халь ĕнтĕ эпĕ те ура çине сиксе тăтăм.— Çапла-и?

— Ăна-кăна асăрхаймарăм çав,— терĕ Гермоген Ильич.— Мана унăн сăн-пичĕ çеç питĕ тĕлĕнтерчĕ. Мăйне ватă хур ами евĕр кукăртса тăснă, куçĕ вара чăн-чăн хурчка куçĕ. Хăварах пĕлетĕр, мĕнешкел инке вăл.

«Кĕрхи çулçă пек сарă тутăр...» Çак самантра вăл манăн куç умĕнчен тепĕр хут вĕлтлетсе иртрĕ. Акă кам пулнă вăл! Акă кам çăварĕнчен вĕçсе тухнă чарусăр чакак! Ун пирки эпĕ малтанах шутланăччĕ. Анчах тытман вăрă — вăрă мар. Эпĕ сарă тутăр çеç курса юлтăм çав.

Пуçăмра асар-писер сăнлăхсем кинори пек çаврăнма тытăнчĕç.

Степанида Кирилловна... Ара вĕсем — пирĕн кӳршĕсем. Упăшки пĕр учреждениre чылаях çӳллĕ пукан çинче ларать. Паллах, шалуне те çителĕклех илет пулмалла. Килĕнче сухал хырмалли электроагрегатран пуçласа телевизор таран пурте пур: кĕпе çумалли, якатмалли, тусан пухмалли, çӳç кăтралатмалли, одеколон сапмалли, аш авăртмалли, пелмен касмалли, çулла варени пĕçернĕ чух чие тĕшшине кăлармалли — йăлтах механизаци. Тата... тата, тен, элек сармалли механизаци те пур пуль çав йăкăрти инкен?!

Степанида Кирилловна хăй ниçта та ĕçлемест. Тахçан вăл педагог пулнă, теççĕ. Кĕçĕн классенчи ачасене хут вĕрентнĕ имĕш. Халь килте ларать. Упăшкипе иккĕшĕ вĕсем пĕр ывăл çитĕнтерчĕç. Аслă шкул хыççăн ывăлĕ киле таврăнмарĕ, мĕншĕн тесен амăшĕ ăна малтанах картса каланă: килте кин таврашĕ кирлĕ мар!

Эпир ĕнтĕ вĕсемпе пилĕк-ултă çул кӳршĕллĕ пурăнатпăр. Çав хушăра пĕр пăт тăвар çинĕ-и, çимен-и, пĕлместĕп, анчах эпĕ хам Степанида Кирилловнăн йăлисене йăлтах пĕлсе çитрĕм.

Акă эп ăна «килте ларать» терĕм-ха, çук, вăл килте питĕ сахал ларать. Ирхине упăшки валли апат хатĕрленĕ хушăра та вăл хăйсен хваттер алăкĕ умĕнчи пусма кукрине темиçе хутчен туха-туха пăхать: «кам та пулин çук-и? Пĕр-пĕр саснра илтĕнмест-и?» Ăçтан та пулин хытăрах каланă сасă илтĕнсен, хăйĕн вăрăм хăлхисене чăнках тăратать. Çавна пула хăш чух плита çине лартса хăварнă катлетне те манать. Çунăк шăрши тулалла тапса тухма тытăнсан тин, шартах хыпăнса ӳксе, кухньăна чупса кĕрет. Упăшкин ирĕксĕрех хайхи кукарланнă катлет çисе ĕçе кайма тивет.

Калас пулать, пирĕн «малогабаритнăй» текен çурт вăл — чăн-чăн «музыкă ещĕкĕ». Кирек мĕнле сасă пултăр, пусармасть çав сасса, вăйсăрлатмасть, тата ытларах хăватлантарать кăна. Пĕр хваттерте «Аха!» тесен, хĕрĕх хваттерте «Аха-ха-ха!» тесе янраса каять.

Çапла, пăшăлтатса сăмахлама та шиклĕ.

Упăшкине ĕçе ăсатсан, Степанида Кирилловна хайхи килĕнчен тумлансах тухать: малтан — пусма кукрине, унтан — картишне, картишĕнчен — кӳршĕ подъезда е кӳршĕ çурта. Çапла вăл ирхи хыпарсене пухса çаврăнать. Çĕнни нимех те тупăнаймасан, сумкă йăтса, урамалла туртăнать, магазинсем тăрăх каять. Кунта та çĕнни çукрах пулсан, вăл тем чĕри касса килнĕ пек туйса илет. Усă сывлăш çитмест тейĕн ăна. Вара хăвăртрах киле таврăнать те чĕре эмелĕ ĕçет. Мĕнле кăна эмел çук-тăр унăн! Чăн-чăн аптекă! Упăшкине те хăйĕн «чĕрипе» йăлтах хăратса пĕтернĕ ĕнтĕ вăл.

Енчен кун каçа та «çĕнĕ хыпар» тупаймасан, Степанида Кирилловна чирлемеллипех чирлесе ӳкет. Кун пек чухне вăл кӳршĕсем урлă васкавлă пулăшу чĕнтерет. Хам та автомат-телефонран сахал мар шăнкăравланă. Икĕ пуслăх укçа йĕкĕр ывçипех пĕтернĕ.

«Хыпар-хăнар» тени çак инкешĕн — чăн-чăн эмел. Кама та пулин çаратнă-и унта, е пĕр-пĕр çамрăк кин çичĕ уйăхрах ача çуратса панă, е камăн та пулин упăшки кĕçĕр килте çывăрман, е пĕр-пĕр çемьере кашăк-тирĕк шакăртатса илнĕ,— Степанида Кирилловна хайхи тин çеç симĕс улăха кăларса янă тына пăру пек сиккелет. Ниçта лара-тăра пĕлмест. Халь ĕнтĕ унăн хăй илтнĕ «хыпара» ыттисене хăвăртрах пĕлтермелле. Акă вăл хăйĕн «орбитине вĕçтерсе тухать»: хваттертен хваттере, подъездран подъезда, çуртран çурта, магазинтан магазина. Хыпарне ахаль çеç пĕлтермест-ха вăл, ăна малтан тем тĕрлĕ эрешлесе илемлетет, çунат хушать, «пĕр чакакран хĕрĕх чакак тăвать».

Анчах «хăйĕнчен килмен сăлтава пула» çĕнĕ «хыпар-хăнара» никама та пĕлтерейменсен, унăн каллех «чĕри касса килет». Каллех эмел, каллех васкавлă пулăшу...

Малтанхи вăхăтсенче вăл хăйĕн упăшки ĕçлекен учреждени ĕçне хутшăнма юратнă иккен. Вĕçĕмсĕр пăлхатнă. Çавна сиссен, учреждени пуçлăхĕ приказ панă: Степанида Кирилловна пек элекçĕсене учреждени алăкĕ патне çур çухрăма çывăха ямалла мар!..

— Вăт çапла, тăвансем,— терĕ ватă пенсионер Гермоген Ильич, хăйĕн шухăшне пĕтĕçтерсе.— Чĕлхе — хăрушă япала.

— Анчах мĕн тумалла-ха унашкал чараксăр чĕлхесене?— каллех сиксе тăчĕ артисткă, пĕчĕкçĕ чышкисене чăмăртаса.— Вĕсем пире пурăнма памаççĕ, ĕçлеме, савăнма чăрмантараççĕ. Калăр, мĕн тумалла çав юплĕ чĕлхесене?

— Ăшаламалла!— терĕм эпĕ.— Капкăн çатми çинче ăшаламалла!

Ватă пенсионер патĕнче «çĕнĕ йышши телевизор» курнă хыççăн, киле таврăнсанах, эпĕ çак калава çырма лартăм. Тен, ăна Степанида Кирилловна та вуласа пăхĕ?!. Тен, уншăн çак калав «чĕре эмелĕ» вырăнне пулĕ?!. Тем пекчĕ...

●

## Публицистика

Павел КРЫСИН

# ТУРӖ КӐМӐЛ

Автобус Ҫӗмӗрлерен 15 минут кая юлса тухрӗ. Шӑматкун Хӗрлӗ Чутая, Етӗрнене, Шупашкара каяс текенсем нумай. Шофер вӗсене пурне те лартма тӑрӑшрӗ, ҫапла вара автобусра тӑма та вырӑн юлмарӗ. Кайран вӑл ҫул тӑршшӗпех кам ӑҫта анас тенӗ, машинӑна ҫавӑнта чарса, пассажирсене антарса пычӗ. Пӑхсан, аван ку водитель, ҫынсен кӑмӑлне тивӗҫтерме тӑрӑшать, тепри пулсан, ҫул ҫӳрекенсене кун пек лартса килес ҫук, темелле. Анчах чылайӑшӗ ҫакна асӑрхарӗҫ: кӗске ҫула тухнӑ пассажирсем анса юлнӑ чухне шофер вӗсенчен укҫа илет те билетне татса памасть. Асламас тӗлне ҫитсен, машинӑна контролер чарса тӑратрӗ. Шофер тем хушӑра, питӗ хӑвӑрт, хыҫалта ларса пыракан икӗ хӗрарӑм валли ҫынсем урлӑ билетсем пама ӗлкӗрчӗ. Анчах контролер ҫакна асӑрхарӗ те шофера ятлама тытӑнчӗ, акт ҫырма пуҫларӗ. Пассажирсем ҫак хушӑра мӗн турӗҫ тетӗр эсир? Вӗсенчен нихӑшӗ те водитель ҫул тӑршшӗпех тӗрӗс мар хӑтланнине кӑтартса памарӗ. Пачах урӑхла, манпа юнашар ларакканни, ӑна пур майсемпе те хӳтӗлеме тытӑнчӗ.

Кайран, Шупашкара ҫитеспе, эпӗ хам кӳршӗрен ҫапла ыйтрӑм:

— Мӗншӗн-ха эсир шофер куҫкӗретӗнех улталанине контролертан пытарма тӑрӑшрӑр? — терӗм.

— Ик-виҫ билет хакӗ нумай-и вӑл? Унпа государствӑ пуйса каяс ҫук. Шофер ӗҫӗ ҫӑмӑл мар. Унӑн сивӗре те, шӑрӑхра та ҫӳремелле, тепӗр чухне тата, пӳтсӗр ҫанталӑкра, кунӗпех машинӑ айӗнче ирттерме тивет. Рейсра ик-виҫ тенкӗ хӑй валли илни ниме те пӗлтермест.

— Заводра, станок умӗнче, стройкӑра, ҫурт купаланӑ ҫӗрте ӗҫлекенсен ӗҫӗ шофер ӗҫӗнчен ҫӑмӑлим? — ыйтрӑм ҫакӑнтан.— Апла пулсан, вӗсен те кашни кунах ӗҫрен киле мӗн те пулин йӑтмалла?

Ытти пассажирсем те ман майлӑ сас пама тытӑнчӗҫ.

— Автобус вӑл завод мар,— тавӑрчӗ кӳршӗ.— Тепӗр тесен, шоферсене укҫа парасси йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Никам та ҫак йӑлана хирӗҫ мар,— тата темскер мӑкӑртатма пуҫларӗ хайхискер.

Иртнӗ ҫулла пулса иртнӗ ҫак ӗҫ ман асӑмран халӗ те тухмасть. Паян, акӑ, совет ҫыннин совеҫӗпе чысӗ ҫинчен калаҫу пынӑ чухне вӑл тепӗр хут ман куҫ умне тухса тӑчӗ. Мӗншӗн-ха ҫапла пулса тухать, мӗншӗн-ха хӑш-пӗрисем ултавҫӑсене, государствӑ укҫи-тенкине хӑйсен кӗсйине чикекенсене е курмӑш пулаҫҫӗ, е курсан та, нимӗн те шарламаҫҫӗ? Ҫакӑ вӑл ҫынсен ӑнланулӑхӗ ҫителӗксӗр пулнинчен килет. Вӗсем пирӗн государствӑ пуян, уншӑн ик-виҫ тенкӗ нимӗн те тӑмасть, тесе шутлаҫҫӗ. Тен, ҫавӑн пек ҫынсем хӑйсен ӗҫне тӳрӗ кӑмӑлпа тӑваҫҫӗ пулӗ, анчах урама тухсан, автобус ҫине ларсан, хӑйсем кунӗпе ӗҫлени, вӑй хурса пурлӑх туни ҫинчен манса каяҫҫӗ пулмалла. Тинӗс тумламсенчен тӑнӑ пекех, миллион тенкӗ укҫа та пуссенченех пухӑнать,— ман кӳршӗ-пассажир ҫакна ӑнланса илесшӗн мар. Кашни автобус водительне кунсерен темиҫешер пус кӑна хӑйӗн кӗсйине чикме ирӗк парсан та, государствӑ нумай укҫа-тенкӗ ҫухатать. Ҫав укҫа-тенкӗ ҫӗнӗ автобуссем тума, ҫулсене юсавлӑ тытса тӑма питех те кирлӗ, мӗншӗн тесен пирӗн валли пурлӑхырлӑх пӗлӗтрен ӳкмест, машинӑна та, ҫула та ҫынсен аллипех тӑваҫҫӗ. Кунта манӑн В. И. Ленин Совет влаҫӗн малтанхи кунӗсенче каланӑ сӑмахсене аса илтерес килет. В. И. Ленин 1919 ҫулта хӑйӗн «Аслӑ пуҫару» произведенийӗнче ҫапла каланӑ: «Коммунизм ахаль рабочисем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес, ӗҫлекенсене хӑйсене мар тата вӗсен «сывӑх ҫынсене» те мар, «аякри» ҫынсене, урӑхла каласан, пӗтӗм обществӑна тивекен **кашни пӑт тырра, кӑмрӑка, тимӗре** тата ытти продуктсене сыхлас тесе, йывӑр ӗҫе ҫӗнтерсе, вӑя шеллемесӗр тӑрӑшнӑ ҫӗрте пуҫланать». Харпӑр хӑйшӗн мар, «сывӑх» ҫыншӑн та мар, «аякри» ҫынсемшӗн, тепӗр майлӑ каласан, пӗтӗм халӑхшӑн, пӗтӗм обществӑ интересӗсемшӗн тӑрӑшни ӗҫ ҫине, обществӑллӑ харпӑрлӑх ҫине, ӗҫ дисциплини ҫине коммунистла пӑхнине пӗлтерет.

Ĕçре те, йӑлара та, килте те, урамра та, кирек ăç-та та тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхлĕ, нравственноç тĕлĕшĕнчен таса, ырă чунлă та сăпайлă пулни çынна илем кӳрет. Çыннăн совеçĕ таса пулсан, ăна пĕтĕм обществă чыслать, хисеплет.

Этем чысне тĕрĕс мар ăнланнине социализм пĕтерсе хучĕ. «Эпир историре пĕрремĕш хут хамăр çĕр çинче тĕрĕс правилă туса хутăмăр — кам лайăх ĕçлет, çавă обществăра хисеплĕ»,— терĕ Н. С. Хрущев юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пулнă чухне каланă пĕр сăмахра. Совет Союзĕнче тӳрĕ кăмăлпа, совеç хушнă пек халăх ырлăхĕшĕн ĕçлекен кашни çынах мухтавра, хисепре, чысра. Совет çыннин совеçĕпе чысĕ тачă çыхăнса тăрать, унăн совеçĕ таса пулсан, чысĕ те пысăк. Пачах урăхла, çын хăйĕн совеçне вараласан, ун çине ыттисем йĕрĕнсе пăхаççĕ. Курасчĕ сирĕн, çӳлерех асăннă автобус водителĕ контролер акт çырнă хыççăн тата пассажирсем ун пирки каласма пуçласан, хăйне мĕнле тыткаланине. Вăл, малтан шӳтлесе калаçакансКер, çул тăршшĕпех пĕр сăмах та чĕнмерĕ, хĕп-хĕрлĕ хĕрелнипех Шупашкара килсе кĕчĕ. Паллах, çак ултавçăпа никамăн та калаçас килмерĕ, çакна хăй те сисрĕ, хăйне хӳтĕлеме хăтланакан çын çине те çаврăнса пăхмарĕ. Çапла вăл, чыса вараласан, совеçлĕ çын çĕр тĕпне анса каймах хатĕр.

Пирĕн обществăра çынна тӳрĕ кăмăллă, ырă чунлă пулма мĕн ачаранах воспитани пама тăрăшаççĕ. Шкулта та, çемьере те, каярахпа ĕçре те ачана, унтан çамрăк çынна яланах тӳрĕ кăмăллă пулма, обществă ырлăхĕшĕн пысăк хастарлăхпа тăрăшма вĕрентеççĕ. Çамрăксене воспитани парасси çинчен кĕнекесенче, хаçат-журналсенче çыраççĕ, лекцисемпе докладсенче, радиопа тата телевиденипе паракан передачăсенче калаççĕ. Пĕр сăмахпа, коммунизм тăвакан çыннăн мораль кодексĕнче çырса хунă нравственноç принципĕсене пропагандăлас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тăваççĕ. Анчах, ман шутпа, çав принципсене пропагандăлани çителĕксĕр. Пирĕн çынсем çав принципсем тăрăх пурăнма хăнăхса пыччăр тесе тăрăшмалла, вĕсене кирек епле пăснине те тăрă шыв çине кăларса пымалла, коммунизмла мораль йĕркисенчен пăрăнакансене тĕрĕс çул çине тухма пулăшмалла.

Çынсене тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентессине тем пек лайăх йĕркелесен те, воспитани паракансем хăйсем тӳрĕ кăмăллă пулмасан, çавăн пек воспитани чăннипех усă кӳрессине кĕтме хĕн.

Пĕррехинче эпĕ Шупашкарпа Çĕрпӳ хушшинче çынсем çул çинче сапаланса выртакан тимĕр татăкĕсене, виçшер-тăватшар метр тăршшĕскерсене, пуçтарнине куртăм. Пуçтаракансенчен виççĕшĕ — икĕ хĕрачапа пĕр каччă, эпĕ машинăран тухнине курсан, хăйсен ĕçне пăрахрĕç те, темлеименсе, айăпа кĕнĕ çынсем пек, ман еннелле пăхрĕç. Анчах унччен те пулмарĕ икĕ вăй питти арçын, хĕрĕхсенчен иртнĕскерсем, çамрăксем тимĕр татăкĕсене йăтма чăраннине асăрхарĕç те вĕсене кăшкăрса тăкрĕç: «Мĕн куртăр унта, çăварсене карса пăрахрăр. Тийĕр хăвăртрах, васкас пулать!».

Эпĕ вĕсем мĕнле тимĕр татăкĕсем пуçтарнипе интереслентĕм. Манпа çаксем калаçасшăнах пулмарĕç. Эпĕ вĕсен машинин номерĕ çине тимлесе пăхнине асăрхасан тин, çак арçынсем ман пата пычĕç.

— Хамăр валли мар вĕт, колхоз валли,—терĕç вĕсем.

Кун пек тимĕр татăкĕсем килте нимех те тума кирлĕ маррине эпĕ вĕсем каламасăрах пĕлетĕп. Çапах та ыйтатăп.

— Камăн тимĕрĕсем вĕсем?

— Камăнне мур пĕлет. Такамăн ӳксе юлнă. Эпир пуçтарса илмесен, кам та пулин урăххи илет. Пурпĕрех хуçине тавăрса параканни пулас çук. Çак вунă татăк тимĕршĕн хуçи те каялла таврăнмĕ,— тӳрре тухма хăтланать пĕри.

— Пирĕн колхоза ун пек тимĕрсем шутсăр кирлĕ. Иртнĕ вырсарникун председатель çавăн пек тимĕрсене шыраса Канаша та усăсăрах кайса килчĕ,— хушса хурать тепри.

Пăхсан, çаксем хăйсемшĕн мар, колхозшăн çунаççĕ, темелле. Чăн та, ун пек материал колхозра машинăсем юсама та, фермăсем таврашĕнче те питĕ кирлĕ. Вĕсене, тен, çул çинче тупнă çак темиçе татăк тимĕре колхоза илсе пынăшăн председатель те тав тăвĕ. Анчах «колхозшăн тăрăшакан» çак колхозниксем, хăйсемпе пĕрле çула тухнă çамрăксен кăмăлне хуçса, пирĕн коллективлă ĕçе, çынсен ăнланулăхне ӳстерес ĕçе мĕн тери пысăк сиен кӳнине ăнланаççĕ-ши? Çак çамрăксене унччен килте те, шкулта та: çын япалине ан тĕкĕнĕр, ан вăрлăр, тупсан-мĕн тусан тавăрса парăр, ялан тӳрĕ кăмăллă пулăр, тесе вĕрентнĕ вĕт-ха. Ак халĕ, çула тухсан, çав çынсемех, килте хăйсен ачисене тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентнĕ çынсемех çул çине ӳксе юлнă япалана машинă çине хăвăртрах пуçтарса чикме васкаççĕ. Çапла, вĕсем, колхозшăн виçĕ пуслăх усă туса, çамрăксен ăс-тăнĕнче ĕмĕрлĕхе усал йĕр хăвараççĕ, тин çеç пурнăç çулĕ çине тăракан çынсем обществăра пурте тӳрĕ кăмăлпа пурăнма тивĕçли çинчен ĕмĕтленнине пĕтерсе хураççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ аслисем хушнă тĕрĕс мар ĕçе тума çамрăксен алă çĕкленмест, çавăнпа ĕнтĕ вĕсем хăйсем йăнăш тунине кăтартасшăн мар, хăйсене кам та пулин курасран шикленеççĕ.

Юлашки вăхăтра «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ чылай çĕрте колхоз бригадирĕсем хăйсене тĕрĕс тыткаламанни çинчен çырусем илме пуçларĕ. Ял çыннисем хăйсен бригадирĕсем пирки хытă тарăхса çыраççĕ. «Бригадирта ĕçлеме тытăнни нумай та иртмерĕ, çын пăсăлса кайрĕ, ĕçке ярăнчĕ. Çавна пула тырра та вăхăтра пухса кĕртеймерĕмĕр, кантăрĕ те юр айнех юлчĕ. Пирĕн бригадиршăн пулсан хуйхисуйхи çук: вăл ялан ĕçкĕре, ялан ӳсĕр. Ĕçме хăнăхнăскер, халĕ ĕнтĕ лаша ыйтма пырсан та, эрехсĕр лаша памасть».

Çакăн пек сăмахсене чылай çырусенче вулама пулать. Паллах, тӳрĕ кăмăллă колхозниксене, общеcтвăлла хуçалăх вăйлантăр, çапла вара ял ĕçченĕсен пурнăçĕ лайăхлантăр тесе тăрăшакан çынсене бригадир айăпĕпе пурлăх сая кайни, ĕç кал-кал пулса пыманни тарăхтарать. Ĕмĕртенпе пĕрчĕ çумне пĕрчĕ хушса пырса, пурлăх тума вĕреннĕ хресчене хуçалăх юхăнни шухăшлаттармасăр тăма пултараймасть. Анчах бригадир ĕçке ернĕшĕн, çавна пула пĕтĕм ял халăхĕ, чăннипе илсен, ертсе пыракан çынсăр тăрса юлнăшăн кам айăплă-ха? Мĕншĕн-ха «бригадира лартиччен питĕ аван пулнă çын» çак ответлă ĕçре ĕçлеме тытăнсанах пăсăлса каять? Тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхе юратакан çынсене çак ыйтусем те шухăша ямалла.

Эпĕ пĕр колхоз правленийĕнче çакăн пек калаçу илтрĕм.

— Эсир ман упăшкана бригадир туса хурасшăн,— терĕ пĕр çамрăк хĕрарăм правление кĕнĕ-кĕменех сĕтел хушшинче ларакан председателе.— Тархасшăн, пире чипер пурăнма ирĕк парăр, упăшкана çак ĕçе ан хушăр. Вăл халь йĕркеллĕ арçын, эрех те ĕçмест, çемьере те кăмăллă...

Председатель çак хĕрарăм упăшки, бригадирта ĕçлесе, колхоза пысăк усă кӳме пултарни çинчен, унăн çак ĕçре пулма пĕлӳ те, пултарулăх та çителĕкли çинчен калама пуçларĕ. Анчах ăна хĕрарăм çийĕнчех пӳлчĕ:

— Çук, татах тепĕр хут калатăп: çук,— терĕ вăл.— Ăна бригадира лартма эпĕ ирĕк памастăп. Ăна пурпĕрех пăсса яраççĕ...

«Ăна пурпĕрех пăсса яраççĕ». Çак сăмахсене хĕрарăм пуçра йĕри-тавра шухăшласа пăхмасăр, ытахальтен каламан. Çапла калама унăн сăлтавĕ пулнах. Вăл чипер, йĕркеллĕ çынсем пăсăлнине хăй куçĕпе курнă. Лайăххинчен усал тăвасси те, япăххине юсасси те пĕтĕмпех обществăран, бригадир пирки калас пулсан, ял-йышран килет. Хальхи бригадир — пысăк хуçалăх пуçĕнче тăракан çын. Вăл халĕ, чăннипе илсен, ĕлĕкрех пулнă председатель вырăнĕнче. Халĕ колхозниксем ун патне нумай ыйтусемпе пыраççĕ. Çапла, унăн правасем те, ответлăх та пысăк. Бригадир калани, бригадир хушни халĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Анчах çакă пĕртте бригадира кучченеçпе хисеплемелле тенине пĕлтермест. Халлĕхе вара чылайăшĕ бригадира мĕнпе те пулин «ырă тума» хăтланаççĕ. «Ырă тумалли» мелсенчен лайăхраххи вара эрех ĕçтерни шутланать. Ялта туй пулсан, чи малтан унта бригадира чĕнеççĕ. Тăвансен ĕçкинче те вăл кĕрекери хăна, салтака ăсатма та пуринчен маларах вăл çитет... Çапла вара бригадира пĕри ĕçтерет, тепри ĕçтерет. Çакăн хыççăн, майĕпенех бригадир хăйне колхозниксем яланах ĕçтерме тивĕçлĕ тесе шутлама тытăнать, каярахпа вăл лаша та эрехле çеç пама пуçлать. «Ырă тăвакансем», «Иван Иванч кĕрсе тух, ман илсе лартни пурччĕ», текенсем чылай чухне хăйсем ăнланмасăрах çынна тĕрĕс çултан пăрса яраççĕ, пĕтĕм хуçалăха сăтăр тăваççĕ. Çапла ĕнтĕ, ялти халăха ертсе пыракан çын пăсăлнăшăн бригадир хăй çеç мар, колхозниксем хăйсем те айăплă пулса тăраççĕ.

Пирĕн халăх коммунизм тăвассишĕн пысăк хастарлăхпа ĕçлет. Çичĕ çуллăх план заданийĕсем пурнăçа ăнăçлă кĕрсе пыраççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ хăвăрт ӳсни пурлăх-ырлăх нумайрах тума май парать. Кунпа пĕрлех ĕç çыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтересси те лайăхланать, мĕншĕн тесен коммунизм обществинче пурлăх тулăх пулнипе пĕрлех йăла ыйтăвĕсене тивĕçтересси чи çӳлĕ шайра пулать. Коммунизм тăвас задачăна пурнăçласси мĕнле пыни çинчен каланă чухне эпир чи малтанах материальнăй производствăра ĕçлекенсем çинчен калатпăр. Ку вăл тĕрĕс, анчах пурлăх тăвакансене пăхакансем çинчен те манмалла мар, вĕсем те коммунизмла обществă тăвассишĕн ĕçлеççĕ вĕт. Суту-илӳ, обществăлла апатлану, коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсенче, культурă, медицинă, çут ĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсен йышĕ пĕчĕк мар, малалла вĕсен хисепĕ татах ӳсет. Тĕп производствăсенчи çынсен ĕçне пĕр-пĕр виçепе (процентпа, калăпăр) хаклама пулать, çынсене пăхакансен ĕçне чылай чухне нимĕнле виçепе те виçме май çук. Вĕсен тĕп тĕллевĕ — ытти çынсен кăмăлне тивĕçтересси. Кунта икĕ кăмăл хире-хирĕç тĕл пулать, пăхма тивĕçлисен кăмăлĕ ыттисен кăмăлне е çĕклет, е хуçать.

Йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисенче ĕçлекенсем ман çине ан кӳренччĕр те, эпĕ çапах та çапла каласшăн: вĕсем хушшинче тивĕçе тĕрĕс ăнланманнисем, тӳрĕ кăмăллă маррисем сахал мар-ха. Кĕрсе курăр-ха эсир пирĕн магазинсене, юриех сăнаса пăхăр продавецсем мĕнле ĕçленине. Акă, арçынсем валли костюмсем сутакан секци. Костюм туянма пынă çын шала кĕрет те пĕр костюма тăхăнса пăхать, унтан тепĕрне... Тĕкĕр патне пырса çаврăнкалать: темле ĕнтĕ, те кăмăла каять, те каймасть, те кĕске, те вăрăм,— труках пĕлме çук.

Çав вăхăтра прилавок умне таянса тăнă продавщицă хăйĕн хĕр-тантăшĕпе хĕрсех калаçать, юлташĕ каласа паракан «çĕнĕ хыпарсене» пĕлмелле-çке-ха унăн,— вĕсене ĕç вĕçлениччен пĕлмесĕр мĕнле чăтăн! Вăл костюм тӳянма пынă çын çинчен мансах кайнă, уншăн пулсан, тавар илекен тарас çук, кăмăлне каять пулсан, туянĕ.

Е тата тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Сирĕн ăçта та пулин васкавлăн шăнкăравламалла. Урамра тĕл пулакан «телефон-автомат» текен будкăна чупса кĕретĕр. Шăтăка икĕ пус яратăр та трубкăна алла илетĕр. Çур минут иртет, пĕр минут, иккĕ... «Кунта кĕриччен, çуран хăвăртрах çитме пулатчĕ», тесе шухăшлама пуçлатăр. Виççĕмĕш минутра трубкăра сасă илтĕнсе каять. Эсир хăвăра нумай кĕттерни çинчен калатăр. Телефонисткă çакна илтет кăна — сирĕнпе калаçма та пăрахать. Эсир вара нимĕн те тăваймастăр, сасăсăр трубкăпа тăрса юлатăр.

Акă мĕн интереслĕ. Кăмăла çапла хуçакан çынсене асăрхаттарсан, вĕсем, каçару ыйтас вырăнне, тÿрре тухма тĕрлĕрен сăлтавсем шырама тытăнаççĕ, унтан та ытларах, хăйсене асăрхаттаракансене айăплама та пăхаççĕ.

Çынсене пăхакансем хушшинче чи пархатарлă профессиллисем вĕсем—медицинă учрежденийĕсенче ĕçлекенсем тесен, йăнăш пулас çук. Халăх сывлăхне сыхлас, çын ĕмĕрне вăрăмлатас тĕлĕшпе вĕсем чăннипех пысăк ĕç тăваççĕ, çавăншăн вĕсене эпир чун-чĕререн хисеплетпĕр. Хаçат-журналсен редакцийĕсене пирĕн ĕç çыннисем тухтăрсене, сестрасене тав туса çырнă ăшă кăмăллă çырусем тăтăшах килсе тăраççĕ. Анчах, шел ĕнтĕ, çав хушăрах почтă пирĕн пата усал хыпарсем те илсе çитерет. Нумай пулмасть Етĕрне районĕнчен пĕр хĕрарăм ытла та тĕлĕнмелле истори çинчен çырса пĕлтерчĕ. Вăл, пĕр çулхине йĕкĕреш ача çуратнă хыççăн, колхозри ытти хĕрарăмсем пек уй-хир ĕçĕсене тухайман, бригадир ăна уй хураллама хушнă. Хĕрарăм хăйĕн ĕçне тÿрĕ кăмăлпа туса пынă, калчасене лайăх сыхланă, уй-хире выльăх-чĕрлĕх кăларса яракансем пирки акт çырса правление пĕлтерсе тăнă. Пĕррехинче калчасем çинче ялти фельдшерицă выльăхĕсене тытнă та акт çырнă. Çакăн çинчен пĕлсенех медицинă çынни хĕрарăма тÿрех çапла каласа хунă: «Эпĕ сана кирлĕ пулăп-ха, ачусем пĕчĕк, çитĕнсе çитиччен пĕрре кăна чирлемĕç». Вицĕ çул хушшинче ĕнтĕ çак фельдшерицă хăйĕн сăмахне çирĕп тытать, хĕрарăм ачисене пырса та пăхмасть, чирленĕ чухне эмелсем те памасть. Çынсен ачисене профилактикă йĕркипе уколсем тăвать, эмелсем парать, ку хĕрарăм ачисем патне ура ярса та пусмасть. Çыру авторĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак фельдшерицăн тивĕçсĕр ĕçĕсем çинчен ялта та, районта та лайăх пĕлеççĕ, анчах ăна никам та пĕр сăмах та шарламасть. Ман шутпа, государствă панă пĕлÿпе ыттисене усал тăвас тĕллевпе усă куракан, халăх сывлăхне сыхлас ĕçре сивĕ кăмăл кăтартакан çын медицинă учрежденийĕнче ĕçлеме пултараймасть. Çакна халĕ фельдшерицă пирки нимĕн те шарламан ял çыннисен те ăнланса илмелле. Паян тÿрĕ кăмăллă пулманни ыран пысăк инкек патне илсе пыма пултарать.

Обществă умĕнчи тивĕçе обществă интересĕсем хушнă пек пурнăçлама вĕрентес тĕлĕшпе чи малтан коллективсене ертсе пыракан çынсем, обществăлла организацисем ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсен хăйсене пăхăнса тăракан работниксенчен çирĕпрех ыйтмалла, дисциплинăна хисеплеме вĕрентмелле. Уйрăмах çакă кÿрентерет: хăш-пĕр çамрăксем хальхи ырă пурнăçа хăйсенчен аслисем мĕн чухлĕ вăй хурса тунине ăнланса илмеççĕ, ĕç çине тÿрĕ кăмăлпа пăхмаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Украинăри «Первое мая» колхозри звеньевой Надежда Григорьевна Заглада совеçпе чыс çинчен хускатнă калаçу питĕ вырăнлă. «Хальхи вăхăтра совеçсĕр пурăнма çук»,— терĕ ватă колхозницă. Хăйĕн тивĕçне тĕрĕс ăнланакан, пысăк çĕкленÿпе ĕçлекен çын кăна, ĕç çине йĕрĕнсе пăхакансемпе, çитменлĕхсемпе тата йĕркесĕрлĕхпе килĕшсе пурăнакансем пирĕн обществăра ан пулччăр тесе тăрăшакан çын кăна çавăн пек сăмахсем калама пултарать. Надежда Григорьевнăн пĕтĕм пурнăçĕ — ĕçре пиçĕхсе ÿснĕ, ĕçре хăйĕн телейне тупнă çын пурнăçĕ. Ача чухне вăл пуян çын патĕнче ĕçлесе пурăннă, ăна çак чухăнлăхран Октябрьти революци ирĕке кăларнă. Ялсенче колхозсем пуçланса кайсан, вăл колхоза кĕнĕ. Вăтăр çулта чухне унăн пысăк хуйхă пулнă: виçĕ ачапа упăшкасăр тăрса юлнă. Заглада пĕтĕм вăй-халпа тата пултарулăхпа колхозра ĕçленĕ. Ĕмĕртен япăх тесе пурăннă çĕрсем çинчех унăн звени халиччен пулман пысăк тухăçлă йĕтĕн, кукурузă, сахăр кăшманĕ туса илнĕ, çавăншăн ăна Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă. Çитмĕл çулхи колхозницă халĕ те колхоз хирĕнче хастар ĕçлет. Ăна, обществăлла тивĕçе чĕререн туйса тăракан çынна, хăйĕн ĕçĕнчи çитĕнÿсем кăна çырлахтармаççĕ, вăл пур çĕрте те ĕçсем лайăх пыччăр тесе тăрăшать.

«Çĕр ĕçлекен ятне çÿлте тытăр!»—тет Н. Заглада. «Совет рабочийĕн ырă ячĕ совеç хушнă пек çине тăрса, творчествăлла ĕçлемеллине пĕлтерет»,— тет Ленинградри паллă рабочи И. Леонов. Н. Загладăпа И. Леонов хускатнă ыйтусем питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Совет çыннин совеçĕпе чысĕ çинчен пуçарнă калаçăва малалла та тăсмалла. Коммунизмăн пурлăхпа техникă никĕсне хывассишĕн хастар кĕрешÿ пынă вăхăтра кашни çын çапла калама пултартăр: манăн совеç таса, эпĕ хам мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тÿрĕ кăмăлпа тăватăп.

Хакĕ 30 пус.